К74
М90
Ч-36359

И.В. МУКИНА



# И.Я. ЯКОВЛЕВ ҪИНЧЕН ХУНӐ ЧӐН СӐМАХ

ШУПАШКАР 98



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КФ
К74
М90

Чăваш патшалăх университечĕн
И.Я. Яковлев институчĕ

Чăваш патшалăх университечĕ çумĕнчи
чăваш чĕлхин проблемисен лабораторийĕ

И.В. Мукина

# И.Я. Яковлев çинчен хунă чăн сăмах

9/Х

Шупашкар – 1998

ББК 86 Чув
М90

Мукина И.В.

И.Я. Яковлев çинчен хунă чăн сăмах.

*Çак кĕнеке пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕр тăван чăваш халăхне пĕтĕм тĕнче цивилизацийĕн тĕп кĕнекисенчен пĕрне – Библие – чăвашла куçарса парас тесе тăрăшни тата куçару ĕçĕ патне мĕнле пырса тухни çинчен каласа парать. Çакăнпа пĕрлех пĕр ĕмĕр каярах куçарнă чăвашла Библи чĕлхине хальхи чăваш чĕлхипе танлаштарса тишкернĕ. "И.Я.Яковлев çинчен хунă чăн сăмах" кĕнеке историксемпе чĕлхеçĕсемшĕн çеç мар, И.Я. Яковлевăн пурнăçĕпе тата ĕç-хĕлĕпе интересленекен ытти чăвашсемшĕн те усăллă пулĕ.*

Ч-36359

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

© Мукина И.В.

ISBN 5-87315002-XI ©Руссика 1998.

ПРОВЕРЕНО
2004



И.Я. Яковлев 1890 çулсенче

*Иван Яковлевич Яковлев*

*ҫуралнăранпа 150 ҫул ҫитнĕ май*

Шупашкар – 1998

# УМЁН КАЛАНИ

Хальхи вăхăтра И.Я.Яковлева пĕлмен чăваш çук та пулĕ. Чăваш çырулăхне, чăваш шкулне пурнăç панă вăл. Тăван халăха тĕнче цивилизацийĕн шайне çĕклеме ĕмĕтленнĕ. Хайĕн пĕтĕм пурнăçĕн тĕллевне — чăваш халăхне христианство тĕнĕпе пĕтĕçтерсе шăпăр шăтăкĕнчен çутлăхăн анлă тĕнчине илсе тухас, чăваша çын шутне кĕртес тĕллевне — чиркӳ ĕçĕпе тата патша влаçĕн политикипе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшнă. Çавăн пекех вăл ĕмĕрĕ тăршшĕпех тăван халăхне пĕтĕм тĕнче цивилизацийĕн тĕп кĕнекисенчен пĕрне — Библие — чăвашла куçарса парасчĕ тесе хĕмленсе ĕçленĕ. Чăвашла тĕн кĕнекисемпе, Сăваплă Çырусемпе пĕрле чăваш тĕнчине христианла ăнлавсем çеç мар, çырулăх та килнĕ. Библи кĕнекисене чăвашла куçарса халăх хушшине сарни чăваш халăхĕн кĕнеке-çыру, литература чĕлхине йĕркелесе яма тата çавăн пекех чĕлхене çĕнĕ ăнлавсемпе, сăмахсемпе пуянлатма пулăшнă. Пĕтĕмлетсе каласан, чăвашла куçарса кăларнă тĕн кĕнекисем халăх хушшине пĕлӳлĕх сарнă, чăвашсенчен вĕреннĕ çынсем йышлăран та йышлă тухма пуçланă. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, аслăрах çулсенчи чăвашсене те малтанласа Псалтирь, Часослов е ытти тĕн кĕнекисем тăрăх вулама вĕрентнĕ. Анчах эпир çакăн çинчен сахал пĕлетпĕр, нумайăшĕ вара халиччен пĕлмен тесен те йăнăш пулмасть.

И.Я.Яковлев çинчен çырнă кĕнеке нумай, çав вăхăтрах унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки тăван чĕлхепе, чăвашла çырса уйрăммăн кăларнă кĕнекесенчен М.П.Петровăн 1928 çулта тухнă “Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен” тата Г.Н.Волковăн 1959 çулта пичетленнĕ “И.Я.Яковлев — чăваш халăх педагогĕ” кĕнекесене çеç асăнма пулать. Анчах вĕсенче те И.Я.Яковлев Турă сăмахĕн кĕнекисене чăвашла куçарни çинчен пĕр сăмах та çырман. Вăхăчĕ çапла пулнă, ун çинчен калама хушман, çăвар уçма хăтланакансене юнаса кăна тăнă. “Аслăран та аслă“

пуҫлăхăн чăвашри хӳрешкисем – атеистсем – чăваш халăхĕ И.Я.Яковлева витĕр пĕлесрен хăранă. Мĕншĕн тесен пĕлмене пĕр сăмах ҫитет, пĕлекене ҫĕр сăмах та ҫитмест тенине лайăх чухланă вĕсем. Халиччен пĕлмен Яковлевпа нумаях пулмасть кăна паллашрăмăр. Ҫак паллашу "И.Я.Яковлев халалĕ" кĕнекерен пуҫланса кайрĕ.

И.Я.Яковлевăн куҫару ĕҫĕнче православи тĕнĕпе ҫыхăннă кĕнекесем тĕп вырăн йышăннă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи тăлмачăсен центрĕ хатĕрлесе кăларнă чăвашла кĕнекесен шутĕнче 80% ытла тĕн литератури, Сăваплă Ҫырусем пулнă. Ҫакна манма та, хисепе хумасăр тăма та, пĕлмесĕр юлма та пултараймастпăр эпир хальхи вăхăтра.

Ҫавна шута илсе, И.Я.Яковлев куҫару ĕҫĕ патне мĕнле пырса тухни, тĕн кĕнекисене куҫарма ăна мĕн хистени, вăл Библи кĕнекисене мĕнлерех йĕркепе куҫарни тата ҫак ĕҫе хăйĕн вĕрентекенĕсене хутшăнтарса пыни ҫинчен аннемĕр чĕлхипе каласа парас терĕмĕр. Мĕншĕн тесен ку кĕнеке ăсчахсемпе пысăк пĕлӳ илнĕ ҫынсемшĕн е ятарлă специалистсемшĕн кăна мар, пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн пурнăҫĕпе туллин паллашма ĕмĕтленекен ытти чăвашсемшĕн те пултăр терĕмĕр.

Кĕнекере ҫырса панă тема калама ҫук анлă, малашне тĕпчевҫĕсем ҫак кĕнекере хускатнă ыйтусемпе сахал мар тĕпчев ĕҫĕ ҫырасса шанас килет. Ку тĕлĕшпе эпир пĕрремĕш сукмак та пулин тăвас терĕмĕр.

Ҫак тĕпчеве ҫырма, ҫырнине йĕркелесе кĕнеке тума ăс панăшăн Чăваш патшалăх университечĕ ҫумĕнчи чăваш чĕлхин проблемисене тĕпчекен лаборатори пуҫлăхне М.Р.Федотов профессора чĕререн тав тăватăп.

Уйрăмах Чăваш патшалăх университечĕн ректорне Л.П.Кураков академика пуҫ тайса тав сăмахĕ калатăп. Вăл тăрăшнипе анчах кĕнеке кун ҫути курма пултарчĕ.

# 1 сыпӑк

# И.Я. ЯКОВЛЕВ ЧӐВАШ ХАЛӐХНЕ ПАНӐ ХАЛАЛ

## 1.1. ЧӐВАШЛА ХАЛАЛ

Ашшийӗн Ывӑлийӗн Святой Сывлӑшийӗн ячӗпе!

Эй тусӑмсем, хамӑн тӑван ҫыннӑмсем, чӑвашсем! Пуринчен малтан эпӗ сире чӗнсе калатӑп. Манӑн чунӑм пӗрмаях сирӗншӗн ҫунатчӗ, халь те акӑ манӑн мӗнпур шухӑшӑм сирӗн ҫийӗре кусрӗ. Юлашки тертӗме пуринчен маларах татах сире каласа хӑварас тетӗп.

Турра ӗненсе пурӑнасси калама ҫук пысӑк япала — пуринчен ытла эсир ҫавна хытӑ тытса тӑрӑр. Ӗненӳ этеммӗн ӑсне, кӑмӑлне ҫунатлӑлантарса ҫӑмӑллатать, чун пурнӑҫне канӑҫлӑх парать, лӑплантарать; инкек–синкек, хуйхӑ–мӗн курнӑ вӑхӑтра чуна хӑват парать; ӗҫсем ӑнса телейлӗ пурӑннӑ чух ӗненӳ чуна тасатать, ӑна ҫутатса тӑрать. Турра ӗненсе пурӑнсан, пурнӑҫ хытти этемшӗн хӑрушӑ мар; Ӑна ӗненсе тӑмасан, ҫӗр ҫинчи пирӗн пурнӑҫ сивӗ пулать, тӗттӗм пулать. Тӗнчене пултарнӑ ҫӳлти Турра ӗненсе тӑрӑр. Ырӑ ӗҫе те, усал ӗҫе те чӑн аслӑ тӳрӗлӗх татӗ, — Турӑ сут тӑвӗ, — вӑл сут тӳрӗ, вӑл сут пит хӑрушӑ.

Вырӑс халӑхӗ пит пысӑк халӑх. Вӑл ырӑ кӑмӑллӑ, ӑслӑ: эсир ӑна итлӗр, юратса пурӑнӑр. Унӑн ӑсийӗн вӑйӗ, ырӑ кӑмӑлӗ, пурнӑҫа малалла ярас шухӑшӗ хисепсӗр нумай, нихӑҫан та пӗтес ҫук. Ҫак халӑх сире тӑван вырӑнне хурса йышӑннӑ, хӑй ҫемйи тунӑ. Вӑл сире пусмӑрламарӗ, сире аяла хӑвармарӗ. Малашнехине курса тӑракан Турӑ вырӑссене эпир курми, сисми аслӑ ӗҫ тума ертсе пырать. Эсир малалла каяс ӗҫре ҫак халӑх сире ҫавӑтса ертсе пыракан пултӑр, ун хыҫҫӑн пырӑр, ӑна шанса тӑрӑр. Ҫак халӑхӑн

пурнăçĕ пит йывăр пулнă. Хăйĕн вăрăм ĕмĕринче, йывăр пурнăçĕнче вăл нумай хуйхă курнă, йывăр кунсем курмалла пулнă, çапах та вăл хăй чунийĕн çуттине сӳнтермен; хăйĕнчен аслă халăх тухса каймаллине пĕртте асĕнчен яман. Вырăс халăхийĕн савăнăçĕпе эсир те савăнмалла пулăр; вăл хуйхă тӳсмелле пулсан, ăна эсир те тӳсĕр. Çапла вара малашне вăл курас çутă пурнăçа унпа пĕрле эсир те курăр; вăл малашне чаплăланса кайсан, унпа пĕрле эсир те чаплăланăр. Иртнĕ ĕмĕрсенче вырăс халăхĕ сире хĕсĕрлемен, ӳлĕмрен те вăл сире хĕсĕрлес çук. Ăна эсир юратса пурăнăр, унпа тачă пурăнма тăрăшăр. Кирек мĕнле хир те пукрасăр пулмасть, çапах та эсир вырăс халăхĕ хушшинче ырă кăмăллă ăслă çынсене кирек хăçан та тупăр. Тӳрĕ ĕç тума вĕсем сире пулăшĕç: çапла пулассине ман пурнăçра пулнă ĕçсем шантарса тăраççĕ. Хăйĕн тӳрĕ ĕçĕсене вырăс халăхĕ нумай асап курса çиеле кăларнă, çавăнпа пĕртте иккĕленме кирлĕ мар, вăл сирĕн тĕлĕшпе те ялан тӳрĕрен пырĕ. Вырăс патшалăхĕ çине шанса пурăнăр, ăна юратăр, вара вăл сирĕн аннĕр пулĕ. Çаксене шанса тăма хама вĕрентсе пурăннă Николай Иванович Ильминский ятне каласа хуратăп; унăн ячĕ сирĕншĕн çул кăтартакан çăлтăр пултăр. Ман хисеппе вырăс халăхĕ катĕрийĕн мĕнпур аслăлăхĕ, мĕнпур илемĕ пурте Ильминскинче тулли тăратчĕ.

Вĕренсе çутăлма телей тупнă чăвашсене калам тата. Астуса тăрăр! Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир пулăшса пурăнмалла; вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар. Ан манăр! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас ĕç пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Эсир вĕсен хушшинчен тухса çутăлнă çынсем. Вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха пуçтарса, эсир хăвăрăн тăван халăхăр патне таврăнăр, вара патшалăхра чăн лайăх этем мĕнле пулмалли çинчен вĕсене каласа ăнлантарăр; закон çинчен тата халăх хушшинче пулмалли тӳрĕлĕх çинчен вĕрентĕр. Çакăншăн тăрăшассине эсир хăвăр çине

илмелле: эсир çав халăх хушшинчен тухнă çынсем. Тăван халăхăрăн çуклăхĕнчен, начарлăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен ан вăтанăр: эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле. Çапла вара эсир халăх вăйĕпе хăвăршăн пуçтарнă ăсăршăн вĕсене парăм тӳлерĕр пулать. Кĕçĕн тăванăрсем умĕнче эсир хăвăр парăмăра манманшăн халăх кăмăлĕ сире кирлĕ таран тавăрĕ. Ан манăр, çакна астуса тăрăр! Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхине хирĕç тăмасан, халăх кăмăлне пĕтĕмпех хăвăр аллăрта тытса тăрăр.

Ху чĕлхӳне пăрахманни вырăс халăхĕ ĕçне ултавлă туса сутни пулмасть вăл; аннĕрсенчен вĕренсе юлнă хăвăн тĕп чĕлхӳне пăрахмасăрах вырăсăн аслă патшалăхĕшĕн ĕçлесе тăма пулать. Эпĕ туса пĕтерейменн ĕçсене эсир туса пĕтерĕр. Турă çыруне çырнă кĕнекесене пĕтĕмпех чăваш халăхне парăр — Этемсен Турăпа пĕрлешсе пурăнасси çинчен каланă аслă сăмах кĕнекисене чăвашла куçарса пĕтерĕр. Вырăс патшалăхийĕн Хĕвел тухăçĕ енче пурăнакан йышлă халăхсене Христос тĕнне вĕрентсе çутăлтарас ĕçе тăрăшса ĕçлĕр: чĕлхе тĕлĕшĕпе те, вĕсен пурнăçĕ йĕрки тĕлĕшĕпе те эсир вĕсене вырăссенчен хăйсенчен çывăхрах тăратăр. Христос тĕнийĕн çуттине эсир вырăссен аллинчен илнĕ. Çапла вара эсир çак пысăк ĕçе ĕçлесе вырăссене парас парăмăра кăшт та пулин парса тататăр.

Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа анваралăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр

валли тёреклĕ чарак лартса хурăр.

Пĕр–пĕринпе сапăр пулăр, çукшăн–пуршăн чашкăрса çӳресрен, харкашасран аякка тарăр. Çăлаканăн аслă сăмахне асра тытăр. Вăл каланă: хăвăр тăшманăрсене те юратăр, тенĕ. Чăваш хушшинче пĕр–пĕр килĕшӳсĕр ĕç часчасах пулкалать. Эпĕ çавна пĕрре анчах курман. Çапла акă чăвашран хăшĕ те пулин мала туха пуçласан ыттисем ăна такăнтарма пăхаççĕ, çулне пӳлеççĕ. Вара унăн та ырă ĕмĕчĕ татăлать, çине пыракансем хăйсем те тип–типĕ тăрса юлаççĕ. Эсир апла ан пулăр. Çӳле çĕкленекене мĕн хал çитнĕ таран çĕкленме пулăшăр. Хăпарса çитсе тĕрек илсен, вăл вара хăй сире аялтан çӳле турта–турта кăларĕ. Малти урапа куссан, хыçалти унтан юлмасть. Пĕр–пĕрин сăмахне тăнланса пурăнни, пĕрне пĕри ырăлăх туса тăни пурнăçа хăват парать. Çакна хытă шанса тăрăр.

Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă — çакна пĕлсе тăрăр, ун пек ĕçе юратăр. Чăн пĕчĕккĕ ĕçе те пит пикенсе, юратса ĕçлĕр. Пурнăçра курма тӳрĕ килнĕ йывăрлăхшăн ан кулянăр. Юратса тусан, чи пĕчĕкçĕ ĕçе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать; ӳркенсе ытахальтен анчах ĕçлесен, чăн пысăк ĕç те пăрахăça тухать, хисепрен каять. Лăпкă чунпа килĕшсе ĕçленĕ пур ĕç те телейлĕ пулать, ăнса малалла пырать. Кукăр çулпа çӳресрен, ултавпа тăвас ĕçрен хăраса тăрăр: тӳрĕлĕхсĕр курнă усă, ултавпа тупнă телей — тĕреклĕ мар, вăл вăраха пымасть.

Çӳлти аслă Турă умне кайма хатĕрленсе, сире каласа хăварас сăмахăм манăн мĕнпурĕ çакă ĕнтĕ. Ирĕклĕ е ирĕксĕр эпĕ кама та пулин кӳрентерсе, вăл ман çие çилĕ хывса çӳренĕ пулсан, пурсăра та тархаслатăп: çиллĕре манăр, каçарăр мана, маншăн Турра кĕлтăвăр. Эй тăван çыннăмсем! Чăн кăмăлтан тав тăватăп сире. Эсир маншăн ялан та ăшă пултăр, кăмăллă пултăр. Сиртен çакна курма эпĕ тивĕçлĕ те пулман. Çаплах тата вырăс çыннисене те нумайăшне, пит нумай çынна чунтан тав тăватăп. Ман ĕçе

тума вĕсем нумай пулăшрĕç, чăн кăмăлтан ман енче тăчĕç. Хампа пĕрле ĕçленĕ юлташăмсене, мана пулăшса пурăннă мĕнпур çынна пурне те чунтан каласа тав тăватăп: нимĕне хапсăнмасăр вĕсем мĕнпур халĕсемпе ĕçлерĕç, вĕсемсĕр пуçне ман ĕçĕм те палăрман пулĕччĕ. Пĕр хам анчах вĕрентнĕ хамăн çыннăмсене кăмăлтан ырă сунатăп. Эпĕ вĕсене вĕрентсе ларнă вăхăтсем ман пурнăçра чăн савăнăç–лă вăхăтсем пулчĕç. Пурăнан пурнăçăрта сире пурсăра та Турă сыхласа, упраса усратăр

*Иван Яковлев*

Чĕмпĕр хули,
авăн уйăхин 4–мĕш кунĕ, 1921–мĕш çул.

## 1.2. ВЫРĂСЛА ХАЛАЛ

## ЗАВЕЩАНИЕ ЧУВАШСКОМУ НАРОДУ

Во имя Отца и Сына и Святого Духа!

Обращаюсь к вам первым, друзья и родичи мои чуваши. О вас болел я душой, к вам в этот час обращается мысль моя, и вам первым хочу сказать мои последние пожелания.

Крепче всего берегите величайшую святыню — веру в Бога. Вера окрыляет силы ума и сердца, дарует внутренний мир, утешает и ободряет душу в часы несчастья и горя, очищает и просветляет ее в счастье и удаче. С верой в Бога не страшны жизненные испытания; без веры в Него холодно и мрачно на земле. Веруйте, что есть Высший мздовоздатель за добро и за зло, что есть Высшая правда, есть Божий суд, грозный и праведный.

Чтите и любите великий, добрый и умный русский народ, таящий в себе неисчерпаемые силы ума, сердца и воли. Народ этот принял вас в свою семью, как братьев, не обидел и не унизил вас. Ведомый Провидением к великим, нам

незримым целям, народ этот да будет руководителем и вашего развития: идите за ним и верьте в него. Трудна была жизнь этого народа, много горестей и несчастий встретил он на своем долгом и скорбном пути, но он не угасил в себе светочей духа и не утратил понимания своего высокого призвания. Да будут его радости вашими радостями, его горести вашими горестями, и вы приобщитесь к его светлому будущему, грядущему величию. Народ этот не обидел вас в прошлом, он не обидит вас и в будущем. Любите его и сближайтесь с ним. На всяком поле есть плевелы, но мой долгий опыт да будет порукой тому, что среди русского народа вы всегда встретите добрых и умных людей, которые помогут вашему правому делу. Русский народ выстрадал свою правду, и, нет сомнения, правдой этой он поделится с вами. Верьте в Россию, любите ее, и она будет вам матерью. Залогом и путеводной звездой да послужит бессмертное имя учителя моего Николая Ивановича Ильминского, олицетворяющего для меня все величие и всю красоту русского народного характера.

Обращаюсь к тем из вас, кому выпало счастье получить образование. Помните, что вы сами должны помогать своим бедным и обездоленным сородичам, не надеясь на то, что помощь к ним придет откуда-нибудь со стороны. Помните, что долг работать над просвещением чуваш лежит, прежде всего, на вас, на людях, которые вышли из их же среды. Возвращайтесь же к своим соплеменникам с сокровищами научного знания, насаждайте среди них понятия гражданственности, учите их закону и праву: заботу об этом должны взять на себя вы, выходцы из народа. Не гнушайтесь бедности, слабости и невежества своих сородичей: из них вы вышли, и для них вы должны поработать, чтобы заплатить ваш долг за полученное за счет народа образование. Любовь народная вознаградит вас за то, что вы не забудете вашего долга перед своими младшими братьями. Помните, что владеть сердцем народным вы сможете, только если не

будете чуждаться языка народного. В обращении к родному языку нет измены русскому делу: служить великому русскому отечеству можно, не забывая родного языка, воспринятого от матерей ваших. Доделайте то, что может быть, не удастся закончить мне: дайте чувашскому народу Священное писание полностью, завершив перевод Ветхого Завета. Послужите делу христианского просвещения, распространяя свет Евангелия среди многочисленных народностей, населяющих русский Восток: по языку и духу вы ближе к этим народностям, чем сами русские. Работой на этой обширной ниве вы заплатите русскому народу часть того великого долга, которым вы обязаны ему, получив из его рук свет веры Христовой.

Берегите семью: в семье опора народа и государства. Семейные заветы всегда были крепки среди чуваш. Охраняйте же это сокровище. В семейном счастье — защита от жизненных испытаний. Крепкой и дружной семье не страшны внешние житейские невзгоды. Берегите целомудрие, бойтесь вина и соблазнов: если обережете семью, обережете детей и создадите крепкую опору для мирного и спокойного труда.

Будьте дружны между собой, избегайте мелких счетов и распрей, помните о великом завете Спасителя: любите и ненавидящих вас, и твердо надейтесь на жизненную силу уступчивости и снисхождения.

Верьте в силу мирного труда и любите его. Делайте самое маленькое дело терпеливо и с любовью, не ропщите на размеры жизненной задачи. Самое малое дело можно осветить и осмыслить любовным к нему отношением и самое большое можно уронить и обесславить отношением небрежным и нерадивым. Счастье и успех придут ко всякому мирно и с любовью совершаемому делу. Бойтесь путей кривых и обходных: успехи, достигаемые нечистыми средствами, — успехи непрочные и временные.

Вот и все, что я хочу сказать вам, готовясь предстать

перед Высшим Судией. Если в ком есть память о вольной или невольной обиде, мною причиненной, прошу простить меня и помолиться обо мне. Сердечно благодарю за тепло и ласку, которыми не по заслугам моим дарили меня вы, мои соплеменники, и многие, многие русские люди, приходившие с открытым сердцем на помощь моему делу. Горячую благодарность приношу всем товарищам и сотрудникам моим по работе: без их бескорыстного усердия был бы невозможен и мой труд. Шлю привет непосредственным ученикам моим. Учебные часы, среди них проведенные, были отрадными часами моей жизни. Да сохранит и да обережет вас Бог в жизненных путях ваших.

*Иван Яковлев*

г. Симбирск, 4 августа 1921 г.

## 1.3. АКĂЛЧАНЛА ХАЛАЛ

## SPIRITUAL TESTAMENT TO THE CHUVASHISH PEOPLE

In the name of the Father and the Son and holy Spirit!

I address myself first to you, my Chuvash friends and relatives. Your welfare is much on my heart; in this hour my thoughts turn to you and to you first I want to convey my last wishes.

More then anything hold fast that which is most sacred: faith in God. Faith gives wings to the power of the spirit and heart, provides inner peace, comforts and encourages the soul in times of trouble and sorrow and illuminates it in hours of success and joy. With faith in God, you will not fail in the trials of life.Without faith the world is cold and dark. Believe in the final reward for good and punishment for evil, in ultimate truth and God's judgment - terrible and just.

Honour and love the good and wise Russian people who hold in themselves the inexhaustible forces of spirit, heart and will. They received you into their family as brothers; they did not deceive nor oppress you. Providence is leading them to great goals unknown to us. May that people be the leader of your development! Follow them and trust them. The Russian people's life has been difficult, encountering - on its long and painful way - much grief and pain, but the light of the spirit never died out in it. The vision of its great mission was never lost.

May Russia's joys be your joys and her sorrows your sorrows! Then you will participate in her coming, brilliant future. Her people did not fail you in the past; they will not let you down in the future. Love them and get closer to them. Every field has its weeds but take my experience as a guarantee: you will always find, among the Russians, good and wise persons who will support a just cause. Russia has gained her rights through suffering; without a doubt she will share those rights with you. Trust the people of Russia, love her, and Russia will be for you a mother. May the immortal name of my teacher, Nikolai Ivanovitsch Ilminski, serve you as a pledge and lodestar; it personifies for me the greatness and beauty of the Russian national character.

I turn to those of you who have had the privilege of an education. Remember that you must help your less fortunate compatriots. Don't hope that someone else will help them! Never forget that it is your first duty to work for the education of the Chuvash because they are your own. Go back to your people with the treasure of scientific knowledge. Promote in them civic responsibility. Teach them law and justice. These matters are up to you because these people are yours.

Do not despise your compatriots' poverty, weakness and ignorance. You have come from them and now you must work for them. You were educated for their sake and at their cost. Now you must pay that debt. Don't forget your obligation to your younger brothers. Your reward? The people's love.

Remember, though, that you won't win their hearts unless you speak Chuvash. Using your native language will not betray the Russian cause! You can serve the great country of Russia without forsaking

your mother tongue.

Complete what I have started, if I cannot do so: give the Chuvash people the Holy Scriptures, completing the translation of the Old Testament. Serve the cause of Christianity; spread the light of the Gospel among the many nationalities which are people of the eastern part of Russia. By your language and spirit you are closer to these people than the Russians are. Your efforts in this great field of endeavour will partly 'repay the debt you owe the Russian people: from them you received the light of Christian faith.

Honour the family. Keep it together. Families support the people and the state. Chuvash family links have always been strong; guard this treasure. A strong family is a bulwark against life's adversities; a close, happy family is not afraid of them. Be chaste. Beware of wine and such temptations. In protecting the family, you protect the children and provide a solid foundation for quiet, peaceable work.

Live in harmony with each other. Avoid petty quarrels. Remember the great command of the Saviour: "Do good to them which hate you". True strength is the privilege of those who do not insist on their rights.

Believe in diligent work and do it willingly. Perform even the smallest task with patience and good humour. Don't grumble over life's problems. When we tackle small tasks enthusiastically, they become important. When we approach important tasks negligently, we diminish them. Success follows all work done willingly and well. Avoid devious methods. Dirty means produce temporary ends.

This is what I wanted to say to you as I prepare myself to appear before the Supreme Judge. If I have offended someone, I ask him to pardon and pray for me. To you, my compatriots and the many Russians who with willing hearts have supported my work, I express my deep gratitude for your warmth and affection which I do not deserve. I remember with warm thankfulness my comrades and fellow-workers. Without their non-partisan zeal, my work could never have been achieved.

I greet my own students. The hours spent with you have been the

happiest of my life. May God protect each one of you on your journey through life.

*(Signed) Ivan Yakovlev*

4th August, 1921

## 1.4. НИМӖҪЛЕ ХАЛАЛ

## GEISTLICHES TESTAMENT AN DIE TSCHUWASCHEN

Im Namen des Vaters und des Sohnes and des Heiligen Geistes!

An Euch wende ich mich als erstes, meine Freunde und meine Stammesgenossen Tschuwaschen. Euer Wohl lag mir sehr am Herzen, und Euch gelten in dieser Stunde meine Gedanken, Euch will ich zuerst meine letzten Wünschen mitteilen.

Am allermeisten haltet fest an dem größten Heiligtum - dem Glauben an Gott! Der Glaube beflügelt die Kräfte des Geistes und des Herzens, schenkt inneren Frieden, tröstet und ermutigt die Seele in den Stunden des Unglücks und der Not, reinigt und erhellt sie im Glück und Erfolg. Wenn wir an Gott glauben, fürchten wir uns nicht vor Heimsuchungen des Lebens; ohne Glauben an Gott ist es kalt und finster auf der Erde. Glaubt, daß es eine Vergeltung für das Böse und das Gute gibt, daß es die Höhere Wahrheit gibt und das Gericht Gottes, schrecklich und gerecht.

Ehrt und liebt das große, gute und kluge russische Volk, das unerschöpfliche Kräfte des Geistes, des Herzens und des Willens in sich birgt. Dieses Volk hat Euch wie Brüder in seine Familie aufgenommen, hat Euch nicht übervorteilt und nicht gedemütigt. Geführt von der Vorsehung Gottes zu großen, für uns unsichtbaren Zielen, soll dieses Volk auch der Führer Eurer Entwicklung sein,

folgt ihm und glaubt an dieses Volk. Schwer war das Leben dieses Volkes, viel Not und Leiden ist ihm auf seinem langen und leiderfüllten Weg begegnet, aber die Leuchten des Geistes sind in ihm nicht erloschen, und das Verständnis seiner hohen Berufung ist ihm nicht verlorengegangen. Seine Freuden sollen Eure Freuden sein, seine Not soll Eure Not sein, und Ihr werdet seiner lichten künftigen Größe teilhaftig werden. Dieses Volk hat Euch in der Vergangenheit nicht übervorteilt, es wird Euch auch in der Zukunft nicht übervorteilen. Habt dieses Volk lieb und nähert Euch einander! Jedes Feld enthält Unkraut, meine langjährige Erfahrung soll Euch aber als Bürgschaft dafür dienen, daß Ihr im russischen Volk immer gute und kluge Menschen finden werdet, die Euch in Eurer gerechten Sache beistehen werden. Das russische Volk hat sein Recht unter Leiden erkämpft und wird dieses Recht zweifellos mit Euch teilen. Glaubt an Rußland, habt es lieb, und Rußland wird Euch eine Mutter sein. Als Unterpfand und Leitstern soll Euch der unsterbliche Name meines Lehrers Nikolaj Iwanowitsch Ilminskij dienen, der für mich die ganze Größe und die ganze Schönheit des russischen Nationalcharakters verkörpert.

Ich wende mich an solche unter Euch, die eine Ausbildung genossen haben. Denkt daran, daß Ihr selbst Euren armen und im Elend lebenden Mitmenschen helfen müßt und wartet nicht, bis die Hilfe von irgendwo kommt. Denkt daran, daß die Pflicht, an der Aufklärung der Tschuwaschen zu arbeiten, in erster Linie auf Euch liegt, auf Menschen, die aus ihrer Mitte kommen. Kehrt zurück zu Euren Stammesgenossen und bringt ihnen den Schatz der wissenschaftlichen Kenntnisse, fördert bei ihnen die Begriffe des Staatsbewußtseins, lehrt sie das Gesetz und das Recht: Die Sorge darüber müßt Ihr übernehmen, Ihr, die Ihr aus dem Volk stammt. Verabscheut nicht die Armut, die Schwäche und die Unwissenheit Eurer Stammesgenossen: Ihr stammt aus diesem Volk und für dieses Volk müßt Ihr arbeiten, damit Ihr Eure Schuld für Eure auf Kosten des Volkes erworbene Bildung bezahlen könnt. Die Liebe des Volkes wird Euch dafür belohnen, daß Ihr Eure Pflichten gegenüber Euren jüngeren Brüdern nicht vergeßt. Denkt daran, daß nur dann das Herz des Volkes Euch gehören wird, wenn Ihr Euch nicht von der Volkssprache entfernt. Die Hinwendung zur

Volkssprache bedeutet nicht Verrat an der russischen Sache. Dem großen russischen Vaterland kann man dienen, ohne die von Euren Müttern übernommene Sprache zu vergessen. Bringt das zu Ende, was ich vielleicht nicht mehr vollenden kann: Gebt dem Volk der Tschuwaschen die Heilige Schrift, nachdem Ihr die Übersetzung des Alten Testaments vollendet habt! Dient der Sache der christlichen Aufklärung, verbreitet das Licht des Evangeliums unter den zahlreichen Völkerschaften, die den russischen Osten besiedeln; der Sprache und der Mentalität nach steht Ihr diesen Völkerschaften näher als die Russen. Durch die Arbeit auf diesem großen Feld könnt Ihr dem russischen Volk einen Teil der großen Schuld zurückzahlen, die Ihr ihm für das Licht des Glaubens an Christus schuldet.

Haltet fest an der Familie: Die Familie ist die Stütze des Volkes und des Staates. Die Familiengebote waren immer stark unter den Tschuwaschen. Bewahrt diesen Schatz. Im Familienglück liegt der Schutz gegen die Heimsuchungen des Lebens. Eine starke und einträchtige Familie fürchtet keine äußere Mühsal des Lebens. Bewahrt die Keuschheit, fürchtet Wein und Versuchungen. Wenn Ihr die Familie bewahrt, bewahrt Ihr die Kinder und schafft eine starke Stütze für das friedliche und ruhige Arbeiten.

Seid einmütig untereinandern, meidet die kleinlichen Zwistigkeiten und Streitigkeiten, denkt an das große Gebot des Heilands: Liebet die, die Euch hassen, und glaubt fest an die Lebenskraft der Nachgiebigkeit und der Nachsicht.

Glaubt an die Kraft des friedlichen Schaffens und habt es gern. Erledigt die kleinste Sache geduldig und mit Liebe, murret nicht über die Dimension der Lebensaufgabe. Die allerkleinste Aufgabe kann durch liebevolle Einstellung erhellt und mit Sinn erfüllt und die allergrößte Aufgabe durch die nachlässige, schlampige Einstellung erniedrigt und enthauptet werden. Glück und Erfolg kommt zu jedem Werk, das friedlich und mit Liebe getan wird. Fürchtet krumme Wege und Umwege; Erfolge, die mit unsauberen Mitteln erreicht werden, sind instabil und vorübergehend.

Das ist, was ich Euch sagen wollte, jetzt wo ich mich vorbereite, vor dem Höchsten Richter zu erscheinen. Wenn ich jemand gewollt oder ungewollt beleidigt habe, so bitte ich, mir zu vergeben und für

Национальная библиотека
Чувашской
Республики
Ч-36359

mich zu beten. Ich danke herzlich für die Wärme und Güte, mit denen ich unverdienterweise beschenkt worden bin von Euch, meinen Stammesgenossen, und von vielen Russen, die mir mit offenem Herzen in meiner Sache zu Hilfe kamen. Ganz herzlichen Dank möchte ich allen meinen Freunden und Mitarbeitern sagen: Ohne ihren selbstlosen Eifer wäre auch mein Werk nicht zustande gekommen. Ich grüße meine unmittelbaren Schüler. Die Unterrichtsstunden, die ich mit ihnen verbracht habe, waren die erquicklichen Stunden meines Lebens. Gott bewahre und behüte Euch auf Euren Lebenswegen.

*IWAN JAKOWLEW*

Simbirsk, den 4. August 1921

## 1.5. ФРАНЦУЗЛА ХАЛАЛ

### TESTAMENT SPIRITUEL AU PEUPLE TCHOUVACHE

Au Nom du Père et du Fils et du Saint Esprit!

C'est à vous d'abord, amis et parents tchouvaches, que je m'adresse. Mon âme était en souci de vous; à cette heure, c'est vers vous que se tournent mes pensées et à vous, en premier lieu, que je veux communiquer mes dernières volontés.

Par dessus toutes choses, gardez fermement ce qu'il y a de plus sacré: la foi en Dieu. La foi donne des ailes aux forces de l'esprit et du coeur, procure la paix intérieure, console et encourage l'âme aux heures de malheur et de peine, la purifie et l'illumine dans le bonheur et le succès. Avec la foi en Dieu, on ne craint pas les épreuves de la vie; sans la foi, le monde reste froid et sombre. Croyez en l'existence d'un Remunérateur du bien et du mal, d'une Vérité Suprême, d'un Jugement divin, terrible et juste.

Honorez et aimez le grand peuple russe, bon et sage, qui cache en lui-même les forces inépuisables de l'esprit, du coeur et de la volonté. Ce peuple vous a reçu comme des frères au sein de sa

famille; il ne vous a pas offensés et ne vous a pas humiliés. Que ce peuple, conduit par la Providence vers des horizons élevés que nous ne connaissons pas, soit aussi le guide de votre propre développement. Suivez-le et faites-lui confiance. La vie de ce peuple a été difficile; sur le long chemin de douleur qu'il a parcouru, il a rencontré bien des peines et des malheurs, mais jamais il n'a laissé s'éteindre en lui-même le flambeau de l'esprit et jamais il n'a perdu la perception de la grandeur de sa mission. Que ses joies soient vos joies, ses peines vos peines et vous participerez à sa splendeur et à sa grandeur futures. Ce peuple ne vous à pas offensés dans le passé, il ne vous offensera pas dans l'avenir. Aimez-le et rapprochez-vous de lui. Il n'existe pas de champ sans ivraie, mais acceptez la caution de mà longue expérience pour avoir l'assurance de trouver toujours parmi le peuple russe des hommes bons et sages, prêts à soutenir votre juste cause. C'est à travers des souffrances que le peuple russe s'est acquis ses droits et, sans aucun doute, il partagera ces droits avec vous. Ayez confiance en la Russie, aimez-la et elle vous sera une mère. Que dans cette démarche, le nom immortel de mon maître Nicolaï Ivanov Ilminski vous serve de gage et d'étoile conductrice: il personnifie pour moi toute la grandeur et toute la beauté du caractere national russe.

Je m'adresse à ceux d'entre vous qui ont eu le bonheur de recevoir une instruction. C'est vous, souvenez-vous en, qui avez le devoir de venir en aide à vos malheureux compatriotes qui vivent dans la misère; n'esperéz pas que l'aide puisse leur parvenir d'ailleurs. N'oubliez pas que c'est à vous qu'incombe la tâche de promouvoir l'instruction des tchouvaches, à vous, des hommes issus de leur milieu. Retournez vers les gens de votre peuple et apportez-leur les trésors de la connaissance scientifique; développez en eux le concept du sentiment civique, enseignez-leur la loi et le droit. Vous qui êtes issus de ce peuple, vous devez avoir le souci de ces choses. Ne dédaignez pas la pauvreté, la faiblesse et l'ignorance de vos compatriotes. Vous êtes sortis de ce peuple et maintenant vous devez travailler pour lui; car c'est pour le compte de ce peuple que vous avez reçu une instruction et vous devez vous acquitter de cette dette. N'oubliez pas ce devoir envers vos frères plus jeunes: l'amour du peuple vous récompensera.

Rappelez-vous qu'il ne vous sera possible de gagner le coeur du peuple qu'à la condition de ne pas abandonner vous-mêmes l'usage de la langue tchouvache. Parler tchouvache ne constitue nullement un acte de trahison à la cause russe. On peut servir la grande patrie russe sans oublier pour autant sa langue maternelle. Achevez ce que je n'aurai peut-être pas la chance de mener à terme: Donnez au peuple tchouvache les Saintes Ecritures au complet en terminant la traduction de l'Ancien Testament. Servez la cause de l'enseignement du christianisme, propagez la lumière de l'évangile parmi les nombreuses nations qui peuplent l'est de la Russie; par la langue et l'esprit vous êtes plus près de ces peuples que les russes eux-mêmes. Vos efforts sur ce grand champ d'action vous permettront d'éponger en partie la grande dette que vous avez contractée envers le peuple russe en recevant de lui la lumière et la foi chrétienne.

Maintenez la cohésion de la famille; la famille est le soutien du peuple et de l'état. Les liens de famille ont toujours été solides parmi les tchouvaches; gardez donc ce trésor. C'est dans le bonheur de la famille que réside la sauvegarde contre les épreuves de la vie. Une famille solide qui vit en bonne harmonie ne craint pas les adversités de la vie. Gardez la pudeur, méfiez vous du vin et des tentations. En gardant la famille, vous garderez les enfants et vous créerez les bases solides en vue d'un travail paisible et tranquille.

Vivez en harmonie entre vous, fuyez les querelles mesquines et les disputes; souvenez-vous du grand commandement du Sauveur; "Aimez ceux qui vous haïssent" et croyez fermement que la force de la vie est l'apanage de celui qui n'insiste pas sur ses droits et va au devant de son prochain.

Croyez en la vertu du travail paisible et aimez-le. Accomplissez la plus petite tâche avec patience et amour; ne murmurez pas devant l'étendue des problèmes que vous pose la vie. Abordée avec amour, la plus petite tâche s'éclaircit et prend un sens, mais une tâche majeure entreprise avec négligence et nonchalance peut être compromise et amoindrie. Chance et succès accompagnent tout travail effectué paisiblement avec amour. Gardez-vous des chemins tortueux et détournés; les succés acquis

par des moyens louches sont précaires et temporaires.

Voilà ce que je voulais vous dire alors que je m'apprête à me présenter devant le Juge Suprême. Si j'ai laissé en quelqu'un le souvenir d'une blessure volontaire ou non, alors je le prie de me pardonner et de prier pour moi. A vous, mes compatriotes et aux nombreux russes qui, d'un coeur spontané, ont apporté leur soutien à mon oeuvre, j'exprime ma profonde reconnaissance pour la chaleur et l'affection, non méritées, qu'ils m'ont témoignées. Je remercie chaleureusement tous mes camarades et mes collaborateurs de travail. Sans leur zèle désinteréssé, mon oeuvre n'aurait pu être réalisée. Je salue mes élèves personnels. Les heures de cours passées avec eux ont été les plus heureuses de ma vie. Que Dieu vous garde et vous protège dans les sentiers de vos vies.

*Signé:* *IVAN IAKOVLEV*

Simbirsk, le 4 aôut 1921

## 2 сыпăк

## “ЧУНĂМ ПĔРМАЯХ СИРĔНШĔН ÇУНАТЧĔ...”

И.Я.Яковлевăн историри чăн вырăнне, тăван халăха Христос вĕрентĕвĕн çутипе çутăлтарса тĕнчери христианство культурин шайне çĕклес ĕçри пĕлтерĕшне халăха уççăн ăнлантарса пама тахçанах вăхăт çитнĕ. Çакна палăртакан ăсчахсем çине тăнине пула çеç çĕнетӳ тапхăрĕн пуçламăшĕнче Вĕрентекенĕмĕрĕн чăваш халăхне пехиллесе хăварнă Чун халалĕпе туллин паллашма пултартăмăр. Пĕр иккĕленмесĕр çапла калассăм килет: çак халала чăваш халăхĕн ĕмĕр сӳнми ăс-хакăл пуянлăхĕсен шутне кĕртме пулать. Унти кашни сăмахра тăван чăваш çыннисен шăпишĕн хыпса çуннă ăсчахăмăрăн канăççăр чĕри таппине туятăн. Халăха çутта кăларасшăн, ăна çын шутне кĕртсе чаплăлантарасшăн ырми-канми тăрăшнă çын, хăйĕн тивлетне Турă ирĕкĕ пек ăнланса, чăвашсене таса чунлă та мал туртăмлă пулма пиллесе хăварнă.

Çитмĕл çул ытла халăхран пытарса пурăннă çак Халала. Коммунистсен партийĕ пуç пулса тăнă тапхăрта, халăха уйрăмах православи тĕнĕнчен пистерсе, коммунизм сĕрĕмĕпе минретсе тăнă условисенче пирĕн шур сухаллă Мăн асаттемĕр чăваш халăхне Турра чунтан ĕненсе пурăнма пиллесе хăварнă сăмахсем, ăс парса каланисем халăх чĕрине кĕресрен хăранă.

Халăх ăнлавне çирĕп кĕрсе вырнаçнă тĕн вĕрентĕвĕнчен революци хĕç-пăшалĕпе хăтăлма пулман. Халăх ăнланнă: Турра ĕненни çынна нимĕн чухлĕ те сиен кӳмен, кӳрес те çук. Пачах урăхла, христианство культурипе паллашни çыннăн чун-чĕре пуянлăхне çирĕплетме, кăмăл-сипет тасалăхне упрама пулăшнă, пулăшĕ те.

Коммунизм вĕрентĕвĕ хăйне тĕн вĕрентĕвĕ пек çирĕплетме хăтланчĕ, чиркĕве патшалăхран уйăрса тĕп тума тăрăшрĕ, пурнăçра, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче православи

тĕнне пачах шута илмесĕр тăчĕ пулин те халăх христианствăран писмерĕ. Кашни çемьерех тин çеç Туррă–мăр çуттине курнă ачана шыва кĕртес йăла сӳнмен, чиркӳ праçникĕсене ахаль çынсем çеç мар, пысăк вырăнта ĕçлекен коммунистсем хăйсем те вăрттăн та пулин паллă тунă, чиркĕве кĕлле çӳрекенсен йышĕ те пĕчĕкех пулман. Ваттисем каланă тăрăх, И.Я.Яковлевăн Чун халалне чиркӳре кĕлĕ ирттернĕ чухне вула-вула панă, унта чăвашсене Турра ĕненме чĕнсе каланă сăмахсене чылайăшĕ çыра-çыра илсе, килтисене, тăван-пĕлĕшсене вуласа парса ăнлантарнă. Çак ӳкерчĕк пĕлтерĕшĕ питех те пысăк: пирĕн Вĕрентекенĕмĕрĕн юлашки кăмăлĕ влаçра ларакан коммунистсемшĕн мар, ахаль чăваш çыннисемшĕн пулнă. Ĕмĕр тăршшĕпех çутăлăха туртăннă чăвашсем вара мăн Асаттемĕрĕн пехилне май килнĕ таран тивĕç пулма тăрăшнă.

Анчах влаçра ларакансем "Чăваш халăхне панă халалăн" тулли текстне тăван халăхăмăртан пытарса пурăннă. Мĕншĕн çапла хăтланнă — çакăншăн çав вăхăтра хуçаланнă идеологсен чунĕ ыраттăр. Ăсчахсене илес пулсан,вĕсем те И.Я.Яковлева "пурнăçа тĕрĕс ăнланман–шăн", революцилле класс кĕрешĕвне йышăнманшăн, халăха вĕрентсе çутта кăларас ĕçе чăвашсем хушшине Христос тĕнне сарассипе тачă çыхăнтарнăшăн хытă вăрçнă, "тĕн сĕрĕмĕнчен" хăтăлайманшăн хытă питленĕ. Çавна пулах Чун халалĕн уйрăм пайĕсене татса-кĕскетсе пичетленĕ. Ăсчахăмăрăн сăмахĕсене урăх шухăш, ют сĕм кĕртме тăрăшнă. Халь тин куншăн тарăхни ытла та айванла пулĕччĕ. Пĕлетпĕр вĕт-ха, коммунизм идеологĕсене нихçан та чăнлăх интереслентермен.

"Чăваш халăхне панă халал" чăвашсемшĕн кăна мар, "вырăс патшалăхийĕн" Хĕвел тухăçĕ енче пурăнакан йышлă халăхсене Христос тĕнне вĕрентсе çутăлтарас ĕçре те виçесĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ Кодекс пулса тăрать. Унта чăвашсене çутăлăх паракан тата чăваш хушшине Христос

вĕрентĕвне сарма тăрăшнă Апостол аслă вырăс халăхĕпе килĕштерсе пурăнма, çак аслă халăха Анне вырăнне хурса юратса-хисеплесе тăма чĕнсе калать: "Унăн ăсийĕн вăйĕ, ырă кăмăлĕ, пурнăçа мала ярас шухăшĕ хисепсĕр нумай, нихăçан та пĕтес çук... Эсир малалла каяс ĕçре çак халăх сире çавăтса ертсе пыракан пултăр, ун хыççăн пырăр, ăна шанса тăрăр", — тенĕ И.Я. Яковлев. Çак сăмахсем, тĕрĕссипе, Раççей патшалăхне хăйсен ирĕкĕпе кĕнĕ ытти халăхсене те пырса тивеççĕ. Çавăн пекех вĕсене вырăс халăхĕ те шута илмесĕр тăма пултараймасть. Витĕмлĕ сăмахсем вырăс халăхĕн историри вырăнне, хăйĕн пысăк çемйине пĕрлешнĕ халăхсем умĕнчи аслă тивĕçне туллин палăртаççĕ.

Çынлăха, тăван халăха юратнипе çыхăннă чăн-чăн патриотизмпа гуманизм хăватне, этемлĕхĕн ĕмĕрхи чун ăшăлăхне çав таранччен витĕр ăнланнине кура хаклас пулсан, "Чăваш халăхне панă халал" кирек хăш халăхăн пулас ăрăвĕсене ăнлантарса вĕрентмелли ĕмĕр сӳнми литература палăкĕ те пулса тăма тивĕçлĕ.

Ахальтен мар ăна чикĕ леш енче тимлесе тишкереççĕ, тĕрлĕ чĕлхене куçарса пичетлеççĕ. Тĕслĕхрен, Германири "Ырă хыпар" издательство (Дилленбург хули) Иоанн çырнă таса Евангелин чăвашла куçарăвне пичетлесе кăларнă. Кĕнекен умĕн каланинче тĕнчери паллă философсем, ăсчахсем, çыравçăсем, культура ĕçченĕсем (В.Паскаль, Гете, И.Кеплер, Э.Кант, Г.Гейне, Г.Галилей, А.Эйнштейн, И.Ньютон, Ф.Достоевский) хăйсен пурнăçĕпе пултарулăхĕнче Таса та Сăваплă çырулăх — Библи — мĕнлерех витĕм кӳни çинчен çырса хăварнă сăмахсене илсе кăтартнă. Кунта чуна савăнтараканни тĕнчери ăс-тăн Улăпĕсен каларăшĕсемпе юнашар пирĕн Патриархăн "Чăваш халăхне панă халалĕнчен" хăш-пĕр сыпăксене илсе пани пулса тăрать. Асăннă мухтавлă çынсен шухăшне пĕтĕмлетсе, И.Я.Яковлевăн Халалĕнчи виçĕ абзаца илсе панă:"Эй тусăмсем, хамăн тăван çыннăмсем, чăвашсем! Чунăм пĕрмаях

сирĕншĕн çунатчĕ, халĕ те акă манăн мĕнпур шухăшăм сирĕн çийĕре куçрĕ. Юлашки тертĕме пуринчен маларах татах сире каласа хăварас тетĕп.

Турра ёненсе пурăнасси калама çук пысăк япала пуринчен ытла эсир çавна хытă тытса тăрăр. Ёненӳ этеммĕн ăсне, кăмăлне çунатлантарса çăмăллатать, чун пурнăçне канăçлăх парать, лăплантарать; инкек-синкек, хуйхă-мĕн курнă вăхăтра чуна хăват парать; ĕçсем ăнса телейлĕ пурăннă чух, ёненӳ чуна тасатать, ăна çутатса тăрать. Турра ёненсе пурăнсан, пурнăç хытти этемшĕн хăрушă мар; Ăна ёненсе тăмасан, çĕр çинчи пирĕн пурнăç сивĕ пулать. Тĕттĕм пулать. Тĕнчене пултарнă çӳлти Турра ёненсе тăрăр. Ырă ĕçе те, усал ĕçе те чăн аслă тӳрĕлĕх татĕ, — Турă сут тăвĕ, — вăл сут тӳрĕ. Вăл сут пит хăрушă...

Çӳлти аслă Турă умне кайма хатĕрленсе, сире каласа хăварас сăмахăм манăн мĕнпурĕ çакă ёнтĕ. Ирĕклĕ е ирĕксĕр эпĕ кама та пулин кӳрентерсе, вăл ман çине çил хывса çӳренĕ пулсан, пурсăра та тархаслатăп: çиллĕре манăр, каçарăр мана, маншăн Турра кĕлтăвăр. Эй тăван çыннăмсем! Чăн малтан тав тăватăп сире. Эсир маншăн ялан та ăшă пултăр, кăмăллă пултăр. Сиртен çакна курма эпĕ тивĕçлĕ те пулман. Пурăнан пурнăçăрта сире пурсăра та Турă сыхласа, упраса усратăр". Асăннă кĕнеке вара вырăсла тата чăвашла тухнисĕр пуçне нимĕçле, французла, акăлчанла çапăнса тĕнчене сарăлнă.

Тĕрĕссипе, наци ăнланулăхне çакăн пек çӳллĕ шая çĕклекен хăватлă Чун халалĕ кашни халăхăн çук та. Атте-Турăмăр И.Я.Яковлев пек ăслă çынна çак çутă тĕнчене кӳнĕшĕн пирĕн, чăвашсен, савăнăçпа тулмалла, хĕпĕртемелле кăна.

Çавна май Вĕрентекенĕмĕр çакăн пек хăватлă Халал çырса хăварас шухăш патне мĕнле пырса тухни питĕ интереслентерчĕ.

Халал çине 1921 çулхи çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче алă пуснă. Анчах çакă вăл Халала И.Я.Яковлев шăп çак вăхăтра

çырнине пĕлтермест. Савнă чăвашсем валли чун халалĕ çырса хăварас шухăш Иван Яковлевичăн пуçĕнче 1921 çулччен чылай малтан тĕвĕленнĕ. Акă, И.Я.Яковлевăн "Манăн пурăнăç" ятпа 1997 çулта пичетленсе тухнă аса илĕвĕсен тулли кăларăмĕнче вăл çапла каланă: "Анчах халĕ шкул та, чăваш халăхĕ хăй те революци вăхăтĕнче тата ун хыççăн пулса иртнĕ пысăк улшăнусен тапхăрĕнче христианство идеалĕсен шайĕнче тытăнса тăрайманнине куратăп. Çавăнпа та хам вилес пулсан асра тытмашкăн вунă çул каярах чăваш халăхне пехил парса çырнă халалăма хальхи саманара пичетлеме май та çук тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен эпĕ унта православи çинчен тата халĕ хисепрен тухнă, ним вырăнне хумасăр тиркекен çавнашкал ăнлавсем çинчен калатăп". Малалла пурпĕрех çапла хушса хурать: "Çапах та хамăн тăван чăвашсен пулас ăрăвĕсене çак ĕмĕтри ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртме пехиллесе хăваратăп", — тенĕ (1). "Манăн пурăнăç" ятлă аса илӳсен кĕнекинче 597 страницăри сноскăра А.В.Жиркевич çапла ăнлантарни пур: "И.Я.Яковлев, эпĕ ыйтнипе, çак халалăн копине ӳкерме пачĕ, çав копине эпĕ вăл ирĕк панă хыççăн çак аса илӳсем çумне хушса паратăп". Сăмахĕ вара кунта шăпах вунă çул каярах çырнă халал пирки пырать.

Аса илӳсен çак йĕркисене 1918 çулта çырса хунă тесе çирĕплетме пулать. Мĕншĕн тесен аса илӳсен кĕнекинчи "Юлашки йĕркесем" текен сыпăкра (çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсем шăпах çав сыпăкран. — *И.М.*) И.Я. Яковлев 1917 çулта пулса иртнĕ ĕçсене "пĕлтĕр" тесе аса илет: "Пĕлтĕр, 1917 çулта, манăн ырă пĕлĕш, эпĕ тахçантанпах лайăх пĕлекен Сергей Степанович Медведков вилсе кайрĕ..." е тата: "Кăçалхи авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче, большевиксем Чĕмпĕре чехословаксемпе Халăх çарĕн аллинчен туртса илнĕ хыççăн, ман патма, хваттере, офицерпа темиçе салтак ухтарас тĕллевпе килсе кĕчĕç..."(2). Çапла вара 1918 çулта каласа кăтартнă аса илӳсенче И.Я.Яковлев чăваш халăхне вунă çул каяллах халал-пехил çырса хăварнăччĕ тесе асă–

нать пулсан, эпир пӑхса тухакан Чун халалне пирӗн Вӗрентекенӗмӗр 1908 ҫултах ҫырнӑ пулса тухать. Ку вӑл шӑпах Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ 40 ҫул тултарнӑ тата Библин Ҫӗнӗ Сӑмахне йӑлтах чӑвашла куҫарса пӗтернӗ вӑхӑта ӳкет. Паллах, ҫав историллӗ самантра И.Я.Яковлевӑн пӗтӗм чӑваш халӑхне, унӑн пулас ӑрӑвӗсене ырӑ сунса пехиллес ӗмӗт ҫуралма пултарнӑ.

Хайне яланах Н.И.Ильминский ӗҫне малалла тӑсаканӗ вырӑнне хурса пурӑннӑскер, Николай Иванович вилес умӗн Иван Яковлевича хӑй ҫумне чӗнсе илсе шала кайнӑ сассипе пехиллесе хӑварнӑ сӑмахсене пӗр самантлӑха та манман: "Пӗлетӗп, Хӑвӑр халӑхӑра юрататӑр эсир, вӑл пуррипе мӑнаҫланатӑр... Эсир — националист... Вырӑс халӑхӗ сире мӗн пуррине йӑлтах парӗ... Турра кӗлтумаллине те хӑвӑрӑн тӑван чӗлхӗрпе парӗ, литература та парӗ. Анчах пӗртен пӗр условипе: эсир хӑвӑр та, халӑхӑр та сирӗн православи тӗнне ан пӑрахтӑр..."(3). Ҫакна, хайне кура тепӗр халал-пехиле, Иван Яковлевич нихҫан та асран кӑларман.

Н.И.Ильминский ҫапла пехилленӗ чухне парнеленӗ турӑша Иван Яковлевич мӗн куҫне хупиччченех чи сӑваплӑ парне вырӑнне хурса упранӑ. Кунсӑр пуҫне тата Атӑлпа Урал хушшинчи йышлӑ халӑхсене Христос тӗнне вӗрентсе ҫутӑлтарас ӗҫре ҫул уҫса тата кӑтартса пынӑ паллӑ миссионер Н.И.Ильминский Хусанта ӗҫленӗ Гурий святителӗн Тӑванлӑх канашӗ ҫумӗнчи Куҫару комиссийӗ ячӗпе те халал ҫырса хӑварнӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн хайне ҫутӑ ҫӑлтӑр пек ҫул кӑтартса пынӑ вӗрентекенне асӗнчен ямасӑр, вилес умӗн тӑван халӑхне юлашки пил сӑмахӗсем каласа хӑварас шухӑш И.Я.Яковлева канӑҫ паман. 1908-1910 ҫулсенче вӑл хайне лайӑхах туйман, ҫакна Иван Яковлевич хӑйӗн чи ҫывӑх та шанчӑклӑ юлташӗ А.В.Рекеев тата чунтан юратнӑ ывӑлӗ Алексей патне ҫырнӑ ҫырусенчен те курма пулать. "Эпӗ хам та иртнӗ икӗ ҫул хушшинче тӑтӑшах чирлекелесе тӑтӑм: пит хӑвӑрт ывӑнатӑп, вӑйӑм-халӑм чакрӗ, хавшанине туятӑп. Вилӗм ҫывхарса

килет пулӗ, тен, вӑл манпа юнашарах та-и... Анчах та пирӗн тепӗр виҫӗ ҫул пурӑнсан юрӗччӗ-ха", — ҫырнӑ вӑл А.В.Рекеев патне 1910 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 30-мӗшӗнче (4). Шӑпах ҫавӑн пек йывӑр шухӑшсем пуснӑ вӑхӑтра ҫырса хума пултарнӑ та И.Я.Яковлев хӑйӗн Чун халалне.

Сӑмах май, *чун халалӗ* тени мӗне пӗлтерни пирки те каласа хӑвармалла пулӗ. "*Духовное завещание* или *грамота* стар. отказная, либо завещанье или *духовная* ж. письменное, законно составленное распоряжение о добре, имуществе своем на случай смерти; последняя воля" (Даль 1, 504). Ӗлӗк пуян ҫынсем пурте тенӗ пекех вилес умӗн чун халалӗ ҫыртарнӑ, ҫапла тӑвиччен малтан вӗсем священника чӗнсе илнӗ, ун умӗнче чунне уҫса калаҫса ҫылӑх каҫарттарнӑ хыҫҫӑн халал (завещани) ҫыртарнӑ. И.Я.Яковлевӑн Халалӗ, паллах, пурлӑха пайлассипе ҫыхӑннӑ документ мар. Пачах урӑхла, ӑс-хакӑл, кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен ҫӳллӗ шайра тӑракан пысӑк пӗлтерӗшлӗ Чун халалӗ, тӑван халӑхшӑн хыпса ҫунакан ҫыннӑн ӗмӗтленнӗ ӗмӗчӗ.

1917 ҫулхи октябрьти революци хыҫҫӑн, И.Я.Яковлев Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче пулса иртекен юрӑхсӑр ӗҫсене курса чун-чӗререн пӑшӑрханнипе сывлӑхӗ чылай хавшанине, вӑйӗ пӗтсе пынине туйса, халал пирки ҫӗнӗрен шухӑшлама пуҫланӑ. Ҫав тапхӑрта И.Я.Яковлевпа ҫывӑх туслӑ пулнӑ, ӑна ҫыру ӗҫӗсене туса пыма пулӑшнӑ, ҫав хушӑрах пирӗн "чӑваш Туррин" аса илӗвӗсене ҫырма пикеннӗ А.В.Жиркевич (5) хӑйӗн кун кӗнекинче ҫапла ҫырса хунӑ: "1919 ҫул. Ака уйӑхӗн 5-мӗшӗ. Тинтерех ҫеҫ ман патӑмра И.Я.Яковлев пулчӗ. Вилес умӗн чун халалӗ ҫырса хӑварас, тет. Пулӑшу ыйтма килнӗ. Ват ҫын хӑйне япӑх туять. Ӑна Чӑваш шкулӗнчен пуҫӗпех хӑваласа кӑларса ярасшӑн. Уйрӑмах Дормидонтов пуп иртӗхет... Халала ҫырас шутпа тӗл пулмалли кун пирки калаҫса татӑлтӑмӑр".

Ҫакӑн хыҫҫӑн кун кӗнекинче ҫапла ҫырни пур: "Ака уйӑхӗн 8-мӗшӗ. Яковлевсем патне кайса килтӗм, Иван

Яковлевич манпа халал тексчӗ пирки канашласа пӑхасшӑнччӗ... Ватӑлсах ларнӑ вӑл, хӑйне хӑй юхӑнтарса янӑ. Телее, ун патне Питӗртен Николай ятлӑ ывӑлӗ килнӗ... Йывӑр пулчӗ паян Яковлевсем патӗнче пулма. Пӗтӗм пурнӑҫӗн ӗҫӗ куҫ умӗнче арканни йӑлтах ҫапса хуҫнӑ ватӑ ҫынна".

Анчах кӗҫӗн ывӑлӗ юнашар пулни тата Мускавра пурӑнакан аслӑ ывӑлӗ ашшӗн шӑпи пирки Раҫҫейӗн ҫӗнӗ правительствин пуҫлӑхӗпе В.И.Ленинпа курса калаҫни ватӑ Иван Яковлевича кӑштах лӑплантарнӑ. Шурсухалӑн кӑмӑлӗ улшӑннӑ, халал пирки те сӑмах хускатман-ха вӑл. Ҫапах та Чӑваш шкулӗнче ӗҫлекенсене пӑлхатакан хӑш-пӗр учительсем тата "революци тивлечӗпе" пуҫӗсене каҫӑртма пӑхакан чӑваш ачисем (вӗсен шутӗнче вӗренӳ ҫине ҫиелтен пӑхакан ҫӑмӑлттайсем ытларах пулнӑ) хӑйне кашни кунах сӗмсӗр ӗҫсемпе кӳрентернипе чунӗ кӳтсе ҫитнӗ Иван Яковлевич пархатарсӑрсене тарӑхса ылханнӑ. Хӗрсе кайнӑ самантсенче вилсессӗн те хӑйне хирӗҫ тӑнӑ чӑваш пупӗсене (Чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи чиркӳре ӗҫленӗ И.Д.Дормидонтовпа В.Н.Никифорова) тата шкулта вӗренекен чӑваш ачисене тупӑк патне те ан ҫывхарччӑр, панихидӑна та ан хутшӑнччӑр, ку ҫеҫ те мар — вӗсенчен, пархатарсӑрсенчен, чечек кӑшӑлӗсем те ан йышӑнӑр, тенӗ.

А.В.Жиркевичӑн аса илӳ дневникӗнче ҫырнӑ тӑрӑх, Иван Яковлевичпа кашни кун тенӗ пекех темиҫешер сехет калаҫса ларнӑ хушӑра ватӑ юрист ылхану христианла пулманни, ҫӑлаканӑмӑр Христос темле асап тӳссен те хӑйӗн тӑшманӗсене каҫарни, ҫавна май мӗнле пурӑнса, мӗнле вилмеллине кӑтартса пани ҫинчен каланӑ. Кирек мӗнле пулсан та ӗмӗрне чӑвашсемшӗн ӗҫлесе ирттернӗ Иван Яковлевич пек ӑслӑ-тӑнлӑ Шурсухалӑн апла тума юраманнине ӑнлантарнӑ, ҫавӑн пекех тӑван халӑха ылханни хӑйӗн вӗрентекенӗн Н.И.Ильминскин юлашки пехилне хирӗҫ кайнине пӗлтерни пулӗччӗ тесе ӳкӗтленӗ. Паллах, ват

çын хирĕçлемен, А.В.Жиркевича вăл чунтан хисепленĕ, ун сăмахĕсемпе килĕшнĕ.

Çавна май А.В.Жиркевичăн И.Я.Яковлевпа тĕл пулнисем пирки çырса пынă кун кĕнекинче текех Халалпа çыхăннă йĕркесем куç тĕлне пулмарĕç. Ывăлĕсем ашшĕ патне килни çинчен 1921 çулхи çурла уйăхĕн 19-мĕш кунĕнче çырса хуни пур: "Яковлевсен — пысăк савăнăç: ывăлĕсем, Алексей Ивановичпа Николай Иванович иккĕшĕ те килнĕ...".

Пĕр ыйту канăç памасть: И.Я.Яковлева çакнашкал Чун халалĕ çырма кам пулăшнă-ши? Çыруçисем камсем пулнă-ши? Халала вăл малтан вырăсла е чăвашла каласа çыртарнă-ши? Чăвашла та питĕ илемлĕ чĕлхепе çырса хăварнă вĕт-ха! Чăваш çыруçи кам пулнă-ши?

"Чăваш халăхне панă халала" чăвашла тата вырăсла çырнă. 1955 çулччен Халал И.Я.Яковлевăн архивĕнче упраннă. Çак архива вара 1922 çулта СССР Наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ, А.И.Яковлев профессор хăй хваттерне илсе килнĕ. Анчах коммунизм саманин синкерлĕ çулĕсенче ăслă-тăнлă Алексей Иванович, тен, сыхлăх шучĕпе-тĕр, ашшĕ Халалĕ пирки сăмах-юмах хускатни паллă мар.

Иван Яковлевичăн мăнукĕ — Ольга Алексеевна Яковлева — ашшĕ çĕре кĕнĕ хыççăн тата çĕршыв политики те улшăннă май 1955 çулта аслашшĕ архивĕн чылай пысăк пайне ССР Союзĕн В.И.Ленин ячĕллĕ Патшалăх библиотекин Алçырусен пайне леçсе панă. Çав материалсен шутĕнче И.Я.Яковлевăн "Чăваш халăхне панă халалĕн" экземплярĕсем те пулнă: икĕ экземпляр — вырăсла текст, икĕ экземпляр — чăвашла.

И.Я.Яковлевпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем аса илнĕ тăрăх, ватăлнăçемĕн вăл хут ĕçне туса пыма пăрахнă, çырусене каласа çыртарнă. Ку ĕçре ăна эпир çÿлерех асăннă А.В.Жиркевич нумай пулăшнă. Унсăр пуçне ятарлă çыруçă-чăваша шалупах тытса тăнă. Халала та И.Я.Яковлев

каласа çыртарнă курăнать. Вырăсла текстăн пĕрремĕш вариантне хура тушьпе çырнă, ун хыççăн вара унта Иван Яковлевич хăйĕн аллипе тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Таса экземплярне икке хутлатнă лайăх пахалăхлă хулăн шурă хут çине илемлĕ те уçă почеркпа çырса хунă. Кунти почерк тӳрлетнĕ экземплярти почеркран уйрăлса тăрать. Çак таса экземпляра лайăх хутранах туса хатĕрленĕ конверт ăшне чикнĕ, шал енчен ăна ятарлă марлĕ хăюпа çирĕплетнĕ. Конвертăн пиччĕн енне сулахайра хура тушьпе "Чун халалĕ" ("Духовное завещание") тесе кукăр-макăр саспаллисемпе çырса хунă. Çав енчех кăранташпа тепĕр хут: "Духовная И.Я." тесе çырни пур. Конвертăн уçăлакан енне хĕрлĕ кăранташпа вырăсла "Духовное завещание И.Я. Яковлева, обращение к чувашам" тесе çырса хунă.

Халалăн текстĕнче ятарласа уйăрнă ят çук. Вăл мĕн пур чун халалĕсене е пилсене çырнă чух усă куракан: "Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн ячĕпе!" сăмахсемпе пуçланать. Ăнланмалла ĕнтĕ, Турра таса чĕререн ĕненсе пурăннă Иван Яковлевич тăван халăха чĕнсе калакан халал-пехиле кĕл тунă чухне пуçласа калакан тата пĕтĕм чун-хавала таса та пархатарлă туйăмсемпе çеç çыхăнтаракан сăваплă сăмахсемсĕр пуçлама пултарайман. "Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн" ячĕсене асăнни Халалта калас тенĕ сăмахсем И.Я. Яковлевшăн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса парать.

Вырăсла текстăн таса экземплярĕнче те хĕррине хăварнă вырăнсенче ахаль кăранташпа çичĕ çĕртре паллă лартнă, çав паллăсем тĕлĕнчи йĕркесенче çыруçă тунă грамматика йăнăшĕсене Иван Яковлевич хăй аллипе тӳрлетнĕ вырăнсем пур. Текст вĕçĕнче вара хăех хура тушьпе "Иван Яковлев" тесе алă пуснă. "Чĕмпĕр хули. 1921 çулхи çурла уйăхин 4-мĕшĕ" тенине симĕс чернилпа çырнă.

Вырăсла халалăн тӳрлетнĕ пĕрремĕш экземплярĕпе пĕрлех чăвашла çырнă текстăн икĕ экземплярĕ упранать. Вĕсене иккĕшне те пĕр алăпа çырнă. Пĕрне икке хутлатнă,

ёненекенсене, хӑйсен ывӑлӗсем вырӑнне хурса йышӑннӑ вӗренекенӗсене тата тӗрлӗ халӑх ҫыннисем — чиркӳ ҫыннисем — патне янӑ ҫырусемпе (посланисемпе) танлаштарма юрать. Тӗрӗссипе, ҫавнашкал ҫыру (послани) ҫырса ярасси христианство литератуинче тӗп форма шутланнӑ. Апостолсем ӗҫлесе пурӑннӑ тапхӑрта ҫакӑ Иисус Христос Туррӑмӑра пӗр иккӗленмесӗр ёненме, чӑн тӗне ёненекенсен таса йӑли-йӗркине тытса тӑма, пӗр-пӗрин хушшинче тӑвансем пек килӗштерсе пурӑнма вӗрентсе каланине пӗлтермелли пӗртен пӗр меслет пулнӑ.

Вырӑссен пӗрремӗш митрополичӗсем те чиркӳ ҫыннисем патне апостолсем пекех вӗрентсе калакан ҫырусем сахал мар ҫырнӑ.

И.Я.Яковлевӑн халалӗнчи хӑш-пӗр шухӑшсене Иисус Христосӑн Турӑ ирӗкӗпе чӗнсе илнӗ апостолӗсен ҫырӑвӗсенчи шухӑшсемпе танлаштарма пулать. Тӗслӗхрен, апостолсем хӑйсен ҫырӑвӗсенчи пӗр-пӗр ҫӗнӗ шухӑша "Эй, савнӑ ҫыннӑмсем" е "Эй, тӑвансем, эй, тусӑмсем, эй, савнӑ тӑвансем!" тесе пуҫланӑ: "Эй, тӑвансем, хамӑра Ҫӑлакан Иисус Христос ячӗпе тархаслатӑп сире: эсир пурсӑр та пӗр сӑмахра тӑрӑр, пӗр пӗринчен уйӑрӑлмалла ан пулӑр, пӗр кӑмӑллӑ, пӗр шухӑшлӑ пулса пӗрле тӑрӑр" (Павел апостол Коринф ҫыннисем патне янӑ малтанхи ҫырӑвӗ, I:10) е тата "Эй, тӑвансем, ача ӑслӑ ан пулӑр; усал тӑвас тӗлӗшрен эсир ача ӑслӑ пулӑр, ӑс кирлӗ ҫӗрте ҫитӗннӗ ҫын пек пулӑр... хӑвӑр мӗн пӗлнипе ыттисене усӑ кӳме тӑрӑшӑр" (Павел, ҫавӑнтанах, XIV:20,26). И.Я.Яковлев та халала "Эй, тусӑмсем, хамӑн тӑван ҫыннӑмсем, чӑвашсем!" сӑмахсемпе пуҫласа ярать.

Ҫветтуй апостолсен ҫырӑвӗсенчи тӗп шухӑш йӑлтах ҫӑлаканӑмӑр Иисус Христос Турра пӗр иккӗленмесӗр, таса чунпа ёненсе тӑма чӗнсе каланипе ҫыхӑннӑ. "... иккӗленекен ҫын вӑл ҫил ҫӗклентерсе, ҫилех салатса ракан тинӗс хумӗ евӗрлӗ... Иккӗллӗ шухӑшлакан ҫын пур

тӗлӗшрен те тӗрексӗр", — тет ҫветтуй Иаков апостол мӗн пур ӗненекенсене янӑ ҫырӑвӗнче (Иаков: 6,8).

И.Я.Яковлев та халалӗнче "Турра ӗненсе пурӑнасси калама ҫук пысӑк япала — пуринчен ытла эсир ҫавна хытӑ тытса тӑрӑр. Ӗнену этемӗн ӑсне, кӑмӑлне ҫунатлӑлантарса ҫӑмӑллатать, чун пурнӑҫне канӑҫлӑх парать, лӑплантарать, инкек-синкек, хуйхӑ-мӗн курнӑ вӑхӑтра чуна хӑват парать; ӗҫсем ӑнса телейлӗ пурӑннӑ чух ӗнену чуна тасатать, ӑна ҫутатса тӑрать", — тесе чӑвашсене юратса йӑваш кӑмӑлпа тархаслать.

Петр апостол мӗн пур ӗненекенсене янӑ малтанхи ҫырӑвӗнче ҫак шухӑша ак ҫапла каласа хӑварнӑ: "Ӑна ӗненсе тӑратӑр, пит мухтавлӑ, калама ҫук пысӑк савӑнӑҫпа савӑнатӑр; хӑвӑр ӗненнӗ тӑрӑх юлашкинчен чунӑрсемшӗн ҫӑлӑнӑҫ тупатӑр" (Петр 1:8-9).

Апостолсем хӑйсен ҫырӑвӗсенче тӗрлӗ япаласемпе ыйтусем тавра сӑмах хускатса калаҫнӑ пекех Иван Яковлевич та "Чӑваш халӑхне панӑ Халалра" е тӑван халӑхӗн пурнӑҫӗнчи, малашлӑхӗнчи тӗп ыйтусене хускатса, пире, юратнӑ ачисем пек курса, ӑс парать. Апостолсем хӑйсен вӗренекенӗсене туса ҫитерейменӗҫӗсене малалла тӑсма тархасланӑ пек, "Эпӗ туса пӗтерейменӗҫсене эсир туса пӗтерӗр" — тесе ӳкӗтлет. Ҫапла вара И.Я.Яковлев хӑйӗн пурнӑҫӗ тӑршшӗпех туса пынӑ чыслӑ та сӑваплӑ ӗҫӗсемпе тата ҫакнашкал халал ҫырса хӑварнипе те "Чӑваш Апостолӗ" ята чӑнласах тивӗҫлӗ.

Иртнӗ ҫулсенче хаҫат-журналта тата ӑслӑлӑх кӗнекисенче пичетленнӗ статьясемпе наука ӗҫӗсене вуланӑ май акӑ мӗн пӗлетпӗр: ҫав тери йывӑра, тӳсме ҫук йывӑра килнӗ пирӗн патриархшӑн пурӑнӑҫӑн юлашки тапхӑрӗ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ӑна "йӳтенӗ ват супнӑ", "пӗтӗм ӗҫе ура хурать" тесе ӗҫрен кӑларса пӑрахнӑ. Ку кӑна та мар, хӑй тӑрӑшса-чупса ҫӳренипе туса лартнӑ шкул хваттерӗнчен хӑваланӑ, шкулӑн ял хуҫалӑх ферминчен йӳнӗрех хакпа



А.В. Жиркевич (1853–1927), псевдоним – А. Нивин, юрист тата писатель. (Портрета И.Репин художник 1891 çулта çырнă).

пахча çимĕç, сĕт илсе тăма чарнă. Вĕренме пĕлмен, пӳтсĕр чăваш ачисем ват çынтан тăрăхласа кулнă. 70 çултан иртнĕ шур сухаллă Вĕрентекенĕн чунне çакă тем пекех ыраттарнă пулин те Халалта вăл "вĕренсе çутăлма телей тупнă чăвашсене" ырă кăмăлпа шанса, тăван халăха вĕрентсе çутăлтарас ĕçе йăлтах хăйсем çине илме, чăваша патшалăх–ра чăн лайăх этем шутне кĕмешкĕн пулăшма пил панă. Çавăнпа пĕрлех хăй туса çитереймен ĕçсене малалла тăсма та вĕсенех шаннă. Çак Халала çырнă хыççăн вăл каярахпа та пĕрре мар çапла каланă: "... пытармастăп, юрататăп эпĕ чăвашăмсене, пĕтĕм чунтан ырă сунатăп вĕсене", — тенĕ.

Юратнă чăвашсене шанни, вĕсен ырă пуласлăхне ĕненни Иван Яковлевичăн христианла таса кăмăл-сипетне, пуян ăс-тăнне кăтартса парать. Халала вĕçленĕ майпа чăваш Патриархĕ (Чĕмпĕрти чăвашсем ăна юратса "чăваш Турри" тесе те чĕннĕ) тăван çыннисенчен каçару ыйтать, хăйшĕн Турра кĕлтума тархаслать, чăн кăмăлтан тав тăвать.

Тен, пирĕн халĕ çакăн пек аслăран та аслă, пысăк чун туйăмлă пехил парса хăварнăшăн Вĕрентекенĕмĕре пирĕн çĕре çити пуç тайса тав тума, унăн пехилне халиччен тивĕçлипе хаклама пĕлейменшĕн чĕркуçленсе ларса каçару ыйтма вăхăт çитрĕ пулĕ. Апла пулсан, хамăрăн мухтавлă Патриархăн халалне тивĕçлĕ ĕçпе пурнăçа кĕртсе пынине кăтартса парар.

Литература

1. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. М.: Республика, 1997. 597 с.

2. Çавăнтах. 591 с.

3. Çавăнтах. 226 с.

4. Яковлев И.Я. Письма. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. С.224.

5. А.В.Жиркевич 1857 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 17-мĕшĕнче хальхи Латви Республикин Лудза хулинче

полякран тухнӑ подпоручик ҫемйинче ҫуралнӑ. Петербургри юридици ҫар академине пӗтернӗ. Ҫар сучӗн службинче генерал-майора ҫитнӗ. 1915 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнче Чӗмпӗрти тӑванӗсем патне куҫса килнӗ. Чӗмпӗрте 11 ҫул иртнернӗ. И.Я.Яковлевпа 1916 ҫулта паллашнӑ. Унпа куллен тӗл пулнисем ҫинчен тата И.Я.Яковлев аса илӗвӗсене ҫырса пынӑ нумай томлӑ кун кӗнеки (дневник) Мускавра Л.Н. Толстой музейӗнче упранать. А.Жиркевичӑн кун кӗнекине чӑваш патшалӑх гуманитари наукисен институчӗн аслӑ наука сотрудникӗ Г.А.Александров пичете хатӗрленӗ. Унӑн сыпӑкӗсем "Лик Чувашии" журналта номертен номере 1995 – 1996 ҫулсенче пичетленсе тухнӑ.

6. Жиркевич А. Встречи с И.Я.Яковлевым// Лик Чувашии. 1996. № 1–2. С. 149.

3 сыпăк

# ЭПИР ПĔЛМЕН И.Я. ЯКОВЛЕВ

## 3.1. ЧĂВАШ ТА ÇЫН ШУТНЕ КĔТĔРЧЧĔ

И.Я.Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă кĕнекесем нумай. Çав шутра вăл çуралнăранпа 100, 120 çул тата Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнăранпа 100 çул çитнĕ май кăларнă кĕнекесене асăнмалла. Вĕсенче И.Я. Яковлев вырăс классикĕсен А.С. Пушкинăн, И.А. Крыловăн, М.Ю.Лермонтовăн, Л.Н.Толстойăн, А.Н. Некрасовăн произведенийĕсене, аслă педагогăн К.Д.Ушинскин вĕрентӳ кĕнекисемпе пĕчĕк калавĕсене чăвашла куçарни çинче тĕплĕн чарăнса тăнă, анчах унăн тĕп куçару ĕçĕ – Библие чăвашла куçарни — пирки çиелтен асăнам пекки кăна тунă. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ, 1917 çулхи октябрьти революци хыç–çăн Совет Союзĕнчи пур йышши тĕне, чи малтанах христиансен православи тĕнне ĕç халăхне пусмăрласа пурăнмалли хатĕр тата ĕç çыннине минретекен наркăмăш тесе пĕлтернĕ, чиркĕве патшалăхран уйăрнă, атеизм пропагандине вăйлăн сарса янă.

Халĕ ĕнтĕ, çĕршыв пурнăçĕнче çĕнĕ улшăнусем пулса иртекен тапхăрта, ку ыйтупа уççăн калаçу пуçарма вăхăт çитнĕ.

Тĕн кĕнекисене чăвашла куçарас шухăш И.Я.Яковлева пĕр самантлăха та канăç паман. Ырă кăмăллă та ĕçе юратакан халăх хушшинче ӳссе çитĕнсе, вăл ытти халăх–сенчен ютшăнакан, хутла пĕлмен чăвашсем Христос тĕнне йышăнманнине, хăйсене тĕне кĕртнĕренпе 150 çул ытла иртнĕ пулин те авалхи турăсене вунă ĕмĕр каярахри пекех пуç çапса пурăнние, чӳк йăли-йĕркине тытса пынине курнă. Ачи-пăчине çуралсанах шыва кĕртнĕ пулин те чăваш хăнăхнă йăларан писеймен, вăл ячĕшĕн кăна христианин пулнă. Кунăн сăлтавĕ, тĕпрен илсен, чăваш Христос

вĕрентĕвĕн пĕлтерĕшне пачах ăнланманнипе çыхăннă. Тĕслĕхрен, ун чухне ку тĕлĕшпе мĕнлерех лару-тăру пулнине И.Я.Яковлевăн вĕренекенĕ пулнă Д.А.Архипов “Константинопольти чăвашсем” очеркĕнче курăмлă та ĕненмелле çырса кăтартнă. Кĕнеке авторĕ Константинопольте пурăнакан чăвашсенчен “Мĕншĕн-ха эсир хăвăр Мухаммед тĕнне тухрăр? — тесе ыйтсан, чăвашсем çапла каланă: “Епир ак мĕшĕн Христос тĕнне пăрахса Мухаммед тĕнне тухрăмăр: епир ăна халĕ тин ăнланса илтĕмĕр. Пупсем пире тĕне кӳртессе кӳртнĕ, анчах вĕрентессе вĕрентмен. Чиркĕве епир нихçан та çӳременпе пĕрех, мĕшĕн тесен унта мĕн тунине, мĕн каланине епир ăнланман: вырăсла пиртен хăшĕ пĕртте пĕлмен, хăшĕ начар пĕлнĕ. Чиркĕве пысăк, аслă праçниксенче, çулталăкра пĕрре, йе иккĕ кайкалаттăмăр çав; унта та хистенипе анчах кайаттăмăр; кайсан та тунката пек тăраттăмăр. Ытти йăласене — ачасене шыва кӳртме-и, вилнисене пытарма-и, венчет тума-и — пупсем хăратнипе-çех тăваттăмăр епир: хăшĕ-хăшĕ тумастьчĕç те. Тусан та мĕшĕн тунине хамăр та пĕлместĕмĕр. Пупсене йуратма мар, вĕсене пирĕн курас та килместчĕ: вĕсем пире вĕрентместчĕç, пиртен укçа сăтăрма анчах пĕлетчĕç... Ачасене те вĕренме шкула йамастăмăр епир, мĕшĕн тесен хăйсем мĕне вĕреннине хăйсем те вĕсем пĕлместчĕç, епир те пĕлместтĕмĕр. Çырăва вĕрентни ачасене усала анчах вĕрентнĕ пек туйăнатчĕ пире. Тутарсем мĕн каланă, çавна ăнланса пыраттăмăр епир. Вĕсем кирек хăçан та, кирек ăçта тĕл пулсан та пирĕнпе хăйсен тĕнне мухтаса, Христос тĕнне хурласа калаçатчĕç. Вĕсем пире ак çапла калатчĕç: “Пупсем сире улталаççĕ. Вĕсенĕн сире вĕрентес пĕр шухăш та çук; вĕсем сиртен укçа анчах сăтăраççĕ. Чиркӳре вĕсем мĕшĕн вырăсла кĕл-тăваççĕ, мĕшĕн вырăсла вулаççĕ, вырăсла йурлаççĕ? Есир ăна пĕлетĕр-и? Вĕсем сире хăйсен тĕнне пĕлтересшĕн мар, çавăнпа вĕсем çапла тăваççĕ. Пупсем мĕн тунине пурне те

ӑнлансан, есир тахçанах пирӗн тӗне, Мухаммед тӗнне тухнӑ пулӑттӑр", тетчӗç пире тутарсем" ,— терӗç..." (1).

Куратпӑр ӗнтӗ, тӗне кӗртнӗренпе 150 çул иртнӗ пулин те чӑвашсенче христианлӑх йӑла-йӗркере те çирӗпленеймен иккен. Çав хушӑрах мӑсӑльмансен муллисем тӗлӗрсе пурӑнман, кӳршӗре пурӑнакан чӑвашсен ӑсне минретнӗ, чӑваш хушшинче тутар тӗнне сарасшӑн хытӑ тӑрӑшнӑ. Чӑвашсем хушшинче ислам тӗнне кӗрекенсен йышӗ çултан çул ӳссе пынӑ. Мӗншӗн тесен вӗсем тутарсемпе кӳршӗ-аршӑллӑ пурӑннӑ, чӑваш ялӗсенче вырӑссем мар, ытларах тутарсем суту-илӳпе çӳренӗ. Çавна май Чӗмпӗр, Самар кӗпӗрнисенчи чӑваш ялӗсенче арçынӗсем кӑна мар, хӗрарӑмӗсем те тутарла лайӑх калаçнӑ. "Вырӑссем чӑтма çук иртӗнсе кайса, темӗн чухлӗ мӑшкӑл туса, ырӑ çӗршывсене турта турта илсе, ирӗксӗрлесе тӗне кӳртсе, пурне те калама çук кӳрентерсе çитернӗ. Пурте вырӑссене вӑрӑ-хурах вырӑнне хунӑ, ачисене те: вырӑс тытать! тесе хӑратнӑ. Çавӑнпа та тарӑхса çитнӗ чӑвашсем тутар муллисене кӑмӑл туса итле пуçланӑ. Çапла вара 1800-мӗш çултан пуçласа тутарла пӗлекен чӑвашсем эртелли-эртеллипе тутар тӗнне кӗрсе, тутара туха пуçланӑ. Ӑна çак цифрӑсем те лайӑх кӑтартса параççӗ: 1826-мӗш çулта Хусан кӗпӗрнинче 317,758 чӑваш, тутарсем 136,475 çын пулнӑ. 1897 çулта Хусан кӗпӗрнинчех чӑвашсем — 513,044 çын, тутарсем — 744, 267 çын пулнӑ" (2).

Ку вӑл Раççей патшалӑхӗшӗн юрӑхлӑ япалах пулман. Мӑсӑльмансем хыççӑн каяс пулсан, тутарла çӑмӑллӑн калаçакан чӑвашсем сисмесӗрех Мухаммед тӗнӗн серепине кӗрсе ӳкме пултарнӑ. Ку юхӑм каярахпа чӑваш халӑхне тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерес хӑрушлӑх патне те илсе çитернӗ пулӗччӗ.

Ӗç-пуç çакӑн пек аталанса пынине И.Я.Яковлев лӑпкӑн сӑнаса тӑма пултарайман. Мӗн пӗчӗкрен вырӑс çемйинче ӳссе, вырӑссемпе хутшӑнса пурӑннӑран чӑвашшӑн вырӑс халӑхӗн çул-йӗрӗ чи тӗрӗсси пулать пулӗ, тенӗ вӑл. Вырӑс

халăхĕпе çывăхланни чăваш халăхне çутта илсе тухма пулăшĕ тесе шухăшланă. Çак тĕллеве вара Христос тĕнĕ урлă, çав тĕне тăван чĕлхепе сарма пуçласан тин пурнăçа кĕртме май пуласса ăнланнă çамрăк Иван Яковлев. Хусан университетĕнче вĕреннĕ çулсенче Н.И.Ильминский вĕрентсе пынипе 22 çулхи студент ку тĕлĕшпе уйрăмах хĕрӳленсе ĕçлеме пикенсе каять. Хăйĕн шухăшне вăл тĕрлĕ пуçлăхсем патне çырусемпе çырса пĕлтерме пуçлать. Вĕсенче пуринче те И.Я.Яковлев, тĕпрен илсен, пĕр шухăша палăртать:

"Мĕн авалах Раççей йышне хăй ирĕкĕпе кĕнĕ чăваш халăхĕ влаçсем тата общественность енчен кăшт ытларах хисепе тивĕçлĕ пулнă. Вĕсен те, Раççейри ытти вак халăх–сенни пекех, вĕренме ирĕк пур. Чăвашсене пĕлӳ парассине вĕсене аслă вырăс халăхĕпе çывăхлантарнипе тата вĕсене христианлăхăн православи культурипе паллаштарнипе килĕшӳллĕн туса пымалла. Çавна май Иисус Христос Сăмахне чăвашсене хăйсен тăван чĕлхипе витĕмлĕ ăнлантарса вĕрентни, чиркӳре кĕлĕсене чăвашла ирттерни кăна христианлăха халăх хушшинче çирĕплетме май парать. Чăваш ялĕсенче уçнă чиркӳсемпе шкулсенче чăвашран тухса пĕлӳ илнĕ пачăшкăсемпе учительсем ĕçлеме тивĕçлĕ. Турă Сăмахне чăвашсен малтан хăйсен тăван чĕлхипе илтмелле, кайран тин, унăн пĕлтерĕшне ăнланса илсен, Христос вĕрентĕвĕн чăнлăхне ĕненме пуçлĕç вĕсем. Çав чăнлăх çути тĕттĕм чăвашăн куçне уçма, ăна çутта тухма, çын шутне кĕме пулăшĕ".

Чăваша çын шутне кĕртес тенĕрен, кунта "христианин" сăмах мĕнле пулса кайни те интереслĕ пек туйăнать. Вырăссем хальхи "крестьянин" пĕлтерĕшлĕ сăмахпа XIV ĕмĕр вĕçнелле тин усă курма тытăннă. Унччен "христианин" пĕлтерĕшлĕ сăмах çеç пулнă. Вăл чăн-чăн çын "человек" тенине пĕлтернĕ. Авалхи вырăс чĕлхине латин чĕлхинчен куçнă christianus "христианин" сăмаха çавăн пекех "поганый" сăмахпа танлаштарма пулать: *поганъ*, *поганинъ* –

*язычник, суя тĕне ĕненекен* (еретик) тени пулать. Сĕм авалах латин чĕлхинчен куçнă *păgănus* малтанласа *"деревенский", сельский"* – ял çынни текен пĕлтерĕшпе çÿренĕ (3). Авалхи Руçпе христианлăха патшалăх тĕнĕ туса хунă тапхăрта, IX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче, çĕнĕ тĕне йышăнма килĕшмен вырăссем вăрманлă вырăнсенчи вăрттăн ялсенче пытанса пурăннă, язычество тĕнĕн йăли-йĕркине тытса пынă. Патшалăх вĕсене перепиçсем вăхăтĕнче те шута илмен, урăхла каласан, çын шутне хуман. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсене тупса тĕне кĕртсе пынă, çапла вара вĕсем те христиансем пулса тăнă, çын шутне кĕнĕ. Ман шутпа, И.Я.Яковлев чăвашсене те çын шутне кĕртесчĕ тенине çÿлерех каланă ăнлавсемпе çыхăнтарма пулать пулĕ.

Чăваш халăхне хăйĕн тăван чĕлхипе вулама-çырма май парас шухăш чăваш каччин пуçĕнче 1865 çул тĕлнеллех çирĕп тĕвĕленсе çитнĕ. Мĕншĕн-ха ытти чылай халăхăн хăйĕн чĕлхипе çырнă кĕнекесем пур, мĕншĕн пирĕн чăвашăн хăйĕн çырулăхĕ çук – пăраланă ун пуçне çак ыйтусем.

19 çулхи çамрăк пикенсех Чĕмпĕрти арçынсен гимназине кĕме хатĕрленет, 1867 çулхи çурла уйăхĕн вĕçĕнче асăннă гимназин пиллĕкмĕш класне вĕренме кĕме экзаменсем тытать. Гимназире вĕреннĕ пирвайхи çулхинех чăваш ачисене те çутта кăларас тесен шкулсем уçса памаллине тата вĕсенче ĕçлемешкĕн чăвашсенченех вĕрентекенсем хатĕрлемеллине ăнланса илет. Çавăнпа вăл Чĕмпĕрте чăваш ачисене хăй патне илсе килме, христианлăха ĕненме вĕрентсе тата пĕтĕмĕшле пĕлÿ парса çын тума шутлать. Каярахпа вĕсем чăваш ялĕсенче ĕçлесе ытти чăвашсене те çиелерех тухма пулăшса пырĕç тесе шутлать.

Çак тĕллевпе вăл малтанласа хăйĕн тăван ялĕнчен – Кăнна Кушкинчен – хутла пĕлекен Алексей Рекеева чĕнсе илет. Вăхăт шунăçемĕн И.Я.Яковлев патне туртăнакан чăваш ачисен шучĕ те ÿссех пырать.

Ку статьяра эпĕ И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулне мĕнле йĕркелесе яни пирки тĕплĕн чарăнса тăрас тĕллев

тытман. Анчах çак шкул ĕçне саккунлă йĕркелесе ямашкăн çут ĕç министерствинчен хăюллăн пулăшу ыйтас тесе Яковлев студент тĕн литературине чăвашла куçарма пикенет. Çапла тума ăна, халарăмăр ĕнтĕ, Н.И.Ильминский вĕрентнĕ. Мĕншĕн тесен Раççей правительстви вак халăхсене çутта кăларас ĕçе пĕртен пĕр тĕллевпе – вĕсем хушшинче православи тĕнне çирĕплетессипе çыхăнтарнă. Куçне хупсан та чăваш шкулĕ çинченех шутланă И.Я. Яковлев ку "чăваш ĕçне" те кĕлĕ кĕнекисене, тĕн литературине тăван халăха чăвашла куçарса парсан, çакăнпа пĕр вăхăтрах чăвашла вĕренӳ кĕнекисем хатĕрлесе кăларма пуçласан тин йĕркелесе яма пулнине ăнланса илет.

Акă мĕн çырать Хусан университечĕн пĕрремĕш курс студенчĕ И.Я.Яковлев 1870 çулхи раштавăн 22–мĕшĕнче Хусан вĕренӳ округĕн попечителĕ П.Д.Шестаков патне янă çырура: "Необходимо пользоваться родным языком чуваш для того, чтобы успешнее распространять христианские понятия в массе их; нужно сделать на понятном чувашском языке переводы религиозно-нравственных книг Священного писания и даже богослужения. Противники всего этого, между прочим, говорят, что чувашский язык беден и не имеет слов для выражения отвлеченных понятий, поэтому невозможно передать на нем высокие истины христианства. Но как бы ни был беден чувашский язык, невозможно обойти и игнорировать его, впрочем я еще должен засвидетельствовать, что чувашский язык действительно не особо богат, но и не настолько беден, чтобы нельзя было на нем передать необходимые для всякого христианина книги Священного писания и богослужения. Правда, сделать это нелегко, надобно потрудиться, но это совершенно необходимо для успеха самого дела. Нельзя основательно успешно и скоро распространить христианские понятия в массе чуваш с помощью одного русского языка, без переводов священных книг на чувашский язык"(4).

Çырăва çапларах сĕмпе никĕслесе унăн малалли йĕркисенче И.Я.Яковлев чăвашсене çутта кăларас ĕç ăнăçлă пытăр тесен вĕсем валли çывăх вăхăтрах икĕ шкул: пĕрне – Кăнна Кушкинче, тепĕрне – Чĕмпĕрте уçма кирли çинчен çырать. Вĕсем иккĕшĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ: Кăнна Кушкинчи шкул чăваш ачисене чăвашла тата вырăсла вулама-çырма вĕрентнĕ май христианла ăнлавсемпе паллаштарма тивĕçлĕ, урăхла каласан, пĕрремĕш сыпăкри пуçламăш шкул пулмалла, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, пуçламăш шкулта хутла вĕреннĕ ачасемшĕн уйрăм пансион пулса тăрса, вĕсене христианлăхăн таса кăмăл-сипет шайĕнче воспитани пама тата каярахпа чăваш ялĕсенчи шкулсенче ĕçлеме учительсем хатĕрлеме пултарать, тенĕ И.Я.Яковлев. Çак пĕчĕк ĕçе малалла пысăклатса яма укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ кирлине кăтартнă.

Ку вăхăт тĕлнелле университет профессорĕ, Хусанти тĕне кĕнĕ тутарсен шкулне ертсе пыракан Н.И.Ильминский, тĕрлĕ кĕнекесене вак халăхсен чĕлхине куçаракан Куçару комиссийĕн председателĕ пулнă май, тĕн литературине чăвашла куçарма пуçăннă И.Я.Яковлева тӳрех хайĕн хӳттине илнĕ.

Университетра вĕреннĕ хушăра наука тĕпчевĕсем çырнă чухне нимĕçлерен вырăсла, вырăсларан латинла куçарусем тунă май И.Я.Яковлев хайĕн ĕçĕ ăнăçлă пулса пынине туйнă. Анчах чăвашла куçарасси уншăн чĕр нуша пулнă, мĕншĕн тесен куçармашкăн нумай ăнлав, терминсем çитмен. Н.И.Ильминский вара ăна чăваш, вырăс тата Европăри чĕлхесем хушшинчи хутшăнусем пирки ăнлантарнă. Шухăш çын пуçĕнче çуралать, тĕрлĕ чĕлхепе палăртма пулать ăна. Анчах шухăш пурне те ăнланмалла пултăр тесен унăн ытарлăхне кашни чĕлхен илем мелĕсемпе кăтартса пама тăрăшмалла, тенĕ вăл. Тутарсем, чăвашсем, вырăссем пĕр пек этнографи, çут çанталăк, патшалăх условийĕсенче çĕр-çĕр çул çума-çумăн пурăнса, пурнăçри пулăмсене пĕр евĕрлех курма, ăнланма хăнăхса çитнĕ, пĕр-пĕрне çăмăл

ăнланаççĕ. Çав халăхсен чĕлхисене пуринче те подлежащи, сказуемăй, дополнени, опредлени пур. Анчах вăл е ку шухăша вĕсенчен кашниех хăйне манерлĕ палăртать. Акă мĕншĕн куçару ĕçĕнче текстри сăмах айне сăмах лартса куçармалла мар. Малтан шухăшне ăнланса илмелле, вара тăван чĕлхен уйрăмлăхĕсене шута илсе чĕлхери хăйне евĕр илемсене тĕпе хурса куçармалла. Кашни сăмах пĕлтерĕшне халăх хăй мĕнле ăнлантарать, çавăн пек кăтартса пама тăрăшмалла, — вĕрентнĕ Н.И.Ильминский чăваш студентне.

Хусан университечĕн историпе филологи факультетĕнче (1870–1875) И.Я.Яковлев славян, вырăс, грек, латин, нимĕç, француз, акăлчан, итальян чĕлхисене вĕреннĕ. Çавăнпа те евангелисене ("евангелие" сăмах вырăс чĕлхине грек чĕлхинчен кĕнĕ, вăл "благовестие" – "ырă хыпар" тени пулать) чăвашла куçарнă чухне вăл текстра вырăс, грек, латин, француз тата нимĕç чĕлхисенчи текстсемпе танлаштарса пăхнă, çав хушăрах асăннă чĕлхесене лайăхрах пĕлекен çынсемпе те канашлама вăтанса тăман. Тепĕр чухне Н.И.Ильминскин тутарла куçарăвĕсемпе те усă курма тивнĕ.

Куçарусем чи малтанах тĕттĕм ялсенче пурăнакан чăваш хресченĕсем валли пулнă, çавăнпа И.Я.Яковлев чăвашăн калаçу чĕлхипе ытларах усă курма тăрăшнă. Ялта пурăнакан хут пĕлмен чăваш çыннин чĕлхипе куçарма вара çăмăлах пулман. "Гимназире, университетра пĕлӳ пухнă хушăра унти тĕрлĕ курссенче вĕренме тивнĕ май, эпĕ тăван ялти ниçта тухса курман чăвашсем пек таса чăвашла калаçма мана пуçланăччĕ. Евангелисене куçарнă чухне эпĕ çакна уйрăмах сисеттĕмччĕ; ирĕксĕрех таса чăвашла калаçмашкăн вĕренме, кашни утăмрах хамăн хама тĕрĕслеме тиветчĕ. Хăш-пĕр чухне ятарласа хут пĕлмен, çавăнпа та таса, чăн чăвашла калаçакан чăвашсемпе хутшăнма тăрăшаттăм. Нумай тар тăкма тиветчĕ куçарусемпе ларнă чухне", — çырса хăварнă И.Я.Яковлев хăйĕн аса илĕвĕсенче (5).

Н.И.Ильминский хăйсене: "Хăвăра ытлашши ан шанăр! Вĕренĕр те вĕренĕр! Пĕр-пĕр халапçă ват çынран вĕренме

ан именӗр! Тимлӗрех тăнлăр! Пуплев уйрăмлăхӗсене, сасă ӗнерӗвне, пӗлтерӗш сӗмӗсене асăрхаса юлма тăрăшăр. Сасă туйăмне ҫивӗчлетсе пырас пулать. Мӗн куҫармаллине тăлмачăн малтан хăйӗн ăнланса илмелле...”— тесе вӗрентнине тӗпе хурса И.Я.Яковлевпа унăн юлташӗсем ҫуллахи каникул вăхăтӗнче чăваш ялӗсем тăрăх тухса кайнă. Тутарсем еннелле сулăна пуҫланă ялсенче чăвашсемпе тӗл пулнă, вӗсене ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе хăйсем чăвашла куҫарнă Евангелие вула-вула панă, тӗттӗм чăвашсен ыйтă–вӗсене хуравланă, кăмăл-сипет, йăла-йӗрке ҫинчен калаҫнă. Чăвашсем хăйсене мӗнле ăнланнине сăнанипе пӗрлех христианство мӗне вӗрентнине ăнлантарса панă тата чăваш пурнăҫне кăштах та пулин лайăхлатас тесен ҫамрăксене ытларах вӗрентме кирлине ӗнентернӗ. Ҫапла И.Я.Яковлев тăван йăхне ҫутта кăларас тата вӗсене Христос вӗрентӗвӗн ҫутипе ăшăтас ӗҫе пӗтӗм ăс-тăнӗпе, пӗтӗм чунӗ-юнӗпе кӳлӗнет.

## 3.2. КИВӖ ПУРНĂҪ ТӖТТӖМЛӖХӖ СИРӖЛЕТ

Ку тӗпчевӗн ҫӗнӗ темине уҫас умӗн ак мӗн каласа хăварассăм килет:

1. И.Я.Яковлев чăваш литература чӗлхин никӗсне ҫырса хăварнă. Ҫакăн пирки пысăк та тарăн шухăшлă тӗпчев ӗҫӗ тăвас вăхăт ҫитеймерӗ пуль-ха, анчах чи пӗчӗк тишкерӳре те И.Яковлевăн ырă пуҫарăвне ни манма, ни айккинелле тӗртсе яма юрамасть.

1.1. 1870-мӗш ҫулсен пуҫламăшӗнче вăл чăваш ҫырулăхӗн вăрлăхне акать те ăна пӗр кана пӗлмесӗр ӗҫлесе пăхса ҫитӗнтерет. Ҫак тапхăртан тытăнса пуҫламăш шкулта вӗренекен ачасем И.Я.Яковлев ҫырнă букварьсем тăрăх пуриншӗн те пӗр литература чӗлхипе вулама, ҫырма, калаҫма вӗреннӗ. Ҫапла вара тури чăвашсемпе анатри чăвашсен калаҫу чӗлхи майӗпен-майӗпен пӗр юхăма кӗре пуҫланă.

1.2. И.Я.Яковлев пирки чăнласах “чăваш хушшине Христос вӗрентӗвне сарнă апостол” теме пулать. Унăн

куҫарӑвӗсем тӑрӑх чиркӳре кӗлӗсене (литургисене) чӑвашла ирттернӗ, паянхи кун та Турӑ Саккунне вӑл куҫарнӑ кӗнекесем тӑрӑх вӗрентеҫҫӗ. Ҫакӑ халӑх ӑшне кӗрсе тарӑн йӗр хӑварнине ниепле те сирсе яма ҫук.

1.3. И.Я.Яковлев тӑрӑшнипе чир-чӗртен епле тасалса, сыхланса пурӑнма вӗрентекен, тыр-пул тухӑҫне ӳстерме пулӑшакан мелсем шырама чӗнекен кӗнекесем ҫине-ҫине тухса тӑни те пур ҫӗрти чӑвашсен калаҫӑвӗсене пӗр карта лартма, вӗсене якатма, илемлетме май та, вӑй та парса тӑнӑ.

Анчах пурнӑҫ пӗр вырӑнта тӑмасть, пӗр ӑру вырӑнне тепӗр ӑру йышӑнать. Чӗлхе те майӗпелен улшӑнса пырать. 150-200 ҫул нумай та мар пек, анчах ҫав вӑхӑтра та чӗлхе хӑйӗн сӑн-сӑпатне, ӑш-чикне мӗнле те пулин улӑштарма ӗлкӗрет. Ҫакна 1800-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче чиркӳ кӗллисене, тӗн символӗсене, вунӑ ӳкӗте (заповеде) тата катехизиса чӑвашла куҫарнӑ тӗслӗхсем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ. 1803 ҫулхи кӑрлачӑн 22-мӗшӗнче Синод катехизиспа турӑ кӗллисене тутар, ирҫе, чӑваш, ҫармӑс, вотяк тата карел чӗлхисене куҫарса кӑларасси ҫинчен указ йышӑнать. Указ тӑрӑх, куҫару ӗҫне йӗркелеме Хусан архиепископне Серапиона тата Оренбург епископне Амвросие хушаҫҫӗ. 1803 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 19-мӗшӗнче Серапион архиепископ ҫапла хыпарлать: "Синод указне пурнӑҫласа... Хусанти академире чиркӳ кӗллисене, тӗн символӗсене, вунӑ ӳкӗте тата катехизиса тутарла, ҫавӑн пекех чӑвашла ҫармӑсла куҫраса пӗтернӗ, чӑвашла тата ҫармӑсла куҫарусене ҫав чӗлхене пӗлекен ҫынсемпе тӗрӗсленӗ..." Куҫарусене икӗ епархирен те пӗр вӑхӑталлах ярса панӑ (6). Ун чухнехи куҫару чӗлхи мӗнлерех пулни аяларах илсе панӑ вунӑ ӳкӗт текстӗнчен лайӑх курӑнать:

| Хусан тӗн академийӗнчен ярса пани | Оренбург епископӗ Амвросий ярса панӑ куҫару: |
|---|---|
| "Пря. Абе санынъ Тора, орихъ Тора манданъ посне анболдыръ сана. | "1) Абе поръ асла Тора санынъ, да полме сана тораземъ иттыземъ, Манданъ посня. |

| | |
|---|---|
| Тября. Анпоссяпъ киремедя ни хараберъ вушкалъ ни мин чолъ сюльдя; пюльть синче мин чолъ сердя сяндалыкъ ра, минъ чоль шывъ ра сирь аинче; анпоссяпъ она, ан пыхъ она. | 2) Анду сана килятке ни порняде ни мискерне, минчолъ сюлдя горе, и минчола серзинчи аялда, минчола шивра и серъ анче посьянмадыръ волзене, и анъ служить тува волзене. |
| Виссе. Ан азынь кулухъ Тора ятне. | 3) Анылъ ячине асла Торра санне кулыхъ. |
| Дватта. Вырысъ арни конъ австувъ, сява конъ Торра поссябъ, итты олда конъ исля, вырысъ арни конъ ан исля, сява конъ Аспоть Тора вали. | 4) Асту шматкона сюдалдарыръ она: олта конъ ту исне поръ изя санынbacklog, а конъ ситче шматконъ асла Торра санне. |
| Билекъ. Азюа абуа хизепля, ирлыхь сана болазшинъ, сіолъ номай порнасъ жинъ сякъ сирь зинче. | 5) Хизяпля азюна хувынне и аннюне хувынне, а лаихъ сана поле, и нумай сюлъ пурнынъ сирьзинченъ. |
| Олта. Анъ виляръ. | 6) Анвляръ. |
| Сичче. Азаръ ар сюря. | 7) Язаръ анкосъ. |
| Саккаръ. Ан вурла. | 8) Анвурла. |
| Тухуръ. Синъ зиня соя турухъ кюльделене анъ болъ. | 9) Анкалась худярымъ синзинче тюнделенъ хулыхъ. |
| Вонна. Іотъ аврумъ бала силыхъ тувма анъ шокшла, поскиль сіортъ не онынъ ойне, чорыне, вылихъ зане, боръ ябалы зане оза анъ тытъ тортса ильмя". | 10) Желать анду харандашъ арымне, желать анду килне сивыхрине ховынне, ни ялне онынне, ни чуризанне унынне, ни хирне унынне, ни выгырне унынне, ни ишакне унынне, ни вылихъне унынне, не порня де сколько сывыхне хувынне"(7). |

Куратпăр ĕнтĕ, куçарусене хальхи чĕлхе шайĕпе танлаштарсан, унта çитменлĕхсем нумай пулни куçкĕрет. Оригинал тыткăнĕнчен хăтăлаймасăр сăмах хыççăн сăмах куçарнă пирки вĕсем чĕрĕ калаçу чĕлхинчен аякра тăнă. Сăмахсен çыхăнăвне чăваш синтаксисĕн саккунĕсене пăхăнмасăр йĕркеленĕрен текстсем пушшех ăнланма йывăр пулса тухнă. Хусантан ярса панă куçарăва Хусанти тĕн академийĕнче пĕр-пĕр аслă класра вĕренекен студент, малтан крешĕн тутарсен шкулĕнче вĕреннĕскер, куçарма пултарнă. Г.И.Комиссаров тĕпчевçĕ каланă тăрăх, ăна Етĕрне уесĕнчи Чемей пупĕ А.Алмазов (1803 - 1806 çç. вăл Патăръел районне кĕрекен Тăрăн ялĕн чиркĕвĕнче ĕçленĕ пулнă. — *И.М.*) куçарнă. Кирек мĕнле пулсан та, куçарусене чăвашла пĕлекен çынсене кăтартса тĕрĕслемесĕр ярса паманах ĕнтĕ.

Сăмахсен фонетика сăн-сăпатне хакласан, пĕрремĕш куçарура тури диалект чĕлхи вăйлă палăртаь: *тора*, *орихъ*, *посне*, *конъ*, *олта*, урăхла каласан, “о” уçă сасăпа усă курнă тăрăх. Кунсăр пуçне, тури чăвашсен чĕлхинче кăна тĕл пулакан сăмахсенчен те пăрăнса иртме çук: *азюа (аçуна)*, *абуа (аннӳне)*, *поскилъ (кӳршĕ)*, *аврумъ (арăм)*, *хараберъ вушкалъ (харпăр хăй пек)*. Тата *кюлделене* сăмах халĕ архаизма куçнă, *“улталас, суя сăмах калас”* тени пулать.

Оренбург епархийĕнчен ярса панă куçарупа кам ĕçлени тата ăна хăш вырăнта куçарни те паллă мар. Калас пулать, çак иккĕмĕш куçару пахалăхĕ Хусанти тĕн академийĕнче куçарнинчен начар. Çавăнпа та çак икĕ куçаруран пичете пама Хусантан тăратнă текста суйласа илнĕ. Заповедьсем 1804 çулта Мускавра Синод типографийĕнче “Начальное учение человеком, хотящим учиться книг божественного писания” ятлă кĕнекен тĕн вĕрентĕвĕсем çинчен калакан иккĕмĕш пайĕнче пичетленсе тухнă. Унăн ячĕ “Пичиксе катехизисъ, iугярна чуваш замъ валли чувашъ чильгибе чиберь билясь жинъ тюре вырысь саконъ не и тора килли юла на да, Хозаны школка замъ ра 1803 сiолъ да ага оихъ ра”. Ку

кĕнекен пĕлтерĕшĕ чăваш çырулăхĕшĕн калама çук пысăк пулнă. Асăннă катехизиссăр пуçне, пĕрремĕш пайĕнче букварь пичетленнĕ пулнă.

Тĕрĕссипе, ăна пичетленнĕ пĕрремĕш чăваш букварĕ теме юрать. "Пичиксе катехизис" çырулăх аталанăвĕнче паллă вырăн йышăнать: вăл тĕн шкулĕсенче чăваш чĕлхипе ăнланса вĕренмелли пулăшу кĕнеки пулнипе пĕрлех чăваш кĕнеке чĕлхипе куçару ĕçĕн пирвайхи утăмĕсене кăтартса парать.

Чăвашсем хушшинче православи тĕнне çирĕплетес, вĕсем валли уçнă шкулсенче православи тĕнĕпе пурăнма вĕрентес тĕллевпе 1803-1871 çулсенче тĕн кĕнекисем чăвашла пурĕ 15 кăларнă. Анчах И.Я.Яковлев çырулăхĕ пуçланиччен чăвашла куçарнă кĕнекесен чĕлхи чĕрĕ калаçу чĕлхинчен уйрăлса тăнă. Куçару ăсталăхĕ çитеймен пирки вĕсенче вырăс синтаксисĕн витĕмĕ вăйлă палăрнă, уйрăм текстсене ăнланма йывăр пулнă. Хăш-пĕр пачăшкăсем чăвашла куçарусемпе усă курма хăтланса пăхнă, анчах чăвашсем вĕсем вуланине пĕртте ăнланман.

Асăннă заповедьсене И.Я.Яковлев та куçарнă. Вĕсене чи малтан "Чăваш ачисене çырăва вĕренмелли кĕнекере", урăхла каласан, И.Я.Яковлев хăй хатĕрленĕ чăвашла çĕнĕ алфавитпа çырнă пĕрремĕш "Букварьте" пичетлесе кăларнă. Çак заповедьсемпе паллаштариччен малтан кĕскен те пулин И.Я.Яковлев чăваш алфавитне туса хатĕрлес енĕпе ĕçлени çинчен каласа хăварни ытлашши пулмĕ.

Алфавита хатĕрленĕ чухне чăваш чĕлхинчи тĕп сасăсене уйăрса илсен, вĕсене мĕнле паллăпа ўкересси çинчен Иван Яковлевич нумай шухăшланă. Вĕсене вăл малтан Европăри халăхсем пек латинла ўкересшĕн пулнă, анчах ăна Н.И.Ильминский чарнă: " апла хăтлансан, вырăссем юратмĕç", – тенĕ. Çавăнпа И.Я.Яковлев вырăсла сас паллисемпе усă курнă, кĕске уçă *ă, ĕ* сасăсене *ъ* тата *ь* паллăсемпе ўкернĕ. Çапла анатри чăвашсен чĕлхинче 8 уçă сасă тата 37 хупă сасă пулнине тупса палăртнă. Вырăс сăмахĕсенче тата тури чăвашсен чĕлхинче кăна тĕл пулакан *о, ф* сасăсене те

шута илсе, алфавита пурӗ 47 саспалли кӗртнӗ. Сасăсен ҫемҫелӗхне уйăрма сас паллисен тăррине сулахаялла чалăш патак туртнă: *п̀ӳрт, т̀ӳл̀ем̀е, к̀ьл̀д̀е, с̀ид̀ет̀*. *-Х-* сассăн янравлă мăшăрне (гх) хӳреллӗ ҕ паллăпа ӳкернӗ. Йӗкӗр сасăсене икшер ҫырмалла тăвать: *йа, йу, йъ, йы, йе, йӳ, йь.*

Чăваш чӗлхин И.Я.Яковлев туса хатӗрленӗ пирвайхи алфавичӗпе ҫакăн пек ҫиелтен ҫеҫ паллашнă хыҫҫăн вăл куҫарнă заповедьсене вуласа пăхар-ха. Курăмлă танлаштарма май пултăр тесе, И.Я.Яковлев куҫарăвӗн халӗ усă куракан вариантне те ҫырса паратăп:

| 1871 ҫулта тухнă "Букварьте" пичетленнӗ заповедьсем | 1992 ҫулта кăларнă "Библипе Турă Законӗ" кӗнекерен илнӗ заповедьсем |
|---|---|
| 1. Ебь Санън Туръ, Мандан пус̀не сана уръх туръ ан пулдър. | 1. Санăн Турру – Эпӗ, Манран пуҫне санăн урăх турăсем ан пулччăр. |
| II. С̀ӳлде пьльт с̀инд́е, айалда с̀ър с̀инд́е, шывра с̀ър айьнд́е де мьскер пур, — пьрне де взене тъс туза, взене ьнензе ан пус̀с̀ап. | 2. Ҫӳлти, пӗлӗт ҫинчи, япаласенӗн кӗлеткисене те, вӗсенӗн евӗрӗсене те ан ту, вӗсене пуҫҫапса, пăхăнса ан пурăн. |
| III. Туррън йатне кълъх въҕьтсър ан азън. | 3. Турă ятне вырăнсăр ан асăн. |
| IV. Эрне кун (т̀ърьлнь кун) кьль кунь тума ан ман, улдъ кун ьс̀ле де, туза хур с̀ав въҕътра хъвън мьн пур ьс̀не, с̀ит́т́ьмьш кун, ерне кун, т̀ърьлнь кун, ху Турружън пулдър. | 4. Шăматкуна уяма ас туса тăр: пур ӗҫӳсене те ӗҫлеме сана ултă кун пултăр, ҫиччӗмӗш кун, канлӗх кунӗ, Турăшăн пултăр. |
| V. Аз̀ъна, анньне хизеплезе тър, хъна да аван пуль, — ку с̀ърде ьмьрӳ въръм пуль. | 5. Аҫуна, аннӳне хисеплесе пурăн, хăвнах ырă пулӗ, ҫӗр ҫинче ӗмӗрӳ вăрăм килӗ. |
| VI. С̀ынна ан вълер. | 6. Ҫынна ан вӗлер. |

| | |
|---|---|
| VII. Йазара ан с̀ӳре. | 7. Аскăнланса ан ҫӳре. |
| XIII. Ан въpла. | 8. Ан вăрла. |
| IX. С̆ын с̀ине суйа суйза ан къҭарт. | 9. Ҫын ҫинчен суя суйса ан кăтарт. |
| X. Ан съхлан с̀ын аръмне, с̀ын кил̀-с̀уртне, анъне, ар̀зын т̀урьне, хьр-аръм т̀урьне, въгърне, ажакне, нимьн выл̀ъхне-т̀ърльхне, нимьскерне де с̀ынъине ан съхлан, ку мана пулдър тесе ан шуҙъшла". | 10. Ҫын арăмне ан ăмсан, ҫын кил-ҫуртне ан хапсăн, ҫын уйне-хирне, ар чурине, хĕрарăм чурине, вăкăрне, ашакне, пĕр выльăх-чĕрлĕхне те – ҫыннăнне нимĕнне те ан хапсăн. |

Пĕрремĕш юпари заповедьсене вулама йывăр пулин те, текста ансатрах та чăвашларах йĕркелеме тăрăшни уççăнах курăнать, куçарура чăвашăн чĕрĕ калаçу чĕлхи илемлĕн илтĕннине туятпăр. Турă ӳкĕчĕсене чăваш хресченĕ мĕнле калаçать, çав йĕркепе çырса панă. Чĕлхемĕре çурма вырăсла, çурма чăвашла хуçкалани сисĕнмест. 1871 çулхи куçару тексчĕн чи пысăк çитменлĕхĕ алфавит кăткăслăхĕпе çыхăннă. Сăмахсене вуланă чухне итлени тăрăх хаклас пулсан, çак икĕ юпари текстсем хушшинче пысăк уйрăмлăхсем çукки сисĕнет. Куçару тексчĕ 125 çул хушшинче тĕпрен улшăннă теме пултараймастпăр.

Алфавит кăткăслăхĕ вара чăвашла вулама-çырма вĕренекен çынна пысăк йывăрлăхсем кӳнĕ. Пĕрремĕш çитменлĕх вăл – сас палли йышĕ пысăк пулни, иккĕмĕшĕ – сас паллисем тăрринчи патаксем (кайăк ури йĕррисем) сас паллисене пĕр чарăнмасăр çыхăнтарса çырма чăрмантарнă, çыру хăвăртлăхне ик-виçĕ хут чакарнă. Çавăнпа та ăна ялсенчи учительсемпе пупсем йышăнма васкаман, малтанхи çыру йĕркинчен пăрăнасшăн пулман. Çак çитменлĕхсенчен хăтăлас тесе И.Я.Яковлев студент 1872 çулта алфавита çĕнетме пуçлать. Н.И.Ильминский профессорпа çĕрĕ-çĕрĕпе тертлене-тертлене И.Я.Яковлев 47 сас паллиллĕ алфавита

тĕпрен улăштарать, çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăвать: чăваш чĕлхинче тĕп сасăсем 25 çеç, вĕсенчен 17-шĕ вырăсла пекех, 8–ăшĕ çеç вырăс чĕлхинчи сасăсенчен уйрăлса тăрать. çак саккăрăшне И.Я.Яковлев ак çапла çырма пуçланă: *ъ, ь, ӳ, ĕ, ԓ, ӊ, ҭ, ť.* Алфавитра пурĕ 27 сас палли кăна (çав шутра о,ф сас паллисем те пур) хăварса, 1872 çулта Хусанта çĕнĕ букварь – "Çыръва вьренме тытънмалли кьнеке" тата "Ҭън тьн кьнеки" пичетлесе кăларнă. Ку кĕнеке тухсан, вырăс пупĕсем *ъ* тата *ь* саспаллисене пула тавлашса кайнă, вĕсем Иван Яковлевича хытă вăрçа пуçланă.

И.Я.Яковлев нумай хирĕçлесе тăмасть: вырăс чĕлхинче *ъ, ь* паллăсемпе хытăлăхпа çемçелĕхе кăтартма усă курнă май чăваш чĕлхинчи *ă, ĕ* сасăсене те çак паллăсемпех кăтартни çыру чĕлхинче хирĕçӳлĕх кăларса тăратма пултарнине ăнланнă вăл. *Ъ* сасса палăртма латин, румын çырулăхĕнче усă куракан *Ăă* сас паллипе, *ь* сасса палăртма латин, румын, чех алфавичĕсенче усă куракан *Ĕĕ,* саспаллине йышăннă. *Й* сасă вырăс чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те пĕр пекех илтĕннине шута илсе, *Ii* сас палли вырăнне каллех *Йй* сас палли йышăннă. Чăваш чĕлхинче *ф* сасă пулманнипе алфавитран *Фф* сас паллине кăларнă.

Литература чĕлхи вырăнне йышăннă анатри чăвашсен диалектĕнче *о* сасă çук. Çавăнпа та çак сасса пĕлтерекен сас паллине те Яковлев алфавитран кăларнă. Çакăн хыççăн унăн алфавитĕнче 25 сас палли кăна тăрса юлнă. Вĕсенчен 17–шне вырăс алфавитĕнчен нимĕн улăштармасăрах илнĕ, 8–шне вырăс сас паллийĕсем çумне уйрăмлăх паллисем хушса тунă: (тăррине лартса) Ăă, *Ĕĕ, Ӳӳ, Ťť;* хӳре çыпăç–тарса *Ԓ ԓ , Ӊ ӊ , Çç, Ҭҭ.*

1873 çулта çак алфавитпа И.Я.Яковлевăн виççĕмĕш букварĕ – "Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки" тата "Матфей çырнă Евангеліе", Ҭăн тĕн кĕнеки", "Мăн кун кĕллисем" ятлă куçарăвĕсем пичетленсе тухнă. Çакăнтанпа И.Я.Яковлев хăйĕн алфавитне пачах та

улăштарман. Çав халлĕн вăл 60 çул хушши тытăнса тăнă (8).

1873–1890 çулсенче чăваш букварьне 7 хут пичетлесе кăларнă. Унсăр пуçне Иван Яковлевич тĕн кĕнекисене куçарас енĕпе пĕр канми хĕмленсе ĕçленĕ, Иисус Христос Туррăмăр хунă Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене уйрăммăн-уйрăммăн чăвашла çаптарса пынă: 1873 çулта, каларăмăр ĕнтĕ, Матфей çырнă Евангелие, 1874 çулта Маркпа Лука çырнă Евангелисене, 1879 çулта Матфей çырнă Евангелие иккĕмĕш хут, çав çулах Иоанн çырнă Евангелие, 1889 çулта Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнă Евангелисене пичетлеттерет. Пурĕ çак хушăра 21 тĕрлĕ кĕнеке тухать, çав шутра – "Аслă праçниксем" /1882 ç./, "Кĕлĕсем" /1883 ç./, "Мăн кун кĕллисем" /1885 ç./, вĕсене вырăсларан чăвашла куçараканнисем Иван Яковлевичпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсем пулнă. Çапла майпа чăвашла кĕнеке хыççăн кĕнеке тухни тăпра ăшĕнче чакаланса пурăнакан халăх ăшне чĕрĕ шухăш, чĕрĕ сывлăш, чĕрĕ пурнăç кĕрте пуçлать, кивĕ пурнăçăн авалхи тĕттĕмлĕхĕ сирĕлнĕçемĕн сирĕлет.

Анчах патша чиновникĕсемпе вырăс пупĕсем чăваш çырулăхне аталантарни, чăвашла ытлашши кĕнеке кăларни чăваш халăхне ытларах хăй çинчен шухăшлаттарать, вĕсем, ытлашши культурăланса кайса, аслă вырăс патшалăхĕнчен уйрăлас, хăйсем тĕллĕн пурăнас шухăш тытĕç тата, тесе янрашма пуçлаççĕ.

И.Я.Яковлев хатĕрленĕ чăваш алфавитне хирĕç, чăвашла кĕнекесене хурласа пăчлантарса хурасшăн пынă кĕрешӳ мĕн тери çивĕч пулнине, çавна май Иван Яковлевичăн мĕн тĕрлĕ хĕн-хур тӳссе ирттерме тивнине Хусанта 1890 çулта тухнă "Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии"(9) кĕнеке уçăмлă кăтартса парать.

## 3.3. ЧĂВАШĂН ТА КĔНЕКЕ ЧĔЛХИ ПУЛАТЬ

Чăваш чĕлхин çĕнĕ алфавитне туни, унпа çĕнĕ çырулăх пуçарса яни чăваш халăх пурнăçĕнче малалла пысăк утăм тунине пĕлтернĕ. Вăл вăхăтри вырăс обществин малта пыракан интеллигенцийĕ И.Я.Яковлев тăвакан ĕçсемпе кăмăллă пулнă. Тĕслĕхрен, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕ И.Н.Ульянов чăвашла пичетленсе тухакан вĕренӳ кĕнекисемпе тĕн литературине чăваш шкулĕсене сарма пулăшнă. Чăваш ялĕсенчи шкулсене тухса çӳренĕ чухне хăйпе пĕрле яланах И.Я.Яковлев чăвашла куçарса, çĕнĕ алфавитпа пичетлесе кăларнă кĕнекесене илсе кайнă. Акă, 1873 çулхи ака уйăхĕн 5–мĕшĕнче Иван Яковлевич патне Хусана янă çырура вăл çапла калать: "Ĕнер Сирĕн пĕчĕк кĕнекĕре илтĕм. Сирĕншĕн тата кĕнекĕр пичетленсе тухнишĕн эпĕ хавас, хам енчен кĕнекĕре чăваш шкулĕсене сарма тăрăшăп", – тет вăл. Çырура асăннă "пĕчĕк кĕнеке" 1873 çулта çапăнса тухнă чăваш букварĕ пулнă.

Хăйĕн ĕмĕрне чăваш историйĕпе этнографине тĕпчесе ирттернĕ вырăс ученăйĕ В.К.Магницкий те И.Я.Яковлев ĕçĕсене ырланă, чăваш çырулăхĕ çуралнăшăн хавасланнă. Чĕмпĕр хулинче ĕçленĕ, И.Я.Яковлевпа тачă çыхăну тытнă И.В.Вишневский, А.В.Годнев, И.В.Ишерский паллă педагогсем те унăн ĕçне пысăк хак панă (10).

Анчах тĕрлĕ çынсем пулаççĕ пурнăçра: пĕрисем ăна малалла ярассишĕн çунаççĕ, пĕр вырăнта чарăнса, хытса тăнине юратмаççĕ, пĕрмаях тĕл тунă çĕрелле талпăнаççĕ. Теприсем вара мĕн пурри те çитет, ытлашши кирлĕ мар, теççĕ, çĕннине сивлеççĕ, киввиех лайăх, теççĕ. Ырă пуçарусене, малашлăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ çĕнĕлĕхсене пĕр ăнланмасăр е хăйсене пĕтерсе хурасран хăраса сивлеççĕ.

Акă, тĕслĕхрен, Чĕмпĕрпе Хусан архиепископĕсенчен хăшĕ-пĕри Ильминскин вак халăхсене вĕрентмелли

системине ырласа йышăннă май И.Я.Яковлев тăвакан ĕçсене те кăмăлланă. Çак система хăйсен епархийĕсенче пурăнакан вырăс мар халăхсене чăнласах христианство енне илĕртни, вырăс тĕнне вĕсем тинех ăнланса ĕненме пуçлани савăнтарнă владыкăсене. Вĕсен шутĕнче Иван Яковлевич Чĕмпĕр архиепископне Гурие (1904-1907 çç. ĕçленĕ), Хусан архиепископне Антоние, Ĕпхӳ архиепископне Андрее ырăпа асăнать.

Анчах И.Я.Яковлевăн ĕмĕрĕнче ĕçлесе пурăннă ариепископсенчен чылайăшĕ вăл тăвакан ĕçсене ("чăваш ĕçне") ним вырăнне те хурасшăн пулман. Çакна вĕсем уççă нах кăтартнă, çийĕнчен хăйсене пăхăнса тăракан тĕн служащийĕсем урлă пĕрмай ура хунă. Вĕсенчен пĕри (1895-1904 çç.). Чĕмпĕр тата Сызрань епископĕ Никандр пулнă. Çак çын И.Я.Яковлева пĕрмаях "сепаратист" тесе айăпланă, Святейший Синода çăхавсем ăсатнă. "Миссионерское обозрение" журналăн 1899 çулхи 11,12 номерĕсенче "К вопросу о более желательной и целесообразной постановке церковноприходской и школьной миссии среди населения инородческого Среднего Поволжья" статья çырса кăларнă, унта вăл И.Я.Яковлевăн чăвашсене çутта кăларас енĕпе тăвакан ĕçне хурлать, "духовенство ĕçне нихăш енчен хутшăнма тивĕçлĕ мар учителĕн" куçару кĕнекисене те, букварĕсене те сивлет. И.Я.Яковлева хăйне хушаматран асăнмасăр "политика тĕлĕшĕнчен хăй тĕллĕн пурăнма пултарайман ... тăван йăхне упракан ăсчах" е "пестун инородческой обособленности" тесе хăртать. Тĕпрен илсен, чăвашла кĕнекесем тăрăх вĕрентни тата чиркӳсенче чăвашла калаçтарма тăрăшни мĕскĕн халăха вырăслантарма чăрмантарать çеç текен шухăша палăртнă. Чĕмпĕр духовенствинче И.Я.Яковлевран тăрăхласа кулнă тепĕр çын вăл Чĕмпĕрти кафедра соборĕн протоиерейĕ, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи училищĕсен совечĕн членĕ П.П.Никольский пулнă.

И.Я.Яковлев Евангелисене тата чиркӳре службăсем irттермелли тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса халăх хушшине сарма пуçланă тапхăрта Чĕмпĕр тата Сызрань епархийĕнче Варсонофий епископ ĕçленĕ (1882-1895 çç.). Хусанти тĕн академийĕнче Ильминский патĕнче вĕреннĕскер, вăл И.Я.Яковлевăн "чăваш ĕçне" хисепленĕ, чăваш шкулне, унти вĕрентекенсене сума сунă. Чăваш ялĕсенче ĕçлеме чăвашран тухнă пупсене уйăрса лартассине те шăпах Варсонофий архиепископ пуçласа янă. Çавна май вăл кашнийĕнчех Иван Яковлевичпа канашланă, мĕншĕн тесен тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухакан чăвашсем пурте малтан Яковлевăн чăваш шкулĕнче ăс пухнăскерсем пулнă.

Çакă вырăс пупĕсене виçесĕр тарăхтарнă, ĕмĕртенпе тăпра ăшĕнче чакаланнă мĕскĕн халăхран тухнă пупсем те хăйсемпе танах пулма тăрăшнипе вĕсем ниепле те килĕшме пултарайман. Çавăнпа пирвай чăваша пусне çĕклеме Вĕрентекене тĕп тума шутласа хураççĕ.

Чăн малтанах И.Я.Яковлев тĕн кĕнекисене куçарас енĕпе çав тери хĕмленсе ĕçлени, çавна май чăвашла кĕнекесем çине-çине тухни кăмăлне кайман вырăс пупĕсенне. Чăвашла тĕн кĕнекисене çĕнĕ йышши чăваш алфавичĕ тăрăх пичетлесе кăларни вĕсен ĕçне йывăрлатнă. Чăвашăн хăйĕн çырулăхĕ пулассинчен сехĕрленсе ӳкнĕскерсем, И.Я.Яковлев алфавитне йышăнасшăн та пулман. Ăна хирĕç пит вирлĕ кĕрешӳ пуçарса янă, аслă пуçлăхсем патне çăхав хыççăн çăхав çырнă. "Алфавит авторĕ вырăс патшалăхĕшĕн сиенлĕ ĕç тăвать", "ку вăл ниме юрăхсăр ĕç", "абсурд" тесе янăрашнă шовинизм сĕрĕмĕпе анраса кайнă вырăс пупĕсем.

И.Я.Яковлев хăйĕн аса илĕвĕсене çакăн пирки çапларах каласа хăварнă: "Манăн куçару ĕçĕ пуçланнă-пуçланманах çĕнĕ ĕçе тиркеме, хурлама та пикенчĕç. Тепĕр чухне ăнланмасăр, ытларахăшĕ вара хăйсен умне йывăрлăхсем кăларса тăратнине тӳсеймесĕр шăлĕсене хăйрарĕç".

Хусанти учительсен семинарийĕн директорĕ, вак халăхсене çутта кăларас ĕçре пысăк опыт пухнă Н.И.Ильминский профессор чăвашсен куçару ĕçне йĕркелесе ертсе пыракан И.Я. Яковлева вĕçĕмсĕр хавхалантарса, йывăр вăхăтра пулăшса, тăшмансенчен хўтĕлесе тăнă. Каларăм ĕнтĕ, çакна "Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии" ятпа 1890 çулта Хусанта тухнă кĕнеке те лайăх çирĕплетсе парать.



Н.И Ильминский

"Хусанти куçару комиссийĕ тĕрлĕ вак халăхсен чĕлхипе куçарса пичетленĕ нумай-нумай кăларăм шутĕнчен пĕртен пĕр чăвашла куçарусене çеç çине тăрса, пĕр вĕçĕмсĕр тенĕ пек тиркесе хурларĕç", – çырать çак кĕнекен умĕн каланă сăмахĕнче Н.И. Ильминский.

Ку тĕлĕшпе пуринчен ытла Шупашкар уесĕнчи Урхас Кушкă ялĕн (халĕ Сăнтĕрвăрри районне кĕрет) пупĕ В.Я.Смелов ӳркенме пĕлмесĕр "тăрăшнă". И.Я.Яковлева хăй ĕçĕнчен пăрса яма тĕллев лартса, вăл ун çинчен вун тăвата çул хушши Хусан архиепископĕсенчен кашнин патнех тата Гурий святитель тăванлăхĕн Куçару комиссине татти-сыпписĕр çăхав ярса тăнă. Акă мĕн çырать-ха вăл 1878 çулхи çурла уйăхĕнче Хусан архиепископĕ Антоний патне янă пирвайхи çырура: "Хăйĕн литературине аталантарнă пуян чĕлхерен чăваш чĕлхине – кĕнеке чĕлхи пулса тăрайман, тĕпрен илсен, пĕр-пĕрин хушшинче тата кил-йышра хутшăнса калаçакан чĕлхене, кăмăл-туйăма,

çутçанталăк хăватне ĕненнипе çыхăннă ăнлавсене чи пĕчĕк шайра палăртакан чĕлхене – куçарма çăмăлах пулманнине хирĕçлеместпĕр эпир. ... Куçарăвăн чи малтанах оригиналăн тĕп-тĕрĕс копийĕ пулмалла. Иккĕмĕшĕнчен, сăмахсене мĕнле май килет, çавăн пек куçарма юрамасть. Виççĕмĕшĕнчен, пуян чĕлхерен чухăн чĕлхене (чăваш чĕлхи шăпах çав шута кĕрет) куçарнă чухне ятарлă ăнлавсене куçарма калаçу чĕлхинче сăмахсем çук пулсан, вĕсене пачах куçармасăр хăвармалла, е ăнлантарса çеç памалла. Анчах çав ăнлавсем валли ятарлă сăмахсем çĕнĕрен шухăшласа кăларма кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен чăвашла куçару пур пĕрех чиркÿ-славян текстне ăнлантармалли пулăшу хатĕрĕ пек пулма тивĕçлĕ; хăçан та пулин чăвашсем вырăсланма тивĕçлĕ, чăваш чĕлхи вара халăхăн библиотекăсенче упранакан çырулăх палăкĕ пек çеç тăрса юлĕ. Яковлев господин шутланă пек, чăваш халăхĕ хушшинче христианлăх пĕлĕвне сарса пырсан, чăваш чĕлхи хуллен-хуллен христианла ăнлавсен шайне çитессе, Христос вĕрентĕвĕн çуттипе çуталса пырса сăваплă чĕлхе пулса тăрасса шанни ытла та сăпайсăр, усăсăр тата политикăна хирĕçле ĕç.

Анчах Яковлев господин куçарăвĕ пирки апла калама çук. Евангелисене вăл ытла та ирĕккĕн куçарнă. Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмаха темиçе пĕлтерĕшлĕ сăмахпа çырса панă: "благословенный" сăмаха *пиллĕхли*, *чапли*, *мухтавли* тенĕ; "расслабленный" – *вăйсăрланнă*, *чирлĕ*, *шăмшаксăр* – ăнланма çук, хăшĕ тĕрĕс?" – тет. "...и в Израиле не нашел я такой веры" тенине Матфей çырнă Евангелире (VIII,10) *Израиль çĕрĕнче çакăн пек ĕненекен çын урăх тупмарăм* тесе куçарнă, Лука çырнă Евангелире (VII,8) вара *Израиль халăхĕ хушшинче çакăн тĕрлĕ ĕненекен çын тупайманччĕ халĕ Эпĕ* тенĕ. Чăвашла *тĕрлĕ* тени "узорчато, пестро, разнообразно"пĕлтерĕшпе çÿрет" .

Малалла та автор чăн-чăн чĕлхеçĕ е тата куçару ĕçĕнче пысăк специалист пек И.Я.Яковлев куçарнă Евангелисен

чĕлхине “тишкерме” хăтланать: “Чăваш чĕлхинче ĕмĕрне те пулман ятарлă ăнлавсене куçарнă чухне Яковлев господин çĕнĕ сăмахсем тăвать е халиччен чĕлхере усă курнă сăмахсене çĕнĕ пĕлтерĕшпе парать: *патшалăх* (“царствие”), анчах çак сăмаха *патшалăк* (”царские двери”) тесе те вулама пулать, *аслăлăх* (”слава”), *тусланнă* (”сделались друзьями”); *пиллес* сăмахпа, акă, (”награждать”) пĕлтерĕшпе усă кураççĕ, анчах И.Я.Яковлев “багословлять” сăмаха çакăн пек куçарать, *тивлетлĕ* (”благодатный”) пĕлтерĕшпе усă курать, “ангел” уншăн *пирĕшти* иккен”, – сивлет йăлтах Урхас Кушкă ялĕн пупĕ.

Асăнтăм ĕнтĕ, ку çырура В.Смелов 1873 çулта Хусанта чăвашла çапăнса тухнă Матфей çырнă Евангелие тата 1875 çулта çавăнтах пичетленнĕ Маркпа Лука çырнă Евангелисене пăхса тухна. Анчах та вăл И.Я.Яковлев тĕн кĕнекисене чăвашла куçарасси мĕн тери хĕн пулни, христианлăх вĕрентĕвне чăвашсем куллен калаçакан чĕрĕ чĕлхепе куçарма тăрăшни çинчен хăйĕн шухăшĕсене 1873 çулта кун çути курнă Евангели ум сăмахĕнче тĕплĕн çырса панине юри тенĕ пекех шута илесшĕн пулман. Акă мĕн каланă Иван Яковлевич: “Чăваш халăхĕн шухăшлавĕ нихăçан та христианла вĕрентӳ содержанийĕпе çыхăнман; апла пулсан, чăваш чĕлхинче христианла ăнлавсене палăртма май паракан сăмахсем пачах та çук. Чăваша малтан çав япаласем çинчен ăнланмалла каласа кăтартас пулать, майĕпен вăл шухăшлама пуçлать, хăй пĕлнĕ пек каласа пама хăнăхать. Вăхăт иртнĕçемĕн, чăваш халăхĕ хушшинче Христос вĕрентĕвĕн çутти сарăлсан, чăваш чĕлхи те майĕпен христианла ăнлавсен шайне çĕкленĕ. Халлĕхе вара куçару ĕçĕнче хăш-пĕр çитменлĕхсем пулма пултарнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Малтанласа эпĕ тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕске текстсене, пĕчĕк кĕнекесене куçарса, чăвашсене çĕнĕ ăнлавсене йышăнма хăнăхтарса пытăм. Çакăн хыççăн тин Евангелие чăвашла куçарма пикентĕм. Евангели – вăл

христианствăн сăваплă кĕнеки çеç мар, пĕтĕм этемлĕхе ăса вĕрентекен тĕп никĕс".

"Матфей çырнă Евангелие эпир вырăсларан куçартăмăр, — çырать малалла И.Я.Яковлев, – славянла текстпа та танлаштартăмăр. Юлашкинчен пăхса тухса тӳрлетнĕ чухне грекла çырнă текста тĕпе хутăмăр, унсăр пуçне вăл е ку ăнлавсене Европа чĕлхисене мĕнлерех куçарнине те тишкертĕмĕр.

Чăваш предложенийĕн хăй евĕрлĕхне тĕпе хурса, аякри тĕттĕм ялсенче пурăнакан хутла пĕлмен чăвашсем те куçарăвăмăра ăнланчăр тесе тăрăшрăмăр эпир. Çак тĕллевпе чăвашла куçарнă сыпăксене тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсене вула-вула патăмăр, вĕсем ăнланайман вырăнсене тӳрлетрĕмĕр".

Çак сăмахсене вуланă пулĕ ĕнтĕ В.Смелов пуп. Çапах та чăвашла куçарусене ним вырăнне хумасăр малалла çапла çырать: "Лексика тĕлĕшĕнчен те Яковлев господин куçарăвĕсем ăнăçлах мар, тĕпрен илсен – Пăва уесĕнче пурăнакан чăвашсен чĕлхинче тутар сăмахĕсем нумай пулнипе тивĕçтерейместĕ. Куçарусем пурне те усă кӳччĕр тесен, çав сăмахсемпе юнашар Шупашкар уесĕнче калакан сăмахсене те кĕртсе хăвармалла пулнă. Шупашкар уесĕнче пурăнакан чăвашсен калаçу чĕлхине ытти халăхсен чĕлхисем палăрмаллах витĕм кӳмен. Çавăнпа та çав таса чĕлхене Етĕрне, Чикме уесĕнчи чăвашсем те лайăх ăнланаççĕ", – тет. Малалла Смелов транскрипци пысăк чăрмав кӳни çинчен калать: "Яковлев г. хăй туса хатĕрленĕ транскрипцие чăвашсем те, вырăссем те çăмăллăн хăнăхса пыраççĕ тет пулин те, ку апла мар. Çакна эпир те туятпăр, чăвашсем те çаплах калаççĕ. Ялти пĕр вĕрентекен пире: Яковлев г. куçарăвĕсене ăнланас тесен, чăвашла — лайăх, Евангелие пăхмасăр пĕлес пулать, терĕ. Ку шухăшпа эпир йăлтах килĕшетпĕр".

Паянхи куçпа пăхсан, тен, çак шухăша хирĕçлеме кирлех те мар пулĕ. Анчах кирек хăш тăлмачă та ĕçленĕ чухне чи

малтан амăшĕн сĕчĕпе вĕренсе ӳснĕ чĕлхене асра тытса çырать. Паллах, И.Я.Яковлев та тăван тăрăхри калаçу формипе усă курнă.

Акă мĕн тет Н.И.Ильминский çакăн çинчен Хусан архиепископĕ патне янă пĕр çырура (ку ĕнтĕ В.Смелов çăхавĕсем пирки ăнлантарса çырнă хут пулнă): "Кирек мĕнле чĕрĕ чĕлхе те тĕрлĕ вырăнти калаçу чĕлхисем (диалект формисем) çине пайланма пултарать. Вĕсемпе пуринпе те кĕнекере усă курма май çук-çке. Кĕнекесем куçарнă чухне тăлмачăсем тĕрлĕ сăлтавсене пула пĕр-пĕр диалект формине суйласа илеççĕ, вара çав калаçу чĕлхи литература чĕлхин картне ларать. Тĕслĕхрен, Мартин Лютер грекла Библие нимĕçле куçарнă чухне Саксони диалектне тĕпе хунă. Ун хыççăн Библие нимĕçле çакăн пек чаплă куçаракан тек пулман та. Çапла вара Саксони çĕрĕн диалекчĕ пĕтĕм Германири литература чĕлхин никĕсĕ пулса тăнă".

И.Я.Яковлев куçарăвĕсем пирки те çавнах калама пулать. Уйрăм сăмахсем пĕр евĕрлĕ пулманнишĕнех чăвашла кĕнекесене хурлама кирлĕ мар, мĕншĕн тесен предложени членĕсене синтаксис законĕсемпе килĕшӳллĕн çыхăнтарнă тата çыру чĕлхи çăмăллăн вуланать пулсан, ăна кирек-хăш вырăнти чăвашсем те ăнланаççĕ.

Алфавит "юрăхсăрлăхĕ" пирки вара В.Смелов кашни çырура тарăхать. Малтанхи çырупе тивĕçлĕ çĕрте пăхса тухасса кĕтмесĕрех вăл 1878 çулхи авăн уйăхĕн 14–мĕшĕнче Гурий святителĕн Тăванлăх канашне тепĕр çыру "шатăртаттарать": "Яковлев господин хăйĕн куçарăвĕсенче каллех транскрипцие улăштарнă. Хăçан вĕçленĕç-ши унăн эксперименчĕсем – калама йывăр. Мĕскĕн чăвашсем! Кăмăлăр-сипетĕре пуянлатса хăвăртрах та ытларах тĕн çинчен тата хăвăрăн мĕнле пулмаллине вĕрентсе çырнă кĕнекесем аллăра тыттарас вырăнне, çак ĕçе тума пултаракан çынсем сирĕн чĕлхе ăсталăхне ӳстерсе вăхăта

сая яраççĕ, хăвăрăн фонетика çепĕçлĕхĕпе паллаштарма тăрăшаççĕ сире...

... Тен унăн сăнавĕсене пула ĕç малалла каять тетĕр пулĕ? Нимĕн чухлĕ те каяс çук! Ытти чухнехи пекех, куçарусенче пăтрашу-çăрăлу. Хăш-пĕр сăмахсене мĕнле вуламаллине тӳрех тавçăрса та илейместĕн. Тĕслĕхрен, *элекъ* сăмаха *илекь* тесе вуласан, "давно" тени пулать, *элекъ* тесен – "клевета". Çавăн пекех *ђюнăн ирзĕрлĕхнэ тазать* тенине "очисти в отдушине *(хура пӳрт тĕнни. – И.М.)* нечистоту" е "очисти душевную нечистоту" пек ăнланмалла. *Пирĕн ђирзене çитсе тӳрлеть* тенине *тир* тесе вуласан "доспевши поправь наши кожи" пек ăнланатăн..."

В.Смелов юриех çавăн пек тĕслĕхсем шыраса ларнă пуль, вĕсене сахал мар илсе кăтартать. Анчах çав вăхăтра Яковлев алфавитĕнче *ч* сасса *ђ* сас паллипе кăтартнине пурте пĕлнĕ, çавăнпа ытти пупсем е Турă законĕсене вĕрентекен учительсем В.Смелов пек пăтрашăнман. Вăйпа юраттараймастăн тенĕ пек, В.Смелов чăвашла алфавит тунине тата унпа çине тăрса усă курнине ниепле те йышăнасшăн пулман, мĕншĕн тесен çакă малтанласа вырăс пупĕсен ĕçне çав тери йывăрлатса янă.

Уйрăм сăмахсене тиркес йăла авторăн чăнласах çирĕп. Хăй чăвашла лайăх пĕлекен çын пулмасан та вăл çапла вĕрентнĕ: "... *турăш* сăмаха пачах пăрахăçламалла, вырăссем те "образ" сăмахпа усă курмаççĕ, *икона* теççĕ. Чăваш чĕлхинче те *икона* сăмах çирĕпленсе çитнĕ. Çавăн пекех тепĕр килпетсĕр сăмах çаврăнăшĕнчен хăтăлмалла. Яковлев усă куракан *усăллă ĕç* сăмах çаврăнăшĕ вырăнне *ремесле* тени илемлĕ, çак сăмах тахçанах чăвашланнă", — тет.

Кунта каллех курăнать ĕнтĕ, чылай "çитменлĕхе" автор хăй шухăшласа кăларнă. Эпир пăхса тухнă çырусене В.Смелов ытлашши хĕрӳленсе, И.Я.Яковлевăн çĕнĕ пикенĕвĕсене кураймасăр çырни тӳрех сисĕнет. Паллах, вĕсене Шупашкар уесĕн пупĕ ытти пупсене те И.Я.Яков–

левӑн ҫӗнӗ алфавитне хирӗҫлес ӗҫе явӑҫтарас тесе ҫырнӑ-тӑр. Анчах ун хыҫҫӑн каякансем сассине пани илтӗнмен.

Ҫырусене Гурий святитель Тӑванлӑхӗн канашӗнче пӑхса тухнӑ, чӑваш чӗлхине калаҫу шайӗнче ҫеҫ пӗлекен пачӑшкӑ чӑвашла куҫарусене ҫапларах хурланипе килӗшмен, тишкерӳсем нихӑш енчен те усӑ кӳмеҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем пирки ытлашши шӑв-шав кӑларас мар тенӗ. В.Смелова хӑйне те хурав паман. Хӑйӗн "тӗпчевӗсене" ҫавӑн пек нимӗн вырӑнне те хуманни В.Смеловӑн чунне вӗчӗрхентернӗ, ҫавӑнпа та вӑл ку хутӗнче – 1880 ҫулхи пуш уйӑхӗн 8–мӗшӗнче – Хусанӑн ҫӗнӗ архиепископӗ патне ҫырса пӑхма шутлать. Ку чухне йӑвашрах ҫырнӑ, унта та Яковлев транскрипцине сивлет, "ҫӗнӗ алфавита хӑнӑх–маннине пула нумай пачӑшкӑ ҫӗнӗ куҫарусемпе мар, кивӗ кӑларӑмсемпех усӑ курать. Чухӑн чӗлхеллӗ, литературӑсӑр халӑх валли тӗн кӗнекисене куҫарса пичетленӗ чухне фонетика ҫепӗҫлӗхне кӑтартас тата чӗлхене наука тӗлӗшӗнчен ҫӗнетсе лайӑхлатас шутпа мар, христианла вӗрентӗве халӑх хушшине анлӑрах сарас тӗллевпе ӗҫлемелле", – тесе ӗнентерме тӑрӑшать архипастырӗн Шупашкар уесӗнчи "нижайший послушникӗ" Василий Смелов. Ҫавӑнтах йӑвашшӑн хушса хурать: "Яковлев господин куҫарнӑ кӗнекесене ытлашши тиркеме ҫук, чӗлхе йӑнӑшӗсенчен хӑтӑлнӑ тата транскрипцие ансатлатнӑ хыҫ–ҫӑн вӗсем тӗн ҫыннисене те, чӑвашсене те пысӑк усӑ кӳрӗҫ", – тет.

Ку ҫырӑва тепӗр икӗ уйӑхран Хусанти учительсен семинарийӗн директорне Н.И.Ильминские панӑ. Иван Яковлевичӑн пӗтӗм ӗҫне-хӗлне ал тупанӗ ҫинчи пек курса тӑнӑ профессор нумай кӗттермен, архиепископ патне хӑйӗн ӑнлантарӑвӗсене ҫырса тӑратнӑ. Унти хӑш-пӗр йӗркесене эпӗ маларах илсе кӑтартрӑм ӗнтӗ.

Ҫырӑвӑн малтанхи пайӗнче Н.И.Ильминский тӗн кӗнекисене чӑвашла ҫине тӑрса куҫаракан тӑлмачӑ кам, мӗнле ҫын пулни ҫинчен тӗплӗн ҫырса кӑтартать:

“И.Я.Яковлева вунӑ ҫул ытла пӗлнӗ май, эпӗ ҫакна таса чӗререн ҫирӗплетме пултаратӑп: христианла тӗн вӗрентӗвӗн кӗнекисене куҫарас ӗҫе вӑл ҫав тери тӑрӑшса тӑвать. Тӗслӗхрен, Евангелисене куҫарнӑ чухне тӗрлӗ текстсемпе, ӑнлантарусемпе, уйрӑмах Михаил архимандритӑн кӗнекисемпе усӑ курнӑ, Гордий Семенович Саблуков пек нумай пӗлекен ҫынсемпе канашланӑ. (Г.С.Саблуков – Хусанти тӗн академийӗпе семинарийӗн профессорӗ, “Корана” вырӑсла куҫарнӑ тӑлмачӑ – *И.М.*). Христианство кӗнекисене куҫарасси ҫӑмӑл ӗҫ мар: Яковлев пӗр ӳркенмесӗр, кана пӗлмесӗр тӑрӑшать, хӑйӗн тӑлмачӑ ӑсталӑхне тӑтӑшах ӳстерсе пырать. Пӗтӗмӗшле каласан, Яковлев господин тӗн кӗнекисене уҫӑмлӑ, ӑнланмалла тата сӑмахсене илемлӗн ҫыпӑҫтарса куҫарнине чӑвашсем те, чӑвашла пӗлекен вырӑссем те йышӑнаҫҫӗ.

И.Я.Яковлев хӑйӗн куҫарӑвӗсем валли нумай шухӑшланӑ тата тӗпчевсем ирттернӗ хыҫҫӑн вырӑс алфавитне суйласа илчӗ. Ҫавна май чӑваш чӗлхинчи хӑш-пӗр хӑйне евӗрлӗ сасӑсене палӑртма уйрӑм паллӑсемпе усӑ курчӗ. Яковлев йышӑннӑ орфографи чӑваш чӗлхинчи сасӑсен системипе ҫирӗп килӗшсе тӑрать, сӑмахсен пӗлтерӗшне тӗрӗс палӑртать, чӑваш ачисене пуҫламӑш классенче вӗрентес ӗҫе ансатлатать. Малтан вырӑс кӗнекисем тӑрӑх вӗреннӗ вырӑссемшӗн тата ҫавӑн пекех чӑвашсемшӗн те Яковлев орфографийӗ пирвай кӑткӑс пек туйӑнма пултарать. Анчах кӑштах тимлесессӗн ӑна часах хӑнӑхатӑн. Чӑвашсем валли 1875 ҫулта кӑларнӑ букварӗн ум сӑмахӗнче И.Я.Яковлев хӑйӗн орфографийӗпе усӑ курмалли правилӑсене ҫырса панӑ.

Малтанласа Хусан епархийӗн чӑваш прихучӗсенче ӗҫлекен пачӑшкӑсем те йывӑрлӑха кӗрсе ӳкрӗҫ, ҫак орфографипе усӑ курма аптраса тӑчӗҫ. Каярахпа хӑнӑхса ҫитрӗҫ те унпа усӑ курма тытӑнчӗҫ. Тӗслӗхрен, ку тӗлӗшпе Ҫӗрпӳ уесӗнчи пупсен 1879 ҫулхи юпа уйӑхӗнче пухӑннӑ съездӗнче Нӑрваш ялӗнче ӗҫлекен вырӑс пупӗ

Н.Богородицкий (çак съездăн председателĕ пулнă-тăр.- *И.М.*) тухса калани те питĕ интереслĕ: "Пилĕк çул каярах пирĕн съезд И.Я.Яковлев господин куçарнă кĕнекесемпе усă курма йышăннăччĕ, анчах ун чухне çак кĕнекесен орфографине кăмăлламаннине палăртнăччĕ. Халĕ вара пилĕк çулхи опыт çакна кăтартса пачĕ: И.Я.Яковлев господинăн кавычкăллă–хӳреллĕ сас паллийĕсем унăн кĕнекисене халăхăн юратнă кĕнекисем пулса тăма нимĕн чухлĕ те чăрмантармарĕç; чăвашсем вăл кĕнекесене ытларах та ытларах ыйта пуçларĕç, манăн прихутра кăна вĕсене 200 экземпляр ытла илнĕ, çемьере пĕри кăшт та пулин вулама-çырма пĕлет пулсан, çавăн пек чăваш çемйинче кашнинчех И.Я.Яковлев кĕнекисене курма пулать... Çапла вара И.Я.Яковлев господин халăх валли куçарнă кĕнекесене тата унăн орфографине халăх хăйех çав тери пысăка хурса хакларĕ".

Съезд çапла йышăннă: чăвашсем И.Я.Яковлев орфографийĕпе кăларнă кĕнекесене çăмăл та хăвăрт вулама вĕреннине тата вĕсенчен чылайăшĕ çак кĕнекесемпе хăйсем тĕллĕн усă курма хăнăхнине шута илсе, Высокопреосвященствăран тата Гурий святитель тăванлăхĕнчен çапла хушу кăларма ыйтас: чăвашсем валли усă курма кăларакан чăвашла кĕнекесене пурне те малашне яланах И.Я.Яковлев господин орфографийĕпе пичетлесе кăлармалла, çавăн пекех чăваш прихучĕсенче ĕçлекен пачăшкăсем валли усă курма кăларакан чăвашла кĕнекесене те кирек мĕнле орфографипе те пичетлеме пултараççĕ, мĕншĕн тесен, пачăшкă чăвашла пĕлет тата вăл хăй ĕçĕнче тимлĕ пулсан, нимĕнле орфографипе вулама та аптраса тăмасть", – çапла çырса пĕлтернĕ Н.И.Ильминский Сергий архиепископ патне. Малалла вăл В.Смелов тиркекен сăмахсене мĕншĕн чăвашла апла е капла куçарни пирки ăнлантарса парать, ытти вак халăхсен, уйрăмах тутар чĕлхине çав сăмахсенех мĕнле куçарни çинчен çырса кăтартать. Юлашкинчен çырăва çапла вĕçлет: "Шанас килет, енчен те Смелов атте хăйĕн курайманлăхне сирсе яма

пултарайсан, И.Я.Яковлев куçарăвĕсемпе вăл чăвашла лайăх вĕренме, уйрăмах чăваш чĕлхин синтаксисне ăнланма пулăшакан пособи пек усă курма пултарать".

Çапла вара пĕр хушă И.Я.Яковлева хирĕçле çăхавсем пыма пăрахнă. Иван Яковлевичпа унăн ĕçтешĕсем, çĕнĕ алфавит авторитечĕ ӳссе пынăшăн савăнса, малалла та хавхаланса ĕçленĕ.

Анчах "Церковно-общественный вестник" журналăн 1884 çулхи 9-мĕш номерĕнче "О деятельности г. Яковлева по образованию чуваш" ятлă статья пичетленсе тухать. Авторĕ камне палăртман, "Шупашкар уесĕнчен" тесе çеç каланă.

"Чăвашсене çутта кăларас тесе И.Я.Яковлев господин 1870 çултанпа пикенсе еçлет. Анчах та çамрăк чун хĕрӳлĕхĕпе ĕçе тытăнса, вăл вырăс мар халăхсене вĕренме çул уçса парас тĕлĕшпе тĕрĕс мар çул-йĕр çине тăчĕ. И.Я.Яковлев господин чăвашсене çутлăхăн анлă çулĕ çине кăларас тесе чăваш чĕлхинчен кĕнеке чĕлхи тăвас тĕллев тытрĕ... Çак тĕллев ăна, паллах, алфавит тăвас шухăш патне илсе пычĕ. Çапла вара нумай тăрăшнă тата филологи тĕпчевĕсем хыççăн, хăш-пĕр вырăсла сас паллисем çумне хӳресем е мăйракасем ӳкерсе хунă та, чăваш чĕлхи , асамçă хушнă пекех, цивилизациллĕ чĕлхе пулса тăнă: транскрипцийĕ те хăйĕн, техника сăмахĕсем /терминсем/ те çителĕклех. Алфавит хатĕрлесе, И.Я.Яковлев господин пурнăçра усăллă ĕç тунă теме пултараççĕ. Анчах пăхăр-ха, юрăхлă-и унăн алфавичĕ?" – тесе йĕкĕлтет паллă мар автор. "Чăваш чĕлхинче, чăнах та, вырăс чĕлхинче çук сасăсем нумай; анчах çавнашкал сасăсем тутар чĕлхинче тата ытларах. Апла пулин те тутарла куçарусене хӳреллĕ е мăйракаллă сас паллисемсĕр, вырăс шрифчĕпех пичетлеççĕ, мĕншĕн тесен çак хӳресемпе усă курни ним тума та кирлĕ мар. Вырăс мар халăх çынни вырăс шрифчĕпе çырнине те вырăс орфографийĕн правилисем тăрăх хăйĕн чĕлхин уйрăмлăхĕсене шута илсе вулама пултарать. Анчах чăвашла пĕлекен вырăс хуть мĕн чухлĕ паллă лартсан та чăваш

сăмахне тĕрĕс вулама вĕренсе çитеймест... Акă, тĕслĕхшĕн виçĕ сăмах: *кăмрăк, шăнгăрчă, çăлăнчăръ,* пĕрремĕш сăмахĕ *кумрык е комрык* тесе каланать, иккĕмĕшĕ – *шынгырч,* виççĕмĕшĕ – *солынчэр.* Сăмах май, кунта çакна та асăнса хăвармалла, – çырать анонимлă статья авторĕ, – хăш-пĕр салтаксен чăвашла çырнă çырăвĕсенче пĕри те И.Я.Яковлев меслечĕпе усă курмаççĕ, авторĕсем хăйсем И.Я.Яковлев господинăн кĕнекисемпе вĕреннĕ пулсан та, вĕсене пурне те вырăс шрифчĕпе çырнă.

И.Я.Яковлев господин, хăйĕн алфавитне туса хатĕрленĕ хыççăн, чăвашсем валли букварьсем çырма пуçларĕ тата тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă темиçе кĕнеке куçарчĕ. Хăй çине çакăн пек йывăр тиев илсе, унăн, паллах, хăй валли пулăшакансем шырамалла пулнă; вĕсене вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕрентсе хатĕрленĕ. Паллах, пирĕн тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене, уйрăмах кĕлĕ кĕнекисене куçарасси, çитменнине тата чăваш чĕлхине куçарасси çав тери йывăр ĕç. Филологи пĕлĕвĕсемесĕр пуçне Турă вĕрентĕвĕпе çыхăннă сăмахсем нумай пĕлмелле, нумай вуламалла – унсăрăн пысăк йăнăшсем тума пулать. Шел пулин те, И.Я.Яковлев господинăн куçарăвĕсенче çавнашкал йăнăшсем ытлашшипех тĕл пулаççĕ...” – тет вăл пăшăрханнă пек туса.

Малалла автор И.Я.Яковлева çапларах “ăс” парать:”...а) пулăшаканĕсене ытлашши шанмалла мар тата куçарусене хăйĕн лайăхрах пăхса тухмалла (куçару комиссине те çапла тума сĕнетĕп). Чăвашла куçарнă чухне тутарла куçарусемпе танлаштарса пăхни те пăсмасть; б) чăваш чĕлхине ытти кĕнеке чĕлхисен йышĕнче граждан прави парассишĕн тăрăшмалла мар, ăна чăвашсене çутта кăлармалли хатĕр тăвасси çинчен шухăшламалла. Çапла пултăр тесессĕн вара çĕнĕ терминсем шухăшласа кăларма кирлĕ мар, урăх сăмахпа ăнлантарни те çитет”. Çакăн хыççăн критик чăвашла мĕнле кĕнекесем куçарни кирлĕ е кирлĕ маррине палăртать. Вĕçĕнче вара çапларах шухăша çавăрттарса

хурать: “ӑвашсем хӑйсем те Христос тӗнне ӑнланса йышӑнса пынӑҫемӗн пур енӗпе те вырӑссем пек пулма тӑрӑшаҫҫӗ – тумӗсене улӑштараҫҫӗ, ҫурт-йӗрне вырӑссем пек тирпейлеме хӑтланаҫҫӗ, славянла вулакан кӗлӗсене темӗнле асамлӑ вӑй пур пек итлесе тӑраҫҫӗ, вӗсене чӑвашла куҫарнисенчен те ӗненмеллерех тесе шутлаҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе, киреметрен пуҫӗпех хӑтӑлас тесен, пур енӗпе те вырӑс пулмалла; унсӑрӑн Христос турра хуть те мӗнле лайӑх ӗненсе пурӑн, пурпӗрех киремет чӑваш чӗлхине илтнӗ-илтмен, чӑваш тумне курнӑ-курман ҫав ҫын ҫумне ҫулӑхать. Мӗншӗн-ха вӗсен киреметрен уйрӑлас туртӑмне чарса тӑрас тата вӗсене, эсир — чӑвашсем, сирӗн чӗлхӗр вырӑс чӗлхипе пӗр тан, тесе ӗнентерес?” – тет. Акӑ мӗнле “хисепленӗ” вырӑс пупӗсем чӑвашсене!

Кунта ҫакна каласа хӑварни те кирлех пулӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче Библие славян чӗлхинчен халӑх ӑнланакан вырӑс чӗлхине куҫарнӑ чухне те куҫару ӗҫне вӑрҫакансем тивӗҫсӗр нумай пулнӑ. Вырӑс духовенствин пысӑк пайӗ Библин ҫӗнӗ куҫарӑвӗ тухнипе калама ҫук кӑмӑлсӑр тӑнӑ. Чиркӳҫӗсенчен чылайӑшӗ славянла Библипе вырӑсла куҫару хушшинче тӗл пулакан уйрӑмлӑхсене пула пысӑк йывӑрлӑха кӗрсе ӳкнӗ, ӗненекенсем умне тухса тӑракан ыйтусем ҫине ним калама та пӗлменнипе ӳпкелешнӗ. Хӑш-пӗрисем вырӑсла ӑнланмалла куҫарнӑ Библие чӑн-чӑн Турӑ сӑмахӗ вырӑнне хурса мар, пушӑ вӑхӑтра вуламалли кӗнеке пек ҫеҫ йышӑнма кирлине палӑртнӑ. Тӑлмачӑсене сут туса мӑнастирьсене хупса лартнӑ тӗслӗхсем те сахал мар пулнӑ. Киев митрополичӗ Филарет, ҫавӑн пекех Святейший Синодӑн обер-прокурорӗ А.П.Толстой граф та Библие халӑхӑн чӗрӗ чӗлхине куҫарассине хирӗҫ тӑнӑ. Синода пӗр вӗҫсӗр ятне палӑртмасӑр ҫырнӑ ҫырусем пырса тӑнӑ. Акӑ мӗн тенӗ “анонимкӑсен” авторӗсенчен пӗри: “Простолюдины на славянском языке слышат только святое и назидательное. Умеренная темноти сего слова не омрачает истину, а служит ей покрывалом и защищает от стихийного

ума. Отымите это покрывало, тогда всякий будет толковать об истинах и изречениях писания по своим понятиям и в свою пользу. А теперь темнота заставляет его или просто покоряться церкви, или просить у церкви наставления" (11).

Анчах Святейший Синод çакнашкал çăхавсене шута илмен, вырăсла Библие те "чăн-чăн Турă сăмахĕ" тесе пĕлтернĕ, çапла вара вырăс православи чиркĕвĕн икĕ Библи — вырăсла тата славянла Библи — пулса тăнă.

## 3.4. ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ЧИРКĔВЕ КĔРЕТ

Мĕншĕн çав териех хăранă-ха православи чиркĕвĕн шанчăклă тарçисем чăвашăн та кĕнеке чĕлхи пуласран? Е тата чăвашсем хăйсен чĕлхи те вырăс чĕлхипе танах пулнине ăнланса илесрен? Паллах, И.Я.Яковлев пек ăслă-тăнлă çынсем халиччен "шăпăр шăтăкĕнче" çеç усă курнă чухăн чĕлхене хăйсен уйрăм çырулăхĕпе çирĕплетсе пыма пуçласан, çитменнине тата чĕлхе грамматикин правилисене çырма тытăнсан, чăвашсем ытлашши ăсланса кайма пултараççĕ. Апла пулсан, вĕсен шутĕнчен те вĕреннĕ çынсем ытларах тухĕç. Чăвашсем хушшинче чăвашран тухнă пачăшкăсем ĕçлеме пикенсен, вырăс пупĕсен ăçта кайса кĕмелле? Алăри çăкăра мĕскĕн чăвашсене туртса илме памалла-и? Ахаль те И.Я.Яковлев тăрăшнипе нумай яла чăвашран тухнă пупсене вырăна кӳрте пуçланă. Чĕмпĕрти тĕн семинарине, Яковлев сĕннипе, кашни çулах вĕреннĕ чăвашсене ытларах та ытларах йышăннă.

Çак шухăш сехĕрлентернипе вырăс пупĕсем И.Я.Яковлева пушшех курайман. И.Я.Яковлев ниме пăхма-сăр тĕн кĕнекисене куçара-куçара çаптарнине тӳсме пулнă-ха. Анчах чăваш чĕлхин алфавитне "шухăшласа кăларса" чăваш çырулăхне çирĕплетме пуçланипе ниепле те килĕшме пултарайман. Н.И.Ильминский хăйĕн вĕрентӳ системине тĕпе хурса ĕçлекен тата ăна малалла аталантарса пыракан И.Я.Яковлева хăшĕ-пĕри çакăн пек ура хурса пынă

чухне пĕччен пăрахса хăварман, çирĕп хӳтĕленĕ. Уйăхсерен тухса тăракан "Православный собеседник" ятлă кĕнекере Иван Яковлевич ĕç-хĕлĕ пирки ăнлантарса çырнă статьясем пичетленсех тăнă. Тĕслĕхрен, асăннă кĕнекен 1883 çулхи пуш уйăхĕнче тухнă номерĕнче Н.И.Ильминскин "О церковном богослужении на инородческих языках" статйи пичетленнĕ. Унта вăл И.Я.Яковлев чăвашсене çутта кăларас тата тĕн вĕрентĕвĕ çинчен калакан кĕнекесемпе чиркӳ кĕллисене чăвашла куçарас енĕпе ĕçлени çинчен питех те тĕплĕн çырса кăтартнă.

Анчах "Шупашкар уесĕнчен" тесе алă пуснă статья тухнă хыççăн Н.И.Ильминский каллех тӳссе тăрайман. Çийĕнчех И.Я.Яковлева хӳтĕлесе пысăк статья çырнă (эпир асăннă "Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии" кĕнекере вăл пурĕ 46 страница йышăнать), ăна "Православный собеседник" кĕнекен 1884 çулхи пуш тата ака уйăхĕсенчи номерĕсенче пичетлесе кăларать.

"Тĕрĕс мар сăмахсене тӳрлетессине тата ăнланман тĕлсене ăнлантарса парассине хамăн тивĕçĕм тесе шутлатăп", — пуçлать вăл сăмахне. Малалла профессор Иван Яковлевич чăвашсене хăйсен тăван чĕлхипе вĕрентме пуçласа çутта кăларас шухăш патне мĕнле пырса тухни тата вăл çак вышкайсăр пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту çине "çамрăк çын хĕрӳлĕхĕпе", çăмăлттайла пăхманни пирки нумай чарăнса тăрать.

"Шупашкар уесĕн авторне" уйрăмах И.Я.Яковлев "шухăшласа кăларнă!" транскрипци килĕшменнине пула Н.И.Ильминский çапла ăнлантарать: "Тутар транскрипцине крешĕн тутарсем пулăшнипе эпĕ туса хатĕрленĕ, çавăнпа та автор ăна ырлани кăштах мана та пырса тивет. Анчах чăнлăхпа тĕрĕслĕх тивĕçĕ мана ку ыйтăва çапларах ăнлантарма хистет: сасăсен янравлăхĕ пирки калас пулсан, чăвашпа тутар чĕлхисем хушшинче пĕрпеклĕх çук. Тутарсен çемçен илтĕнекен кĕске сасă пĕрре çеç, вăл сăмах пуçламăшĕнче

тĕл пулакан *дж.* Тутар сăмахĕсенче вырăсла таса *ж* сасă çуккине пула *дж* сасса *ж* паллăпа çырма йышăнтăмăр. Тутарла куçарусенче Мамадыш уесĕнчи калаçу чĕлхине тĕпе хурса ĕçленине шута илес пулсан, ку вара чĕлхене нимĕнле йывăрлăх та памарĕ. Анчах Мензелин уесĕнчи тутарсен калаçăвĕнче çак сасă çемçен илтĕнекен 36 сасса куçать, апла пулсан, ку сасса палăртма пирĕн те çĕнĕ паллă шухăшласа кăларма тиветчĕ. Ку сасă чăваш сăмахĕсен пуçламăшĕнче тата ытларах çемçелет, *сь* пек илтĕнет. Сăмах пуçламăшĕнче çемçетекен паллăсемпе усă курма май çуккине шута илсе, И.Я.Яковлевăн ирĕксĕрех çĕнĕ паллă шухăшласа кăларма тиврĕ. Çавна май вăл наукăсен Император академийĕн членĕн О.Н.Бетлинкăн якут алфавитне туса хатĕрленĕ чухнехи меслечĕпе усă курчĕ, çемçен илтĕнекен сасăсене сас паллин аялти пайне хӳресем ӳкерсе палăртма йышăнчĕ: *ç, ҫ.* Тата *ă ĕ, ӳ* сасăсем пирки калас пулсан, çак тĕслĕхре И.Я.Яковлев Европа чĕлхисенче çавнашкал илтĕнекен сасăсене мĕнле палăртнине тĕпе хучĕ. Чăваш чĕлхинчи уйрăм сасăсене çакăн пек ятарлă паллă-семпе ӳкерни чăваш сăмахĕсене лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Çитменнине вĕсемпе мĕнле усă курмалли пирки И.Я.Яковлев тĕплĕн ăнлантарса çырса кăтартрĕ...

Кашни чĕлхен хăйĕн уйрăм транскрипцийĕ пулни сăмахсене уçса ярать, тăван чĕлхере мĕнле калаççĕ, çырура та сасăсен янравлăхне пĕр улăштармасăр çырса хума май пулать. Çакăн çинчен эпĕ хамăн шухăша пĕрре мар пĕлтернĕ...

И.Я.Яковлевăн чăваш транскрипцийĕ пирки Çĕрпӳ уесĕнчи пĕр пачăшкă /Н.М. Богородицкий.- *И.М.*/ хăй Яковлевăн куçарăвĕсене ăнланса вулама пуçланă хыççăн унăн çĕнĕ сас паллийĕсем те çăмăл тата уçăмлă пулнă пек туйăнса кайни çинчен каласа кăтартнăччĕ. Апла пулсан, чă-ваш прихучĕсенче ĕçлекен вырăс пупĕсемшĕн чăвашла уйрăм транскрипци пулни авантарах та. Мĕншĕн тесен

вĕсем вăл е ку сăмаха, уйрăм саспаллисем пуррине кура, чăвашларах вулама тăрăшаççĕ".

Малалла Н.И.Ильминский хăйĕн статйинче И.Я.Яковлевăн куçару чĕлхи пирки нумай чарăнса тăрать. "Шупашкар уесĕнчен" текен автор илсе кăтартнă тĕслĕхсем тĕрĕс маррине, вĕсенчен ытларахăшне чĕлхене лайăх пĕлменрен туртса кăларнине палăртать. Çавăн пекех критик хурлакан "çĕнĕ сăмахсене" И.Я.Яковлевпа унăн куçаруçисем шухăшласа кăларманнине, вĕсене чĕлхе законĕсене пăхăнса йĕркеленине тутар чĕлхинчи тĕслĕхсемпе танлаштарса çирĕплетет. Чăваш чĕлхинчи пĕр йышши аффикссемех анлă сарăлнине тата вĕсемпе темиçе пĕлтерĕшпе усă курма пултарнине палăртать. Тĕслĕхрен, "*турăш* сăмахпа Теччĕ, Пăва, Çĕрпӳ уесĕсенчи чăвашсем анлă усă кураççĕ, ку И.Я.Яковлев шухăшласа кăларнă сăмах мар",– тет Н.И.Ильминский татăклăн.

*Пирĕшти* сăмах чăваш чĕлхине перс-тутар чĕлхинчен куçнă. Çавăнпа та ăна тури чăвашсем *ангел* пĕлтерĕшпе ăнлантармасан та пултараççĕ. И.Я.Яковлев хăй енчен критиксем вăрçнине шута илес тенĕ пулĕ, каярахри куçарусенче вăл çак сăмахпа усă курма пăрахнă. Халĕ çак сăмахпа каллех усă курма пуçланă, ăна мĕн пур çĕрти чăваш та ăнланать.

Н.И.Ильминский профессор чăн-чăн лингвист пулнă. Хăйĕн статйинче Иван Яковлевичăн чăвашла куçарăвĕсенчи уйрăм сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене тиркенĕ тĕслĕхсене вăл пурне те йĕркипе пăхса тухса тишкерет. Çав сăмахсене ытти тĕрĕк чĕлхисенче мĕнлерех каланипе паллаштарса, чăваш куçаруçисем те вĕсен пĕлтерĕшне тĕрĕсех ăнлантарса панине ырлать:

"Критик асăрхаттарăвĕсене пăхса тухнă хыççăн "вăл чăвашла лайăхах пĕлменни пирки пĕтĕмлетӳ тума пулать: уйрăм сăмахсене е сăмах çаврăнăшĕсене ăçта та пулин илтнипех вăл çавсем анчах тĕрĕс, урăх нимĕнле сăмахпа та усă курма юрамасть, тесе шутлать. Ытти çĕрти чăвашсем çав

сӑмахсене пачах урӑхла калама пултарни пирки асне те илмест. Пӗр пӗлтерӗшлӗ синоним-сӑмахсемпе усӑ курнӑшӑн И.Я.Яковлева вӑрҫса, чӑваш чӗлхи чухӑн чӗлхе, ӑна цивилизаци шайне ҫӗклессишӗн тӑрӑшма кирлӗ мар тесе, чӑваш чӗлхи пирки субъективлӑ ӑнлава ҫирӗплетме хӑтланать. Чӑн чӑваш лайӑх ӑнланакан сӑмахсем пиркиех иккӗленӳллӗ шухӑшсем ҫуратать. Чӗлхене лайӑх пӗлмен ҫӗртенех чӑн чӑвашсене тиркесе "вӗрентес" туртӑм вӑйлӑ пулнӑран кӳҫару "юрӑхсӑрлӑхӗ" пирки пӗтӗмӗшле хак пама та именсе тӑмасть ятсӑр автор", – ҫырать Н.И.Ильминский.

И.Я.Яковлевӑн ӗҫне хӳтӗленипе пӗрлех вӑл малалла чӑвашсем тӗн вӗрентӗвӗн пӗлтерӗшне тин ҫеҫ ӑша хывма пуҫланӑ тапхӑрта чӗлхере православи ӑнлавӗсене палӑр–такан сӑмахсем ҫукки ҫинчен калать: "Кӳҫаруҫӑсем авал–лӑхран нимӗн те илме пултараймаҫҫӗ, тӗн вӗрентӗвӗпе ҫыхӑннӑ терминсене ирӗксӗрех хӑйсен чӗлхинчи сӑмахсемпе ӑнлантарса ҫырса пама тивет. Мӗн тери йывӑр ӗҫ ку: кирек мӗнле ята та пӗрремӗш хут ҫӗнӗ пӗлтерӗшпе илтекен чӑваш ӑна хӑй ӑнланакан сӑмахсемпе ҫырса кӑтартма тӑрӑшать. Пӗр-пӗр сӑмаха тӗн пӗлтерӗшпе ҫыхӑнтарас пулсан, ҫав ӑнлав чӑваш пуҫӗнче малтан ҫирӗпленсе ҫитмелле, каярахпа вӑл ҫав ӑнлавра ҫыхӑннӑ сӑмахсене пӗр уйрӑм сӑмахпа та калакан пулать. Ҫапла майӗпен тивӗҫлӗ терминсем йӗркеленме пуҫлаҫҫӗ, чӗлхе те ҫӗнӗ сӑмахсемпе пуянланса пырать. Тӗн терминологийӗ йӗркеленсе пынӑ пирвайхи тапхӑрта ҫав ӑнлавсене пӗрисем ҫырса пани, теприсем вӗсене ырӑ кӑмӑлпа йышӑнни шутсӑр пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Кирек мӗне те – япалана та, ӑнлава та, йӑла-йӗркене те, сӑмаха та – кулӑшла ҫавӑрса хума пулать. Ҫавӑнпа та вӑл е ку халӑхӑн тӗн ӑнлавӗпе христианла сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем мӗнле йӗркеленсе, аталанса пынине ҫав халӑхӑн представителӗсем, тӑван чӗлхене амӑш сӗчӗпе вӗренсе ӳснӗ ҫынсем ҫеҫ пуринчен те лайӑхрах хаклама пултараҫҫӗ. Мӗншӗн тесен ҫав ҫынсем хӑйсен тӑван халӑхӗн

шухăш-туйăмне, ăнлав шайне уçăмлă курса, сиссе тăраççĕ çеç мар, православи тĕнне мĕн тери ĕненме пуçланине çав туйăм хăйсен ăшĕнче хăватлăланса пыни тăрăх та хаклама пултараççĕ", – çапла сăпайлăн кăна тĕксе илет вак халăхсене ним вырăнне хуман вырăс пупĕсене Н.И.Ильминский.

"Чăвашсем Христос вĕрентĕвне ĕненес енĕпе хăйсем те вырăссем пек пулма тăрăшаççĕ – тумтирне улăштараççĕ, кил-çуртне вырăссем пек йĕркелеççĕ, кĕлĕсене славянла вуланă чухне вĕсенче темле асамлă вăй пур пек туйса тăраççĕ, вĕсене чăвашла куçарнисенчен те лайăхрах тесе шутлаççĕ. Вĕсен шучĕпе, киреметрен хăтăлас тесен, пур енĕпе те вырăс пек çеç пулмалла, вара вĕсене киремет палласа илеймест, унсăрăн христианла кирек мĕнле лайăх курăнсан та киремет чăваш калаçăвне илтнĕ-илтмен, чăваш кĕпи-тумтирне курнă-курман çав çын çумне çулăхать", – тесе çирĕплетни пирки Н.И.Ильминский шутсăр кулянса: "Автор чăвашсен психологине чăнласах çапла мĕскĕн, юриех çăмăлттайлатса, çырса кăтартать. Çаплах пулсан – ытла та шел,"— тет.

"Чăнах та, христианствăна çиелтен çеç ĕненем пекки туса йышăнни Шупашкар уесĕнчи чăваш прихучĕсенче тĕл пулкалать,– тет малалла Н.И.Ильминский, – мĕнле те пулин йывăрлăхсем килсе тухнă чухне çакă уйрăмах вăйлă палăрать: тырă пулман çулсенче е вырçлăх килсе тухсан – чăвашсем çакна тӳрех киремет кӳреннипе çыхăнтарма хăтланаççĕ, чăн Турă чăваш тĕнне пăрахнăшăн тавăрать, теме пăхаççĕ, Турă кашни халăха хăйĕн тĕнне: чăваша – чăваш тĕнне, вырăссене – хăйсен тĕнне, тутарсене – каллех уйрăм тĕн панă, тесе шутлаççĕ. Вак халăхсем те христианство йăли-йĕркисене чун-чĕререн ĕненсе, пĕр иккĕленмесĕр тытса пыма пуçлаччăр тесен, вĕсен Христос тĕнĕ мĕн çинчен вĕрентнине лайăх ăнланса илмелле. Апла-тăк, кĕлĕ кĕнекисене тата христианство литературине кашни халăха хăйĕн тăван чĕлхипе çырса памалла.

И.Я.Яковлев шăпах христианствăна чăвашсем пур енлĕн ăнланса, пĕтĕм кăмăл-туйăмпа ĕненсе йышăнччăр, тесе тăрăшать. Çавăн пекех вăл славянла вулакан кĕлĕсен темле "асамлă вăйĕ" çине шанса тăмалла мар тет, чиркӳре литургисем вăхăтĕнче итлекен кĕлĕсенче мĕн каланине ăнланса илнĕ хыççăн ăс-тăна, чун-чĕрене вĕсенчи таса та сăваплă шухăш-туйăмпа пуянлатасси пирки шухăшлать. Апла пулсан, "И.Я.Яковлев чăвашсене хăйсен чĕлхи те вырăс чĕлхипе танах пулнине ĕнентерме хăтланать" тени тĕрĕс мар, ăссăрла шухăш. Çавăнпа та кунта çапларах пĕтĕмлетӳ тума пулать: хирĕçлес шухăшпа, курайманлăх туйăмĕпе сăмах пуçланă пулсан, темле киревсĕр шухăш патне те пырса тухма пулать", – тет Н.И.Ильминский.

Тĕрĕссипе, 1880 çулсенче чăвашсем хушшинче христианство тĕнне ĕненсе йышăнасси çулсерен çирĕпленсе пынă. Чăваш прихучĕсенче ĕçлекен пачăшкăсем тата халăх училищисен инспекторĕсем палăртнă тăрăх, çакă йăлтах И.Я.Яковлев тĕн литературине тата чиркӳ кĕллисене чăвашла илемлĕрех, ăнланмалларах куçарса панипе çыхăннă. Вăл тăрăшнипех тăван чĕлхе чиркӳре тата шкулта янăранă, унта çӳрекенсене хавхалантарнă, вĕсен чĕрисене ăшăтнă. Уйрăмах Çĕрпӳ уесĕн çурçĕр-хĕвел тухăç пайĕнче – Чиркӳллĕ Нăрваш, Чирĕклĕ Мăнçырма, Кавал, Патти, Тимеш прихучĕсенче – чăвашсем йышлăн Христос вĕрентĕвĕн çути патне туртăнни палăрнă. Чăвашла янăракан кĕлĕсене вĕсем кăмăллăн, киленсе, пĕр сас-чӳ кăлармасăр, шăп тăрса итленĕ, кĕл тăвакансен йышĕ те ӳснĕçемĕн ӳссе пынă.

Çавна май Иван Яковлевич патне тата Хусанти Куçару комиссине чăвашла куçарусемшĕн, Туррăн ырă хыпарне тăван чĕлхепе ăнланса илме пулăшнăшăн тав туса çырнă çырусем сахал мар пынă. Тăван чĕлхепе кăларнă кĕнекесене чăвашсем юратса тата хисеплесе йышăнни И.Я.Яковлева йывăр вăхăтсенче пулăшнă, малашне те пуçа усмасăр пикенсе ĕçлеме хавхалантарнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи

куçаруçăсем те хăйсен ĕçĕ çимĕç кӳме пуçланине курса хĕпĕртенĕ. Чăнах та, хăйсен тăван чĕлхине чăвашсемсĕр пуçне тата кам çавăн пек ăнланса хаклама пултартăр-ха?!

## 3.5. "ТУЛЛИ КĂМĂЛПА ТИМЛЕÇÇĔ"

И.Я.Яковлевăн куçару ĕçне тата çĕнĕ чăваш алфавитне Н.И.Ильминский мĕн тери ĕненмелле сăмахсемпе хӳтĕленĕ. Апла пулин те чăваш халăхне çутта кăларассишĕн пĕтĕм чун хавалĕпе ĕçлекен çынна тĕрĕс çул çинчен пăрса-сирпĕтсе яма хăтланакансем те парăнасшăн пулман. Шупашкар уесĕнчи В.Смелов пуппа пĕр çăварлă çын татах тупăннă, вăл Чикме уесĕнчи Шурчари 2–мĕш округ чиркĕвĕсене пăхса тăракан П.Любимов пуп пулнă. Ку та И.Я. Яковлевăн алфавитне тӳсме пултарайман. Çавăнпа 1886 çулхи кăрлачăн 25–мĕшĕнче Хусан архиепископĕ патне рапорт çырса тăратнă. Унта П.Любимов Шупашкар уесĕнчи пупăн "юрринех юрлать", чăваш алфавитне çапларах вилĕм сунать: "Кашни сăмахрах тĕл пулакан уйрăм йышши паллăсем ниме те пĕлтермеççĕ, сиен кăна кӳреççĕ, 1832 çулта вырăс алфавичĕпе, нимĕнле уйрăм паллăсемсĕрех пичетлесе кăларнă кĕнекесем тăрăх вĕреннĕ çынсене чиркӳ вĕрентĕвĕнчен пачах пистереççĕ. Шухăшласа кăларнă паллăсене вĕсен авторĕсем тӳрре кăларма тăрăшаççĕ. Анчах вак халăхсен чĕлхисене куçарнă кĕнекесем хăйсем тĕллĕн питĕ усăллă пулин те, каярахпа – уйрăм йышши çĕнĕ паллăсене шухăшласа кăларакансем хăйсем кирлĕ мар çынсем пулса тăнă хыççăн – çав саспаллисене пулах архив тусанĕ айне пулĕç", – теме вăтанман. Сăмахĕсем ĕненмеллерех пулччăр тесе, П.Любимов благочиннăй пĕр тĕслĕх илсе кăтартнă. Хăй пăхса тăракан прихутри Лапкасси ялĕн хресченĕ Александр Павлов чăвашла куçарнă кĕнекесене вуланă хыççăн нимех те ăнланман имĕш. И.Я.Яковлев каçхи Аслă апат (Тайная Вечеря. – *И.М.*) историне куçарнă текстри "Вăл /Иисус Христос/ хăйĕн таса

аллине *“ҫӑкӑр* илнӗ те пиллесе, ӑна вӗренекенӗсене *хуҫа-хуҫа* панӑ текен предложенири *“ҫӑкӑр”* сӑмаха *“сакар”*, *“хуҫа-хуҫа* панӑ“ тенине “*хуса-хуса* панӑ“ тесе вуланӑ та куҫарӑва ҫапларах ӑнланнӑ иккен: “Он взял восемь помолившись и благоловивши, поблевал эти восемь, подавая ученикам”.

Ҫакӑн пек тӗслӗхпе критиксем И.Я.Яковлев чиркӳ кӗнекисен содержанине акӑ мӗнлерех пӑсса куҫарать тата унӑн ҫӗнӗрен шухӑшласа кӑларнӑ паллисем чӑвашла куҫарусене мӗн тери пысӑк сиен кӳреҫҫӗ, тесе айӑпласшӑн пулнӑ.

П.Любимов благочиннӑйӑн ҫак рапортне Гурий святителӗн Тӑванлӑх Канашӗ хушнипе Куҫару комиссийӗнче тӗплӗн пӑхса тухнӑ, тивӗҫлӗ хак панӑ. Куҫарусенчи йӑнӑш тесе илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсенчен ытларахӑшӗ чӑвашла сасӑсен янравлӑхне тӗрӗс мар вуланипе ҫыхӑннине палӑртнӑ. “Александр Павлов чӑваш ҫӗнӗ саспаллисен пӗлтерӗшне кирлӗ чухне аванах ӑнланать: *“вӑл”, “ҫийӗр”*, “*иҫум”, “каҫхи”, “ӗҫӗр”* сӑмахсене *он, ешьте, изюм, вечерний, пейте* пӗлтерӗшпех вулать. Анчах сӑмахсен пӗлтерӗшне кулӑшла е пачах киревсӗр ҫавӑрса хума май пур чухне ӑнланмана перет: “ҫӑкӑр” “хуҫ” сӑмахсен пӗлтерӗшне мӗншӗн ҫапла пӑсса кӑтартмалла пулнӑ-ха чӑн чӑвашӑн?” – тесе ыйтнӑ Куҫару комиссийӗн тишкерӗвӗнче. Унтан хӑйсемех ҫапла хурав панӑ: “Пӗлекен ҫынсем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, Александр Павлов Шупашкар уесӗн училищинче вӗреннӗ те, иккӗмӗш класран тухса кайнӑ хыҫҫӑн вулӑс писарӗн ҫумӗ пулса ӗҫленӗ, каярахпа, пӗр вӑхӑт хушши полици уретникӗ пулнӑ. Вӑл хӑйӗн тӑван чӗлхинчен вӑтанать”.

Паллах, кӑна ӗненме пулать ӗнтӗ. Тӑван чӗлхерен риснӗ, вӑтанакан ҫын ҫеҫ вырӑс пупӗсем хыҫҫӑн кайса чӗлхерен ҫапла мӑшкӑллама пултарнӑ. Хӑнӑхман паллӑсемпе чӑвашла ҫырни малтанласа вырӑсла вулама-ҫырма вӗреннӗ чӑвашсемшӗн хӑйсемшӗн те йывӑр пек туйӑннӑ. Анчах

çĕнĕ паллăсенчен ютшăнса тăмасан, вĕсене пĕр ÿркенмесĕр вулама хăнăхса çитсен чăвашла куçарусем çав тери илемлĕ пулнине туйса илнĕ пирки Куçару комиссине нумай çĕртен çыра-çыра пĕлтернĕ. Чăвашла кĕнекесем Хусан, Чĕмпĕр, Самар, Ĕпхÿ, Оренбург кĕпĕрнисенчи чăваш ялĕсенче нумайланнăçемĕн нумайланса пынă. Чылай çĕрте шкулсенче кăна мар, чиркÿре те чăвашла калаçнă, чăваш чĕлхине пĕлекен е чăвашранах тухнă пачăшкăсем те сахал пулман. Шкулсенче чăвашла вĕрентекен тата чиркÿсенче кĕлĕсене чăвашла юрласа ирттерекен çĕрте чăвашсем хăйсем те Христос тĕнне чунтан ĕненсе тытса пыма пуçлани, хутла вĕренме тăрăшни вăйлă сисĕнет: пуçламăш шкулсем уçăлаççĕ, халиччен ĕçлекен училищĕсенче вĕренекенсен йышĕ ÿсет, чиркÿсене турра ĕненекенсем тăрăшса çÿреççĕ. Кĕлĕсене тăван чĕлхепе вулама-юрлама пуçлани чăвашсене тĕлĕнмелле вăйлă хумхантарать те, хаваслантарать те. "Çавăнпа та тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса кăларакансене тав тумалла çеç, саспаллисемшĕн çапăçса-вăрçăнса пурăнса ята та, вăхăта та сая ямалла мар. Тĕн кĕнекисене хута пĕлекен çын тĕрĕс вуласассăн, ăна итлесе тăракан чăвашсем унта мĕн çырнине лайăх ăнланса пыраççĕ. Хăйсен ĕçне таса чунпа тăвакан пупсем ăнланма йывăртарах вырăнсенче чарăнса тăрса сăмах мĕн çинчен пыни пирки уçăмлă ăнлантарса пама тивĕçлĕ. Çавăн пек пулсан çеç эпир Христос вĕрентĕвне вак халăхсем хушшинче сарса çирĕплетме пултаратпăр. Чăваш кĕнекисенче вырăс саспаллийĕсем çумне ÿкерсе хунă паллăсене илес пулсан, вĕсем чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕрĕс те уçăмлă палăр-таççĕ. Пурнăç кăтартса пачĕ ĕнтĕ, И.Я.Яковлев алфавитне çырăва тин вĕренме пуçлакан ачасем питĕ çăмăл хăнăхса пыраççĕ. Çавăн пекех вулама-çырма вĕреннĕ чăвашсем те çак алфавита алла илме тăрăшаççĕ. Чăваш прихучĕсенче ĕçлекен вырăс пупĕсем пирки каласан, чăвашла орфографи вăрттăнлăхне ăнланса илес тесессĕн, И.Я.Яковлев кăларнă

чăвашла букварĕн умсăмахне çеç тимлĕрех вуласа тухмалла", – тесе ăнлантарнă Куçару комиссийĕ.

Ăнлантару хучĕ çине Хусан архиепископĕ Палладий çапла алă пуснă: "Куçару комиссийĕн пĕтĕмлетĕвĕ хисепе тивĕçлĕ. Куçарусем вак халăхсене тĕн вĕрентĕвĕпе çутта кăларма пулăшнипе, нумай пархатарлă витĕм кӳнипе эпĕ хам та килĕшетĕп. Любимов пуп хăш-пĕр уйрăм тĕслĕхсем çеç илсе кăтартнă, вĕсем те куçарусене хăйсене мар, вĕсенчи уйрăм паллăсене çеç пырса тивеççĕ. П.А.К" – тенĕ.

И.Я.Яковлева хирĕçле çăхавсене пăхса тухнă хыççăн çапла шухăш патне килсе тухатăн: чăваш прихучĕсенче ĕçлекен вырăс пупĕсем хушшинче И.Я.Яковлев алфавитне тата чăвашла кĕнекесене хирĕçле вăрçа йăлтах Шупашкар уесĕн Урхас Кушкă ялĕнчи Василий Смелов пачăшкă пуçарса янă тата таврари ытти пупсене те чăваш çырулăхне хирĕç тăма хĕтĕртнĕ. Куратпăр ĕнтĕ, Куçару комиссийĕ тата Н.И.Ильминский хăй чăваш чĕлхинчи çĕнĕлĕхсем е куçару меслечĕ пирки мĕн чухлĕ ăнлантарса çырнă. Анчах вĕсене В.Смелов "филологические извороты Ильминского" тесе çеç хаклать. Чăваш алфавичĕпе усă курма пуçлани 5-6 çул иртнĕ, ĕнтĕ чăваш шкулĕсенче вĕренекенсем те, чăваш прихучĕсенче ĕçлекен вырăс пупĕсем те ăна хăнăхса çитнĕ.

В.Смелов вара пурнăç чăнлăхне ниепле те йышăнасшăн пулман. Çĕнĕ куçарусене алла илнĕ-илмен вĕсенче япăххине шырама пикеннĕ. 1889 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Хусан архиепископĕ патне каллех тепĕр çăхав янă. Кунта каллех куçару комиссийĕ е куçаруçăсем тунă йăнăшсене "тӳрлетет", яланхи пекех транскрипци юрăхсăрлăхне ĕнентерет, çавна май хăй тĕслĕхсене юриех вырăс саспаллисемпе çырса парать, нумай сăмаха тĕрĕс çĕртех йăнăш тесе ăнлантарать. Хăйĕн 16 страницăллă çăхав-çырune вăл çапла вĕçлет: "Турă Саккунне ("Закон Божий") вĕрентекен вырăссем чăвашла куçарусене ăçтан ăнлантарса парайччăр? Пĕр пытармасăр каласан, пупсенчен чылайăшĕ Яковлев господинăн куçарăвĕсене чăвашла

саспаллисемпе çырнăшăн вулама та пĕлмеççĕ, анчах май килнĕ чухне вĕсене мухтама тăрăшаççĕ. Чăвашран тухнă учительсемшĕн Яковлев господин шутсăр пысăк авторитет, çавăнпа унăн сăмахĕсене чи тĕрĕсси выраннe хурса йышăнаççĕ, кĕнекесенчи йăнăш пичетленнĕ вырăнсене тӳрлетме те хăраççĕ", – тет чăвашла калаçкалама вĕреннĕ пачăшкă И.Я.Яковлев пек ăслă-тăнлă çынсене кураймасăр. Ку çырăва Палладий архиепископ хушнипе Куçару комиссийĕнче пăхса тухаççĕ. Чăвашла куçарусене вăй çитнĕ таран хăй алли витĕр кăларнă Н.И.Ильминскин каллех комисси ячĕпе татăклă сăмах калама тивет.

"В.Смелов атте "чирĕ ытла та шала кайнине" шута илсе, вăл хирĕçленисемпе унăн асăрхаттарăвĕсене питĕ тĕплĕн тата лăпкă кăмăл-туйăмпа ăнлантарса памалла тесе шутлатăп", — пуçлать сăмахне ватă профессор.

"В.Я.Смелова манăн филологи пĕлĕвĕсен шайне тата эпĕ наукăра яланах тӳрĕ кăмăллă пулма тăрăшнине ĕненме ыйтас килет. Ку енĕпе халиччен мана никам та шанмасăр тăманччĕ-ха. Енчен те эпĕ ăнлантарса панă тĕслĕхсемпе хăшинпе те пулин усă курнă пулсан, критикăн кăмăлĕ кăштах улшăннă пулĕччĕ", – çырать Н.И.Ильминский.

Малалла вăл В.Смеловăн асăрхаттарăвĕсене тишкерсе наука тĕлĕшĕнчен ăнлантарать, вăл е ку сăмах çаврăнăшне И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем мĕншĕн çапларах куçарнине çырса кăтартать, тĕслĕхсене тутар, араб, перс, грек, француз чĕлхисенче мĕнле куçарнипе паллаштарать. В.Смелов чăваш синтаксисне вырăс чĕлхин законĕсен аршăнĕпе виçнине хытă сивлет. Ку хутĕнче Н.И.Ильминский чăвашла куçарусене хирĕçлесе те тиркесе çырнă çырусенче илсе кăтартнă 111 тĕслĕхе пăхса тухса наука тĕлĕшĕнчен ăнлантарать:"Смелов атте чăвашла лайăхах пĕлменни пирки эпĕ маларах та çырнăччĕ, халĕ те çавнах калама пултаратăп. Кирек мĕнле пулсан та асăрхаттарусене чĕлхе законне пĕлмесĕр, хăй сĕнекен вариантсене пĕр вăтанмасăр чи тĕрĕсси вырăнне хурса йышăнма хистени ытла та

сăпайсăр. Текста чăвашла куçарнă чухне çак пачăшкă сăмах айне сăмах çырса куçарттарасшăн пулĕ. Çук, куçарусенче предложенин тĕп шухăшне тĕрĕс пĕлтерĕшпе çырса пани паха. Çавăн пекех чăвашсем тăван чĕлхепе кăларнă кĕнекесене алла илнĕ хыççăн çеç христианствăна ăша хывса майĕпен ĕненме пуçланине те шута илмелле. Халиччен те литература чĕлхи çирĕпленсе çитеймен тата тин çеç çутта туха пуçланă халăх чĕлхине куçарнă чухне текста тĕп-тĕрĕс тума, пĕр кăлтăксăр чи çӳллĕ шая çитерме вышкайсăр йывăр.

Смелов атте вара чăвашла куçарусене хурланисĕр пуçне тăлмачăсем халăх малашлăхĕшĕн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ тата пархатарлă ĕç туни çинчен те пĕр ăшă сăмах та каламасть", – тет Н.И.Ильминский хăйĕн ăнлантарăвĕнче.

Чăвашла кĕнекесене И.Я.Яковлевпа унăн пулăшаканĕсем мĕнлерех куçарнине тĕплĕнрех ăнлантарса парас тата В.Смелов пупăн асăрхаттарăвĕсем пирки куçаруçăсем хăйсем мĕн шутланине те пĕлес шутпа Н.И.Ильминский Иван Яковлевич патне Чĕмпĕре юлашки çăхав копине ярса панă. И.Я.Яковлев çырупа паллашнă та ăна куçару ĕçĕнче хăйпе пĕрле пит хытă тăрăшнă Андрей Петров пуп патне çитернĕ.

Андрей атте, Етĕрне уесĕнчи Сăкăт прихутне кĕнĕ Мăн Явăш ялĕнче çуралнă чăваш, çамрăк чухне П.Д. Миловидов протоиерейĕн регент шкулĕнче вĕреннĕ, темиçе çул хушши унăн çемйинчех пурăннă. 1874 çулта, 16 тултарсан, Хусанти учительсен семинарине вĕренме кĕнĕ, унта чиркӳ хорĕнче юрлама вĕреннĕ, сасси уçă та янравлă пулнипе палăрса тăнă. 1877 çулта семинарирен вĕренсе тухсан, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче чиркӳ юррисене юрлама вĕрентекен учительте ĕçленĕ, арçынсен шкулĕн кĕçĕн класĕсенче тата хĕрсен уйрăмĕнче Турă Саккунне вĕрентнĕ. 1885 çулта Чĕмпĕр шкулĕ çумĕнче чиркӳ уçăлнă хыççăн унти пачăшкăна кĕнĕ. 1889 çул пуçламăшĕнче Ĕпхӳ епархийĕн Пелепей

уесĕнчи Пишпӳлек ялĕн чиркĕвĕнче ĕçлеме пикеннĕ. Нумай пĕлме тăрăшнипе тата ĕçе юратнипе Андрей Петров атте Чĕмпĕр шкулĕнче чухне И.Я.Яковлева куçару ĕçĕнче чи нумай пулăшакансенчен пĕри пулнă. В.Смелов çырăвне Иван Яковлевич шăпах ун патне ярса панă.

Андрей Петров 1889 çулхи çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Н.И.Ильминский патне хурав çырса янă. Унта вăл чиркӳ кĕнекисене чăвашла куçарнă чухне мĕнле пособисемпе усă курни çинчен тата çавăн пекех В.Смелов асăрхаттарăвĕсем пирки хăй мĕн шутлани пирки çырса пĕлтернĕ. Унăн ăнлантарăвĕ чăваш куçаруçисем мĕн тери пултаруллă пулнине тата пĕтĕм чун хавалĕпе тăрăшса ĕçленине, мĕн тери ăслă тата тĕплĕ шухăшлама пĕлнине кăтартса парать.

Куçарнă чухне тăлмачăсем славянла тата грекла Библипе ĕçленĕ, Авал хунă Сăмаха, Псалтире, Çĕнĕ Сăмаха вĕренме пулăшакан 15 тĕрлĕ пособипе, ăнлантару-кĕнекесемпе анлă усă курнă. "Пĕтĕм уçă кăмăлпа тата таса чĕререн каласа ĕненме ыйтатăп Сире, Николай Иванович, — тет Андрей атте, – чăвашла тĕн кĕнекисене пурне те мĕн чухлĕ ăс-тăн, вăй-хал пулнă, çавăн чухлĕ тăрăшса, тĕплĕн, канма пĕлмесĕр куçарнă. Çавна май текстри шухăша тĕрĕс куçарса парас тесе çеç мар, куçару чĕлхи илемлĕ янăратăр, мĕн пур чăвашсемшĕн ăнланма çăмăл пултăр тесе тăрăш–рăмăр. Чăвашла куçарусене вуланă чухне вĕсене итлекенсенче чăн-чăн подлинника вуланă чухнехи пекех ырă шухăш-туйăм çуралма тивĕçлине асра тытнă эпир.

Текста вуланă чухне йывăрлăхсемпе тĕл пулсан, ăнлантару пособийĕсенче тивĕçлĕ кăтартусем тупайман чухне Чĕмпĕр соборĕнче ĕçлекен Сергей Степанович Медведков богослови магистрĕпе тата грек чĕлхине вĕрентекенсемпе канашлаттăмăрччĕ.

Кашни куçарăва Чĕмпĕр шкулĕнчи мĕн пур вĕрентекенсемпе тата вĕренекенсемпе пĕрле вуласа тухаттă–мăр. Çакăн хыççăн куçарусене пурне те Иван Яковлевичпа хăйĕнпе пĕрле вулаттăмăр. Вăхăчĕ çук пулсан та вăл

(час-часах çĕрĕ-çĕрĕпе) чăвашла текстсене питĕ тĕплĕ пăхса тухатчĕ. Тепĕр чухне вара ытлашши чăкăлташса кĕрсе кайнăнах туйăнатчĕ. Пĕр куçарăва та хăй пăхса тухмасăр пичете паман. Апла пулсан та хăш-пĕр йăнăшсем пулма пултарнах ĕнтĕ. Мĕншĕн тесен эпир куçарнă кĕнекесем пурте калăпăшĕпе пысăк пулнă. Мĕн чухлĕ вăй, тӳсĕмлĕх тата юрату кирлĕ пулнă вĕсене куçарма, унтан – пăхса тухса тӳрлетме тата пичетлеттерме. Астăватăп-ха, пĕр сăмах çаврăнăшне куçараймасăр икĕ кун тертлентĕм, урăх нимĕн çинчен те шухăшлаймарăм. Питĕ йывăр сăмах çаврăнăшĕ, шухăшĕпе ăна темиçе тĕрлĕ те ăнлантарма пулать, анчах чăвашла куçарса пама çав тери йывăр пулчĕ. Пин тĕрлĕ те çавăрттарса пăхрăм, анчах ниепле те кăмăла каймарĕ. Кайран, сисмесĕрех кирлĕ сăмахсем хăйсемех пуçа килсе кĕчĕç. В.Смелов критик вара йывăр вырăнсене мĕнлерех ăнăçлă куçарнине пĕртте асăрхамасть, яланах таçтан туртса илнĕ сăмахсене çеç тиркеме пăхать. Асăрхаттарăвĕсене вăл ытла та çиелтен, тарăн шухăшламасăр тăвать, çитменнине час-часах текста пĕтĕмĕшле ăнланма тăрăшмасть. Унăн çырăвĕсенче пуринчен те ытларах тĕлĕнтерекенни вăл – пĕр вăтанмасăр хăйне хăй ăсла хуни. Пĕр-пĕр сăмах çаврăнăш-не тиркенĕ май хăй енчен пачах килпетсĕр, ăнăçсăр сăмахсем сĕнни ытла та кулăшла.

Чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсене ăнланман тата чĕлхе пĕр евĕрлĕ пĕлтерĕше кăтартакан тĕрлĕ сăмахсемпе пуян пулнине тĕшмĕртмен Смелов атте нихăш енчен те чăвашла куçарусене пĕтĕмĕшле хак паракан судья пулма пултараймасть. Хут пĕлекен чăвашсем вĕсене çав тери хисеплесе вулаççĕ, итлекеннисем вара тулли кăмăлпа тимлеççĕ, çавăнпах пулĕ ĕнтĕ чăвашла кĕнекесене Хусан, Чĕмпĕр кĕпĕрнисенче нумай ыйтаççĕ. Смелов атте куçарусенче йăнăш пичетленнĕ е сиксе юлнă сăмахсене тупса пама пулăшнипе çеç пĕртен пĕр усă кӳме пултарать. Çавăн чухне вара эпир унăн сĕнĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсене тав туса йышăннă пулăттăмăр. Ытти çĕрти пачăшкăсемпе

Тура Саккунне вĕрентекенсем пире çапла пулăшаççĕ", – тесе вирлĕ хурав парать çăхавçă-критика И.Я.Яковлевăн шанчăклă пулăшаканĕсенчен пĕри – Андрей Петров куçаруçă.

## Литература


1. Чуваши в Константинополе (Константинопольри чăвашсем). Казань: Типография А.М.Петрова, 1903. 12-13 с.
2. Петров М.П. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич Яковлев çинчен. Шупашкар, 1928. 11 с.
3. Даль В. Толковый словарь живого великорусского языка: В 4 т. М., 1995; Т. 3. С. 153; Фасмер М. Этимологический словарь русского языка: В 4 т. Спб, 1996. Т. 3. С. 294–295.
4. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989. С. 53-54.
5. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. М.: Республика, 1997. 274-275 с.
6. Петров Н.П. Чăваш литература чĕлхин историйĕ. Шупашкар, 1978. 79-80 с.
7. Опыты переложения христианских вероучительных книг на татарский и другие инородческие языки в начале текущего столетия: Материалы для истории православного русского миссионерства. Казань, 1883. С. 215, 225.
8. Петров Н.П. Чăваш çырулăхĕ. Шупашкар, 1971. 21-22 с.
9. Переписка о чувашских изданиях Переводческой комисси. Казань: Изд-ие Правосл. Миссионерск. Общ-ва, 1890. С. 1--204.
10. Петров Н.П. Чăваш çырулăхĕ. Асăннă кĕнеке. 26-27 с.
11. Рижский М.И. История переводов Библии в России. Новосибирск: Наука. Сиб. отд–ние, 1978. С. 157.

# 4 сыпăк

# ЧĂВАШЛА БИБЛИ

## 4.1. БИБЛИ ЧĔЛХИ ТАТА АВАЛХИ КУÇАРУСЕМ

"Библия" тени грексен biblia сăмахĕнчен, тĕрĕсрех каласан, нумайлă хисепри TA BIBLIA сăмахран пулса кайнă, "кĕнекесем" тенине пĕлтерет. XII ĕмĕртен пуçласа çак сăмахпа пĕрреллĕ хисепре çеç усă курма тытăннă. Тепĕр чухне чиркӳçĕсем "библиотека" ятпа та усă курнă е "Дивина библиотека" тенĕ. Чăвашла "Турă çинчен çырнă кĕнекесен пуххи" тени пулать вăл. Мĕншĕн тесен, Библи пĕр кĕнекерен çеç мар, 1500 çул хушшинче 40 яхăн автор çырнă тата канонланă 66 кĕнекерен тăрать. Ăна çыракансем хушшинче патшасем, ăсчахсемпе тухтăрсем, чиркӳçĕсемпе ӳкĕтлевçĕсем, патшалăх ĕçĕнчи пысăк вырăнти пуçлăхсем, ял хуçалăх ĕçченĕсем, пулăçсем, музыкантсем, пророксем пулнă.

Пĕтĕм Библи хăй икĕ пайран тăрать: пĕри — Авал хунă Сăмах ("Ветхий Завет") тепри — Çĕнĕ Сăмах ("Новый Завет"); "Завет" сăмахпа, — çырать Сăваплă Çырусене тишкерес енĕпе палăрнă ученăй Э.Эби, — чи малтан Чиркӳ çынни Тертуллиан атте "союз" пĕлтерĕшпе усă курнă". Çавна май Авал хунă Сăмах ("Ветхий Завет") — Турă Моисей урлă Израиль халăхĕпе, Çĕнĕ Сăмах ("Новый Завет") — Христос Хăйĕн Чиркĕвĕпе çыхăну йĕркеленине кăтартса парать. Библи чĕлхи çинчен калас пулсан, Авал хунă Сăмаха, тĕпрен илсен, *ивритла* çырнă. Ездра, Неемия тата Даниил пророксен кĕнекисенчи уйрăм пайсене *арамейла* çырса хăварнă. Сĕм авал иврит Палестинăра усă куракан тĕп чĕлхе пулнă, арамей чĕлхи — каярахпа йĕркеленнĕ диалект, Тухăçра пурăнакан еврейсен калаçу чĕлхи. Çĕнĕ Сăмаха вара грекла çырнă. Çав вăхăталла грек чĕлхи тĕнчипе тенĕ пек паллă вырăн йышăннă.

Библи куçарӑвӗсем мӗн авалтанпах пулнӑ, вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем пирӗн вӑхӑта çитнӗ оригиналсенчи ал çырӑвӗсенчен те ватӑрах. Авал хунӑ Сӑмахӑн, çавӑн пекех Çӗнӗ Сӑмахӑн тексчӗсене тишкернӗ чухне çав куçарусем калама çук пысӑк пулӑшу параççӗ. Сӗм авалхи куçарусенчен чи паллӑраххисен шутне çаксене кӗртеççӗ:

*Септуагинта* ("çитмӗл" тенине пӗлтерет) — Авал хунӑ Сӑмаха грекла куçарнӑ текст. Ӑна Александрия хулинче, Птоломей Филадельфус патшара ларнӑ чухне куçарма пуçланӑ та Христос çураличчченхи (урӑхла каласан, пирӗн эрӑччченхи) 275-130 çулсем хушшинче куçарса пӗтернӗ. Халӑхсем хушшине сарӑлнӑ сӑмах-юмах тӑрӑх, çак текста грекла куçарас енӗпе Иерусалимран килсе çитнӗ 72 ӑслайçӑ-кӗнекеçӗ тӑрӑшнӑ. Тӑлмачӑсем пӗр-пӗрне курмасӑр, пӗр-пӗринпе калаçмасӑр 72 кун та 72 çӗр пуçне çӗклемесӗр тенӗ пек ӗçленӗ, Авал хунӑ Сӑмахӑн мӗн пур кӗнекине куçарса хунӑ. Куçарусене пурне те пӗрле пӑхса тухса тӗрӗсленӗ хыççӑн çак Сӑваплӑ Çырусен содержанийӗ пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑманнине, текст чӗлхипе стилӗ кӑна тӗрлӗрен пулнине палӑртнӑ. Çавӑнпах-тӑр тӑлмачсене ку сӑваплӑ ӗçре çӳлти Турӑ хӑват парса тӑнӑ тесе йышӑннӑ, куçарнӑ текстсене пӗрле пухса, "септуагинта" тесе çаптарса кӑларнӑ. Çак сӑмах-юмах тӗрӗс-и, çук-и — ун пирки тӗпчевçӗ- историксем паянхи кунччченех тавлашаççӗ, анчах вырӑс чиркӗвӗн литературинче те ӑна "çитмӗл тӗрлӗ ӑнлантарса панӑ куçару" теççӗ. Тӗрӗссипе, Септуагинтӑн тӗрлӗ пайне пирӗн эрӑччченхи III тата II ӗмӗрсенче тӗрлӗ вӑхӑтра тӗрлӗ çынсем куçарнӑ, çавӑнпа та вӗсем пӗр-пӗринчен чӗлхипе те, стилӗпе уйрӑлса тӑраççӗ. Септуагинтӑпа пирвайхи христиансем, тӗслӗхрен, Павел апостол усӑ курнӑ.

Тепӗр паллӑ, паха куçару вӑл — "*Пешитта*" — Библи кӗнекисене сири чӗлхине куçарни. Çавна май Авал хунӑ Сӑмаха еврей чӗлхинчен II ӗмӗр пуçламӑшӗнче, Çӗнӗ Сӑмаха II ӗмӗрте грекларан куçарнӑ.

Виççĕмĕш куçару Хĕвеланăç Германи епископĕн ячĕпе, Христос çуралнă хыççăн 388-мĕш çулччен пурăннă Ульфиласпа çыхăннă. Библие вăл греккларан готсен (Германири авалхи йăхсен пĕр ушкăнĕ) чĕлхине куçарнă, çак тĕллевпех готсен алфавитне туса хатĕрленĕ. Ульфилас куçарăвĕ ("*готический перевод*") Германи литературин сĕм авалхи палăкĕ пулса тăрать. Шел пулин те, пирĕн вăхăт тĕлнелле çак куçарăвăн уйрăм сыпăкĕсем, тĕпрен илсен, хĕрлĕ пергамент çине кĕмĕл шывĕпе çырнă Евангелисен пайĕсем çеç сыхланса юлнă, вĕсем Швецире упранаççĕ.

Христианство Италире тата латинла калаçакан ытти çĕршывсенче сарăлса, çирĕпленсе пыни Библие латинла куçарма хистенĕ. Латинла куçарăва "*Вульгата*" тенĕ, ку вăл "халăх чĕлхипе çырнă", "пурне те ăнланмалла" тенине пĕлтерет. Мĕншĕн тесен, Италире патшалăх чĕлхи вырăнĕнче малтанласа вырăнти çынсем ăнлансах пĕтереймен грек чĕлхи пулнă.

Латинла куçарнă пирвайхи текстсем пурте ăнаçлах пулса тухайманнине шута илсе Рим папи Дамасий Чиркĕвĕн чи пултаруллă Иероним ятлă ăслайçă-кĕнекеçине Сăваплă çырусене грекла текст тăрăх çĕнĕрен куçарса хатĕрлеме хушнă. Иероним атте Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене греккларан куçарнă, Авал хунă Сăмаха вара оригинал чĕлхинчен, ивритла Библирен, куçарма шутланă. Çак тĕллевпе вăл еврей чĕлхине ятарласа вĕреннĕ, кайран 15 çул хушшинче Авал хунă Сăмах кĕнекисене йăлтах куçарса пĕтернĕ. Ку ĕç пирĕн эрăри 383-405 çулсенче пулса иртнĕ. Библин çак латинла куçарăвĕ (у.к."Вульгата") католиксен чиркĕвĕ йышăннă пĕртен-пĕр саккунлă кĕнеке пулса тăнă.

Тепĕр паллă куçару — Мартин *Лютерăн нимĕçле куçарăвĕ*, ăна вăл Вартбургра 1521 çулта пуçланă та 1534 çулта вĕçленĕ. Библие йăлтах оригиналтан куçарнă, Лютер пек çӳллĕ шайра куçарнă нимĕçле вариант ку таранччен те çук. Унта тăлмачă нимĕç халăхĕн пуян чĕлхипе туллин усă курма пултарнă, çапла майпа нимĕçсен пĕтĕмĕшле

литература чĕлхин никĕсне хывнă. Лютер куçарнă Библие нимĕççем паянхи кун та чăн-чăн литературăпа истори палăкĕ вырăнне хурса упраççĕ, унпа тивĕçлипе мăнаçланаççĕ (1).

Хăй вăхăтĕнче Совет Союзне кĕнĕ халăхсене илес пулсан, чи авалхи куçарусем эрменсемпе грузинсен пулнă. Библие вĕсем йăлтах V-мĕш ĕмĕрте куçарса алла тытнă.

## 4.2. ВЫРĂСЛА БИБЛИН КĔСКЕ ИСТОРИЙĔ

Руçе тĕне кĕртнĕ хыççăн (988 ç.) вырăссем Кирилпа Мефодий пĕр тăвансем куçарнă славянла Библипе усă курнă (2). Çавна май христианство тĕнне славянсен çĕрĕ çинче çирĕплетме ятарласа янă Кирилпа Мефодий Библие куçарас умĕн славянсем валли азбука та туса хатĕрленине палăртса хăвармалла.

Вырăс православи чиркĕвĕнче авалхи славянсен чĕлхипе усă курасси темиçе ĕмĕре пынă. Протестантсен чиркĕвĕ Библие халăх калаçакан чĕрĕ чĕлхепе вĕрентме, тишкерме тăрăшнă, çакă Турра ĕненекенсен йышне ӳстерме пулăшнине палăртнă. Паллах, ку вырăс чиркӳне витĕм кӳмесĕр тăма пултарайман, Раççей обществинче те вырăсла Евангели, вырăсла Библи кирлĕ пулни сисĕне пуçланă. Çак сăлтава пулах 1813 çулта Раççейре Библи обществине туса хунă.

Çакăн йышши общество чи малтан Англире йĕркеленнĕ, 1804 çулта Лондонра уйрăм хуçасен укçи-тенкипе Британин Библи обществине туса хунă. Унăн тĕллевĕ — "обществăра пурăнакан мĕнпур çынсене Турă сăмахне вулама вĕрентесси, çавăнпах Библи кĕнекисене тĕрлĕ халăх чĕлхисене куçарса пичетлесе кăларасси тата çав кĕнекесене йӳнĕ хакпа сутасси, чи чухăннисем хушшинче тӳлевсĕрех сарасси" пулнă.

Малтанласа Раççейĕн Библи обществи Библи кĕнекисене Синодран йӳнĕрех хакпа туянас тата Раççей империйĕн

территорийĕнче пурăнакан халăхсене Сăваплă Çырусене хăйсен чĕлхипе куçарса парас енĕпе ĕçленĕ. 1816 çулта славянла Библие тепĕр хут пичетлесе кăларма хăтланнă. Ăна вырăсла куçарасси пирки сăмах та пулман. Анчах кăштах вăхăт иртсен, Библи обществи Турă çырăвĕсене вырăс халăхĕ калаçакан чĕрĕ чĕлхене куçарас ыйтăва хускатнă. I Александр патша та çакăнпа пĕр сăмахсăрах килĕшнĕ. 1816 çулхи нарăсăн 28-мĕшĕнче Библи обществин президенчĕ А.Н.Голицын князь Синод членĕсене патша кăмăлне пĕлтернĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл çапла ăнлантарса панă: чиркӳсенче славянла текстпа çеç усă курмалла, вырăсла куçарăва та славянла текстпа пĕрле пичетлемелле. Çийĕнчен тата Греци чиркĕвĕнче хăйĕнче те Константинополь патриархĕ Кирилл ирĕкĕпе Çĕнĕ Сăмаха грексен хальхи вăхăтра калаçакан чĕлхипе вуласа ăнлантарни пирки асăнса хăварнă. Апла пулин те çак шухă–ша Синод ырласах йышăнман, анчах патшана хирĕç те кайма пултарайман, "Сăваплă Çырусене хальхи вырăс чĕлхине куçарса пичетлени усăллă" тесе палăртнă та куçару ĕçне тӳрремӗнех хутшăнма килĕшмен (3).

Çапла вара куçару ĕçĕ йăлтах Тĕн академийĕсемпе училищисен представителĕсенчен йĕркеленĕ комиссипе Библи обществи çине тиеннĕ. А.А.Голицын çине тăнипе Библи кĕнекисене вырăсла куçарас ĕçе Мускав, Петербург тата Киев тĕн академийĕсен профессорĕсене хутшăнтарнă. Матфей çырнă Евангелие — Петербург тĕн академийĕнче авалхи еврей чĕлхине вĕрентекен профессор Герасим Петрович Павский, Марк çырнă Евангелие — тĕн семинарийĕн ректорĕ Поликарп архимандрит, Лука çырнă Евангелие — академи бакалаврĕ Моисеев архимандрит, Иоанн çырнă Евангелие — Филарет архимандрит куçарнă. 1818 çулта тăватă Евангелие пичетлесе те кăларнă. 1819 çулта вара патша çак çĕнĕ куçарăва тепĕр хут славянла текстсăр пичетлеме ирĕк панă. 1822 çулта Çĕнĕ Сăмах кĕнекисем пурте пĕрле таса та чĕрĕ вырăс чĕлхипе çапăнса

тухнӑ (4). Евангелисене тата Апостолсен ӗҫӗсемпе Ҫырӑвӗсене Синод хушнипе грек чӗлхинчен мар, славян чӗлхинчен куҫарнӑ. 1824 ҫул тӗлне Раҫҫей Библи обществи ертсе пынипе тата тӳрремӗнех хутшӑнса ӗҫленипе Ҫӗнӗ Сӑмахӑн кӗнекисене йӑлтах, Авал хунӑ Сӑмахран — Моисейӗн 5 кӗнекине, Псалтире, Руфь, Иисус Навин, судьясен кӗнекисене вырӑсла куҫарса пӗтернӗ. Ҫак ҫулах Ҫӗнӗ Сӑмаха пирвайхи хут славянла текстсӑр пичетлесе кӑларнӑ. Пӗтӗм куҫарӑвӑн редакторӗ Г.П.Павский профессор пулнӑ.

Тӗрӗссипе, Авал хунӑ Сӑмаха 1820 ҫулта куҫарма тытӑннӑ. "Пултарни" текен кӗнекене — Петербург Тӗн академийӗнче, "Тухни" кӗнекене — Мускавра, “Левита" Киевра куҫарнӑ. 1825 ҫул тӗлне Руфь кӗнеки патне ҫитиччен йӑлтах куҫарса пичетлеттернӗ, анчах кӗтмен ҫӗртен Библи обществине хупнӑ та Раҫҫейри пӗтӗм куҫару ӗҫӗ чарӑнса ларнӑ.

Ҫапах та уйрӑм ҫынсем ку ӗҫе пӑрахма пултарайман. Г.П.Павский профессор 20 ҫул хушшинче Тӗн академийӗнче ирттернӗ лекцисем вӑхӑтӗнче Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене сӑмахпа каласа пӗрерӗн-пӗрерӗн йӑлтах куҫарса тухнӑ. Вӑл каланине студентсем ҫырса пырса пӗр-пӗрин хушшинче сарнӑ, вӑрттӑн пичетлеттерме те пуҫланӑ. Г.П.Павский профессор Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене авалхи еврей чӗлхинчен хальхи вырӑс чӗлхине чи пирвай куҫарнӑ ҫын пулнӑ.

Унпа пӗр вӑхӑтрах Библие аякри Алтай тӑвӗсем ҫинче пурӑнакан православи миссионерӗ Макарий архимандрит (Михаил Яковлевич Глухарев) куҫарнӑ. Вырӑнти халӑх хушшинче чаплӑран та чаплӑ ӳкӗтлевҫӗ шутланнӑ таса атте хӑй прихутне ҫӳрекен христиансене Турӑ сӑмахӗ ӑнланмалла пултӑрччӗ тесе тӑрӑшнӑ, Авал хунӑ Сӑмаха грек чӗлхинчен мар, подлинникран, авалхи еврей чӗлхинчен куҫарнӑ. Ӳкӗтлев службисене славянла мар, чӗрӗ вырӑс чӗлхипе ирттерме пуҫланӑ хыҫҫӑн Макарий архимандрит

прихутěнче пуранакан язычниксемпе магометансем те тěне кěме, чиркěве çӳреме пуçланă.

Шел пулин те, Г.П.Павский профессорпа Макарий архимандритăн ěçне патша та, Синод та йышăнман. Пачах урăхла , "хăйсен тивěçěсен картинчен тухса аслă влаç йышăнăвěсене хирěç кайнăшăн" айăпласа юратнă ěçрен уйăрма хăтланнă. Вěсен куçарăвěсем вара Синод архивěнче чěрěк ěмěр хушши тусанланса выртнă. 1876-1877 çулсенче çеç вěсене "Православное обозрение" журналта пичетлесе кăларнă. Авал хунă Сăмахăн кěнекисене вěсем иккěшě те йăлтах авалхи еврей чěлхинчен куçарнă, Маккавейсен 1-мěшпе 2-мěш кěнекисене кăна – грек чěлхинчен. Каярахпа, Библие вырăсла куçарнă чухне тăлмачăсем яланах Г.П.Павский профессорпа Макарий архимандрит куçарăвěсемпе усă курнă, вěсем тăлмачсене çав тěрлě пысăк пулăшу панă.

Хупнă хыççăн тепěр 30 çултан Раççейěн Библи обществи çěнěрен ěçлеме пуçланă. Ку хутěнче Синод Библие куçарас енěпе ěçлемешкěн официаллă йěркепе ирěк панă.

Малтанхи пекех, куçару ěçне тума Петербург, Мускав, Киев тата Хусан тěн академийěсене хушнă. Кашни академирех авалхи чěлхесемпе Турă саккунěсене вěрентекен профессорсен йышěнчен куçаруçă-тăлмачсене суйласа илсе, уйрăм комитетсем йěркеленě, вěсене ректорсем ертсе пынă. Тăлмачсене ěçлеме лайăх условисем туса панă, ěçтернě-çитернě, пулăшма ятарлă çынсем уйăрнă. Тěпрен илсен, тăлмачсем авалхи еврей чěлхипе çырнă текста тěпе хунă, ытти куçарусене те шута илмесěр хăварман. Хатěр куçарусене малтан сыпăкăн-сыпăкăн тěн журналěсенче пичетлесе пынă, вулакансем ярса панă асăрхаттарусене йăлтах пăхса тухса шута илме тăрăшнă.

1860 çулта тăвата Евангелин вырăсла куçарăвне пичетлесе кăларaççě, 1862 çулта – Çěнě Сăмахăн ытти пайěсене калăпăшěпех. Çапла вара Çěнě Сăмаха пирвайхи хут чěрě вырăс чěлхипе, славянла текстсăр пичетлесе

кăларнă хыççăн шăпах 40 çул иртсен Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмахăн тулли кăларăмĕ тепĕр хут çапăнса тухнă.

1867 çулта Синод пĕтĕм Библие те кăларма пуçланă. Вырăсла Библин пĕрремĕш пайĕ — Моисейĕн пилĕк кĕнеки — 1868 çулта кун çути курнă. Ун хыççăн Библие пайăн-пайăн кăларсах тăнă, 1876 çулта вара пирвайхи хут Сăваплă Çырусен мĕнпур кĕнекине пĕр томпа пичетлесе кăларнă. Ку вырăсла Библие "Синод хăй пехиллесе" пичетлеттернĕ, паянхи кун та вăл аслă вырăс халăхĕн мăнаçлă пуянлăхĕ пулса тăрать (5).

Синод пехилленĕ вырăсла Библие авалхи грек чĕлхине куçарнă Септуагинтăна тата чиркӳре усă куракан славянла Библие тĕпе хурса йĕркеленĕ. Урăхла каласан, çак Библири кĕнекесен йышĕ тата вĕсене вырнаçтарас йĕрке Септуагин–тăпа славянла Библирен пĕртте уйрăлса тăман. Çапах та Авал хунă Сăмахри канонланă (чиркӳ саккунĕпе çирĕплетсе йышăннă) кĕнекесене – еврей чĕлхинчен, канонламаннисене грекла е латинла подлинниксенчен куçарнă. Библири ятсене еврейла мар, грекла мĕнле каланă, çавăн пек хăварнă. Мĕншĕн тесен чиркӳ çыннисем те, тĕне ĕненекенсем те вĕсене тахçанах грекла калама хăнăхса çитнĕ. Акă, тĕслĕхрен, “Иисус” ят еврейсен чĕлхипе “Ешуа” пулать. "Христос" сăмаха ивритла "Машиах" сăмахран куçарнă, "помазанник" тенине пĕлтерет. Еврейла “Эстер” вырăнне “Эсфирь”, “Бетлехем” вырăнне — “Вифлеем” тата ыт.те.

Сăмахăм мĕн пирки пынине шута илсе, çакна палăртса хăварам: вырăссем паянхи кунччченех Синод пехилленипе 1876 çулта кăларнă Библи тексчĕпе усă кураççĕ. Мĕншĕн тесен çак куçару чĕлхе, стиль тĕлĕшĕнчен чи çӳллĕ шайра тăрать, ăна пурте ăнланаççĕ. Çавна май Сăваплă çырусенчи йĕркесене славянла вулани, вĕсем хамăрăн авалхи йăхсен чĕлхипе — Кирилпа Мефодий чĕлхипе — янăрани пуриншĕн те паха тесе шутлаççĕ. Протестантизм тымарĕнчен тухнă конфессисемшĕн, çавăн пекех Раççейри католиксемшĕн те Синод кăларнă вырăсла Библи чăн-чăн

çветтуй кĕнеке: кĕлĕсем вăхăтĕнче те вĕсем вырăсла текста çеç тĕпе хураççĕ, ăна улăштарса пăсасран пит сыхланаççĕ (6).

## 4.3. ÇĔНĔ САМАХА ЧĂВАШЛА КУÇАРНИ

Раççейре 1813 çулта Библи обществине уçнă хыççăн вăл Вырăс патшалăхийĕнче пурăнакан суя тĕнлĕ халăхсемпе магометансем валли те хăйсен чĕлхипе Библи пичетлесе парас тĕллев лартнă.

Чăвашла куçарнă Библин пирвайхи пайĕсене çак общество 1820 çултах пичетлесе кăларнă. Çĕнĕ Самаха йăлтах куçарса пĕтернĕ пулнă, анчах вĕсенчен тăватă Евангелие кăна çаптарса кăларма пултарнă. Ку вăхăт тĕлнелле Хусанти куçару шкулĕ ура çине тăма вăй çитернĕ ĕнтĕ, хăйĕн ĕçĕнче вăл Чулхула шкулĕн традицийĕсене тĕпе хурса, малалла аталанса пынă. XIX ĕмĕрĕн пирвайхи вунăçуллăхĕсенче чăваш кĕнеке ĕçĕ, тĕпрен илсен, йăлтах Хусанта пулса пынă. В.Родионов тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх (7), çак тапхăрта куçару ĕçне П.Талиевпа А.Алмазов пупсем чун хĕрӳлĕхĕпе хутшăннă, ӳкĕтсемпе вĕрентсе каланисене чăвашла анлăн куçарнă. Иккĕшĕ те Муркаш тăрăхĕнчи чăвашсем пулнăран вĕсем Хусан шкулĕн литература чĕлхине çав калаçу уйрăмлăхĕсене сахал мар кĕртеççĕ. Тăван чĕлхемĕре лайăх пĕлнĕ пулин те вĕсен куçарăвĕсем мĕн пур чăваш хушшине сарăлайман, мĕншĕн тесен тури чăвашсен калаçу уйрăмлăхĕсем çинче никĕсленнĕ çыру чĕлхи ытти тăрăхра пурăнакан чăвашсемшĕн ют чĕлхе евĕрлех янăранă, халăхăн чĕрĕ калаçу чĕлхи çывăхне те пырайман. Анчах христианла тĕн вĕрентĕвне кирек ăçта та ĕненекенсен тăван чĕлхипе усă курмасăр сарма май çук. Çавăнпах-тăр Христос вĕрентĕвĕ çак тапхăрта чăваш чĕринче вырăн тупайман.

Тепĕр 50 çултан Библие çĕнĕрен чăвашла куçарма пикеннĕ. Ку хутĕнче Иван Яковлевич Яковлев çак йывăр çĕклеме йăтма килĕшнĕ.

Анчах кирек хăш халăх та Сăваплă Çырусене хăй чĕлхине куçарма пуçланă май хăйĕн çырулăхне йĕркелеме тăрăшнă. Акă, тĕслĕхрен, сириецсен, готсен, нимĕçсен, эрменсен, грузинсен, славянсен пурин те çырулăхĕ Библи кĕнекисене куçарма пуçланă тапхăрта йĕркеленнĕ. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Кирилпа Мефодий пĕртăвансем авалхи славянсен çĕрĕ çине Моравие килсе çитнĕ-çитмен славянсен азбукине туса хатĕрленĕ, ун хыççăн вара, Турă пулăшнипе, сăваплă Евангелисене славянла çырма пуçланă.

И.Я.Яковлев Библи кĕнекисене чăвашла куçарма пикенсе пăхас шухăш тытнă чухне чăваш халăхĕ те "кĕнекесĕр халăх" шутĕнче тăнă. Унăн хăйĕн алфавичĕ те пулман, христианла кĕлĕ сăмахĕсене, литурги поэзине ăнлантарма кирлĕ литература чĕлхи пирки тĕн çутлăхĕшĕн çунса тăракан чиркӳçĕсем ĕмĕтленме çеç пултарнă. Хăйĕн те Кирилпа Мефодий асапнех тӳссе ирттерме тивнине ăнланнă И.Я.Яковлев.

Çырулăх çукки хăй пĕр кăткăслăх, çав хушăрах Сăваплă Çырусене куçарас тесен чăваш чĕлхине тĕн вĕрентĕвĕпе, философипе, патшалăх тата общество тытăмĕпе çыхăннă ăнлавсене палăртакан çĕнĕ сăмахсем нумай кирлĕ-çке.

Ахаль куçаруçă çеç вăй çитереймен çак йывăр задачăна татса пама. Çакăн валли сахалтан та икĕ чĕлхене чаплă пĕлекен çын кăна мар, чăн-чăн чĕлхе ăсти, урăхла каласан, чĕлхе наукине тарăн чухлакан, нумай пĕлӳллĕ, анлă тавра курăмлă çын кирлĕ пулнă.

Çав вăхăтри чи паллă ăслайçăсенчен пĕри, Хусанти Гурий святителĕн Тăванлăх канашĕ çумĕнчи Куçару комиссийĕн председателĕ, крешĕн тутарсен шкулне ертсе пынă Н.И.Ильминский чăвашсем валли те çавнашкал сăваплă ĕçе тума пултаракан çын тĕлне пулнă. Тин çеç Хусан университетне вĕренме кĕнĕ чăвашпа Н.И.Ильминский

1870 çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче паллашнă. Çавăнтанпа Христос тĕнне Атăлпа Вятка хутлăхĕнче пурăнакан вак халăхсем хушшине сарас тĕлĕшпе хĕмленсе ĕçленĕ "апостолпа" тăван халăхне çутта кăларса, çын шутне кĕртес тесе тăрăшнă "чăваш патриархĕн" пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăннă.

Чăваш халăхне христианла культура çутăлăхне илсе тухас тĕллевпе тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса парас шухăш çамрăк Иван Яковлев пуçĕнче Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕ чухнех çуралнă. Çавнашкал куçарусем тума хăтланса та пăхнă вăл, анчах ĕçĕ ăнсах кайман. Çав хушăрах нимĕçлерен вырăсла, вырăсларан латинла куçарма ансатрах пек туйăннă ăна. Çавăн чухне ĕнтĕ вăл чăвашла, культура тĕлĕшĕнчен чи пĕчĕк шайра тăракан халăх чĕлхине куçарас ĕç мĕн тери йывăр пулнине ăнланса илнĕ.

Çамрăк чухне И.Я.Яковлев чăвашсене вырăс культурипе çывăхрах паллаштарас тесен, мĕн пĕчĕкрен вырăсла çеç вĕрентмелле тесе шутланă. Анчах Н.И.Ильминский ăна хирĕç пулнă, вĕрентӳ никĕсĕнче тăван чĕлхе тĕп вырăнта пулма кирлине курăмлă тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшнă. И.Я.Яковлева крешĕн тутарсен шкулне илсе çӳренĕ, унта вĕренекенсен пурнăçĕпе, пĕлӳ шайĕпе çывăхрах паллашма хистенĕ. Ак çапла çырнă Н.И.Ильминский хăйĕн шкулне И.Я.Яковлев пирвайхи хут пырса курни пирки: "Шкул пурнăçĕ тата чиркӳре ачасен тăван чĕлхипе кĕлĕ ирттерни, çавăн пекех хăйсенĕн чĕлхипе вулакан кĕлĕ сăмахĕсене вĕсем савăнса тимлени, пачăшкăпа пĕрле хаваслăн юрлани И.Я.Яковлева тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ" (8). "Шăпах крешĕн тутарсен шкулне час-часах килсе çӳренипе ĕнтĕ шухăшĕ улшăнса пычĕ унăн (И.Я.Яковлевăн. — *И.М.*), христианла православи тĕнĕ чăвашсем пек вак халăхсене ăс-хакăл, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çĕкленме пулăшнине курса ĕненчĕ, çавна май христианла ăнлавсене ăша хывма пулăшаканни тăван чĕлхе пулнине ăнланчĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ унăн христианла тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене

чăвашла куçарас шухăшĕ çирĕпленчĕ"(9),—тенĕ Н.И.Ильминский.

Самарти тĕн училищинчен вĕренсе тухнă В.В.Васильев тата Хусанти крешĕн тутарсен шкулĕнче вĕренекен С.Н.Тимрясов (чăвашла та, тутарла та яппар калаçнă ачасем), Н.И.Ильминский вĕрентсе те ертсе пынипе чăваш шкулĕсенче вĕренӳ хатĕрĕ вырăнне хурса усă курмалли тĕн кĕнекисене чăвашла куçарнă. 1870 çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче ку ĕçе Иван Яковлев студент та явăçать. И.Я.Яковлевпа пĕрле ытти чăваш ачисем кĕлĕ кĕнекисене тата Сăваплă çырусен уйрăм сыпăкĕсене чăвашла куçарас енĕпе пикенсе ĕçлеме тытăнаççĕ. Каярахпа И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсене те куçару ĕçне хутшăнтарма тытăнать. “Хусан университетĕнче вĕренме пуçланă пирвайхи çулах эпĕ тутарла лайăх пĕлекен Рекеевпа Игнатий Иванов пулăшнипе тутарларан чăвашла куçарма пикентĕм. Ĕçсем ăнăçлах пулса тухрĕç. Унтан вара эпĕ Ильминский программипе вырăсларан чăвашла куçарма пуçларăм. Кунта аплах ăнмарĕ. Куçару вăраххăн малалла шурĕ. 1871 çулта эпĕ алтай халăхĕсем валли вырăсла букваре алтай чĕлхине куçарма пуçларăм. 1871 çулхи çулла Матфей çырнă Евангелие вырăсларан чăвашла куçарма пикентĕм. Çак ĕç йăлтах вăраххăн та йывăрпа пулса пычĕ. Анчах майĕпен, ĕçленĕçемĕн куçару меслетне алла иле пуçларăм. Кунта та мана Рекеев, Игнатий Иванов, ытти ачасем пулăшса тăчĕç”,— аса илет И.Я.Яковлев хăйĕн “Манăн пурăнăç” кĕнекинче (10).

Куçару ĕçне хăвăртлатас тĕллевпе Н.И.Ильминский пуçтарнă тăлмачăсен ушкăнĕнчи С.Н.Тимрясова И.Я.Яковлев ыйтнипе Чĕмпĕре куçараççĕ. Ку вăхăтра чăваш шкулĕнче пурĕ 30 яхăн ача вĕреннĕ. Вăл пулăшнипе А.Рекеев, И.Бюргановский тата аслăрах классенче вĕренекен ытти ачасем Евангелие чăвашла куçарнă. Çак самантран тытăнса Библи кĕнекисене чăвашла куçарас тапхăр пуçланать.

* * *

Библие И.Я.Яковлев Ҫĕнĕ Сăмахран ("Новый Завет") куҫарма пуҫланă. Н.И.Ильминский сĕннипе вăл Матфей ҫырнă Евангелие суйласа илнĕ. 1871 ҫулхи ҫуллахи каникул вăхăтĕнче вăл, тĕпрен илсен, е Кăнна Кушкинче юлташĕсемпе пĕрле вырăнти калаҫу тĕслĕхĕсене пухса ҫӳренĕ, е Чĕмпĕрте (общежити евĕрлĕ) чăваш шкулĕнче асăннă Евангелие куҫарса пурăннă. Пĕр вăхăтрах фонетика законĕсем тăрăх чăвашла букварь ҫырса хатĕрленĕ. Пĕрремĕш Евангелие И.Я.Яковлев-студент ҫулталăка яхăн куҫарнă.

1873 ҫулта Хусанта "Матфей ҫырнă таса Евангели" чăвашла ҫапăнса тухсан, ҫакна Англин Хусанти консулĕ В.Салмен асăрханă. Вăл Британипе Ют ҫĕршывсен Библи Обществин (БИБО) Раҫҫейри агентствин секретарьне Вильям Николсона ҫак кăларăмсемпе интересленсе пăхма сĕннĕ. 1873 ҫулхи чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче В.Николсонран Лондона БИБО представителĕ К.Джексон патне ҫакăн пек хыпар ҫитнĕ: "Салмен господин ман патăма ҫветтуй Матфейăн чăвашла куҫарнă Евангелине ярса пачĕ, ăна Яковлев господин куҫарнă иккен, хăй шучĕпех ҫаптарнă; хальхи вăхăтра вăл Сăваплă ҫырусене чăвашла куҫарас енĕпе ĕҫлет. Ҫак куҫару пурнăҫра усă курма юрăхлă-и е юрăхлă мар-и тесе, ăна эпĕ Санкт-Петербург Академийĕн членĕсенчен хăшне те пулин кăтартса пăхма шутлатăп" (БИБОн Кембридж университетĕнче упранакан архивĕ, ЕСI БИБО редакцине пырса кĕрекен ҫырусем, 1873, т. 10, с. 125. — Статьяра усă куракан ытти ҫырусене те Чăваш Республикине ҫав архивран ярса панă. — *И.М.*) (11).

1874 ҫулхи ҫĕртме уйăхĕнче Атăл тăрăх пăрахутпа ҫӳренĕ чухне В.Николсон Хусанта И.Я.Яковлевпа тĕл пулнă. Ун пирки вăл хăйĕн кун кĕнекинче ҫапла ҫырса хăварнă: "... эпĕ ҫав тери кăмăллă та йĕркеллĕ пĕр ҫамрăкпа, Яковлевпа, паллашрăм, вăл Сăваплă ҫырусене тата ытти тĕн

кĕнекисене тăван чĕлхине — чăвашла — куçарас енĕпе чăн-чăн христианла филантроп пек хытă тăрăшса ĕçлет. Çветтуй Матфейĕн Евангелине куçарса кăларнă та ĕнтĕ вăл, унăн копине Лондона ярса панăччĕ. Çав куçарăва халĕ тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекен ăслайçă А.Шифнер академик грекла çырнă текстпа танлаштарса тĕрĕслет"(12).

1874 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Лондона янă тепĕр çырура В.Николсон "чăвашла куçарнă Евангели питех те ăнăçлă пулса тухни пирки А.Шифнер академик ырласа çырнă отчета илни" çинчен хыпар ярать.

Çакна каласа хăварни те выранлă пулмалла. Тĕрĕк чĕлхисене тĕпченĕ А.Шифнер академик 1875 çулта Н.И.Золотницкин "Корневой чувашско-русский словарĕн" наука редакторĕ пулнă.

Куçарусен пахалăхне тĕрĕслени И.Я.Яковлева пăшăрхантарман. Мĕншĕн тесен ку ĕçе вăл таса чĕререн, ырă кăмăлтан, хăй кирлĕрен те кирлĕ ĕç тунине чăннипе ĕненсе те юратса тунă. Хусанта вĕреннĕ чухне те, каярахпа Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăннă чухне те куçарусене малтан уйрăммăн çаптарса тĕпчевçĕ-чĕлхеçĕсене кăтартма тăрăшнă.

Университетра ăс пухнă тапхăрта Н.И.Ильминский ăна хăйĕн çывăх юлташĕпе Гордей Семенович Саблуков профессорпа паллаштарнă. Г.С.Саблуков, араб чĕлхисене тĕпчесе çырнă нумай-нумай ĕçсен авторĕ, Хусанти тĕн академийĕнче тата семинарире тутар, грек, араб, сири чĕлхисемпе лекцисем вуланă, авалхи еврей (иврит) чĕлхипе чаплă пĕлнĕ. И.Я.Яковлева та вăл евангелисенчи уйрăм текстсене, псаломсемпе кĕлĕсене тарăннăн ăнлантарса пама тăрăшнă. Хăй вăхăтĕнче христианство вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене — тутарла, Корана чи малтан вырăсла куçарнăскер, тин çеç куçару ĕçне пуçăнакан студента пысăк пулăшу панă. Çавна май И.Я.Яковлев унăн чаплă та пуян библиотекипе усă курнă. Çак ученăй-чĕлхеçĕ пирки И.Я.Яковлев "Манăн пурăнăç" кĕнекинче ăшшăн тав туса тата сума суса аса илет (13).

Каярахпа И.Я.Яковлева ку тӗлӗшпе тӗнчипе паллӑ тюрколог Н.И.Ашмарин нумай пулӑшнӑ. Ҫакна вӑл Н.И.Ашмарин патне янӑ ҫырусенчен те курма пулать. Акӑ И.Я.Яковлев 1899 ҫулхи раштавӑн 5-мӗшӗнче Н.И.Ашмарин патне янӑ ҫырури хӑш-пӗр йӗркесем: "... Сирӗн пата тин ҫеҫ пичетрен тухнӑ таса Евангелисене ярса паратӑп. Тӗрӗс мар ҫапнӑ тӗлсене асӑрхама тата ҫӗнӗ кӑларӑмсене кӳртсе хӑварма май пур йӑнӑшсене тӳрлетме тархасласа ыйтатӑп, ҫавӑн пекех вӑхӑтӑр пулсан, тархасшӑн, чӑвашла текста грекла текстпа танлаштарса пӑхайсан, асӑрхаттарусене ман патма ярса параймӑр-ши; ҫавнашкал асӑрхаттарусене кӑрлач уйӑхӗччен алла илни аван пулӗччӗ, мӗншӗн тесен тепӗр икӗ уйӑхран эпӗ Евангелин ҫӗнӗ кӑларӑмне ҫаптарма пуҫлас–шӑн"(14).

1899 ҫулта Н.И. Ашмарин Хусанта крешӗн тутарсен шкулӗнче тата вак халӑхсем валли учительсем хатӗрлекен семинарире вӗрентнӗ. И.Я.Яковлев ыйтнӑ ӗҫ уншӑн йывӑрах пулман, кирек мӗнле ыйтӑва та тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫлама хӑнӑхнӑ ученӑй чӑвашла куҫарнӑ Евангелисене тӳрех грекла текстпа танлаштарса тӗрӗсленӗ. Унӑн асӑрхаттарӑвӗсемпе тӳрлетӗвӗсене И.Я.Яковлев ҫӗнӗ кӑларӑмсенче шута илме тӑрӑшнӑ. Н.И.Ашмарин уншӑн авторитет пулнӑ, чӗлхене чӑн-чӑн ученӑй шайӗнче чухлакан ҫыннӑн сӑмахӗ куҫарусене редакциленӗ чухне татӑклӑ пулнӑ Иван Яковлевичшӑн.

Ҫавӑн пекех Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ӗҫленӗ учительсенчен пӗри Турӑ законӗсене вӗрентекенскер, грекла питӗ лайӑх калаҫнине кӑтартса паракан хыпарсем те пур. Вӑл вара Библи кӗнекисене оригинал чӗлхинчен тӳрех чӑвашла куҫарнӑ.

1874 ҫулта И.Я.Яковлев Хусанта Ҫӗнӗ Сӑмахӑн малалли пайӗсене — Маркпа Лука апостолсем ҫырнӑ таса Евангелисене — ҫаптарса кӑларать. Н.И.Ильминский чӑвашла Евангелисене Раҫҫейре ют ҫӗршыв укҫи-тенкипе кӑларттарасшӑн пулман. Хӑй йышне илнӗ вак халӑхсен

тăван чĕлхине аталантарас ĕçе вырăс патшалăхĕ хăй тĕллĕнех туса пыма пултарать тесе шутланă вăл. Çак патриотла туйăмах ăна БИБОран та ютшăнтарса тăнă. Çавна пулах чăвашла тĕн кĕнекисен пирвайхи кăларăмĕсем Библи обществин представителĕсем патне çитеймен пулас, çавăнпа та вĕсем çинчен уйрăммăн каласа хăварни БИБО архивĕнче çук. Н.И.Ильминский вилнĕ хыççăн Святейший Синодăн обер-прокурорĕсем пулнă К.П.Победоносцев тата В.К.Саблер акăлчансен пулăшăвне сивлемен, Библи кĕнекисене вак халăхсен чĕлхипе, çав шутра чăвашла пичетлеме уйăракан укçа-тенкĕпе усă курма тытăннă.

Университетран вĕренсе тухнă хыççăн И.Я.Яковлев "Авал хунă Сăмахăн тата Çĕнĕ Сăмахăн сăваплă историне" (Чĕмпĕр, 1876), "Çӳлти Туррăмăрпа Турă Амăшийĕн тĕп чиркӳ уявĕсене" ("Аслă праçниксем") (2-мĕш кăларăм, Хусан) тата ытти кĕнекесене чăвашла çаптарнă. “Сăваплă историе” вăл университетра вĕреннĕ чухнех куçарса пĕтернĕ пулнă. Çакă Алексей Рекеев патне 1873 çулхи юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче янă çыруран та курăнать: “Афинский çырнă Сăваплă историе ман патма хăвăрттарах ярса пар — хăв тӳрлетме тата çĕнĕрен çырса пама пулнă пайĕсене; пĕрремĕш пайне Сергей (Тимрясов. — *И.М.*) пит аван тӳрлетсе çĕнĕрен çырса пачĕ; эс те лайăх тӳрлетессе шанатăп”(15).

Çырусенченех çакă курăнать: “Чăн тĕн кĕнекине”, “Аслă праçниксене”, “Матфей çырнă Евангелие” И.Я.Яковлев 1873 çулта чăвашла çаптарттарса хăй пĕлекен чăвашсем патне яра-яра панă, вĕсене чăвашла кĕнекесене вулаттарса вĕсен шухăш-кăмăлне пĕлесшĕн çуннă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Ырă Хыпарсен ("Евангелие" сăмах грек чĕлхинчен куçарсан "ырă хыпар" тенине пĕлтерет) тăваттăмĕш кĕнекине — Иоанн çырнă таса Евангелие — куçарас енĕпе малалла ĕçлет. "Чăвашла Евангели пирки калас пулсан,— тет В.Николсон 1878 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче Лондона янă çырура, — эпĕ

Чĕмпĕрти Яковлев инспектортан çыру илтĕм, унта вăл Иоанн çырнă Евангелие куçарса пĕтерни çинчен хыпар парать. Ăна Хусан университечĕн типографийĕнче çулла çапса кăлараççĕ. Ун хыççăн тин Евангелие редакцилесе пирĕн патăмăра ярса пама пулчĕç. Ĕçе васкатас тесе, кашни Евангелие куçарнăшăн эпĕ ăна 150-шар тенкĕ пама пултăм. Анчах Яковлев куçарусене тĕплĕн редакцилесе çитериччен укçа илме килĕшмерĕ" (ЕСІ, т. 14, 186).

Çапла вара Çĕнĕ Сăмахăн тата тепĕр 23 кĕнекине (Евангели 27 пайран тăрать) куçармалла пулнă. Библие куçарса кăларассипе çыхăннă ĕç-хĕле И.Я.Яковлев БИБОн Раççейри представителĕсемпе татса пама тăрăшнă. Библи обществи чăвашла куçарусене пичетлесе кăларма укçа-тенкĕпе пулăшса тăнă. Иоанн çырнă таса Евангелие 1880 çулта Хусанта Православин Миссионер обществи 1200 экземпляр тиражпа кăларнă. Çакăн хыççăн пĕр хушă чăвашла çĕнĕ куçарусем çаптарас ĕç чарăнса тăнине палăртаççĕ БИБО представителĕсем.

Тепĕр 15 çул иртсен, 1895 çулта, Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнă тăватă Евангелие пĕрле 273 страницăпа БИБО Чĕмпĕрте пичетлесе кăларать. Тата икĕ çултан 4 Евангели пĕрле Хусанта 3600 экземпляр тиражпа тухать тата тепĕр çулталăкран, 1898 çулта, çавсемех Чĕмпĕрте виççĕмĕш хут калăпланса тухаççĕ. 1901 çулта Чĕмпĕрте Библи Обществи И.Я.Яковлев куçарнă Псалтире, унтан Апостолсен ĕçĕсене (сăнавлă кăларăм — 200 экземпляр) тата Евангелисен тӳрлетнĕ кăларăмне Апостолсен ĕçĕсемпе пĕрле пичетлет. Библие чăвашла куçарас енĕпе 30 çул ытла чунтан тăрăшса ĕçленĕ хыççăн И.Я.Яковлев çĕнĕ Сăмахăн юлашки пайĕсене — Апостолсен çырăвĕсемпе Апокалипсиса — 1904 çулта пичетлесе кăларма пултарнă.

Анчах та çакна палăртса хăварас килет. Чăвашла кăларнă Библи кĕнекисем пирвайхи хут пичетленнĕ вăхăта Библи Обществин представителĕсем пĕр тĕрлĕ палăртаççĕ. И.Я.Яковлев вара çав кĕнекесем хăш çулсенче тухнă пирки

ак çапла çырса хӑварнӑ: "Çапла хӗрӗх çул хушшинче эпӗ çак кӗнекесене çаптарнӑччӗ: малтан — 1873-мӗш çулта Хусанта 1) Матфей çырнӑ Евангелиене çаптарнӑччӗ: унтан 1874-мӗш çулта Хусанта " 2) Маркпа Лука çырнӑ Евангелисене ; 1879-мӗш çулта Хусанта 3) Матфей çырнӑ Евангелиене, иккӗмӗш хут; çав çулах Хусанта 4) Иоанн çырнӑ Евангелиене; унтан 1889-мӗш çулта Чӗмпӗрте 5) Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнӑ Евангелиесене, унтан 1891-мӗш çулта Чӗмпӗрте 6) çавнах (Тӑватӑ Евангелие. — *И.М.*), иккӗмӗш хут; 1897-мӗш çулта Чӗмпӗрте 7) çавнах виççӗмӗш хут; ун хыççӑн 1900-мӗш çулта Чӗмпӗрте 8) Апостолсен ӗçӗсене; çав çулах Чӗмпӗрте 9) Евангелиепе Апостолсен ӗçӗсене; унтан 1903-мӗш çулта Чӗмпӗрте 10) Апостолсен çырӑвӗсемпе Апокалипсиса; тепӗр çул Чӗмпӗрте 11) Евангелипе Апостолсен ӗçӗсене, иккӗмӗш хут; юлашкинчен 1906-мӗш çулта Чӗмпӗрте 12) Апостолсен çырӑвӗсемпе Апокалипсиса, иккӗмӗш хут çаптарнӑччӗ" (Пирӗн Туррӑмӑр Иисус Христос хунӑ Çӗнӗ Сӑмах. — Чӗмпӗр, 1911, III).

Çапла вара çӳлерех çырса панӑ икӗ абзацра илсе кӑтартнӑ вӑхӑтсем пӗри те тӳр килмеççӗ. Çакӑ И.Я.Яковлев чӑвашла куçарнӑ кӗнекесене, тӗпрен илсен, Православи Миссионер Обществи урлӑ пичетлесе кӑларнипе çыхӑннӑ. Куçару ушкӑнӗ питӗ хастар ӗçленӗ, БИБО вӗсен куçарӑвӗсене пурне те сӑнаса тӑма та ӗлкӗреймен. Хусанти Гурий святителӗн Тӑванлӑх канашӗн Куçару комиссийӗ ертсе пынипе ӗçлекен И.Я.Яковлев акӑлчансене хӑйӗн пӗтӗм ӗçӗ пирки йӑлт пӗлтерсе тӑма кирлех мар тенӗ пулас. Куçарнӑ кӗнекесене малтанласа сӑнаса пӑхас шутпа вӑл 100-500-шер экземплярпа çаптарса кӑларнӑ. Çакӑ куçарусене тӳрлетсе лайӑхлатма май паракан ӑнӑçлӑ меслет тесе шутланӑ. Çавӑнпа та хӑш-пӗр кӑларӑмсем Лондонри Библи çуртне çитеймен те. Анчах та çакӑн пек ирӗклӗн ӗçлени БИБОна килӗшсех кайман, унӑн пуçлӑхӗсем "Яковлев мистер" хӑйсемпе канашламасӑрах укçа-тенкӗ нумай тӑкакланӑшӑн

ӳпкелешме пуҫлаҫҫӗ. Сӑмахран, Библи обществинчен ыйтса тӑмасӑрах И.Я.Яковлев 1900 ҫулта Апостолсен ӗҫӗсемпе Псаломсене 300 экземпляр кӑларать, ҫавна май Гурий святителӗн Тӑванлӑх канашӗ ҫумӗнчи Куҫару комиссийӗ укҫа-тенкӗпе тивӗҫтерме май ҫукки ҫинчен хыпарланӑ хыҫҫӑн тӑкаксене саплаштарма БИБОран укҫа ыйтса пӑхать. "Ку вӑл пирӗншӗн ытла та хака ларакан меслет" текеleҫҫӗ пулин те, укҫине памах тивет Библи Обществин. Мӗншӗн тесен унта Библие чӑвашла куҫарас ӗҫе И.Я.Яковлевран лайӑхрах тума пултаракан ҫын ҫуккине ӑнланаҫҫӗ.

Библие урӑх чӗлхене куҫарнӑ чухне БИБО тӑлмачӑсене Сӑваплӑ ҫырусене куҫармалли ятарлӑ мелсемпе паллаштарнӑ, ку вӑл ҫирӗпленнӗ йӑла пулнӑ. Анчах БИБО архивӗнче И.Я.Яковлева ятарласа Библие куҫарма вӗрентни ҫинчен калакан пӗр хыпар та ҫук теҫҫӗ. Ку вара Библие чӑвашла куҫарас ӗҫре БИБО, тӗпрен илсен, кӗнекесене пичетлесе кӑларма тата сутма пулӑшакан спонсор ҫеҫ пулнине кӑтартса парать. Тепӗр чухне вӑл Библи кӗнекисене чӑвашла ҫаптарса кӑларнисене тӗрӗслесе тӑма та ӗлкӗреймен.

Библин Ҫӗнӗ Сӑмахне йӑлтах И.Я.Яковлев Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ уҫӑлнӑранпа 40 ҫул ҫитнӗ тӗле куҫарса пӗтернӗ. Анчах пӗр тулли кӗнеке кӑларас ӗҫ вӑраха кайнӑ. Вырӑс Православи Миссионер обществи, урӑхла каласан, Святейший Синод укҫа-тенкӗ ҫитменнипе хыпар ямасӑр тӑнӑ. Иван Яковлевич ку вӑхӑталла 60-тан иртнӗ ватӑ ҫын пулнӑ ӗнтӗ, унӑн пӗтӗм пурӑнӑҫӗн итогӗсене пӗтӗмлетес килнӗ. Шӑпах ҫакӑн пек йывӑр шухӑшсемпе пурӑннӑ чухне ун патне Чӗмпӗре Библи обществин уполномоченнӑйӗсем В.Киҧпа тепӗр ҫын пырса ҫитнӗ. Ку хутӗнче, 1908 ҫулхи ҫулла Иван Яковлевич, акӑлчансен сӗнӗвне сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн, кӗнекене вӗсен укҫипе пичетлесе кӑларма килӗшнӗ. Анчах пӗр условипе: Библи обществи пичетлесе кӑларакан кӗнекесенче вырӑссене кӳрентерме пултаракан кӑтартусем — чӑвашла куҫарусене Раҫҫейре акӑлчансен укҫи-тенкипе кӑларнине палӑртни-пулмалла мар. "Пӗр-перинпе кӗскен

канашласа илнӗ хыҫҫӑн Библи обществин представителӗсем ҫакӑнпа килӗшнӗ. Ҫапах та чӑвашла куҫарусен Чӗмпӗрте ҫаптарнӑ листисене Финляндие, Библи обществин кӗнеке хуплашкисене туса ҫӗлекен мастерскойӗсене ярса пама ыйтнӑ. Иван Яковлевич хирӗҫлемен. Вара акӑлчансем ӗҫе вӑраха ямасӑр 2000 кӗренкке стерлинглӑх (ылтӑн укҫапа 20000 тенке яхӑн) кредит уҫма сӗннӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн Иван Яковлевича Библи обществин хисеплӗ членне суйланӑ" (16).



Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗрентекенсем

1910 ҫул вӗҫнелле тин ӗмӗтленнӗ ӗмӗте тултарас шанӑҫ ҫуралнӑ. Ҫапла халиччен ҫапӑнса тухнӑ куҫарусене тӗплӗн тӗрӗслесе тӳрлетӳсем кӗртнӗ хыҫҫӑн, 1911 ҫул пуҫламӑшӗнче, Чӗмпӗрте "Пирӗн Туррӑмӑр Иисус Христос хунӑ Ҫӗнӗ Сӑмах" пӗрремӗш хут тулли кӑларӑмпа 20000 экземпляр тиражпа пичетленнӗ. Ку ӗнтӗ калама ҫук пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ пулнӑ. Ҫакӑн пек чаплӑ та сумлӑ чӑвашла кӗнеке тухни И.Я.Яковлевшӑн ҫеҫ мар, пӗтӗм чӑваш культуришӗн, вышкайсӑр пысӑк ҫитӗнӳ пулнӑ. Тинех чӑваш чӗлхи чухӑн чӗлхе, вӑл нихҫан та кӗнеке чӗлхи, ҫитменнине

Сăваплă Çырусен, Турă сăмахин чĕлхи пулма пултараймасть тесе И.Я.Яковлева ура хума хăтланакансен çăварĕсем хупăннă. Унсăр пуçне çакнашкал чаплă кĕнеке чикĕ леш енче мар, чăвашăн вĕренӳпе культура центрĕнче –Чĕмпĕрте – тухни те паллă пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Чĕмпĕр шкулĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсем те, И.Я.Яковлев хăй те шутсăр савăннă. Акă тинех вĕсем 40 çул каярах акнă вăрлăхăн çимĕçне курса савăнма пултарнă. Çакă Çĕнĕ Сăмахăн чăвашла кăларăмĕ валли ятарласа çырнă тарăн пĕлтерĕшлĕ Умĕн каланă сăмахран та курă-нать. Унта И.Я.Яковлев тăван халăха йăвашшăн çапла каласа ăнлантарнă: "Эй савнă тăванăмсем, вăй çитнĕ таран туса пынă ĕçĕм пулса çитнине эпĕ куртăм ĕнтĕ; манăн мĕнпур шухăшăм çавăн çинчеччĕ, çавăншăн пуринчен ытла тăрăшрăм, ăна пуринчен ытла юратса пурăнтăм; ĕнтĕ хам хытă ĕненсе тăнă тăрăх, йывăр ĕçпе irттернĕ пурăнăçăмра хам курса пĕлнĕ тăрăх, çак сăмахсене йăвашшăн каласа сире тархаслатăп: Турă сăмахне хисеплĕр, вăл ырăлăха Турă, ытти этемсене панă пек, сире те пачĕ. Çак ырăлăхран пуçне пирĕншĕн те, пĕтĕм тĕнчешĕн те ĕмĕрне те урăх ырăлăх пулас çук. Чăн малтан çав ырăлăха Турă Хăй кăмăл тунипе *суйласа илнисене, Израил ывăлĕсене* анчах панă. Халĕ сире те, *суя тĕнлĕ халăхсен* хисепĕнчисене, *тĕттĕмре, вилĕм тĕттĕмĕнче* ларакансене Христос çутти çутатрĕ. Апостол каланă пек, халĕ эсир те *суйласа илнисем, таса халăх, Турă çыннисем... ĕлĕк эсир халăх та марччĕ, халĕ Турă халăхĕ пултăр, ĕлĕк сире каçарманччĕ, халĕ сире каçарнă.* Эсир *ĕлĕк аякра тăраттăрччĕ, халĕ Христос Іисус урлă Унăн юнĕпе çывăх çынсем пултăр. Хăвăр ĕненнĕ тă-рăх сире тивлет парса çăлнă; çăлăнасси хăвăртан килмен, вăл Турă панă ырăлăх.* Туррăн çав тĕрлĕ ырăлăхне хисеп-леме вĕренĕр. Хăвăр хисепе хуманнипе, кăмăлăр пăсăлса ĕненме пултарайманнипе, пурăнăçăр йĕркесĕррипе çав ырă-лăха çухатасран хăраса тăрăр. Апостол каланă пек, хăвăра тĕттĕмрен Хăйĕн тĕлĕнмелле çуттине чĕнсе Кӳртекенĕн

ырăлăхĕсене пĕлтерсе тăрăр. Пурăнăçăра таса пурăнса, Христос вĕрентнине туса ирттерĕр; чиркӳре Турă сăмахне пĕтĕм кăмăлăртан итлесе тăрăр; килĕрте те Турă сăмахин кĕнекине хисеплĕ тытăр. Вулама та ăна таса чĕрепе, ырă ăспа тытăнас пулать. Савăнăç килсен те, хуйхă килсен те, çак савăнăç паракан, çăлăнăç кӳрекен кĕнекене ырă кăмăлпа, таса шухăшпа тытса вулас пулать, кил-çуртра ăна чи лайăх вырăнта усрас пулать. Анчах Турă сăмахне итленинчен, вуланинчен пуçне, ăна тата тĕрĕс ăнланни кирлĕ. Ăна Христос тĕнне сыхласа тăракан, тĕрĕс ăнлантарса паракан Чиркӳ вĕрентнĕ пек ăнланса илес пулать. Турă сăмахне ăнланма халĕ сире хĕнех мар ĕнтĕ. Хăвăр пĕлмен ют чĕлхепе вĕрентнĕ чух, Христос вĕрентнийĕн чăнлăхĕ, савăт айне лартнă çутнă çурта пек, сире курăнмастчĕ. Павел апостол хăй те ĕлĕк каланă: *ыттисем пĕлмен чĕлхепе каласа паракан — çынна каламасть, мĕншĕн тесен ăна никам та ăнланса илеймест*, тенĕ. Халĕ ĕнтĕ, Иисус Христос Туррăмăрăн таса Евангелийĕне сире те хăвăр чĕлхĕрпе вĕрентме Турă пачĕ. Çакă пирĕншĕн — савăнăç, анчах çаках пире, эпир Турă сăмахне пĕлмен чухнехи пек пурăнсан, пысăк айăпа хăварать. Çавăн пекех — кăмăла хытаракан, ӳте астаракан Магомет тĕнĕ хыççăн каякансем те тӳрре тухаймĕç, хальхи илĕртекен çĕнĕ вĕрентӳсем хыççăн каякансем те айăпа юлĕç, мĕншĕн тесен *ун пек вĕрентӳсем çынна ирĕке кăларма пулаççĕ, хăйсем ирсĕр ĕç чурисем. Эй тăванăмсем, юлашкинчен тата Çăлаканпа, Унăн хăватлă вăйĕпе тĕреклĕленĕр; Туррăн вăрçă хатĕрĕсене пурне те тăхăнса хурăр.* Юратнă тăванăмсем, *сыхланса пурăнăр. Чăн тĕне хытă тытăр, хăватлă тăрăр, тĕреклĕ пулăр,* вара *хамăра Çăлакан Іисус Христос Туррăмăрăн ырăлăхĕ сире пурсăра та* пулĕ. *Іисус Христоса ĕненнĕ тăрăх эпĕ сире пурсăра юратса тăратăп. Иван Яковлев.* Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ. Раштав уйăхин 24-мĕш кунĕнче, 1910 -мĕш çулта"(17).

И.Я.Яковлев тăван халăхĕ валли çырнă çак Сăмаха БИБО представителĕ В.Кин Лондона, Библи çуртне ярса панă.Чăвашла Евангелие çакăн пек умсăмахпа пичетлесе кăларни БИБО правленине килĕшмен, Лондонра çакна истори традицийĕнчен пăрăнни пек хаклама пăхнă. БИБОн куçарупа издательство пайĕн управляющийĕ Р.Килгор Лондонран Раççее В.Кин патне 1911 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче çырнă çырура çапла калани пур: "Чĕнӳ тем пек лайăх пулсан та, ăна эпир çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнса кăларса пăрахмалла. Яковлев мистера çакăн пирки епле те пулин çемçен пĕлтерме тăрăшсамăр".

В.Кин пĕр тăхтаса тăмасăр Чĕмпĕре, И.Я.Яковлев патне çапла хыпар çитернĕ: “Многоуважаемый господин инспектор! Получив титульный лист Нового Завета на чувашском языке я внимательно обдумал предисловие, которое вы составили к этому изданию, и я послал тщательный перевод его нашему комитету в Лондон. Как Вам известно, мы издаем Священное Писание без отметок и объяснений: если и есть предисловие в одном из наших изданий, то оно состоит только из нескольких строк, объясняющих неточности священного текста.

Я не думал, что наш комитет согласится на распространение вашего предисловия. Но тем не менее я представил ваше уважаемое предисловие на их полное усмотрение, рассчитывая, что в конце концов Комитет отнесется к нему с величайшим сочувствием. Комитет просит передать вам, что признав вполне достоинства Вашего предисловия, он должен согласно их обширной практике, отклонить принятие оного”,— тенĕ. Малалла Комитет И.Я.Яковлева чăваш халăхне Сăваплă Çырусене куçарса парас енĕпе чĕрĕк ĕмĕре яхăн ырми-канми тăрăшса ĕçленĕшĕн тав тунине пĕлтернĕ.

Анчах Я.Яковлевшăн чăвашла Евангели халиччен пулман кĕнеке пек туйăннă, çавăнпа унăн вулакансенĕ кăларăм тĕллевне тата пĕлтерĕшне ăнлантарса парас килнĕ. Ăна

БИБО валли мар, тăван халăх валли кăларатпăр, тенĕ. Евангелие, ум сăмахне кăларса пăрахмасăр, хăй укçипе те кăларма хатĕр тăнă вăл. Юлашкинчен Библи Обществин И.Я.Яковлев çавнашкал çирĕп тăнипе ирĕксĕрех килĕшме тивнĕ.

Кирек мĕнле пулсан та БИБО Сăваплă Çырусен тĕп куçаруçин тата тĕп редакторĕн ĕçне пысăк хак панă. 1911 çултах, Евангели чăвашла тухнă хыççăн, И.Я.Яковлева Библи Обществин ют çĕршывсенчи Хисеплĕ членне илнĕ. Çак сумлă ят ăна, каярахпа, ватлăхри йывăр кунсенче, БИБОран пулăшу илсе тăма май панă (18).

Çавăн пекех пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕрĕн пурнăçĕнче пулса иртнĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ самант пирки каласа хăварни те ытлашши пулмĕ. Чăвашла Евангелие тата ун хыççăн çулталăкран çапăнса тухнă "Мухтав юррисен кĕнекине" И.Я.Яковлев II Микулай патшана та парнеленĕ. 1912 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче çут ĕç министрĕ Л.А.Кассо, ăна Санкт-Петербурга чĕнсе илсен, Иван Яковлевич Святейший Синодăн обер-прокурорĕпе В.К.Саблерпа тĕл пулма шутланă, анчах май килеймен. Чĕмпĕртен килнĕ инспектор ун валли çыру çырса хăварнă. Çырура вăл чăвашла Евангелипе Псалтире, май пулсассăн, II Микулай патшана парнелеме ыйтнă. В.К.Саблер Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторне лайăх пĕлнĕ, çавăнпа И.Я.Яковлевăн ыйтăвне тивĕçтерсе, чăвашла кĕнекесене патшана парнеленĕ. Кĕнекесенчен пĕрин ăшне И.Я.Яковлев çыру çырса чикнĕ. Ăна патша патне вырăсла çырнине шута илсе тата çыру шухăшне пăсас мар тесе çаплипех илсе парар:

"С-Петербург, 1912.

Всепресветлейший, Державнейший, Великий Государь Император Николай Александрович, Самодержавец Всероссийский, Государь Всемилостивейший!

Господу Богу было удобно дать совершиться делу перевода на чувашский язык Слова Божия. Ныне я дожил до

осуществления (мечты) своей молодости — дать своим соплеменникам Святое Евангелие и большую часть Библии на их родном, им понятном и доступном языке. Дело этого перевода начато было 40 лет тому назад с Высокомилостивого одобрения Вашего незабвенного деда царя-освободителя, благословения Святейшего Синода и при живом сочувствии обер-прокурора графа Д.А.Толстого и К.П.Победоносцева; оно продолжалось под покровом благосклонного внимания вашего августейшего родителя царя-миротворца и ныне в Ваше благополучное царствование, наш возлюбленный монарх, совершено оно в своей главной и основной части. Словами не могу выразить своей бесконечной благодарности памяти Ваших отца и деда и Вам, государь за высокое покровительство моему слабому и несовершенному труду. Только это покровительство и сделало возможным его доведение до конца. Да благословит господь Ваши дни и да пошлет он в Вашем сыне такого же крепкого защитника и покровителя делу распространения веры Христовой, какими были в длинном ряде столетий его прадеды и его царь — христианин-отец.

Вашего Императорского Величества

верноподданный"(19).

Патша ҫак парнесемшӗн каярахпа И.Я.Яковлева чӗререн тав тунӑ. Ҫакна Святейший Синодӑн обер-прокурорӗ В.К.Саблер Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн инспекторне Яковлева официаллӑ ҫырупа пӗлтерет: "Милостивый Государь, Иван Яковлевич. Его Императорское Величество Государь Император, милостиво приняв доставленные мне Вашим Превосходительством, для поднесения Его Императорскому Величеству, экземпляры Нового Завета и Псалтири на чувашском языке, в 8 день текущего ноября, в Царском Селе, Всемилостивейше повелеть соизволил благодарить Вас, Милостивый Государь, за поднесение означенных изданий.

О таковой Всемилостивейше благодарности имею честь уведомить Ваше Превосходительство.

Примите уверение в совершенном моем почтении и преданности" (20).

В.Саблер.

II Микулай патшаран тав сăмахĕ илтнипе И.Я. Яковлев шутсăр савăннă, çакăн пирки хăвăртрах Хусан вĕренӳ округне çырса пĕлтернĕ. Анчах вĕренӳ округĕнчен ăна: "Малашне патшана парне парас тетĕр пулсан, малтан Çутĕç министерствипе вĕренӳ округĕн попечителĕ урлă çыхăнас пулать",– тесе хăтăрса илнĕ (ӳкерч. пăхăр).

II Микулай патша ку вăхăталла И.Я.Яковлева Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕн отчечĕсем тăрăх çеç мар, хăйĕнпе тĕл пулнисем тăрăх та пĕлнĕ. Пĕрремĕш хут вĕсем Чулхулара, 1896 çулхи çулла, Пĕтĕм Раççей выставкинче тĕл пулнă. Иккĕмĕш хутĕнче – 1905 çулхи çу уйăхĕнче. Ун чухне Çут ĕç министерстви И.Я.Яковлева Санкт-Петербурга Раççейĕн Хĕвел тухăçĕнчи вак халăхсене çутта кăларас ыйтупа ирттернĕ канашлăва чĕнсе илнĕ пулнă. Канашлу хыççăн унта хутшăннисене II Микулай патша ятарлă апата чĕннĕ. Çав апат вăхăтĕнче патшана И.Я.Яковлевпа паллаштарнă. Тĕл пулу пирки И.Я.Яковлев çапла аса илнĕ: "Николай Александрович император патшана манпа 1905 çулта, çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче е çĕртмен 1-мĕшĕнчеччĕ-и — хăш кунне лайăх ас тумастăп — Патша Салинче, Александр патшан Çĕнĕ керменĕнче паллаштарнăччĕ. Паллашу ак мĕнле лару-тăрура пулса иртрĕ. Çав çулхи çу уйăхĕн пуçламăшĕнче мана Петербурга чĕнсе илчĕç. Атăл тăрăхĕнчи (каярахпа — Çĕпĕрти) вак халăхсене вĕрентес ĕçри йĕркесене палăртса çирĕплетекен комиссие. Пирĕн комисси ĕçне ертсе пыраканни паллă славист Антон Семенович Будиловиччĕ. Комисси хăйĕн ĕçне вĕçленĕ хыççăн халăх çутĕç министрĕ Глазов генерал патшана комисси членĕсемпе паллаштарма кăмăл турĕ. Çакна палăртсах калама юрать, министр мана уйрăмах ăнланма тăрăшатчĕ. Палăртнă кун

эпир, комисси членĕсем, пĕр хĕрĕх ҫын, Глазовпа Будилович ертсе пынипе Патша Салинчи вокзалтан ирхине 10 сехетсенче тӳрех кермене мар, кермен ҫывăхĕнчи пĕр ҫурта пырса ҫитрĕмĕр. Унта пире ирхи апат тутарчĕҫ. Апат хыҫҫăн эпир кермене куҫрăмăр. Чылайччен кĕтрĕмĕр патша тухасса. Комисси членĕсемпе Глазовсăр пуҫне тĕл пулура урăх никамах та пулмарĕ. Патша пирĕн пата пĕчченех тухрĕ. Чи малта Будилович профессор тăратчĕ, иккĕмĕшĕ — Софья Владимировна Чичерина, унтан виҫҫĕмĕшĕ — такамччĕ(астумастăп), тăваттăмĕшĕ — эпĕ, ыттисем — ман хыҫра. Ҫакăн умĕн маларах Глазов пирĕнтен пуринчен те хамăр кам пулни, мĕнле вырăнта ĕҫлени, наукăри ĕҫ-хĕл тата ытти ҫинчен ҫырса панă хутсене илнĕччĕ. (Ун чухне эпĕ действительнăй статский советник пулнă). Патша хăйне ахаль ҫын пекех тыткаларĕ. Кăмăллă та ачаш куҫсемччĕ унăн. Пирĕнпе пуринпе те Глазов генерал паллаштарса пычĕ. Патша пире кашнинех алă тытрĕ. Ман тĕле ҫитсен, патша мана эпĕ хам ҫырса панă хут тăрăх темиҫе ыйту пачĕ: "Эсир кĕнекесене чăвашла куҫарнă-и? Мĕнле кĕнекесем? Ăҫта ĕҫленĕ? Эсир халĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕ-и? " "Чăваш шкулне эпĕ йĕркелесе янă, ҫавăн пекех эпĕ букварьсене, сăваплă кĕнекесене, кĕлĕ кĕнекисене, Евангелие чăвашла куҫарнă" . "Тата ытти мĕнле кĕнекесене? "— ыйтать манран патша. "Петрушевскинне — вырăс историйĕнчен илнĕ калавсене". Ҫакăн хыҫҫăн патша ҫапла хушса хучĕ: "Патриотла кĕнеке. Аван, ăна куҫарнă пулсан. Тав тăватăп сире! " Унтан, пуҫне тайса, иккĕмĕш хут алă памасăр, теприн патне куҫрĕ. Манпа вăл 8 минут хушши, ыттисенчен чылай нумайрах калаҫнине пурте асăрхарĕҫ" (21).

Литература


1. Эби Э. Краткое введение в Библию. Licht im Osten, West-Germanu, 1989. С.7–8.

2. Верещагин Е. О древнейших переводах Библии, а также о переводе на современный русский язык.// Азия и Африка сегодня. 1993. №11. С. 49.

3. Рижский М.И. История переводов Библии в России. — Новосибирск: Наука. Сиб. отд–ние, 1978. С. 130–131.

4. Геллей Г. Библейский справочник. Спб, 1996. С. 847–848.

5. Ҫавӑнтах. С. 852.

6. Верещагин Е. Асӑннӑ статья. С. 50.

7. Родионов В.Г. 1800-1820 çç. чӑвашсен çыруллӑ сӑмахлӑхӗ// Хыпар. 1997. № 202.

8. Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии. Казань, 1890. С.38-39.

9. Ҫавӑнтах. С. 19.

10. Яковлев И.Я., Манӑн пурӑнӑҫ: Аса илӳсем. М.: Республика, 1997. С.273.

11. Арапович Б. Перевод Библии на чувашский язык, сделанный И.Я.Яковлевым.// Лик Чувашии. 1995. №6. С.123.

12. Ҫавӑнтах. С. 124.

13. Яковлев И.Я. Манӑн пурӑнӑҫ: Аса илӳсем. С. 166, 250.

14. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1. Чебоксары, 1989. С. 153.

15. Яковлев И.Я. Письма. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1985. С.160.

16. Яковлев А.И. Иван Яковлевич Яковлев. 1848—1930. Чебоксары, 1958. С.96.

17. Пирӗн Туррӑмӑр Іисус Христос хунӑ Ҫӗнӗ Сӑмах. Чӗмпӗр, 1911. С. III–V.

18. Краснов Н.Г. Выдающийся чувашский педагог-просветитель. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. С. 368-370.

19. ЧРПА. 207 ф., 1 оп., 2080 ӗç, 111 л.

20. ЧРПА. 207 ф.,. 1 оп., 933 ӗç.

21. Яковлев И.Я. Манӑн пурӑнӑҫ: Аса илӳсем. С.541-542.

4 марта 1912 г.

Получено уведомление 16 ноября 1912

ОБЕРЪ-ПРОКУРОРЪ

СВЯТѢЙШАГО СУНОДА.

Милостивый Государь,

Иванъ Яковлевичъ.

Его Императорское Величество Государь Императоръ, милостиво принявъ доставленныя мнѣ Вашимъ Превосходительствомъ, для поднесенія Его Императорскому Величеству, экземпляры Новаго Завѣта и Псалтири на чувашскомъ языкѣ, въ 8 день текущаго Ноября, въ Царскомъ Селѣ, Всемилостивѣйше повелѣть соизволилъ благодарить Васъ, Милостивый Государь, за поднесеніе означенныхъ изданій.

О таковой Всемилостивѣйше благодарности имѣю честь увѣдомить Ваше Превосходительство.

Примите увѣреніе въ совершенномъ моемъ почтеніи и преданности.

№ 11458

9 Ноября 1912 г.

Его Превосходительству И.Я. Яковлеву.

В. Саблеръ

ОРЪ
[illegible]
[illegible]

1912 г.

ЕГО ПРЕВОСХОДИТЕЛЬСТВУ,

Господину Попечителю Казанскаго Учебнаго Округа.

Сегодня, 16 ноября, я имѣлъ счастье получить отъ Г. Оберъ-Прокурора Святѣйшаго Синода письмо отъ 9 ноября за № 11458, которымъ Его Высокопревосходительство извѣщаетъ меня, что ЕГО ИМПЕРАТОРСКОЕ ВЕЛИЧЕСТВО ГОСУДАРЬ ИМПЕРОТОРЪ, милостиво принявъ доставленные мною для поднесенія ЕГО ИМПЕРАТОРСКОМУ ВЕЛИЧЕСТВУ экземпляры Новаго Завѣта и Псалтири на чувашскомъ языкѣ, въ 8 день текущаго ноября, въ Царскомъ Селѣ, Всемилостивѣйше повелѣть соизволилъ благодарить меня, за поднесеніе означенныхъ изданій.

При семъ долгомъ считаю почтительнѣйше представить ВАШЕМУ ПРЕВОСХОДИТЕЛЬСТВУ копію съ подлиннаго письма.-

4 марта 1913 года 47

МИНИСТЕРСТВО
НАРОДНАГО ПРОСВѢЩЕНІЯ.
ПОПЕЧИТЕЛЯ
Казанскаго Учебнаго Округа.
КАНЦЕЛЯРІЯ
Столъ 4.
28 Февраля 1913 г.
№ 5264
КАЗАНЬ.

Г. Инспектору Симбирской чувашской учительской школы.

Представленіемъ отъ 16 ноября минувшаго года за № 2296 Ваше Превосходительство донесли въ Управленіе учебнаго округа, что 16 ноября 1912г. Вы получили отъ Г. Оберъ-Прокурора Святѣйшаго Синода письмо отъ 9 ноября за № 11458, которымъ Его Высокопревосходительство извѣстилъ Васъ о томъ, что ЕГО ИМПЕРАТОРСКОЕ ВЕЛИЧЕСТВО ГОСУДАРЬ ИМПЕРАТОРЪ, милостиво принявъ доставленные Вами для поднесенія ЕГО ИМПЕРАТОРСКОМУ ВЕЛИЧЕСТВУ экземпляры Новаго Завѣта и Псалтири на чувашскомъ языкѣ, въ 8 день ноября 1912 года, въ Царскомъ Селѣ, ВСЕМИЛОСТИВѢЙ-

## 4.3. АВАЛ ХУНӐ СӐМАХА КУҪАРСА ПӖТЕРМЕ ӖМӖТЛЕННИ

Библие куҫарнӑ чухне ялан тенӗ пекех малтан Ҫӗнӗ Сӑмахран пуҫлаҫҫӗ. Анчах И.Я.Яковлев кунта та ҫак йӗркене ҫирӗп пӑхӑнма тӑрӑшман. Чӗмпӗр шкулӗнче ӗҫлекен пултаруллӑ чӑвашсем тата талантлӑ вӗренекенсем, хӑйсен Учителӗ хавхалантарса тӑнипе Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене те Евангелипе пӗр вӑхӑтрах куҫарма тытӑннӑ.

Калӑпӑшӗпе Авал хунӑ Сӑмах Ҫӗнӗ Сӑмахран виҫӗ хут пысӑкрах, унта пурӗ канонланӑ 39 кӗнеке, унсӑр пуҫне тата апокриф кӗнекисем 10 ытла. Сӑваплӑ Ҫырусене "канонланисем" тата "канонламаннисем" (апокрифсем) ҫине пайлаҫҫӗ. Ҫак икӗ ӑнлав пирки кӑштах каласа хӑварни вырӑнлӑ пулмалла. "Апокриф" тени "ӑшри, чун патӗнчи", "вӑрттӑн" тенине пӗлтерет. "Канон" пӗр-пӗр ӗҫе, пулӑма тӗрӗслемелли "виҫе" е "правило" тени пулать. Канонланӑ кӗнекесене пурне те ивритла ҫырнӑ, апокрифсем вара грекла е латинла чӗлхепе ҫеҫ пулнӑ,урӑхла каласан, вӗсене каярах вӑхӑтра ҫырнӑ. Авал хунӑ Сӑмаха грекла куҫарнӑ чухне ун шутне еврейла Библире пулман кӗнекесене те кӗртсе хӑварнӑ. Тӗслӗхрен, вӗсен шутне Товит, Юдифь, Маккавейсен кӗнекисем, Соломонӑн, Сирах ывӑлӗ Иисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнекисем тата ытти те кӗреҫҫӗ. Ҫӗр-ҫӗр ҫул хушши ҫырӑннӑ кӗнекесене Сӑваплӑ ҫырусем тесе шутланӑ. Библире халӗ вӗсене Авал хунӑ Сӑмах ("Ветхий Завет") ятпа палӑртаҫҫӗ. "Ветхий Завет" тени Ҫӳлти Турӑ сӗм авал Израиль халӑхӗпе Моисей урлӑ ҫыхӑну йӗркеленине пӗлтерет. Библири Сӑваплӑ ҫырусенче каласа хӑварнӑ тӑрӑх, Турӑ, Египетра вӑрах вӑхӑт хушши чуралӑхра пурӑннӑ еврей халӑхне "суйласа илсе" Моисей пулӑшнипе ирӗке кӑларнӑ, каярахпа Моисей Синай тӑвӗ ҫинче ҫак халӑх ячӗпе Турӑпа килӗшӳ тунӑ: Турӑ хӑй суйласа илнӗ халӑха — Израилӗн ывӑлӗсене — Ханаан ҫӗрӗ ҫинче (еврейсем ӗмӗртенпе пурӑннӑ ҫӗрте) ҫӑтмахри пек ырӑ

пурнăç туса пама шантарать, çакăншăн хăйне çеç итлесе пурăнма, пĕтĕм чун-чĕререн, пĕр иккĕленмесĕр ĕненсе тăма ыйтать.

Авал хунă Сăмахăн пĕрремĕш пайĕ Моисей ячĕпе çыхăннă пилĕк кĕнекерен тăрать. Еврейсем тата мĕнпур христиансем çав кĕнекесене Моисей çырнă тесе шутлаççĕ. Вĕсенче саккунсемпе правилăсем тĕп вырăн йышăннипе пулĕ, еврейсем Моисей кĕнекисене пĕр сăмахпа Тора, урăхла каласан, Саккун тенĕ. Вăл 52 пайран тăрать, кашни шăматкун кĕлĕ вăхăтĕнче пĕрер пайне вуланă. Авал хунă Сăмаха ивритран грекла куçарнă тăлмачăсем Моисейĕн пилĕк кĕнекине те, содержанине кура, уйрăм ят панă: Пултарни ("Бытие") — тĕнчене туса хуни тата этемсем, Израилĕн ывăлĕсем çурални çинчен — тĕнчен сĕм авалхи историйĕ; Тухни ("Исход") — Авраам йăхĕсем Египетри чуралăхран тухса тарни тата таса Турăпа этем хутшăнса пурăнмалли условисем çинчен; Левит — Левит йăхĕнчисене чĕнсе илсе хăйсен пĕртен-пĕр Туррине хисеплесе, итлесе тата вăл каланине тĕпе хурса ĕçлесе пурăнмалли йĕркесемпе паллаштарни çинчен; Хисеп кĕнеки ("Числа") — Турă сĕннĕ çĕр çине тавраннă чухне тăшман йăхсемпе çапăçăва кĕрсе пысăк çухатусемпе йывăрлăхсем тӳснĕ халăх йышне шута илсе çырма пуçлани çинчен; Ас тутарса калани ("Второзаконие") — Моисей Израиль ывăлĕсемпе сывпуллашас умĕн иртнĕ пурнăçа аса илсе тишкерни, Египетри чуралăхран тухсан пуш хирсенче ӳссе çитĕннĕ çамрăк ăрусене Турă шантарнă çĕр-шывра мĕнле пурăнмаллине вĕрентсе калани, Саккуна (Туррăн вунă халалне) çĕнĕрен вĕрентсе ас тутарни.

Британипе Ют Çĕршывсен Библи Обществи (БИБО) палăртнă тăрăх, И.Я.Яковлев Авал хунă Сăмахăн ултă кĕнекине (343 страница) — Моисейĕн пилĕк кĕнекине тата Псалтире — 1897 çул тĕлнех куçарса пĕтернĕ. Вĕсене вăл йăлана кĕнĕ меслечĕпе — сăнав шучĕпе —сахал кăна çаптарса та кăларнă пулнă. Анчах пурне те пĕрле пухса

уйрăм кĕнеке пек пичетлесе кăларма укçа çукки чарса тăнă. БИБОра ĕçлекенсенчен хăш-пĕрисем Псаломсемпе Моисейĕн пилĕк кĕнекине пичетлессипе çыхăннă тăкаксене тӳлесси пирки ыйту хускатнă пулнă, анчах Редакци комитечĕ ку ыйтăва татса парассине каярах вăхăта хăварма сĕннĕ. Библи обществи И.Я.Яковлев Авал хунă Сăмахăн кĕнекисене те çакăн пек пысăк хастарлăхпа куçарма пикенессе шутламан та, çавăнпа ку ĕç валли укçа-тенкĕ уйăрма хатĕр пулман. “Мухтав юррисен кĕнеки” валли, вăл куллен кирлине шута илсе, Хусанти Миссионер Обществине 1000 тенкĕ куçарса панă. 1900 çулта Псалтирь уйрăм кĕнекен çапăнса тухнă. Моисейĕн пилĕк кĕнекине те тем пекех пичетлесе кăларасшăн пулнă И.Я.Яковлев. БИБОна вăл çак куçарусене 50 кĕренкке стерлингпах пичетлеттерме ирĕк парасшăн тăнă. Анчах ку вăхăтра БИБОна Çĕнĕ Сăмах кăларăмĕ çеç интереслентернĕ (1).

БИБО Авал хунă Сăмаха куçарас ыйтупа интересленсех кайманни И.Я.Яковлев кăмăлне хуçман. Ахăртнех чун туртăмĕн хăвачĕ чăнласах çирĕп пулнă-тăр унăн. Кирек мĕнле пулсан та Библие куçарас ĕç мĕнле пыни çинчен БИБО представителĕсене пĕлтерсе тăма тăрăшнă.

1912 çулхи чӳк уйăхĕнче вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе Санкт-Петербургра пулнă чухне Иван Яковлевич хăйĕн çывăх юлташĕпе — БИБОн Раççейри агентствин секретарĕпе В.Кинпа — тĕл пулать. Хăй Авал хунă Сăма–хăн пирвайхи кĕнекисене чăвашла куçарни, вĕсене халăх мĕнле йышăннине сăнаса пăхас тĕллевпе сахал йышпа пичетлесе кăларма хатĕрлесе çитерни тата ку ĕçе йалтах хăйĕн укçи-тенкипе туса пыни çинчен пĕлтерет.

Çак хыпара В.Кин пĕр тăхтаса тăмасăр БИБО референчĕ А.Тэйлор патне çитернĕ:”Чĕмпĕрте пурăнакан Иван Яковлев мистер, Сăваплă Çырусене чăвашла куçаракан тăлмачă, темиçе кун каярах Санкт-Петербургра пулчĕ. Вăл склада кĕрсе мана çыру парса хăварчĕ, ăна сире акăлчанла куçарса

ярса паратăп. Вăл мĕнле шухăш-туйăмсемпе пурăннине пĕлме интереслĕ пулĕ сирĕншĕн.

Мана вăл Авал хунă Сăмахăн малтанхи кăларăмне пичете хатĕрлесе çитерни пирки пĕлтерчĕ, ăна вăл хăй шучĕпе пичетлет". Çыру çине 1912 çулхи чӳкĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă. Çав кунсенче И.Я.Яковлев Санкт-Петербургра Л.А. Кассо министр чĕннипе пулнă.

Часах А. Тэйлор Лондонра Куçарупа издательство комиссийĕн ларăвĕнче Яковлевăн çĕнĕ куçарăвĕсем пирки В.Кин çырнă çырупа паллаштарать. Анчах издательство комиссийĕ И.Я.Яковлев БИБО хушмасăрах "хăй ирĕкĕпе пуçарнă ĕçе" укçа-тенкĕ хывма килĕшмест. Енчен те Авал хунă Сăмах кĕнекисене Яковлев мистер, ниме пăхмасăр, хăй укçипех пичетлесе кăларас пулсан, пирĕн библиотека валли те пĕрер экземпляр туянса ярса пама ыйтатпăр", — тесе çеç пĕлтереççĕ. Çавăн пекех И.Я.Яковлев хăй тĕллĕн кăларнă Библи кĕнекисенчен хăшĕ БИБО библиотекинче çук, çавсене те пĕрер экземпляр тупса пама ыйтаççĕ.

Библие чăвашла куçарас ĕç пуçаруçи тата йĕркелӳçи пулнă май И.Я.Яковлев айккинчен пулăшу кĕтсе ларман, кĕлмĕçленсе укçа-тенкĕ те ыйтса çӳремен. Çĕнĕ Сăмаха пичетлесе халăх хушшине сарас ĕç ăнăçлă пулса тухнипе хавхаланнăскер, Авал хунă Сăмаха та чăваш халăх аллине тăван чĕлхипе парасчĕ тесе малаллах талпăннă.

Çав хушăра пĕр кăсăк ĕç пулса иртнĕ. БИБОра ĕçлекен чиновниксенчен пĕри Петербурга килнĕ те чăвашла куçарусем ăнланмалла пулнипе пулманнине тĕрĕслесе пăхма шут тытнă. Çак тĕллевпе тĕрмери вулакансем патне пынă. Анчах тĕрмере babaракансем мĕн вуланине ăнланманни БИБО чиновникне (Подина) тĕлĕнтернĕ тата иккĕленӳллĕ шухăшсем çуратнă. Ырă мар хыпар часах Лондона çитнĕ. БИБО управленийĕ В.Кина ăнлантарса пама ыйтнă. 1913 çулхи авăнăн 18-мĕшĕнче Килгор Петербурга Кин патне çапла çырнă: "Çак кунсенче Подин мистер Библи çуртне килсен, эпĕ унпа куçарусем пирки калаçрăм. Вăл тĕрмере

лараккансемпе тӗл пулса калаҫнӑ чухне чӑвашла куҫарӑва ӑнланма йывӑр пулни ҫинчен пӗлтерчӗ. Куҫарусем ӑнӑҫлах пулса тухайман тесе шутлать пулас вӑл. Тен, Эсир ҫакӑн ҫинчен пӗлетӗр те пулӗ".

Анчах ӑслӑ В.Кин столицӑри акӑлчансен, БИБО чиновникӗсен иккӗленӗвне сирсе яма пӗлнӗ. Ҫак тӗллевпе вӑл Петербургри вӗренӳ заведенийӗсенче чӑваш студенчӗсене шыраса тупнӑ та иккӗленекенсене пурне те куҫарусем ӑнланмалла пулнине ӗненмелле кӑтартса панӑ. 1913 ҫулхи раштавӑн 25-мӗшӗнче хӑйӗн тӗрӗслевӗ пирки Лондона хыпар янӑ: "Адам Подин мистер кирек кам пулсан та вӑл чӑвашла куҫарусен пахалӑхне тӗрӗслекен эксперт мар. Ку чӗлхене пӗлмест вӑл. Мӗншӗн-ха вӑл куҫарусене ҫав таранччен япӑх хак панине ыйтса пӗлтӗм эпӗ. Уҫӑмлӑ хурав параймарӗ. Тата ӳнран ытти куҫарусем пирки те ҫавӑн пекех япӑх шутлатӑр-и, тесе ыйтрӑм. Ҫук, терӗ вӑл акӑлчанла, "Эсир кӑна ытлашши ӳстерсе калатӑр" терӗ. Тӗрмере лараккансенчен ытларахӑшӗ, хутла пӗлменскерсем, кӗнекере пичетленнӗ чӗлхе хӑйсен тӑван чӗлхи пулнине тӳрех ӑнкарса илеймерӗҫ, теме ҫеҫ пултарчӗ Подин мистер. Ҫавӑн пекех Подин мистертан эпӗ Яковлев ӗҫӗсем ҫинчен мӗн те пулин пӗлетӗр-и тесе ыйтрӑм. Яковлев, чӑваш, пӗр енчен вӑл чӑваш шкулӗсен инспекторӗ, чӑваш ачисем текех хутла вӗренмесӗр ан ӳсчӗр тесе тӑрӑшать, тепӗр енчен, хӑй тавра пуҫтарнӑ ҫынсемпе пӗрле вӑл 30 ҫул хушши ӗнтӗ Ҫӗнӗ Сӑмах кӗнекисене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне куҫарнӑ тата редакциленӗ, ҫавна май хӑйӗн ӗҫне чи ҫӳллӗ шая ҫитериччен темиҫе хутчен тӳрлетсе ҫӗнетнӗ, юлташӗсемпе пӗрле ӗҫе тӗплӗн вӗҫлемесӗр нихӑҫан та пичетлесе кӑларма васкаман. Ытти япаласем ҫинчен нумай пӗлнӗ пулин те Подин мистер ҫакӑн пирки нимӗн те илтмен. Ҫавӑнпа та хӑй пачах ӑнланман япаласем ҫинчен Лондона кайса калаҫса ҫӳреме кирлех те мар унӑн".

Телее, ҫакӑн пек пӑтӑрмахсем ҫинчен Яковлев нимӗн те пӗлмен. Кин ӑна кулянтарас темен пулас. Ҫав хушӑрах

Лондонран çыру хыççăн çыру киле пуçланă, вĕсенче пуринче те ялан пĕр ыйту пулнă: “Яковлевăн Авал хунă Сăмахĕ пирки мĕнле те пулин хыпар çук-и?”— тенĕ (2).

1911-1914 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи куçару ĕçĕ вĕренӳ округĕнчен тĕрлĕ ревизисемпе килсе чăрмантарнине пула чарăнса ларнă. Кĕвĕçсе усал сунакансем куçару ĕçĕ шкулта ĕçлекенсемпе вĕренекенсене хăйсен тӳрĕ тивĕçĕсене пурнăçлама чăрмантарать тесе айăплама хăтланаççĕ. “Иртнĕ 1911 çул хушшинче, çавăн пекех кăçал та округран манăн ĕçе пĕр вĕçĕмсĕр тапăнаççĕ тата ĕçлеме чăрмантарса тăраççĕ. Юлашкинчен халĕ мана сепаратист тесе айăпларĕç. Манăн ĕçĕм-хĕлĕм яланах чăваш халăхне вырăссемпе çывăхлатса пĕрлештерес тĕллевпе çыхăннă, ăна эпĕ ĕмĕр тăршшĕпех саккунпа килĕшӳллĕн туса пынă тата халиччен ку ĕçе яланах манăн пуçлăхсем çирĕп тĕрĕслесе те ырласа çеç тăнă“, — тенĕ Иван Яковлевич Л.А.Кассо (1910-1914 çç. çутĕç министрĕнче ĕçленĕ. -- *И.М.*) патне янă çырура (3).

1913 çулхи авăн уйăхĕнче Хусан вĕренӳ округĕн инспекторĕ Богоявленский шкул ĕçне вунă куна яхăн тĕрĕсленĕ. Ун хыççăн халăх çутĕç министерствине çакăн пек отчет тăратнă: “Хам куçпа курса ĕненнĕ тата учительсем вĕрентсе хатĕрлекен шкулта çӳретекен çырусене пăхса тухнă хыççăн çакна калама тивĕçлĕ: чăн статски советник Яковлев — чăн-чăн националист-чăваш, çавăнпа та ăна шанса панă вĕренӳ заведенийĕсем пурте чăвашлăхпа палăрса тăраççĕ. Çакă вăл учительсем хатĕрлекен шкулта тата ун çумĕнчи вĕренӳ заведенийĕсенче чăваш чĕлхине вĕрентнинчен те, тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесемпе кĕлĕ кĕнекисене чăвашла вуланинчен те курăнать”(4). Тĕрĕссипе, Богоявленский Чĕмпĕр чăваш шкулне пенси çулне çитнĕ И.Я.Яковлева ĕçрен кăларттарас тĕллевпех килнĕ пулнă.

И.Я.Яковлев чунĕ чăтайманнипе Л.А. Кассо хыççăн çутĕç министрне ларнă П.Н. Игнатьев граф патне хăйĕн

куçару ёçё тата чăвашла кĕнекесем кăларнă пирки акă мĕн çырса пĕлтернĕ: "Шкул çумĕнче (кĕнекесене чăвашла куçарса кăларакан) нимĕнле комисси те çук. Анчах эпĕ 1878 çултанпа Православи миссионер обществин куçару комиссийĕн членĕнче тăратăп. 1875 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче мана Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторне уйăрса лартрĕç. Çавăн чухне Сăваплă Çырусемпе кĕлĕ кĕнекисене тата ытти кĕнекесене чăвашла куçарассине манăн тивĕçсен шутне кĕртсе çирĕплетнĕ. Куçарусем мĕнле майпа хамăн тĕп тивĕçсене пурнăçлама "чăрмантарнине" чăн статски советник Богоявленский шкулпа çиелтен çеç паллашнă хыççăн ниепле те хаклама пултараймасть", — тенĕ (5).

Пĕтĕм йывăрлăха чун çывăхне илсе, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр пăшăрханнă И.Я.Яковлев. Çапах та çав тĕрĕслевсене шăла çыртса тӳссе irттерет чăваш шкулĕн пуçлăхĕ. Анчах çак тапхăртан пуçласа куçару ĕçĕн хастарлăхĕ те сӳннĕ. Паллах, тăван халăхшăн ырми-канми ĕçленине чылайăшĕ ăнланманни, çак çул çинче тепĕр чухне тăр пĕччен тăрса юлма тата час-часах ӳпкев сăмахĕ çеç илтме тивни 65 çулхи Иван Яковлевичăн чĕрине ыраттарнă. Хăй пуçарнă ĕç тĕрĕс те кирлĕ пулнине ăнланни çеç йывăр самантсенче пуçа усма паман, малаллах тăрăшма хистенĕ. "Турă пулăшасса шанни тата хамăн ĕç халăха ĕмĕрлĕх кирлĕ пулнине ăнланни кăна чуна çемçететчĕ",— çырнă вăл чунĕ кӳтсе килнĕ чухне шанчăклă юлташĕсем патне.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă хыççăн И.Я.Яковлевпа Библи обществи хушшинчи çыхăну пĕр хушă татăлать. 1917 çулхи революци хыççăн пирĕн çĕршывра БИБО агентствине хупаççĕ. 1921 çулхи çулла тин Яковлевсен çемйинче пурнăç йывăрланса çитсен И.Я.Яковлевăн ывăлĕ Алексей Иванович пуçарнипе çыхăну çĕнĕрен тĕвĕленет. Ун чухне Мускавра Британин Коммерци Миссийĕ ĕçленĕ, вăл Раççейри чиркӳ çыннисемпе БИБО хушшинче çырусем çӳретме пулăшакан кĕпер пулса тăнă. Çак мисси ĕçне ертсе пынă Монтгомери

Гроув 1921 çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче И.Я.Яковлев ывăлĕпе — Мускав университечĕн профессорĕпе тĕл пулни çинчен çырать: “Яковлев мистер хăй хальхи вăхăтра профессор шалăвне илменни тата пурăнма укçи çукки çинчен каласа пачĕ. Унăн ашшĕ хăй ĕмĕрĕнче ĕçлесе илнĕ пĕтĕм укçи-тенкине йăлтах чăваш чĕлхине аталантарма тата чăвашла кĕнекесем кăларма парса пынă, халĕ, ватлăх кунĕсенче, пĕр пуссăр тăрса юлнă. Профессор ашшĕне тăрантарса пурăнайманни çинчен каларĕ. Мĕнле те пулсан укçан пулăшу памасан ашшĕ хĕлле выçăпа вилесрен шикленнине пĕлтерчĕ”.

БИБОран çийĕнчех хурав кĕтсе илейменрен авăнăн 26-мĕшĕнче М.Гроув Лондона тата тепĕр хыпар ярать: “Сэр, Иван Яковлев мистера 1913 çулхи çу уйăхĕнче Сирĕн Обществăн Хисеплĕ членне илнĕ пулнă. (Тĕрĕссипе, маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, хисеплĕ ята И.Я.Яковлев 1911 çултах илнĕ, çакăн çинчен БИБОн Куçару-издательство комиссийĕн протоколĕнче çырса хăварнă, Хисеплĕ член Дипломне вара 1913 çулта тин панă). Унăн ывăлĕ каланă тăрăх, Сирĕн общество унччен маларах ашшĕне куçарусемшĕн пĕрре мар укçа сĕннĕ, анчах вăл килĕшмен, мĕншĕн тесен ун чухне вăл хăйех тулăх пурнăçпа пурăннă. Халĕ унăн нимĕн те çук. Енчен те эсир пулăшмасан, хĕлле вată çынна выçлăх çапса хуçма пултарать”.

БИБОн Куçарупа издательство пайĕн пуçлăхĕ Р.Килгор 1921 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче М.Гроув патне çапла çырать: “Çурлан 9-мĕшĕнче çырнă çырăвăр пирĕн пата отпуск вăхăтĕнче çитнĕ, çавна пула комисси ăна каярах пăхса тухрĕ.

Библи Çуртĕнче эпир Иван Яковлев мистера яланах сума сунă. Вăл Раççейри пирĕн секретарьсенчен пĕрин (В.Кинăн. — *И.М.*) çывăх юлташĕ пулнă. Укçа-тенкĕпе пулăшас тесен эпир ăна мĕнле ярса памаллине пĕлместпĕр. Енчен эсир хăвăр пĕр 10 кĕренкке стерлинг тăкаклама пултарайсан,

каярахпа эпир ҫав укҫана Сирӗн ятӑрпа тавӑрса панӑ е кунти счетӑр ҫине куҫарнӑ пулӑттӑмӑр".

И.Я.Яковлевӑн Англири тусӗсем уншӑн чӑнласах пӑшӑрханнӑ, май килнӗ таран пулӑшма тӑрӑшнӑ. Ҫав хушӑрах вырӑнти влаҫ Чӑваш наци обществинчи хӑш-пӗр йӗксӗксем хӗтӗртнипе пирӗн Вӗрентекенӗмӗртен мӑшкӑллама пӑрахман. Ултавлӑ ҫӑхавсене пула допроссем тунӑ, хваттерне ухтарнӑ, хӑй йӗркеленӗ тата пӗр улшӑнмасӑр 50 ҫул ытла ертсе пынӑ шкултан хӑвалanӑ. 1921 ҫулхи выҫлӑх хӑрушлӑхӗ ҫинчен илтнӗ акӑлчансем И.Я.Яковлева пулӑшусӑр хӑварма пултарайман. Вӗсенчен Америка урлӑ 10 долларлӑх посылкӑсем илнӗ хыҫҫӑн Яковлевсем, ашшӗпе ывӑлӗ, БИБОна тав ҫырӑвӗсем янӑ, пурлӑх тӗлӗшӗнчен пысӑк пулӑшу панӑшӑн ҫеҫ мар, хӑйсене манманшӑн, хисепленӗшӗн, хавхалантарнӑшӑн чӗререн тав тунӑ. Ҫак йывӑр вӑхӑтра та ватӑ Иван Яковлевич хӑйшӗн ҫеҫ ҫунманни, хӑйӗнчен ытларах нушаллӑ тӑванӗсене пулӑшма тӑрӑшни палӑрнӑ. Илнӗ посылкӑсене вӑл виҫҫе пайлама, пӗр пайне — Н.И.Ильминскин 80 ҫулхи арӑмне, Екатерина Степановнӑна, тепӗрне тӑван хӗрне Лидия Некрасовӑна ярса пама ыйтнӑ.

Библи обществипе ҫӗнӗрен йӗркеленнӗ ҫыхӑну Шур сухала ҫав тери хавхалантарнӑ. Ун чухне вӑл 74-ра пулнӑ ӗнтӗ. Чун юратнӑ ӗҫне малалла тӑсас шухӑшӗ куҫ хупма паман. Библие куҫарас шанӑҫ ҫӗнӗрен чӗрӗлсе тӑнӑ. 1922 ҫулхи кӑрлачӑн 24-мӗшӗнче Лондона янӑ тав ҫырӑвӗнче те вӑл хӑйӗн тертлӗ пурнӑҫӗ ҫинчен мар, Авал хунӑ Сӑмахӑн кӗнекисене куҫарасси ҫинчен ҫырать. Ҫырӑва акӑлчанла ҫырнӑ, эпир ӑна чӑвашла илсе паратпӑр:

"Раҫҫей, Чӗмпӗр, Чӑваш институчӗ.

Хисеплӗ господасем, Эсир ман патма Хӑвӑрӑн хаклӑ пулӑшӑвӑра яни пирки эпӗ Раштав уявӗ умӗн хыпар илтӗм. Ырӑ кӑмӑлтан ҫакӑн пек пысӑк пулӑшу панӑшӑн ҫеҫ мар тата унтан та питрех пахараххишӗн, Британин Мускаври представителӗ манӑн кӑмӑл-туйӑма ҫӗклентерсе

хавхалантарнӑшӑн манран хамран тата ҫемьемрен чӗререн тухакан тав сӑмахне йышӑнсамӑр. Пирӗн чухӑн та Турӑ маннӑ ҫӗршывра ҫакнашкал тимлӗх палли мӗн тери паха пулнине хаклама та йывӑр.

Манӑн валли янӑ укҫана хамран та ытларах нушаллӑраххисемпе пайларӑм — манӑн юратнӑ вӗрентекенӗмӗн, аслӑ Николай Ильминскин тӑлӑха юлнӑ арӑмӗнчен (Катерина Ильминскаяран, Хусан) тата Лидия Некрасовӑран (Мускав, Петровский-Разумовский урамӗ) пысӑк тав. Эсир ирӗк панипе ҫакна палӑртма хӑюлӑх ҫитеретӗп: сакӑр вунӑ ҫулхи Катерина Ильминская ытти кирек хӑш вырӑс сыннинчен те ытларах ҫак пулӑшӑва тивӗҫлӗ. Вӑл Николай Ильминскин юратнӑ арӑмӗ ҫеҫ мар, унпа пӗрле пӗр ӗҫ тунӑ сын, унӑн ӗҫне малалла тӑсаканӗсемпе пиншер вӗренекенне ӑшшӑн йышӑнса пурӑннӑ кил-ҫурт вучахне вӑл нихҫан та сӳнме паман.

Ильминский ячӗ, Христос вӗрентӗвӗн ҫутине вырӑс мар вак халӑхсем хушшине саракан апостолӑн ячӗ пекех, миллионшар вырӑс сыннишӗн тата уйрӑмах Раҫҫейӗн Тухӑҫ пайӗнче пурӑнакан тӗрлӗрен вырӑс мар халӑхсемшӗн таса та сӑваплӑ ят. Тен, ӑна халӗ пӗлсех те каймаҫҫӗ пулӗ — ҫавӑнпа та унӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫырнӑ статьяна асӑнса хӑварма ирӗк парсамӑр. Ӑна Мускав университечӗн докторӗ Алексей Яковлев (манӑн ывӑл) ҫырнӑ — “Восток и Запад”, 1913, июль. № 43.

Британипе Ют ҫӗршывсен Библи Обществипе 30 ҫул ытла ҫыхӑну тытма тивӗҫлӗ пултӑм эпӗ, ҫавӑнпа та вырӑс пурнӑҫӗн иртнӗ хурлӑхлӑ (синкерлӗ) ҫулӗсенче тунӑ ӗҫсем пирки кӗскен те пулин хыпар яни Сирӗншӗн кӑштах та пулин интереслӗ пулӗ тесе шутлатӑп. Британипе Ют Ҫӗршывсен Библи Обществи 1910 ҫулта чӑвашла кӑларттарнӑ Ҫӗнӗ Сӑмахпа Псаломсене чӑвашсем хапӑл туса йышӑнчӗҫ теме пултаратӑп, мӗншӗн тесен вӗсем ялсенче пурӑнакан ахаль чӑваш халӑхӗшӗн ӑнланмалла пулса тухрӗҫ. Экземплярсен чылай пысӑк пайне (20000

çаптарнă) хуплашкисене çĕлеттермешкĕн Петроградран Финляндие ăсатнăччĕ, халĕ вĕсем тĕрĕс-тĕкел тăрасса шанатăп.

Иртнĕ 25 çул хушшинче кăна эпĕ Авал хунă Сăмаха куçарас енĕпе тăрăшрăм. 1914 çулта Моисейĕн 5 кĕнекине кăларма хăтлантăм, шел те, çак ĕç 1917-1922 çулсенчи синкерлĕ вăхăта пула 19-мĕш листа тĕлĕнче чарăнса ларчĕ, 20-мĕш листине наборланă хыççăн ("Хисеп кĕнекин" 19-мĕш сыпăкне) салатса пăрахрĕç. "Хисеп кĕнекин" вĕçĕ тата "Второзакони" ал çырăвĕнче упранаççĕ, вĕсем пичете хатĕр. Виçĕ экземпляртан пĕрне — çаптарнă 19 листана — эпĕ ятарласа упрама сире ярса парас терĕм. Тата çакна хушса калам: хальхи вăхăтра тĕрлĕ çĕрте упранакан кăларăмсене эпĕ хаваспах БИБОна ярса панă пулăттăм. Маларах эпĕ Иов, Иисус (Навин. — *И.М.*). Руфь кĕнекисене чăвашла куçарса çаптарнăччĕ... Иртнĕ 5 çул хушшинче манăн ку ĕçе вĕçлеме нимĕнле май та пулмарĕ. Пурнăç условийĕсем çапла майĕпен лайăхланса пырсан, куçару ĕçне çĕнĕрен йĕркелесе яма пулатех-тĕр. 75-е çитсе пынă май хам çине çав тĕрлĕ пысăк ĕç илме хăюлăх çитерейместĕп. Енчен те эсир мана туслă пулăшу пама хирĕç пулмасан, ĕçе хăвăртлатма май пулĕччĕ. Пулăшу пирки каласан, укçа мар, апат-çимĕç посылкисем кирлĕ (Америкăн Пулăшу Администрацийĕ 10 долларлăх 1 посылка ярса панăччĕ, унăн штаб-хваттерĕ Мускавра Спиридоновкăра, Америка миссийĕ ертсе пыракан секцийĕ Лондонра). Тăлмачăсен штачĕ эпĕ ертсе пынипе Авал хунă Сăмаха малалла куçарма пуçăнтăр тесен (малтанласа ал çырăвĕпе), уйăхне пĕр 3-5 посылка çителĕклĕ пулнă пулĕччĕ.

Иван Яковлевран тата тепĕр хут чĕререн тухакан тав сăмахне йышăнсамăр.

Иван Яковлев".

Çак çырăва БИБОна 1922 çулхи нарăсăн 24-мĕшĕнче Моисейĕн Пилĕк кĕнекин вĕçленмен куçарăвĕн копийĕпе

пĕрле (куçару Хисеп кĕнекин 18 сыпăкĕн 5 стихĕ таран) Британин Мускаври коммерци миссийĕ урлă ярса панă.

БИБО И.Я.Яковлев çырăвĕ çине ăшшăн хуравланă: "Иван Яковлев профессора. Чăваш институчĕ. Чĕмпĕр.

Хисеплĕ Яковлев профессор!

Сирĕн кăрлачăн 24-мĕшĕнче янă çырăвăра илсе вулама кăмăллă пулчĕ. Эпир Сире пама пултарнă пĕчĕк çеç пулăшăва Эсир çав тĕрлĕ пысăк хак панине пĕлсен эпир питĕ савăнтăмăр.

Эсир Авал хунă Сăмаха чăвашла куçарас енĕпе ĕçлени пирки эпир тахçанах пĕлетпĕр тата Эсир хăвăр шутăрпа çаптарнă Пилĕк кĕнеке гранкисемшĕн тав тăватпăр. Пичетлеттернĕ экземплярсене те пирĕн Обществăна ярса пама сĕнни Эсир пире ырă суннине пĕлтерет. Вĕсене ярса памалли майсем тупăнсан, эпир вĕсене йышăнма хавас, анчах та халĕ лару-тăру лăпкă маррине пула нимех те тума май çук.

Хальхи вăхăтра эпир Сире укçа-тенкĕпе пулăшма пултараймастпăр пулсан та манăн ку ĕçе пăрахтарас килмест. Ал çырăвĕсене хăвăр патăрта упраса е пирĕн пата упрамашкăн ярса панă май Эсир Авал хунă Сăмаха куçарса хатĕрлес енĕпе малалла ĕçлеме пултарайăр-ши. Хамăрăн секретаре, мистер Дэвидсона эпĕ Кĕнекене сарас ыйтăва тишкерме хушатăп. Енчен те вăл чăнласах кирлине ĕнентерме пултарайсан, эпир унпа хаваспах усă курнă пулăттăмăр. Мистер Дэвидсон çавăн пекех пĕтĕм ыйтупа доклад хатĕрленĕ. Эпир кунта (Англири Библи çуртĕнче.— *И.М.*) Сире кăмăлтан ырă суннине шантаратăп",— тенĕ БИБОн издательство управляющийĕ (6).

Ку çырăва чăваш патриархĕ патне БИБОн издательство пайĕн управляющийĕ Р.Килгор 1922 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче çырнă.

И.Я.Яковлев Британин коммерци миссийĕ урлă "енчен те эсир ку ĕçпе çыхăннă кулленхи тăкаксене саплаштарма, у.к. секретарь ĕç укçине, çыру хатĕрĕсене парса тăма

пултарайсан”, хӑй те ҫаплах тӑвасшӑн ҫунни ҫинчен хыпарлать.

1918 ҫулта БИБОн Раҫҫейри агентствине хупнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршывра пурӑнакан халӑхсен чӗлхине куҫарнӑ Библи кӗнекисене ҫак обществӑн Финляндири филиалӗ Гельсингфорс хулинче кӑларса тӑнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ Чӗмпӗрте ҫаптарса кӑларнӑ Евангелин темиҫе пин кӗнекине хуплашкисене туса ҫӗлеттермешкӗн шӑпах ҫавӑнта ӑсатнӑ. 1922 ҫулта ҫак филиалӑн секретарӗнче В.Дэвидсон ӗҫленӗ. Вӑл, БИБОн ытти представителӗсем пекех, Иван Яковлев ӗҫӗсене аван пӗлнӗ тата ватӑ ҫын ӗмӗр тӑршшӗпех тӗн литературине куҫарас ӗҫре вӑй хуние пысӑк хак панӑ.

1922 ҫулхи ака уйӑхӗн 21-мӗшӗнче Р.Килгор В.Дэвидсона ҫапла ҫырса пӗлтернӗ: “Сире эпӗ Яковлев профессор патне ҫырнӑ ҫыру копине ярса паратӑп. Эсир ас тума тивӗҫ, вӑл — мӗн виличченех общество правленийӗн хисеплӗ членӗ. Кин ун пирки яланах ырӑпа ҫеҫ ҫыратчӗ. Вӑл чӑвашла куҫарнӑ Ҫӗнӗ Сӑмаха пичетлесе кӑлартӑмӑр эпир. Ун чухне условисем аванччӗ те вӑл Авал хунӑ Сӑмаха та куҫарма сӗнчӗ. Хальхи вӑхӑтра Авал хунӑ Сӑмах халӑх хушшине анлӑн сарӑлассӑнах туйӑнмасть, анчах та, тен, каярахпа ҫав куҫарупа усӑ курмалли майсем уҫӑлӗҫ. Ку ыйтупа хӑвӑрӑн шухӑшӑра пӗлтерсен аван пулмалла. Шансах тӑратӑп, кӗнекепе усӑ курма май килейсен, куҫарӑва алла илес тесе пирӗн Комитет Яковлев профессора укҫа-тенкӗ енӗпе пулӑшма хавас пулӗ”.

Авал хунӑ Сӑмаха куҫарса пӗтерес тӗллевпе БИБО И.Я.Яковлевӑн опычӗпе тата пӗлӗвӗсемпе туллин усӑ курма тӑрӑшнӑ. Анчах ку вӑхӑтра ватӑлса ҫитнӗ И.Я.Яковлев тӑтӑшах чирлесе тӑнӑ ун ҫумӗнче малтанхи пек чунне парса, хавхаланса ӗҫлекен чӑвашсем те юлман.

Хӑйӗн аса илӗвӗсенче палӑртнӑ тӑрӑх, И.Я.Яковлев Авал хунӑ Сӑмах кӗнекисенчен Псалтире ҫеҫ хӑй куҫарнӑ: ”Эпӗ Псалтире чӑвашла куҫартӑм. Ӑна эпӗ хамах темиҫе хутчен тӳрлетсе ҫӗнетрӗм. Ҫавна май мана Федор Данилов (чӑваш,

ёҫкелеме юратаканскер) тата Константин Иванов (чăваш, поэт. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренчĕ вăл, анчах курсран вĕренсе тухаймарĕ) пулăшрĕҫ. Псалтирĕн юлашки редакцине эпĕ Иванов пулăшнипе питĕ те лайăх якатса ҫитертĕм.

Пĕтĕмĕшле илсен, куҫару ĕҫне эпĕ (ҫак тата ытти кĕнекесене куҫарма) питех те нумай хутшăннă, уйрăмах — Ҫĕнĕ Сăмахпа Псалтире куҫарас ĕҫе.

Чăвашла куҫарусем тунă чухне мана ҫак ҫынсем пулăшу панă:Маккавейсен, Иисус Навин, Руфь, Юдифь, Товит, Сирах кĕнекисене куҫарма — чăвашран тухнă пуп Петр Васильевич Васильев (халĕ те пурăнать-ха).

Библин 1,2,3,4 кĕнекисене (Моисейĕн пилĕк кĕнекине) куҫармашкăн хамăн тăван, Иван Степанов пулăшрĕ, вăл та пурăнать-ха (Степанов Иван Степанович 1897 ҫулта Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă, 1901 ҫулта И.Я.Яковлевăн аппăшĕн хĕрне Татьяна Савельевна Савельевăна качча илнĕ. 1897-1907 ҫулсенче тĕрлĕ ялти шкулсенче вĕрентнĕ, 1907-1919 ҫулсенче Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕҫленĕ.– *ИМ*).

Ҫĕнĕ Сăмах кĕнекисене куҫарнă чухне мана ҫавсем те тата ытти чăвашсем те пулăшнă (хăшне-пĕрне мана та пуҫланă ĕнтĕ). Ҫавна май эпĕ кашни меллĕ самантпа, кашни тĕл пулупа усă курма тăрăшаттăмччĕ.

Чăваш шкулĕнчи преподавательсенчен куҫару ĕҫĕнче мана Чăваш шкулĕн чиркӳҫи Иван Дормидонтов тата, кăштах ҫеҫ, шкулти тепĕр чиркӳҫĕ Василий Никифоров пулăшнă.

Ҫапла калама пултаратăп: куҫару ĕҫĕнче эпĕ нумай, калама ҫук нумай вăй хунă. Халĕ те, акă, Библие чăвашла куҫарас енĕпе ĕҫлетĕп. 4-мĕш кĕнекене (Хисеп кĕнекине) пичетлеҫҫĕ. Ăна, ҫавăн пекех Библин пичетлесе кăларман ытти пайĕсене те, тахҫанах куҫарнă. Эпĕ ăна пĕрре мар пăхса тухса тӳрлетнĕ, ытти тĕрлĕ ҫынсем, ҫав шутра вĕсемпе пĕрле хам та хутшăнса темиҫе хутчен те редакциленĕ. Пилĕк кĕнекерен пурне те (Моисейĕн пилĕк

кӗнекине) пичетлесе кӑларас килет. Хам ҫине эпӗ чи кирлине — редакцилессипе корректурӑна илтӗм. Анчах кӗнеке ҫаптарасси питӗ вӑраххӑн пулса пырать, ӗҫӗ виҫесӗр хаклӑ (унччехинчен вӑтӑр хут хаклӑрах). Куратӑр пулӗ ӗнтӗ, ватлӑхра та эпӗ, ку чухнехи лару-тӑрура та юратнӑ ӗҫе пӑрахмастӑп" (7).

И.Я.Яковлев ертсе пынипе тӑлмачӑсен ушкӑнӗ Авал хунӑ Сӑмахран пурӗ 12 кӗнеке: Моисейӗн 5 кӗнекине — Пултарни, Тухни, Левит, Хисеп; Иисус Навин, Руфь, Товит, Иов кӗнекисене, Псалтирь, Сирах ывӑлӗн Иисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнекине тата Маккавейсен пӗрремӗш кӗнекине куҫарнӑ. Ку вӑл Авал хунӑ Сӑмахӑн пӗтӗм калӑпӑшне илсессӗн 33,8 процентпа танлашать, апла пулсан тепӗр 66,2 процентне куҫармалла пулнӑ. Анчах та ҫак шута Хисеп кӗнекин вӗҫӗ тата Ас тутарса каланин ("Второзаконин") чӑвашла ал ҫырӑвӗсем кӗмеҫҫӗ. Унсӑр пуҫне И.Я.Яковлев аллинче ытти нумай-нумай ал ҫырӑвӗсем (черновиксем) упраннӑ. Акӑ мӗнле аса илет вӑл хӑйӗн "Манӑн пурӑнӑҫ" кӗнекинче ҫав куҫарусем пирки: "Чӑвашсене манӑн пӗтӗм Библие чӑвашла куҫарса парас килет. Ку таранччен ун пек куҫару пулман-ха. Библин уйрӑм пайӗсене эпӗ хам та куҫарнӑ, ыттисен куҫарӑвӗсене те тӳрлетсе хатӗрленӗ. Ҫавна май манӑн тӗн пӗлӗвӗсене сарас тӗллев ҫеҫ мар, халӑхӑн культура пӗлӗвне ӳстерес тӗллев те пулнӑ. Урӑхла каласан, чи малтанах Библирен чӑваш халӑхне ырӑ витӗм кӳме пултаракан кӗнекесене куҫарма палӑртаттӑмччӗ. Ҫак тӗллеве тӗпе хурса, йӗркипе йӑлтах куҫармасӑр, эпӗ Маккавейсен кӗнекине (патриотла туйӑмсемне ҫирӗплетме пулӑшакан кӗнеке вырӑнне хурса), ваттисем уйрӑмах кӑмӑллакан Сирах кӗнекине, Турӑ янӑ йывӑрлӑхсене тӳссе irttерне чухне ҫирӗп тата тӳсӗмлӗх кӑтартма вӗрентекен Иов кӗнекине тата "Юдифь", "Руфь" ятлӑ пӗчӗк кӗнекесене куҫартӑм.

Пӗтӗм ӗмӗр тӑршшӗпех ӗмӗтленсе пурӑннӑ пек Библие йӗркипе тата йӑлтах чӑвашла куҫарса кӑларичченпурӑнса ҫитерейместпӗр пулӗ,тесе шутлатӑп. Халӗ манра Библие

куҫарнă черновиксем нумай. Анчах вĕсене пăхса тухса тӳрлетмелле-ха...

Манăн тата тепĕр пысăк ĕмĕтĕм пур. Анчах вăл пурнăҫа кĕнине те курса пулмасть пулĕ. Ку вăл — чиркӳсенче служба ирттернĕ чухне вуламалли чăвашла куҫарнă кĕнекесене пурне те пĕрле пухса Святейший Синодăн вырăсла кăларăмĕнчи йĕркепе пĕр пысăк кĕнеке туса уйрăммăн пичетлесе кăларасси" (8).

Тĕрĕссипе, И.Я.Яковлев чăвашла куҫармалли Библи кĕнекисене тăлмачăсене йăлтах сыпăкăн-сыпăкăн валеҫсе панă пулнă. Анчах Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче хăйĕнче халиччен "чăваш турри" вырăнне хурса хисеплесе тăнă И.Я.Яковлева хирĕҫле шухăш-кăмăл ӳсме пуҫлани, вăтă Шурсухалăн сывлăхĕ хавшаса пыни тата пĕрремĕш тĕнче вăрҫи пуҫланнă хыҫҫăн патшалăхра пĕтĕмĕшле лару-тăру улшăнни те куҫару ĕҫне сӳрĕклентернĕ. Халиччен тăлмачăсене Православи Миссионер обществин Хусанти куҫару комиссийĕ урлă укҫа-тенкĕпе е ытти майсемпе (тĕслĕхрен, чăваш прихучĕсенче авантарах вырăна ĕҫе вырнаҫтарса) хавхалантарнă пулсан, малашне ҫак ĕҫĕн ертӳҫи нимĕнле ҫăмăллăхсем пирки те шантарма пултарайман. Ҫитменнине Лондонри Библи обществипе те ҫыхăну татăлнă.

Хăйĕн аса илӳсен кĕнекинче И.Я.Яковлев чăваш халăх поэтне К.В.Иванова ырăпа ҫеҫ аса илет, вăл чаплă поэт тата куҫаруҫă пулнине палăртать. Константин Иванов 1914 ҫулхи кĕркунне йывăр чирлесе ӳкнĕ хыҫҫăн чӳк уйăхĕнче сипленме тесе тăван ялне Слакпуҫне тухса кайнă. Аслă Вĕрентекен ыйтнипе вăл Моисейĕн пилĕк кĕнекин куҫарăвĕсене пăхса тухса тӳрлетме тата куҫару ĕҫне малалла тăсас тĕллевпе ытти хушусем те илнĕ. 1915 ҫулхи пуш уйăхĕнче К.В.Иванов йывăр чире ҫĕнтереймесĕр ҫĕре кĕрет, Моисейĕн Пиллĕкмĕш кĕнекине куҫарса пĕтереймест. Ҫакăн хыҫҫăн, И.Я.Яковлев унăн ашшĕ-амăшĕнчен тата тăванĕсенчен Константин Васильевичăн ал ҫырăвĕсене, унăн пĕтĕм архивне Чĕмпĕр чăваш шкулне

таварса пама ыйтнă. Поэтăн шăллĕ, Квинтилиан, ун чухне Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Куçару ал çырăвĕсене вăл Иван Яковлевича илсе килсе панă, анчах пиччĕшĕн тулли архивне ашшĕ-амăшĕн килĕнчех хăварма шутланă. Граждан вăрçи çулĕсенче К.В.Ивановăн тăван çĕршывĕнче хаяр çапăçусем пынă, унăн ашшĕ-амăшĕн кил-çуртне шурă гвардеецсем темиçе хутчен те ухтарнă-тустарнă. Çакăн хыççăн поэтăн архивĕ пăч çухалнă. Куçару ал çырăвĕсем çине К.В.Иванов ниçта та алă пусман. Вĕсене И.Я.Яковлев хăй аллипе пачах тĕкĕнмесĕр çаплипех Лондона ярса панă. Октябрьти революци хыççăнхи синкерлĕ кунсенче (1922 çулхи январьте БИБОна янă çырура асăннă пек) ал çырăвĕсемпе те инкек сиксе тухасран сыхланнă пулинех. И.Я.Яковлев еткерлĕхне тĕпчекен паллă ăсчах Н.Г.Краснов палăртнă тăрăх, Моисейĕн Пиллĕкмĕш кĕнекин Ас тутарса каланине ("Второзаконие") куçарнă ал çырăвĕсем 38 страницăна яхăн тата Хисеп кĕнекин вĕçĕ (миçе страница пулни паллă мар) паянхи кунччене БИБО архивĕсенче упранаççĕ.

Каларăм ĕнтĕ, 1918 çулта БИБОн Раççейри агентствине хупнă хыççăн пирĕн çĕршывра пурăнакан халăхсен чĕлхипе Библие малалла та пичетлеме ыйтакан пачах пулман. Раççейре тĕне хирĕçле кĕрешӳ пынă условисенче халиччен пичетленнĕ кĕнекесене те халăх хушшине сарма йывăр пулнă. Сăмахран, Чăвашла пысăк тиражпа кăларнă Евангели те сутăнса пĕтеймен. Çавăнпа та Лондонра Авал хунă Сăмаха куçарнăшăн "Яковлев профессора" укçа-тенкĕпе пулăшмашкăн кăштах тăхтама шутланă. Çакăн пирки ун патне, ватă çыннăн кăмăлне хуçас марччĕ тесе, сăпайлăн çырса пĕлтернĕ. Хăйсем пурпĕрех ĕçе пăрахма хушман, хăçан та пулсан чăвашла ал çырăвĕсемпе усă курма май килессе шаннă.

Ĕç-пуç çапларах килсе тухни 80-алла çывхарса пыракан Иван Яковлевича та канăççăрлантарнă. Палăртнă ĕçĕсене туса çитерейменни унăн ăш-чикне вăркатнă. Çавăнпах-тăр

чăваш халăхне панă Халалĕнче вăл çапла пилленĕ: "Эпĕ туса пĕтерейменнe ĕçсене эсир туса пĕтерĕр. Авал хунă Сăмаха — Этемсен Турăпа пĕрлешсе пурăнасси çинчен каланă Аслă Сăмах кĕнекисене — вĕçне çитиччен куçарса пĕтерсе, Туррăмăрăн Сăвaплă Сыруне пĕтĕмпех чăваш халăхне парăр. Вырăс патшалăхийĕн Хĕвел тухăçĕ енче пурăнакан йышлă халăхсене Христос вĕрентĕвĕпе çутăлтарас ĕçе тăрăшса ĕçлĕр", — тенĕ.

И.Я.Яковлевпа БИБО хушшинчи çыхăну 50 çула пынă. Çав тапхăрта Библи обществи Сăвaплă Çырусене 299 чĕлхепе пичетлесе кăларнă пулнă. Пирĕн аслă Вĕрентекенĕмĕр ĕмĕр тăршшĕпех чăваш халăхне çутта кăларас, халăхăмăрăн культура пĕлĕвне ӳстерес тесе хĕмленсе ĕçленипе чăвашла куçарнă Евангели, Сăвaплă Çырусен ытти пайĕсем Библи 300-мĕш чĕлхене куçнине кăтартса параççĕ. Апла пулсан чăваш чĕлхи — Библин 300-мĕш чĕлхи — чи авалхи Пурнăç кĕнекине хальхи чĕлхепе калаçтаракан пуян чĕлхесен шутне кĕнĕ.

И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем ĕмĕр тăршшĕпех чăн кăмăлтан, нимĕне хапсăнмасăр, мĕн пур халĕпе тăрăшнине пула чухăн тата малашлăхсăр тесе тиркенĕ чăваш чĕлхи хăйĕн халăхне цивилизаци тĕнчине илсе тухнă.

* * *

1922 çул пуçламăшĕнче БИБОра Библие тата тепĕр çын чăвашла куçарма пиkенни, çав çын Германире пурăнни çинчен хыпар илеççĕ. Хыпалансах вăл кам, мĕнле çын пулнине тĕпчеме тытăнаççĕ. "Яковлев профессорăн" çулĕсем нумайланса пынă май ватă çын халсăрланнăçемĕн халсăрланнă вăхăтра шăпах унăн куçару ĕçне малалла тăсма пултаракан чăваш тупăнни ăнăçлă пуласса шаннă пулĕ Библи Обществинче. Кăштах вăхăт иртсен шыраса тупаççĕ çав чăваша. Вăл пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче нимĕçсем патне тыткăна лекнĕ Роман Иванов ятлă хутла пĕлекен çын

пулнă. Германире Библи колледжĕнчен вĕренсе тухсан Вернигород хулинче икĕ çул хушши пасторта ĕçленĕ, çав хушăрах пĕр-икĕ Евангелие чăвашла куçарнă. Ун чухне вăл Раççейре И.Я.Яковлев Библин Çĕнĕ Сăмахне тулли кĕнекен куçарса кăларнине те, Сăваплă çырусене малалла куçарас енĕпе ĕçленине те пĕлмен. Чăвашсенчен хăй çак ĕçе пуçăнакан пĕрремĕш çын тесе шутланă. "Тĕрлĕ çăлкуçсенчен илтнĕ тăрăх, Библие БИБО 300 тĕрлĕ чĕлхене куçарнă; ĕненекен чăвашсене эпĕ хăйсен тăван чĕлхипе Библи куçарса пама пултарайсан эпĕ мĕн тери телейлĕ пулнă пулăттăм! Çапла вара Сирĕн вăрăм списокăра тата тепĕр чĕлхе — 301-мĕш чĕлхе — кĕнĕ пулĕччĕ",— тесе çырнă Р.Иванов БИБОна. Çырăвне вăл нимĕçле çырнă.

Тахçантанпах тăван çĕршывĕнче пулман çын Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Библие куçаракансен пысăк ушкăнĕ ĕçленине те, Çĕнĕ Сăмаха тата Авал хунă Сăмахăн хăш-пĕр пайĕсене уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларнине те пĕлмен.

Çакăн хыççăн Роман Иванов Библие куçарса пĕтерес тĕллевпе БИБОн Финляндири филиалĕпе тачă çыхăну тытма пуçланă. Чăвашла Евангелипе Псалтирь кĕнекине хăй патне çитерсен вăл 1820 тата 1911 çулсенче пичетленсе тухнă Евангелисене танлаштарса тишкерме пикеннĕ. Çавна май хăш-пĕр тĕлсем грекла текстпа килĕшсе тăманнине асăрханă та БИБОна Евангелие çĕнĕрен чăвашла куçарса кăларма сĕннĕ. Анчах Библи обществинче ĕçлекенсем хăйĕн квалификацийĕ мĕнле шайра пулнине тĕшмĕртмен чăвашпа асăрханулларах пулма кирлине тавçăрса илеççĕ, унпа тачă çыхăну тытма та пăрахаççĕ. Çапла вара Германие тыткăна лекнĕ чăваш Библие чăвашла куçарас ĕçре тивĕçлĕ йĕр хăварайман.

* * *

Юлашкинчен çакна татăклăн каласа хăварар: 1997 çул вĕçленнĕ тĕле Сăваплă Çырусене тĕнчери 2197 чĕлхене куçарса пичетлесе кăларнă. Çав шутра пĕтĕм Библие йăлтах — 363 чĕлхепе, Çĕнĕ Сăмаха — 799 чĕлхепе тата уйрăм кĕнекисене 926 чĕлхепе кăларнă. Библи обществисен пĕрлешĕвĕн ертӳçисем шутланă тăрăх, Сăваплă Çырусене куçаракан тăлмачăсен ĕçĕ вĕççĕр-хĕрсĕр: мĕншĕн тесен лингвистсем палăртнă тăрăх, тĕнчере 6000 тĕрлĕ чĕлхепе калаçаççĕ (9).

Пирĕн вăхăтра тинех И.Я.Яковлевăн ĕçне малалла тăсакансем тупăнчĕç. Библи обществин Раççейри филиалĕн представителĕсем йĕркелесе тата ертсе пынипе Библие йăлтах чăвашла куçарса пĕтерчĕç. Ку сăваплă ĕçе пирĕн паллă çыравçăсем П.В.Афанасьев, Д.В.Гордеев, В.Г.Григорьев, Е.Н.Лисина, П.К.Львов пурнăçларĕç. Редакцилессипе çыхăннă йывăр çĕклеме П.К.Львовпа О.В.Таллерова хăйсем çине илме килĕшнĕ. Чăвашла Библие компьютерпа наборланă, хальхи вăхăтра ăна чиркӳ çыннисем пăхса тухса тӳрлетеççĕ. Çавна май вĕсем И.Я.Яковлев хывнă куçару традицийĕсенчен пĕр шит те пăрăнасшăн мар, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчи куçару комиссийĕ йышăннă терминсене çаплипех сыхласа хăварма ыйтаççĕ. Куçаруçăсем хăйсем те Яковлев ушкăнĕ куçарнă текста тĕпе хурса ĕçленине тата çав традицирен пăрăнас мар тесе ювелир пек асăрхануллă пулма тăрăшнине палăртаççĕ.

Ĕнтĕ Турă пулăшсан, 2000-мĕш çулсем тĕлне чăвашла тулли Библие алла илессе шанас килет. Халех мăнаçланма пултаратпăр: Раççейре пурăнакан вырăс мар халăхсен йышĕнче эпир, чăвашсем, пĕтĕм Библие тăван чĕлхепе вулама пултаракан пĕрремĕш халăх пулса тăтăмăр. Апла пулсан, И.Я.Яковлевăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ паянхи кун пурнăçа кĕрсе пырать.

Литература

1. Арапович Б. Перевод Библии на чувашский язык, сделанный И.Я.Яковлевым// Лик Чувашии. 1994. № 6. С. 125.

2. Краснов Н.Г. Выдающийся чувашский педагог-просветитель. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. С. 370-372.

3. Яковлев И.Я. Из переписки. Ч. 1. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1989. С.222.

4. ЧРПА. 207 ф., 1 оп., 378 ĕç. 2 л.

5. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. М.: Республика, 1997. С.276-277.

6. Краснов Н.Г. Асăннă кĕнеке. С.373-379.

7. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. С.276.

8. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. С. 596 — 597.

9. Благовест-инфо (еженед. изд–ие). 1998. Февр. № 6. С.4.

## 5 сыпӑк

# ПСАЛТИРЬ Е МУХТАВ ЮРРИСЕН КӖНЕКИ

Псалтирь кӗнеки — тӗнче литературин чи чаплӑ палӑкӗсенчен пӗри. Ку кӗнекене Библи чун-чӗри теҫҫӗ. Вӑл авалхи еврей халӑхӗн тарӑн ӑс-хакӑлне тата ҫӳллӗ шайри чаплӑ поэзине кӑтартса парать. Тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх, Библири пӗр кӗнеке те еврейсемпе христиансен пурнӑҫӗнче Псалтирь пек пысӑк вырӑн йышӑнман. Псаломсене чиркӳре кӗлӗ вуланӑ вӑхӑтра юрланӑ, вӗсем литургисен тӗп элеменчӗ пулса тӑнӑ. Хальхи вӑхӑтра та христиансен чиркӗвӗнчи пӗтӗмӗшле кӗлӗ псаломсенчен йӗркеленнӗ.

Псалтирь Библире Кивӗ Сӑмахӑн "кетубим" текен виҫҫӗмӗш пайне кӗрет, унта вӑл пӗрремӗш вырӑнта тӑрать. *"Кетубим"* — еврей сӑмахӗ, *"ҫырусем"* тени. Ҫырусен пуххинче мухтав юррисем (псаломсем) пӗрремӗш вырӑнта тӑраҫҫӗ. Ивритла вӗсем *"Сефер-техилим"* ятлӑ, *"мухтав кӗнеки"* *е* *"мухтав юррисем"* тени пулать ку. Иврит чӗлхинчен тӳрех куҫарсан, *"техилим"* — *"мухтавлани"* ("хваления"), пӗрреллӗ хисепри япала ячӗ *"техила(х̊)"* *"мухтав"* ("хвала, слава") тенине пӗлтерет. Ҫапла вара Псалтирь, пӗтӗмӗшле илсен, Турра чӗререн ӗненсе, ӑна савӑнса мухтакан гимн-псаломсен кӗнеки пулать. Ҫавӑнпа ӑна И.Я. Яковлев та чӑвашла "Мухтав юррисен кӗнеки" тесе куҫарнӑ.

Маллала ҫавӑн пекех *"псалом"* тата *"псалтирь"* сӑмахсем мӗне пӗлтерни, вӗсем ӑҫтан пулса кайни те интереслӗ. Славян-вырӑс сӑмахӗ *псалом* грек чӗлхинчен *psalmos* япала ятӗнчен пулса кайнӑ, *psalmos* сӑмах хӑй *psallo-* глаголтан пулнӑ. Унӑн пуҫламӑш пӗлтерӗшӗ — "туртас, татас, чӗпӗтес, татса илес". Каярахпа *psallo-* глаголӑн иккӗмӗшле пӗлтерӗшӗ аталаннӑ — "сӗртӗнес, суйлас (пӳрнепе хӗлӗхсене суйла-суйла сӗртӗнес) е хӗлӗхсене пӳрнепе ҫапса выляс". Малалла ҫак глагол ҫумне тата ҫӗнӗрен пӗлтерӗш хушӑннӑ: "юрлас (хӗлӗхлӗ инструмент каласа)". Ҫапла вара *psalmos* сӑмах уйрӑм пӗлтерӗше палӑртма пуҫланӑ —

“хӗлӗхлӗ инструмент сасси” е ”хӗлӗхлӗ музыка каласа юрлани” тенине пӗлтернӗ. Хӗлӗхлӗ инструмента грексем *psalterion* тенӗ, славян-вырӑс сӑмахӗ шӑпах ҫакӑнтан пулса кайнӑ (1).

Псалтерий ятлӑ инструмент пирки Греци классикӗсен (Аристотель, Плутарх), ҫавӑн пекех Секст Эмпирикӑн произведенийӗсенче пӗрре мар асӑннӑ, анчах вӑл тулашӗнчен пӑхсан мӗн евӗрлӗ пулни тата ӑна мӗнле туса хатӗрлени пирки никам та калама пӗлмест. Апла пулин те псаломсем хывса юрлакан патшана ялан тенӗ пекех е лира, е арфа, е вырӑс кӗсли евӗрлӗ хӗлӗхлӗ инструмент каласа ларнӑ пек ӳкерсе кӑтартаҫҫӗ.



Давид–патша, пророк тата псаломсем хывакан поэт – псалтерион (псалтирь) калать. Сылтӑм енче – мухтав юррисене ҫырмалли хут тӗрки

Лингвистикӑра сӑмах пӗлтерӗшӗсен аталанӑвне, пӗр евӗрлӗхне пула сӑмахсен пӗлтерӗшӗ улшӑннине кӑтартакан саккун пур. Ҫапла майпа музыка инструментне ҫеҫ мар, унпа каласа юрлакан юрӑсен пуххине те *псалтирь* теме пуҫланӑ. Еврейсен Сӑваплӑ ҫырӑвӗсене грекла куҫарнӑ тӑлмачӑ-сӑмахҫӑсем Турра мухтаса юрлакан гимнсен пуххине Псалтирь ят панӑ.

Кам тата хӑҫан ҫырнӑ-ши Псалтире? Псалтирьте пурӗ 150 псалом, вӗсем канонланисен шутне кӗреҫҫӗ, грекла тата

славянла Библири Мухтав юррисен кĕнеки 151 юрăран тăрать. Кашни псалома пĕр-пĕринчен уйăрса цифрăсемпе черетлесе палăртса тухнă. Вĕсен пуçламăшĕнче çырса палăртнă тăрăх, вĕсенчен çитмĕл виççĕшне Давид патша (пирĕн эрăчченхи 1056 çултан пуçласа 1016 çулччен патшара ларнă) çырнă. Сăвăласа хывнă псаломсенче вăл хăйĕн пурнăçĕнчи таран йĕр хăварнă паллă событисене кăтартса панă.

Давид ăсланă псаломсем çаксем: 3-31; 33-40; 50-64; 67-70; 85, 100, 102, 107-109; 121; 123; 130; 132; 138-144. Тата 1; 2; 32; 103; 137-мĕш псаломсене те вăлах çырнă теме пулать. Унăн кун-çулĕ тĕрлĕ енлĕ пулнă, çакна псаломсен хисепĕ йышли те аван çирĕплетет. Давид пурнăçĕн историйĕ пуриншĕн те паллă. Çапах та ун пирки кăштах çырса кăтартни вырăнлă пулĕ тетпĕр. Вăл, Иессей çемйинче çуралнăскер, хăйĕн пултарулăхĕпе паттăрлăхне кура, ахаль кĕтӳçĕрен еврейсен патшин коронине çĕнсе илнĕскер, кĕске вăхăтра халăх паттăрĕ пулса тăни такама та интереслентерет.

Çынсем хушшинче Давидăн ячĕ филистимсен ертӳçипе Голиафпа çапăçнă хыççăн анлăн сарăлнă. Пĕррехинче еврейсен тата филистимсен çарĕсем Соко ятлă тăрăхра тĕл пулнă, çывăхри сăрт-тусене йышăннă, анчах нихăшĕ те тӳремлĕхе анман. Мĕншĕн тесен унта çапăçсан, çĕнтерӳ пирки шухăшлама та май пулман. Филистимсен çарĕнчен Голиаф ятлă пĕр питĕ пысăк, вăйлă паттăр тухнă та еврейсенчен пĕрне хăйĕнпе куçа-куçăн тăрса çапăçма чĕне пуçланă. Еврейсен хушшинчен ăна хирĕç тухакан çын тупăнман. Вара Голиаф вĕсене 40 кун хушши мăшкăлланă. Турă ятне те хурланă. Давид çав вăхăтра, пиччĕшсен сывлăхне пĕлес тата апат-çимĕç парас тесе, çар тăракан çĕре пынă. Голиаф сăмахĕсене илтсен, вăл Саул патшаран хăйне çапăçăва кăларма ыйтнă. Патша ăна чарман. Давид чĕвве ямалли юплĕ патакпа Голиафа хирĕç чул ывăтнă та ăна тивертсе вĕлернĕ. Патша çавăншăн Давида çар пуçлăхĕ туса хунă тата хăйĕн хĕрне ăна качча панă. Каярахпа еврей халахĕ Давида Саулран та ытларах хисеплеме пуçланă, ăна юрăсенче. Мухтанă: “Саул пиншер тăшмана, Давид вара

тĕттĕме çĕнтерчĕ”,—тенĕ. Унăн чапĕ çулсерен ӳснĕçемĕн, вăл çапăçусенче яланах çĕнтернĕшĕн Саул кĕвĕçме пуçланă. Курайманлăхĕ ӳссе пынипе патша Давида йĕрлеме пикеннĕ, ăна вăрттăн вĕлерме шут тытнă. Çав сăлтавсене пула вăл Саулран тарса хăтăлнă. Еврей халăхĕ Давида ырă кăмăллă, çапăçура паттăр пулнăшăн, хăйне мăнна хуманшăн хытă юратнă.

Саул вилсен, патшана Давида суйланă, тепĕр хут йывăç çăвĕпе сĕрсе, Иудин йăхĕнчен тухнă çынсен патшине лартнă. Çакă еврейсемшĕн усăллă пулнă. Мĕншĕн тесен вĕсен 12 йăхĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕр пысăк патшалăх туса хунă. Турă Давида пăрахман, ăна пур ĕçĕнче те палăртса, пулăшса пынă. Çывăхри патшалăхсемпе вăрçнă чух Давид ялан çĕнтернĕ, Иевуйсенчен (суя тĕнлĕ халăхран) вăл Иерусалимпе Сион тăвне туртса илнĕ. Иерусалиме хăй пурăнакан пуç хула туса хунă. Вăл чăнкă тăрăллă чул ту çинче ларнă, ăна тăшман пырса перĕнеймен. Çапах та хăй вăхăтĕнче Давид çак хулана туртса илнĕ. Ăна аслăлатнă, кедр йывăçĕнчен патша çурчĕ туса лартнă, хула илемленсе кайнă.

Иерусалиме тутарса пĕтерсен, Давид унта Моисейăнни евĕрлĕ çĕнĕ кĕлĕ чатăрĕ туса лартнă. Закон Арчине те çавăнта куçарса лартма шухăш тытнă. Ăна вăл питĕ чаплă куçарнă. Малти Закон Арчине хӳхĕм урапа çине лартса çамрăк вăкăрсемпе турттарса пынă, ун хыçĕнчен патшапа халăх тĕрлĕ кĕвĕ каласа, Турă юррисем юрласа пынă. Пĕр тĕлте вăкăрсем сасартăк пĕр еннелле пăраннă та урапана тайăлтарса янă. Оза ятлă левит, Закон Арчи ан ӳктĕр тесе, ăна ярса тытнă та çавăнтах ӳксе вилнĕ. Çавна курсан Давид тĕлĕнсе кайнă. Вара Закон Арчине урапа çинчен антарса, Аведдар ятлă çын килне кӳртсе лартнă. Вăл Аведдар патĕнче виçĕ уйăх тăнă. Турă Аведдара пилленĕ: унăн пурăнăçĕ питĕ ăнса кайнă. Виçĕ уйăх иртсен, Давид Закон Арчине каллех куçарма тытăннă. Ун чухне вара ăна священниксем, левитсем хулпуççи çинче йăтса пынă, кашни улттă ярса пусмассерен Турра парне кӳнĕ. Çул тăрăх кĕлĕ юррисем юрласа пынă. Давид хăй те чунĕ савăннипе Закон

Арчи умĕнче ташласа пынă. Иерусалиме çитерсен, Ăна çĕнĕрен тунă Кĕлĕ Чатăрне кĕртсе лартнă.

Анчах та Давид патшара (40 çула яхăн) ларнă чух хурлăхлă самантсем те чылай пулнă. Вирсавияпа çылăха кĕни тата Урий вилни çемйери хутшăнусене синкерлĕх кӳнĕ. Çакă унăн ывăлĕсен Авессаломпа Адони пăлхавĕсенче вăйлах палăрнă.

Ытти псаломсене Давид патша ĕçне малалла туса пыракансем — хор пуçлăхĕсем е регентсем — поэт пултарулăхĕпе палăрса тăракан тата малашлăха пророк пек уççăн пĕлсе тăракан ăслă çынсем çырнă. Псаломсен пуçламăшĕнче чылайăшĕнче Корей ывăлĕсен, Асаф юрăçăн, унăн шăллĕн Еманăн, Ефан юрăçăн, Турă çынни Моисейĕн, Соломон патшан ячĕсене асăнни пур. Ку ĕнтĕ çак псаломсене асăннă çынсем çырнине пĕлтерет.

Соломон 71, 126 тата 131-мĕш псаломсен авторĕ. Вăл 71-мĕш псалома патша престолĕ çине ларсан, 126-мĕшне Храм туса пĕтерсен, 131-мĕш псалома Закон Арчине Кĕлĕ Чатăрĕнчен Храма куçарсан çырнă.

Акă, Асаф ячĕ 12 псаломра тĕл пулать. Вĕсем çаксем: 49, 72-82. Асаф левит Гирсон йăхĕнчен тухнă, Верехи ывăлĕ пулнă. Давид патшара ларнă чухнех пурăннă, çавăнпа та унăн мухтав юррисен пĕлтерĕшне чун-чĕререн хисеплесе, ăнланса йышăннă. Вăл мухтав юррисем хывакансен шкулне йĕркеленĕ, унта Давидăн хавхалануллă тата Турра мухтакан тĕн поэзийĕн традицийĕсене типтерлĕн упраса, ĕмĕртен ĕмĕре куçарса пынă.

Асаф Давида пĕтĕм чун-чĕререн юратнă. Çавăнпа вăл хăйĕн псаломсĕсене çырнă чух патшан кун-çулĕнчи пуллă пулăмсене шута илме тăрăшнă.

Еман, Кааф йăхĕнчен тухнăскер, 87-мĕш псалома, Ефан, Мерари несĕлĕн çынни, 88-мĕшне çырнă. Вĕсем иккĕшĕ те левитсем, Давид пурăннă вăхăтра унăн Кĕлĕ Чатăрĕнчи юрăçсем пулнă. Еврейсен Библийĕнче çӳлерех асăннă псаломсене çыракансене езрахитянсем тенĕ. Çакă пултаруллă авторсем, Давидпа Асаф пек, кĕнекеçĕсен йышĕнче çивĕч ăс-хакăлпа палăрса тăнă.

Корей ывăлĕсем 11 псалома, урăхла каласан, 41-48, 83, 84 тата 86-мĕш псаломсене çырнă.

Ытти 44 псалома (вĕсен шутне 65, 66, 90-99; 101, 104-106; 110-120; 122, 124, 125, 127-129; 133-136 тата 145-151-мĕшсем кĕреççĕ) паллă мар çыруçă-поэтсем ăсланă (2).

Псаломсен содержанийĕ. Ун пирки çакна калама пулать: тĕпрен илсен, мухтав юррисенче пророксен чун-чĕрине тыткăна илнĕ хăватлă туйăмсен кĕрлевĕ янăраса тăрать. Вăл — Турăпа калаçнă чухнехи хĕпĕртӳ, Турра савăнса мухтани, ун çине шанса тăни, пурнăçри йывăр, хурлăхлă кунсенче унран пулăшу ыйтни, тăшмансене курайманни, çылăха кĕнĕ çын ӳкĕнсе хӳхлени, Турра ӳкĕтлени, тыткăнра нуша куракан еврей халăхĕшĕн хурланни, Иерусалима таврăнасса шанни тата иккĕмĕш хут Çĕнĕ Çурт (Иерусалим храмне) тунă чухнехи савăнăç (3).

Псалтирь çын ăшĕнчи чун туйăмĕсене тарăн туйса илме май парать. Псаломсене вуланă май этем чунĕ Турăшăн мĕн тери тунсăхланине, ăна ĕненсе, ăна хисеплесе чиркӳре çеç мар, хăй ăçта пулнă, çав тĕлте — пуш хирте, сăрт-тусем çинче, тусен-сăртсен хăвăлĕнче, шыв хĕрринче — кĕл тунине куратпăр. Псаломсем ĕненекен çыннăн чунĕ-чĕмĕ мĕнле улшăнса тăнине, ăс-тăн ылмашнине, чун хăватне сăмах витĕр тĕлĕнмелле илемлĕ кăтартса параççĕ.

Ӳкĕнес килет-и, чунна уçса çылăха каçарттарасшăн-и, хуйхă-суйхă пусмăрлассшăн-и, сана хăвалаççĕ-и е хирĕç тăрса вăрттăн кавар тăваççĕ-и, канăçна çухататăн-и е сăлтавсăрах шар тӳсетĕн-и, ырă пулассишĕн малалла ăнтăлатăн-и, хăвăн çулна пӳлекен тăшмана тĕл пулатăн-и — çак туйăмсем çинчен каланисем пурте пур псаломсенче. Псалтирь вĕреннĕ çынсен килĕнче пушă вăхăтра вуламалли, сĕтел çинчен кайман кĕнеке пулнă. Çавăнпа пĕрлех çулçӳревçĕсем те ăна пĕрле илсе çӳреме тăрăшнă.

Псалтирь ултă ĕмĕр хушши çырăннă, унта еврей халăхĕн историйĕнчи калама çук пысăк тапхăра кăтартса панă. Çавăнпа та ăна ĕмĕрсен ĕмĕрхи кĕнеки теме пулать: вичĕ пин çул ĕнтĕ вăл нихçан сӳнми пурнăçпа пурăнать, çĕр çинчи мĕн пур христиансене — Хĕвел тухăç тата Хĕвел

анăç Чиркĕвĕн çыннисене — ăс-хакăл, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен тивĕçтерсе тăрать. Кĕскен каласан "Псалтирь" вăл ырă пулма ӳкĕтлесе çырнă чун пуянлăхĕн кĕнеки.

Псаломсем этемĕн чун туйăмĕсене ĕненмелле палăртнине пула вĕсене пĕтĕм тĕнчипех пысăк хурса хаклаççĕ. Библие хăйне ытлашшиех хакламан вăхăтсенче те псаломсем литургисемпе чиркӳ юррисенче сыхланса юлнă. Телейсĕр çынсемпе хĕн куракансен ĕненĕвне пур чухне те шăпах псаломсем вăй кӳрсе тăнă. Хальхи вăхăтра "Псалтире" тӳрĕ кăмăллă, Турра чунтан ĕненекенсем хушшинче пăхмасăр калама пĕлекенсене курма пулать. Ăна ĕлĕкрен килекен йăлана хисеплесе, çын вилсен хĕрĕх кун хушши, е 6, 9 тата 40 кун иртсен вулаççĕ. Çак сăлтава пула Псалтирь Авал хунă сăмахăн Çĕнĕ Сăмахпа пĕрле пичетлесе кăларакан пĕртен пĕр кĕнеки пулса тăрать.

Псаломсене чиркӳре ирхи тата каçхи кĕлĕсем вăхăтĕнче вулаççĕ, эрне хушшинче — псаломсене йăлтах, Аслă Типĕре эрнере икĕ хутчен те вуласа тухаççĕ. Кĕлĕсем вăхăтĕнче вулама псаломсене Часословпа ("сехет кĕнекипе") пĕрле пичетлесе кăларнă. Славянла "сехет кĕнекипе" псаломсен пуххине чи малтан Кирилпа Мефодий куçарнă (4).

И.Я.Яковлев Псалтирьти уйрăм юрă-кĕлĕсене куçару ĕçне пикенсенех чăвашла куçарса хатĕрленĕ. "Вĕрентӳллĕ псаломсене" вăл чăваш шкулĕсенче усă курмалли кĕнекесенче те çырса панă. Псалтирь кĕнекине вулакан, псаломсене пĕлекен çын кирек ăçта та хутла пĕлекен çын — "кĕнеке çынни", урăхла каласан, кирек мĕнле кĕнекене те вулама пултаракан çын шутланнă. Çавăнпа та И.Я.Яковлев чăвашсене Псалтире хăвăртрах хăйсен тăван чĕлхипе тыттарасчĕ тесе çуннă. Вăтăр çул ытла куçарнă пирĕн Вĕрентекенĕмĕр "Мухтав юррисен кĕнекине". Ăна вăл Моисейĕн 5 кĕнекипе пĕрле 1897 çулччено куçарса пĕтернĕ. 1898 çулта псаломсене чăвашсем мĕнлерех ăнланса йышăннине сăнаса пăхас шутпа сахал кăна пичетлесе кăларнă. Çакна И.Я.Яковлев 1898 çулхи чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕнче Пелепей уесĕнчи Пишпӳлек пачăшки А.П.Петров патне янă çыру та çирĕплетсе парать: "Сире

псаломсен виçĕ листине ярса паратăп, тăваттăмĕш листине çак кунсенче çапса пĕтереççĕ. Тен, Эсир вĕсене килĕрте пăхса тухма май тупайăр. Чăвашла куçарнă псаломсене халлĕхе, тĕрлĕ сăлтавсене пула, яланхи йĕркепе пичетлесе кăларман-ха. Псаломсен 100 экземплярпа пичетлеттернĕ çак куçарăвне халăх хушшине сарма хатĕрлемен...” (5). Д.Ф.Филимонов тата П.В.Васильев патне янă çырусенче те Яковлев–куçаруçă псаломсене пăхса тухса тӳрлетмелли çинченех калать. Вырăнти чиркӳçĕсем тата Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухса кайнă учительсемпе псаломщиксем ун патне хăйсен сĕнĕвĕсене, тӳрлетĕвĕсене ярса панă. Вĕсене пăхса тухса тишкернĕ хыççăн И.Я.Яковлев псаломсене тата тепĕр хутчен кăларма тĕв тытать, Хусанти Куçару комиссийĕ ирĕк панă хыççăн Библи обществинчен укçан пулăшу ыйтса пăхать. 1898 çул вĕçĕнче çак обществăн Раççейри комитечĕ Хусанти Миссионер обществине ятарласа “Яковлев инспектор куçарнă Псалтирьшĕн” тесе 1000 тенкĕ ярса парать. Çапла вара 1900 çулта тата 1901 çулта тӳрлетсе якатнă “Мухтав юррисен кĕнекине” И.Я.Яковлев икĕ хутчен çаптарса кăларать.

“Манăн пурăнăç” кĕнекинче И.Я.Яковлев Псалтире куçарни пирки çапла аса илет: “Эпĕ Псалтире чăвашла куçартăм. Ăна эпĕ хамах нумай хутчен тӳрлетсе якатрăм. Çавна май мана Федор Данилов (чăваш, ĕçме юратаканскер) тата Константин Иванов (чăваш, поэт. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренетчĕ, анчах курса пĕтереймерĕ) пулăшрĕç. Псалтирĕн юлашки редакцине эпĕ Иванов пулăшнипе питĕ аван хатĕрлесе çитертĕм.

Пĕтĕмĕшле илсен, эпĕ куçару ĕçне хутшăннине никам та хирĕçлеме пултараймасть, уйрăмах Çĕнĕ Сăмахпа Псалтире куçарнине” (6).

Чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Иванов ытти ăста тăлмачăсемпе пĕрле куçару ĕçне активлă хутшăнни çинчен маларах каласа кăтартрăмăр. Мускавра, Раççей патшалăх библиотекинче И.Я.Яковлевăн алçырусен фондĕнче чăвашла Библи тексчĕн машинăпа çаптарнă экземплярĕ упранать, унта çапла паллă туни пур: “Ку корректурăна Константин Иванов вуланă“. И.Я.Яковлев хăй аллипе: “Юлашки

корректура. Константин Иванов пăхса тухнă“ тесе çырса хунă.

1911 çулта Псалтирь е Мухтав юррисен кĕнекине Чĕмпĕрте Библин Çĕнĕ Сăмах кĕнекипе пĕрле пичетлесе кăларнă.

Чăвашла Псалтире е Мухтав юррисен кĕнекине алла илсе вулама ларнă çынсене ăнланмалларах пултăр тесе çакна пĕлтерсе хăварни те ытлашши пулмĕ. Маларах псаломсене цифрăсемпе черетлесе тухни çинчен асăннăччĕ. Унсăр пуçне кашни псалом умĕнче çырса панине шута илес пулсан, псаломсене пилĕк ушкăна уйăрма пулать иккен:

1. Юрăсен пĕр пек енлĕхĕ: а) “кĕлĕсем” (16, 85, 89, 101 псаломсем) — вĕсенче тархасланă кăмăл-туйăм ытларах сисĕнет; ă) “мухтав юррисем” (94, 144); б) “вĕрентӳллĕ псаломсем” (31, 41, 87) — вĕсенче авторсем пурнăçри хăйсене хумхантаракан çивĕч ыйтусене хускатаççĕ.

2. Мĕнле усă курмаллине çырни, сăмахран: а) “Псалом” тени Псалтирьте тăтăшах тĕл пулать. Çапла асăрхаттарни асăннă произведение псалтирь (хĕлĕхлĕ инструмент) каласа юрламаллине пĕлтерет; ă) “Юрă“ тени псалома юрламаллине асăрхаттарать; б) “Хĕлĕх хурса каламаллисемпе” (4, 53 тата ыттисем те) музыка инструменчĕсемпе усă курмаллине калать; в) “Сакăр хĕлĕхлипе” (6, 11) октавăпа, çинçе сасăпа юрламаллине пĕлтерет; г) “Гефри кĕвĕ каламаллипе” (8, 80, 83) — ахăртнех Давид “цитра” ятлă, ещĕк евĕрлĕ музыка инструментне çапла калать. Унпа филистимсен Геф хулинче усă курнă; д) “Шошан теекен кĕвĕ каламаллипе” (44 пс.) калăпăшĕпе лили чечек евĕрлĕ музыка инструменчĕ; е) “Лабен вилсен” (9 пс.) Ахитофел, саккунсем кăлараканăн, Давидăн чи çывăх тусĕ вилсен çырнă; ж) “Ан пĕтерсем” (56, 57, 58,74 пс.), “Михалафпа юрламашкăн” (87), “Шурăмпуç килнĕ чухне” (21), “Аякра сасă кăлармасăр тăракан кăвакарчăн çинчен” (55) тенисем тĕл пулаççĕ. Çакăн пек çырнисем псаломсене асăннă сăмахсенчен вулама пуçламаллине пĕлтереççĕ.

3. Псаломсен авторĕсене кăтартни, тĕслĕхрен: “Давид псаломĕ”, “Моисей кĕлли” тата ытти те “Юрлакан ушкăн пуçне” тесе çырни вара псалома камăн юрламаллине кăтартать.

4. Псалома хăш вăхăтра çырнине пĕлтерни. Сăмахран, 3-мĕш псаломра: “Хăйĕн ывăлĕнчен Авессаломран тарнă чухнехи”, 29-мĕшĕнче “Кил-çуртне çĕнетнĕ чухнехи юрри” тенĕ.

5. Псаломсене хăçан, мĕнле вырăнта вуламаллине кăтартни. Тĕслĕхрен: 91-мĕш псалома “Шăматкун юрламалли юрă“, 28-мĕшне “Чатăр праçникне irттернĕ чух” тенĕ. 119 - 133-мĕш псаломсен айĕнче “Улăхнă чухнехи юрă“ тесе палăртнă. Левитсем вĕсене храм картлашкисем çине тăрса, священниксем Силоам çăлкуçĕнчен шыв илнĕ вăхăтра юрланă. Тата çавăн пек “улăхнă чухнехи” тесе ят панине çапла та ăнлантараççĕ: арçынсен çулталăкне виçĕ хутчен Иерусалиме пырса каймалла пулнă, асăннă псаломсене вĕсем çул çинче Иерусалим хули патне хăпарса çитнĕ чухне юрлама пултарнă (7).

Литература

1. Верещагин Е. Сефер Техилим и Псалтырь Давида, пророка и царя. // Азия и Африка сегодня. 1994. № 1. С. 56

2. Чун кĕнеки. Пĕрремĕш кăларăм. Шупашкар. 1995. Умĕн калани. 6-9 с.

3. Бируков И.Н., Бирукова Е.Н. Предисловие к переводу Псалтири// Лит. учеба. 1994. Кн. 1. С. 3–4

4. Христианство: Энцикл. словарь: В 3 т. М., 1995. Т. 2, С. 415-416 .

5. ЧР ПА. 207 ф., 1 оп., 691 ĕç, 5 л.

6. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. М.:Республика, 1997. 275 с.

7. Краткий библейский словарь. Изд–во “Благая весть”. С. 629.

## 6 сыпăк

# ЧĔМПĔРТИ ЧĂВАШ ШКУЛĔНЧИ ТĂЛМАЧĂСЕМ

И.Я.Яковлев пĕтĕм Библие чăвашла куçарса кăларма ĕмĕтленнине тата çавăншăн пуринчен ытла тăрăшнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Çавна май вăл ку ĕçе пĕччен туманни те паллă. Унпа пĕрле ĕçленĕ тăлмачăсем камсем пулни пире пурсăмăра та интереслентерет.

Сăваплă Çырусене чăвашла куçарас ĕçе 22-ри студент 1870 çултах пуçăннă. "Куçару ĕçне эпĕ хам тĕллĕн пикентĕм тесе калаймастăп. Малтанласа мана Н.И.Ильминский хĕтĕртрĕ, чăваш, вырăс тата Европа чĕлхисем хушшинчи хутшăнусене уçса пачĕ, вак халăхсен чĕлхисемпе урăх чĕлхесен уйрăмлăхĕсене туйса илме, вĕсен фонетикине ăнланма вĕрентрĕ", — тет вăл хăйĕн аса илĕвĕсенче (1).

Университетра вĕреннĕ хушăра вăл Н.И.Ильминский кăтартса пынипе чăвашсем валли букварь хатĕрлет тата Сăваплă историе, 4 евангелие, православи христианство тĕнне ĕненсе тăма вĕрентсе калакан Ӳкĕтсене, Аслă чиркӳ праçникĕсене, Мăн кун кĕллисене, св. Тихон Задонский ӳкĕчĕсене куçарать. Куçару ĕçĕ калама çук тертлĕ пулнине туйса илет Иван Яковлев. Малтан ăна Хусанти крешĕн тутарсен шкулĕнче вĕреннĕ Сергей Тимрясовпа Игнатий Иванов пулăшса, хăнăхтарса пыраççĕ. Ку ачасем чăвашла та, тутарла та аван пĕлнĕ, çавăнпа вĕсем Ильминский сĕннипе тĕн кĕнекисене тутарларан чăвашла куçарнă. Анчах Иван Яковлев хăй вырăсла лайăхрах пĕлнипе вырăсла текстсене куçарма килĕшет. Çавăнпа пĕрлех Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче юлнă Алексей Рекеева хăйпе пĕрле ĕçлеттерме пикенет.

Алексей Васильевич Рекеев 1848 çулта Кăнна Кушкинче çуралнă, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕрремĕш вĕренекенĕ, 1872 çулта Чĕмпĕр уесĕн училищи çумĕнчи педкурсран вĕренсе тухнă хыççăн 1872-1874 çулсенче ялти учительте ĕçленĕ, 1874-1881 — çулсенче Хусанти вак халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинари çумĕнчи пуçламăш чăваш шкулĕн учителĕ, 1881-1916 çулсенче Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Теччĕ уесĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕн пачăшкинче ĕçлесе пурăннă.



А.В. Рекеев

А.В.Рекеев Иван Яковлевичшăн тăванран та тăван пулнă, пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех чи шанчăклă юлташĕ пулса тăнă. Куçару ĕçне те вăл хавас тытăнать, пĕр ўркенмесĕр, хастар ĕçлет, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче асли вырăнне юлнăскер, ытти вĕренекенсене те явăçтарать. И.Я.Яковлев вĕсене мĕнле йĕркепе ĕçлемеллине тăтăш яракан çырусемпе вĕрентсе тăрать: "Арçын ачасене çăмăлтарах статьясене куçарма хистесех тăр, çавна май эсĕ ху е Гаврила çак ĕçе хăвăр тĕрĕслесе йĕркелесе тăрăр. Тĕп-тĕрĕс, пĕр сăмахне сиктермесĕр куçармалла, шухăшĕ те тĕрĕс пултăр. Çапла тусан кăна вĕсем вырăсла тата чăвашла лайăх вĕренсе çитеççĕ. Чи пахи вара — çапла тăтăш чăн хастарлăхпа тăрăшсан пирĕн каярахпа чаплăран та чаплă куçаруçăсем пулĕçĕ",— çырнă вăл А.Рекеев патне (2).

Пирвайхи тапхăрти куçарусене пурне те И.Яковлев сĕннипе А.Рекеев алли витĕр кăларнă. "Пирĕн куçарусем çинче урăх никамăн ятне те мар, санăн ятна çеç сыхласа хăварасчĕ. Çавăнпа та вăхăту сахал пулин те ĕлкĕрме тăрăш тата ху куçару ĕçĕпе ларни çинчен уллахра янраса ан çўре, эп çак ĕçе тăвватăп тесе, манăн çавăнпа вăхăт çитмест,

эп ҫавӑнпа ӗлкӗрейместӗп тесе никама та ан кала", — ҫырнӑ вӑл тепринче.

Хӑй Хусан университетӗнчен вӗренсе тухнӑ ҫӗре И.Я.Яковлев куҫару ӗҫне малашне тата вӑйлӑрах йӗркелесе ярас тӗллевпе А.В.Рекеева Хусанти Учительсем хатӗрлекен семинари ҫумӗнчи чӑваш шкулӗн учителӗ пулма сӗнет. "Учительсен семинарийӗ ҫумӗнчи чӑваш шкулӗ мӗнпур вырӑнти е кӗпӗрнери чӑвашсене хутла вӗрентсе ҫутта кӑларас енӗпе калама ҫук пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулма пултарать. Ҫавӑнпа та ҫак пысӑк вырӑна санӑн кирек мӗнле пулсан та йышӑнасах пулать. Уйрӑмах халӗ, хамӑр ӗҫе пуҫланӑ чухне кирлӗ ҫакӑ. Енчен те эсӗ ку вырӑнта виҫ-тӑватӑ ҫул пулсан тата хамӑр шкулта (Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче. — *И.М.*) вӗренекенсене ху ертсе пынипе вӗрентме тытӑнсан, вӗсем те майӗпен чӑваш ачисене вӗрентме хӑнӑхса пыраҫҫӗ, ҫапла пирӗн ӗҫӗмӗр тарӑн тымар ярӗ тата ҫирӗп ура ҫине тӑрӗ. Ун чухне эсӗ Чӗмпӗрти шкула та таврӑнма пултаратӑн, Хусанти шкулта вара хамӑр вӗренекенсенчен хӑшӗ те пулин ӗҫе кӗрӗ. Тепӗр виҫ-тӑватӑ ҫултан пирӗн ҫынсем пулаҫҫӗ-ха, халь кӑна ҫук. Шухӑшласа пӑх-халӗ, енчен те ҫак вырӑна Митрофан Димитриев ларсан, мӗн пулса тухма пултарать? (Митрофан Димитриев Н.И.Золотницкипе пӗрле ӗҫленӗ, хӑй вӑхӑтӗнче вӑл Золотницкий хыҫҫӑн кайса, И.Я.Яковлев ӗҫне ним вырӑн-не те хурасшӑн пулман. — *И.М.*). Вӑл пирӗн кӗнекесене вуламан та, вулама та пӗлмест, ҫийӗнчен тата вуласшӑн та



И.Я. Яковлевӑн пирвайхи вӗренекенӗсенчен пӗри С.Н. Тимрясов куҫарусӑ

мар-ха! Шухăшласа пăх-халĕ тата, çак шкулта пирĕн кĕнекесемпе мар, урăххисемпе вĕренте пуçласан! Паллах, Митрофан Димитриев халĕ çак вырăна лекес тесе Николай Иванович (Ильминский. — *И.М.*) умĕнче ытлашшипех йăпăлтатать, мĕншĕн тесен кунта шалăвĕ 600 тенкĕ, вăл çак укçаран ытла нимех те тăвас çук, урăхла каласан, ĕç тăвас, чăвашсене усă кӳрес тесе тăрăшмĕ. Тата çак Митрофан Димитриев хăй те нумаях пĕлейменнипе ытти чăвашсене те, сăмахран пирĕннисене, нимех те вĕрентеймĕ; чăвашсене вĕрентес ĕçре вăл çирĕп çул-йĕр тытса пыма пултараймасть, анчах, ман шутпа, ыттисем тунине е халĕ тăвакан ĕçе пăсма пултарать. Акă мĕн хăрушă, савнă Алексей! Сана Хусанти учительсен семинарийĕ çумĕнчи чăваш шкулĕн учителĕ пулма лартас ĕмĕтĕн тепĕр сăлтавĕ те пур. Хусанта малалла вĕренсе ăс пухма пит те лайăх условисем пур. Кунта кĕнекесем те, çынсем те çителĕклех, Хусан — ял мар. Юлашкинчен тата Хусанти пурăнăç хăй, Николай Иванович Ильминскипе, семинари учителĕсемпе тата ытти çынсемпе тăтăш хутшăнса пурăнни сана малалла аталанма нумай пулăшĕ. Эсĕ кунта ытлашши нумай тертленмесĕрех виç-тăвата çул хушшинче Сăваплă Çырусем енĕпе кирлĕ пĕлӳ пухăн, ку чăвашла куçарусем тăвас ĕçре уйрăмах кирлĕ. Санăн кунта, Хусанта, çирĕп ура çине тăрса ятлă çын пулма тăрăшмалла; пĕр сăмахпа, манăн сана чăваш ĕçĕн ертӳçи тăвас килет. Эпĕ хам курсран вĕренсе тухсан икĕ çуллăха Петербурга тата ют çĕршыва кайма ĕмĕтленетĕп. Çав вăхăтра кунта эсĕ те пулмасан пирĕн ĕç сӳнсе ларма пултарать",— çырнă И.Я.Яковлев хăйĕн пĕртен-пĕр шанчăклă юлташĕ патне (3).

А.В.Рекеев Хусанти семинарире ĕçленĕ хушăра ун патĕнче С.Н.Тимрясов, И.С.Бюргановский, Г.Е.Вася, Ф.Д.Данилов, П.В.Васильев, А.П.Петров, Н.С.Сидоров, П.Ф.Скворцов, А.М.Соколов тата ытти нумай чăваш вĕренсе тухнă. Хушаматран асăннисем пурте тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене чăвашла куçарас ĕçе семинарире

вĕреннĕ чухнех хăнăхса пынă, каярахпа та ку тĕлĕшпе пĕр ӳркенмесĕр тăрăшнă.

Малтанласа Иван Яковлевич Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи пирвайхи вĕренекенсенчен ытларахăшне çак ĕçе явăçтарса пăхнă, вĕсен чĕлхе пĕлӳлĕхне тĕрĕсленĕ. Çавна май вăл Илья Савельевич Бюргановскин, Федор Данилович Даниловăн тата Клементий Макарович Макаровăн чăвашла çырнă ĕçĕсем ăнăçлă пулса тухнăшăн савăннă, ку ачасем уйрăмах хастар та тимлĕ ĕçленине тулли кăмăлтан палăртнă. И.Я.Яковлев пулăшнипе вĕсем каярахпа малалла та вĕреннĕ, пупа тухнă тата ĕмĕр тăршшĕпех хăйсен вĕрентекенĕпе çыхăну татман. Вĕсем çинчен кĕскен те пулин уйрăммăн каласа хăварар.

И.С.Бюргановский 1877 çулта Хусанти вак халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарие пĕтернĕ, чылай ялта учитель пулса, каярахпа пачăшкăра ĕçленĕ.

К.М.Макаров 1873 çултанпа чăваш, вырăс тата ирçе ялĕсенче учительте тăрăшнă, христианла тĕн кĕнекисене куçарассинччен пĕр самантлăха та пăрăнман. Çакăншăн ăна Иван Яковлевич пур енлĕн пулăшса тăнă, каярахпа вăл сĕннипех К.М.Макарова пуп сумне кĕртнĕ, çапла вара Климентий атте Чĕмпĕр чăваш шкулне пĕтернисенчен чи пирвай Турăран тивлет илнĕ, чăвашран тухнă пĕрремĕш чиркӳçĕ пулса тăнă. Акă мĕнле аса илет çак самантсене И.Я.Яковлев хăйĕн кĕнекинче:

“1885 çулта Хусанта Атăлпа Кама тăрăхĕнчи архиерейсен уйрăм съездне ирттерчĕç, унта К.П.Победоносцевпа В.К.Саблер та пулчĕç. Тĕне кĕртнĕ вак халăхсене, уйрăмах мăсăльман тĕне куçакан халăхсене православирех сыхласа хăварассине çирĕплетес ыйтăва пăхса тухрĕç. Ку съездра эпĕ те пултăм. Хусан архиепископĕ Палладий ертсе пычĕ. Уйрăм ыйтусемпе çыхăннă пĕчĕк канашлусене Н.И.Ильминский хваттерĕнчех сӳтсе яврĕç. Ильминский çине тăрсах чăвашсем пурăнакан ялсенчи чиркӳсене чăваш пупĕсене лартма кирлине

ёнентерме тăрăшрĕ. Варсонофий архиепископ, Ильминский шухăшĕпе йăлтах килĕшсе, ун майлă пулчĕ. Çакăнта тӳрех Чĕмпĕр уесĕнчи Улхаш ялне пĕрремĕш хут чăвашран тухнă пупа Климент Макарова çирĕплетрĕ. Çакă вара Чĕмпĕр епархийĕнчи вырăс священникĕсене тарăхтармаллипех тарăхтарнă, мĕншĕн тесен чăвашран тухнă пупсем хуларан аякри ялсенче вĕсен вырăнĕсене йышăна пуçланă-çке-ха. Çавăнпа Макарова сăлтавсăрах тапăнма, унăн таса ятне варалама пуçларĕç"(4). Макаровăн таса ятне Иван Яковлевич Варсонофий архиепископ ыйтнипе Çăлаканăн турăшĕ умĕнче сăхсăхса тупа тунипе çех сыхласа хăварма пултарнă. Каярахпа Чĕмпĕр архиепископĕ тата темиçе чăваша ял прихучĕсене пупа лартнă. Çавна май пурне те — И.Я.Яковлевпа канашласа, мĕншĕн тесен вĕсем Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнăскерсем пулнă. Варсонофий архиепископ тепĕр чухне чăвашсене ăса вĕрентекенпе шӳтлесе те илкеленĕ: "Иван Яковлевич, архиерей эпĕ мар, эсир теççĕ. Мĕн пурне эпĕ мар, эсир тăватăр имĕш..."— тенĕ.

Хамăр енчен çапла çеç хушса калама пултаратпăр: паллах, пупа тухиччен вĕреннĕ чăвашсен пурин те тĕн кĕнекисене чăвашла куçарас ĕçре сахал мар пиçĕхме тивнĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче куçару ĕçĕ çирĕп йĕркене кĕрсе ура çине тăма пуçланă тапхăрта И.Я. Яковлевпа юнашар ĕçленĕ ăста тăлмачăсенчен пĕри Андрей Петров пулнă.

Андрей Петрович Петров (Туринге) (1858 — 1913) Етĕрне уесĕнчи Сăкăт прихутне кĕрекен чăваш ялĕнче Мăн Явăшра çуралса ӳснĕ, çамрăклах П.Д.Миловидов протоиерейĕн регент шкулне вĕренме кĕнĕ, темиçе çул хушши унăн çемйинчех пурăннă, чиркӳ юррисене пит аван юрлама вĕреннĕ. 1874 çулта, 16 тултарсан, вăл Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарие вĕренме кĕрет, унта та чиркӳ юррисене юрлас енĕпе малалла пĕлӳ пухать, çавна май ку тĕлĕшпе пысăк пултарулăх кăтартать. Унсăр пуçне

Н.И.Ильминский тата А.В.Рекеев сӗннипе куҫару ӗҫне хутшӑнса чӑваш чӗлхи тата ытти чӗлхесем енӗпе ӑста пулнине кӑтартса парать. 1877 ҫулта Андрей Петров Хусанти семинари курсне пӗтерсен Чӗмпӗрти тӗп чӑваш шкулне чиркӳ юррисене юрлама вӗрентекен учитель тата арҫын шкулӗпе хӗрсен уйрӑмӗн кӗҫӗн класӗсенче Турӑ Саккунне вӗрентекен пулса ӗҫлеме тытӑнать. 1885 ҫулта чӑваш шкулӗ ҫумӗнче чиркӳ уҫӑлсан, ӑна пӑхса тӑракан священник пулса тӑрать. Ун чухне чиркӳ ӗҫне туса пыракан пупӑн, Н.И.Ильминский сӗннипе, Турӑ Саккунне вӗрентнисӗр пуҫне тата тӗн кӗнекисене чӑвашла куҫарас енӗпе ҫанна тавӑрса ӗҫлемелле пулнӑ. Ҫакӑншӑн тата чиркӳре службӑсем ирттернӗшӗн Православи миссионер обществи ҫулталӑкне 600 тенкӗ уйӑрса тӑнӑ.

1889 ҫулта Ӗпхӳ епархийӗнчи Пелепей уесӗнчи Пишпӳлек ялне пачӑшкӑ пулса ӗҫлеме тухса кайиччен, тӑватӑ ҫул хушши, хӑйӗн штатпа пӑхнӑ ӗҫӗсене тунипе пӗрлех, пуҫне ҫӗклемесӗр тенӗ пек, тӗн кӗнекисене чӑвашла куҫарас енӗпе тӑрӑшать. А.П.Петров яланах нумай пӗлесшӗн ҫуннипе, ӗҫе юратнипе, тӗлӗнмелле тӑрӑшулӑхӗпе шкулта ӗҫлекен ытти юлташӗсене те хавхалантарса пынӑ. Ҫакӑншӑн ӑна Иван Яковлевич та чунтан юратнӑ. Каярахпа А.П.Петров хӑйӗнчен аякра чухне те унпа ҫыхӑну татӑлман, И.Я.Яковлев унӑн опычӗпе, тӑлмачӑ ӑсталӑхӗпе туллин усӑ курма тӑрӑшнӑ: ҫамрӑк тӑлмачӑсем хатӗрленӗ куҫарусене пӑхса тухса редакцилеме ун патне яра-яра панӑ. Май пур чухне Чӗмпӗре чӗнсе илсе хӑй те унпа юнашар ларса ӗҫлеме юратнӑ.

Ҫак сӑмахӑма ҫирӗплетсе манӑн И.Я.Яковлев 1898 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 8-мӗшӗнче А.П.Петров патне янӑ ҫырури йӗркесемпе паллаштарас килет. Ун чухне Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи ҫӗнетсе аслӑлатнӑ чиркӗве тасатса сӑвапланӑ (освящение) ятпа ирттернӗ савӑнӑҫлӑ мероприятие шкултан вӗренсе тухнӑ паллӑ ҫынсем пурте пуҫтарӑннӑ. Иван Яковлевич А.П.Петров аттене те Ҫветтуй

Сывлăш апостолсем çине аннă ятпа уçнă чиркĕве сăвапланă çĕре килме йыхрав ярать. Шухăшĕ унăн ялан пĕр ыйту тавра пулни ку çырура та курăнать: "Сире Чĕмпĕрте пĕр виçĕ эрне, тен, ытларах та хăнара пурăнтарас килет. Эсир кунта пурăннă вăхăтра нумаях пулмасть çаптарнă кĕлĕ ёнекипе Часослова иксĕмĕр пĕрле пăхса тухса тӳрлетесчĕ, эпĕ вĕсене малтан сире пăхса тухмашкăн ярса панăччĕ. Çавăн пекех çĕнĕрен 100 экземпляр кăларнă Псалтире те, хăвăр 1888 çулта куçарнă Октоиха та тепĕр хут тӳрлетсе тухасчĕ. Акă мĕнлерех тĕллевсем кунта, çавăнпа та сире кунта ытларах пурăнтарас килет.

Кĕлĕ кĕнекипе Часослова Эсир пăхса тухрăр та пулĕ ёнтĕ, çавăнпа ăна та, кăна та — тӳрлетнĕ экземплярсене — хăвăнпа пĕрле илсе килме тархасласа ыйтатăп. Кĕлĕ кĕнекин нумай пулмасть çаптарса кăларнă, эпĕ Сире ярса панă экземплярне те — пирĕн преподаватель Маркел Петрович тӳрлетнĕ экземпляра — илме ан манăр (М.П.Петров, Кăнна Кушки чăвашĕ. 1890-1895 çç. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Куçару ĕçне хутшăнса тимлĕх кăтартнипех шкул инспекторĕ ăна чăваш шкулĕнче юрă-музыка урокĕсене ертсе пыма кĕртнĕ. Иван Яковлевич çумĕнче вăл 1899 çулччен, института вĕренме кĕричченех, харсăр ĕçлесе пурăннă.— *И.М.*)

Ёпхӳ Владыки ирĕк памасан пирĕн патăмăра килсе çӳреме Сирĕн май çук пулĕ тесе шутлатăп, çавăнпа та çак йыхравпа пĕрлех çӳлерех асăннă тĕллевпе ĕçлемешкĕн Сире пĕрер уйăхлăх отпуск пама ӳкĕтлесе Преосвященнăй Иустин патне те çыру çырса яратăп. Паллах, Эсир çакна хăвăр та тума пултаратăр-халĕ, анчах ман ыйту та ытлашши пулмĕ тесе шутлатăп.



Маркел Петрович Петров

Малтанхи чăвашла кăларăмсене тӳрлетсе çĕнĕрен çаптарни тата кĕлĕ ирттермелли ытти кĕнекесемпе Сăваплă Çырусен кĕнекисене çĕнĕрен куçарса пичете хатĕрлени хамăрăн тăван йăха — чăвашсене — çутта кăларас тĕллевпе тăвакан сăваплă ĕçе малалла та ăнăçлă туса пымашкăн уйрăмах кирлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Сире, унччен хампа пĕрле ĕçленĕ çывăх çын вырăнне хурса, халĕ те ку ĕçе май килнĕ таран хутшăнма тархасласа ыйтатăп. Эпĕ хам та халĕ çак куçару ĕçĕпе пуринчен те тимлĕрех ларасчĕ тесе пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшатăп. Çавăнпа пĕрлех Сире псаломсен виçĕ листине ярса паратăп, тăваттăмĕшпе юлашкине çак кунсенче çапса пĕтереççĕ. Тен, Эсир вĕсене килĕртех пăхса тухма май тупайăр. Псаломсен чăвашла куçарăвĕсене халиччен, тĕрлĕ сăлтавсене пула яланхи йĕркепе пичетлесе кăларман-ха. Псаломсен хальхи куçарăвне, 100 экземпляр çеç çаптарса кăларнă вариантне, халăх хушшине сарас тĕллевпе пичетлеттермен..." (5).

Кунта пирĕншĕн "октоих", "часослов" сăмахсем мĕне пĕлтерни те интереслĕ пулмалла. "Октоих" — грек сăмахĕ, "сакăр сасăллă" тени пулать. Православи чиркĕвĕн куллен кĕлĕсем ирттермелли кĕнеки. Унта тунтикунтан пуçласа шăматкунччен вуламалли ирхи кĕлĕсемпе литургисем, каç кӳлĕм тата каçхине ирттермелли кĕлĕсемпе юрăсем; вырсарникун валли асăннă кĕлĕсемпе юрăсемсĕр пуçне çĕрле служба ирттермелли кĕлĕсемпе юрăсем кĕреççĕ. Юрăсене пурне те сакăр сасăпа юрлаççĕ. "Часослов" — чиркӳре халăх умĕнче Турра кĕл тумалли кĕнеке, ăна ятарласа кĕлĕ вулакансемпе юрăçсем валли кăлараççĕ. Унта кулленхи службăсем вăхăтĕнче хăш сехетре мĕнле кĕлĕ вуламаллине кăтартса çырнă. Ячĕ те унăн "часы" сăмахран пулса кайнă, урăхла каласан "сехет кĕлли" (6).

А.П.Петров-тăлмачă пирки пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: вăл чăваш чĕлхине витĕр пĕлсе тăнисĕр пуçне ытти чĕлхесене лайăх ăнланакан чăн-чăн ăста чĕлхеçĕ пулнă, ăслă-тăнлă шухăшлама пултарнипе тĕплĕ те тимлĕ пулнипе

паларса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Шупашкар уесне кĕрекен Урхас Кушкă ялĕнчи В.Смелов пуппа Чикме уесĕнчи Акрамовăри (Шурчари) Любимов пуп И.Я.Яковлев кăларакан кĕнекесене хирĕç тăра пуçласан, Иван Яковлевич урăх никама та мар, А.П.Петрова чăвашла куçарусем пирки ăнлантарса пама ыйтать. А.П.Петров чăвашла куçарусене пур енлĕн пăхса тухса тишкерет, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче куçару ĕçне мĕнлерех туни тата хăйсене камсем пулăшни çинчен чăн-чăн тĕпчев çырса Н.И.Ильминский умне тăратать.

А.П.Петровпа юнашар ĕçленĕ, ун пекех Н.И.Ильминский патĕнче тарăн пĕлӳ илнĕ тепĕр çын вăл — Даниил Филимонович Филимонов (1855-1938), Çĕрпӳ уесне кĕнĕ (хальхи Çĕрпӳ районĕ) Ямаш ялĕнчен тухнă чăваш. 1875 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухсан Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлеме пикеннĕ. Чăваш ачисене Хусанти крешĕн тутарсен шкулĕнче çирĕпленнĕ манерпе чиркӳ юррисене юрлама вĕрентнисĕр пусне (1876-1882 çç.) аслă классенче историпе географи, кĕçĕн классенче арифметика вĕрентнĕ тата А.П.Петров шкула ĕçлеме киличчен Иван Яковлевич çук чухне шкул хуçалăхне хăй аллинче тытса тăнă. Çавна май ăста педагог тата пултаруллă администратор пулнине кăтартса панă. Ачасене вĕрентнинчен пуçне чăвашла кĕнекесем куçарас ĕçре нумай тертленнĕ.

Д.Ф.Филимонов чăвашла çав тĕрлĕ лайăх пĕлнĕ, вырăс, чиркӳ-славян чĕлхисем те уншăн тăван чĕлхе пекех пулнă, хăйĕн шухăшне вăл вырăсла та, чăвашла та ăнланмалла тата наука тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра çырса пама пултарнă, çыру ĕçне пысăк тимлĕхпе туса пыма пĕлнĕ. Каярахпа вăл Хусан кĕпĕрнине кĕнĕ (хальхи Вăрмар районĕнчи) Чирĕклĕ Мăнçырма ялĕнче пачăшкăра ĕçленĕ чухне чăвашла леш тĕнчери пурăнăç çинчен уйрăм кĕнеке çырса кăларнă. Ятарласа кĕнеке çырма Филимонова ăс паракан тата кирлĕ материалсемпе тивĕçтерекенĕ Н.И.Ильминский пулнă. Çак

кĕнекен виççĕмĕш кăларăмне Иван Яковлевич тӳрлетсе, редакцилесе панă. Ку çеç те мар, вăл вырăс историйĕпе çыхăннă калавсене — Дм. Бантыш-Каменский çырнă чаплă вырăс çыннисен, генералиссимуссемпе генерал-фельдмаршалсен биографийĕсене чăвашла ăста куçарса кăларнă, кайран ку кĕнекене А.В. Петрушевскин Вырăс патшалăхĕн историйĕпе паллаштаракан патриотла калавĕсемпе пуянлатнă. Çапла вара чăвашла пысăк та сумлă уйрăм кĕнеке пулса тухнă, ăна тӳрлетме тата пичетлесе кăларма И.Я.Яковлев хутшăннă. Ку кĕнеке икĕ хут, 1882 тата 1888 çулсенче çапăнса тухнă. Иккĕмĕш кăларăмне хатĕрленĕ чухне те И.Я.Яковлев тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн чиркӳçи В.Н. Никифоров нумай тăрăшнă. Кĕнекене вырăсларан куçарнине пĕлмесен, авторĕ ăна тӳрех чăн чăвашла çырнă теме пулать. Сăмах май, И.Я.Яковлев 1905 çулта II Микулай патшапа тĕл пулнă чухне шăпах çав кĕнеке пирки сăмах хускатнă.

Ĕмĕр тăршшĕпех чунтан хисеплесе, юратса пурăннă И.Я.Яковлев хăйĕн вĕренекенне. Ăна вăл хăй пĕлекен чăвашсенчен чăн ăсларахххи тесе шутланă. Д.Ф.Филимонов Самар хулинче чăвашла кĕнекесем куçарса кăларакан тепĕр центр йĕркеленĕ. И.Я.Яковлев Филимоновăн пуçарăвне хавасланса ырланă, пултарнă таран пулăшнă. Çапла вара тăлмачăсен икĕ ертӳçи, Чĕмпĕрти патриархпа Самарти талантлă чĕлхе ăсти пĕр-пĕринпе алла-аллăн тытăнса ĕçленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ И.Я.Яковлев Даниил Филимонова пĕрремĕш чăваш архиерейне кӳртесшĕн пулнă. Анчах Чĕмпĕрте, Чĕмпĕр кĕпĕрнинче, пĕтĕм Раççейре ахăрсамана пуçлансан, чăвашсем валли чăвашранах ятарлă архиерей уйăрса лартас шухăш сӳннĕ.

1921 çулта Д.Ф.Филимонов хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен, тĕрĕсрех каласан, Н.И.Ильминский, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, И.Я.Яковлев тата тĕттĕм чăваш халăхĕ хушшине пăртак та пулин культура çуттине кӳртесчĕ тесе тăрăшнă ытти паллă

çынсем çинчен интереслĕ аса илӳсем çырса Иван Яковлевич патне ал çырăвне ярса панă.

И.Я.Яковлев хăйĕн аса илӳсен кĕнекинче Оренбург кĕпĕрнине кĕнĕ Челябинскри реальнăй училищĕ протоиерейне Константин Прокопьева асăнать, вăл та чăваш архиерейĕ пулма тивĕçлине палăртать. Ахальтен мар пулĕ çакă. К.П.Прокопьев 1872 çулта хальхи Тутар Республикин Çĕпрел районне кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. Пуçламăш шкул хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, унтан 1890 çулта чи лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Пĕр хушă Пăва районĕнчи Эльшел ялĕн училищинче çулталăк учительте тăрăшнă хыççăн Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне вĕренме кĕнĕ. Семинарирен те чи лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Тӳрех священник ятне илсе Пăва районĕнчи Рунга ялĕн чиркӳне ĕçлеме вырнаçнă, шкулта Турă Саккунне вĕрентнĕ. И.Я.Яковлев ăна "шутсăр пултаруллă, хĕмленсе, харсăр ĕçлекен священник" тесе мухтанă. Чĕмпĕр çывăхĕнче ĕçлесе пурăннă Прокопьев атте Библи кĕнекисене чăвашла куçарас ĕçрен пăрăнса юлма пултарайман. Ахальтен мар вăл 1903 çулта Хусанти тĕн академийĕнчен вĕренсе тухас умĕн "Переводы христианских книг на инородческие языки во второй половине XIX века", "К истории просвещения инородцев Казанского края в XYIII веке", "Инородческие школы Казанского края до введения просветительной системы Ильминского", "Брак у чуваш", "Похороны и поминки у чуваш", "Обряд прохождения в земляные ворота" ятлă тĕпчев ĕçĕсем çырса Хусан университечĕ çумĕнчи "Известия общества археологии, истории и этно-


К.П. Прокопьев

графии” журналта пичетлеттернĕ. Академире вĕреннĕ чухнех 1903-мĕш, 1904-мĕш çулсем валли чăвашла календарьсем хатĕрлесе кăларнă.

Петр Васильевич Васильев, Шупашкар уесне кĕнĕ (хальхи Куславкка районĕ) Кутемер ялĕнчен, 1877-1889 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вырăсла вĕрĕнтнĕ, Андрей Петровпа пĕрлех Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен 1877-мĕш çулта вĕренсе тухнă, унпа пĕр çултах Чĕмпĕр шкулĕнчен каять, вунă çул хушши ялти шкулсенче учительте ĕçленĕ, чăваш ачисене вырăсла вĕрентмелли методикăпа вĕренӳ хатĕрĕсем çырса хатĕрленĕ. 1889 çулта П.В.Васильев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсем 1884-1889 çулсенче çырса панă анлă автобиографисемпе йăла-йĕрке очеркĕсене, тĕрлĕ çĕрте çырса илнĕ фольклор материалĕсене пухса 6 томлă пысăк та пуян алçыру хатĕрленĕ. 1899 çулта пачăшкăна тухнă.

1898 çулхи чӳк уйăхĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнчи аслăлатса çĕнетнĕ чиркĕве уçиччен И.Я.Яковлев куçару ĕçĕнче хăйĕн чи шанчăклă та пултаруллă пулăшаканĕсем пулнă Д.Ф.Филимоновпа П.В.Васильев патне пĕр пек содержаниллĕ çырусем ярать. Вĕсенче чиркӳ уçнă ятпа ирттерекен савăнăçлă уява килсе чыслă хăна пулма йыхравлать тата чунĕ патĕнчи ĕçĕ пирки хыпса çунать: “Çырупа пĕрле корректура вуламалли виçĕ листа чиксе яратăп, унта — халиччен çаптарман псаломсен пысăк пайĕ, вĕсене пăхса тухма тата хăвăртрах тӳрлетсе ман патма ярса пама тархаслатăп. Иртнĕ çулла эпĕ Сире çĕнĕрен çаптарнă 144 страницăллă Кĕлĕ кĕнекине ярса панăччĕ тата ăна пăхса тухса тӳрлетме ыйтнăччĕ. Енчен те çав ĕçе вĕçлерĕр пулсан, кунта ярса пама е чиркӳ уçнă çĕре килме пуçтарăнайсан хăвăрпа илсе килме май тупсамăр”, — тет (7).

“Маккавейсен, Иисус Навин, Руфь, Юдифь, Товит, Иов, Сирах кĕнекисене чăвашла куçарнă чухне мана Петр

Васильевич Васильев (халĕ те пурăнать-ха) пулăшрĕ",— тесе аса илнĕ Иван Яковлевич каярахпа (8).

Василий Никифорович Никифоров (1864-1942), Пăва уесне кĕнĕ (хальхи Патăрьел районĕ) Аслă Арапуçĕнчен, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче 1879-1883 çулсенче вĕреннĕ. Çулталăк хушши ялти шкул учителĕнче ĕçленĕ хыççăн И.Я.Яковлев чĕннипе Чĕмпĕре куçса пынă. А.П.Петровпа пĕрле Библи кĕнекисене куçарас енĕпе хытă тăрăшнă, хăйне уйăрса панă текстсене пĕр турткаланса тăмасăр, юратса куçарнипе тўрех ырă ята тивĕçнĕ. 1889 çулхи нарăс уйăхĕнче, Петров атте Ĕпхў епархине ĕçлеме куçсассăн, В.Н.Никифорова чăваш шкулĕ çумĕнчи чиркў настоятельне лартнă. Çак тапхăртан пуçласа куçару уншăн юратнă ĕç кăна мар, чи пирвайхи тивĕç те пулса тăрать. Пĕр вăхăтрах Василий Никифорович пачăшкă ĕçне туса пырать, хĕрсен училищинче Турă Саккунне тата учительсем хатĕрлекен шкулта историпе географи вĕрентет. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлеме пуçланăранпа 15 çул çитсен И.Я.Яковлев çине тăнипе В.Н.Никифорова пĕр кăлтăк-сăлтăксăр ĕçленĕшĕн, çакăнпа ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнăшăн Чĕмпĕрпе Сызрань епископĕ Гурий наградăпа чысланă тата протоиерей сумне куçарнă. Шел пулин те, 1917 çулхи революци хыççăн В.Н.Никифоров, хăйне чăваш семинарийĕнчен кăларса ярасран хăраса, И.Я.Яковлевăн тăшманĕсен картине тăрать.

Федор Данилович Данилов (1859-1909) Пăва уесĕнчи Сител ялĕн (Патăрьел районне кĕрет) хресченĕ, 1878 çулта Хусанти учительсен семинарийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ялти шкулсенче учительте ĕçленĕ, 1892 çулта православи тĕн ведомствинче службăра тăнă.

Сăваплă Çырусен кĕнекисене, кĕлĕ кĕнекисене тата тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă ытти кĕнекесене чăвашла куçарма тата çавăн пекех пичетленĕ чухне корректура вулама И.Я.Яковлева уйрăм пĕр çын кирлĕ пулнă. Куçаруçăсен ертўçи çак вырăна 1895 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче

Шупашкар уесӗнчи Тӗрлемес ялӗнче учительте тата псаломщикре ӗҫленӗ Федор Данилова чӗнсе илнӗ. Укҫа-тенкӗ енчен ҫителӗклӗрех пултӑр тесе Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче чистописани учителӗ тата шкул ҫумӗнчи хӗрсен училищинче чиркӳ юррисене юрлама вӗрентекен пулма ҫирӗплетнӗ. И.Я.Яковлевич хӑй тӳрремӗнех ертсе пынипе Ф.Данилов ҫулталӑк ҫурӑ хушшинчех куҫару ӗҫӗнче ытла та аван хӑнӑхса ҫитнӗ тата хӑйӗн тивӗҫне юратса пурнӑҫланине кӑтартса панӑ.

И.Я.Яковлев Хусанти Гурий Святителӗн Тӑванлӑх канашӗ ҫумӗнчи Куҫару комиссине 1897 ҫулхи нарӑсӑн 14-мӗшӗнче ҫырса пӗлтернӗ докладран акӑ мӗн пӗлетпӗр: "В минувшем 1896 году при ближайшем его (Ф.Д.Данилова. — *И.М.*) сотрудничестве мною вновь переведены и напечатаны: 1) Поучение об истинной вере Преосвященного Гурия, епископа Самарского, 2) Святый Стефан Великопермский и его просветительно-миссионерская деятельность к 500-летию Святителя, 3) Житие Святого Германа, Свияжского чудотворца, второго Архиепископа Казанского, 4) Священное коронование Русских царей и цариц и чин миропомазания их при венчании на царство, 5) по поручению Переводческой комиссии — Первая Всеобщая перепись населения Российской империи, кроме того исправлены, дополнены и вновь изданы: 1) Молитвенник, 2)Букварь для чуваш, 3) О загробной жизни по учению православной церкви, 4) пересмотрено и исправлено раньше переведенное "Наставление в Законе Божьем" епископа Агафора, которое в настоящее время печатается" (9). Ку ҫыруран тӗн вӗрентӗвӗпе ҫыхӑннӑ мӗнлерех кӗнекесене куҫарнине пӗлетпӗр.

Асӑннӑ куҫарусене хутшӑннисӗр пуҫне Ф.Данилов И.Я.Яковлев сӗннипе, Авал хунӑ Сӑмахӑн Богословский ҫырнӑ сӑваплӑ историне хӑй тӗллӗн 4-мӗш пайӗ таран — "Турӑ суйласа илнӗ пӗрремӗш патшасем"текен сыпӑкӗсене — чӑвашла куҫарса пичете хатӗрленӗ, ку 528 страницӑллӑ

пысăк кĕнекен пĕрре виççĕмĕш пайĕ пулнă. Вунă çул ытла ĕçлесе пурăннă вăл Иван Яковлевич çумĕнче, çак хушăра Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене чăвашла йăлтах куçарса пĕтерес тесе хытă тăрăшнă, чăваш чĕлхине витĕр пĕлсе тăнăран И.Я.Яковлев ăна çав тери хисепленĕ. Анчах вăл Çĕнĕ Сăмаха пĕр кĕнекепе çаптарса кăларнине кĕтсе илеймен, 1909 çулта çĕре кĕнĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх архивĕнче Хусанти Гурий святителĕн Тăванлăх канашĕ çумĕнчи Куçару комиссийĕ Федор Данилова Библи кĕнекисене тата Сăваплă Çырусене чăвашла куçарма хутшăннăшăн çулталăкне 300 тенкĕ шалу парса тăма йышăнни çинчен калакан документсем упранаççĕ (166 стр. ӳкерчĕке пăхăр).

Пĕтĕмлетсе каласан, Ф.Д.Данилов Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче 10 çул ытла ĕçлесе пурăннă. Çак хушăра кăларнă чăвашла кĕнекесем Чĕмпĕрте пĕри те унăн аллине кĕмесĕр тухман. Çавăнпа ун чухне кăларнă кĕнекесен чĕлхи уйрăмах пуянтарах. Çапла вăл чăваш чĕлхи вăй-хăватне кăтартма пĕлнĕ.

Библи кĕнекисене чăвашла куçарас ĕçре паллă йĕр хăварнă тепĕр çын — вăл Михаил Петрович Петров (1877-1938). Етĕрне уесне кĕнĕ (хальхи Вăрнар районĕнчи) Мăн Элмен (Мăнъял Элмен) ялĕнчен. 1892-1897 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри шутланнă. Шкул хыççăн çулталăк хушши ялти учительте ĕçленĕ. 1898 çулта Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне вĕренме кĕнĕ. Кунта та каллех лайăх вĕреннипе ырă ята тивĕç пулнă. 1901 çулта семинарирен вĕренсе тухсан Спас уесĕнчи Сиктĕрме ялĕнчи икĕ класлă училищĕне учительте ĕçлеме яраççĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ хушăра И.Я.Яковлев пултаруллă çамрăка тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕнекесене куçарма хутшăнтарнă, ку ĕçре ăна Д.Ф.Филимонов, П.В.Васильев, В.Н.Никифоров тата И.Я.Яковлев хăй вĕрентсе пынă. Тата



По описи № ~~4474~~ 551 438

со-д. ~~3~~ 5

Ц. А. У. Ч. А. С. С. Р.
Исторический архив
№ 438

# ДѢЛО

о назначеніи Переводческой коммиссіи при Бр. св. Гурія въ Казани, учителю Симбирской чувашской учительской школы Ѳедору Ванину годоваго вознагражденія въ размѣрѣ 300 руб. за сотрудничество въ переводѣ на чувашскій языкъ книгъ Священнаго писанія.

## ИНСПЕКТОРА ЧУВАШСКИХЪ ШКОЛЪ

## Казанскаго Учебнаго Округа.

Фонд 207
Оп. 1
Д. 226

*Началось* 14 февраля 1897 *года.*

*Кончено* 189 *года.*

*На* 6 *полулистахъ.*

ПЧ 95

Историч... архив

ЦГА ЧАССР ... архив

Фонд 207 Оп. 1 Ед. хр. № 817

# Дѣло № 1865/21

по складу чувашских изданий при школе

[Ходатайство перед переводческой комиссией Миссионерского общества о назначении членом ее законоучителя женского училища при Симбирской чувашской учительской школе Ивана Фармаковского.]

## Инспектора Симбирской Чувашской Учительской Школы.

Начато 7 Мая 1911 г.

Кончено 10 Мая 1913 г.

2 3 л.

ЦГА ЧР
Фонд 207
оп. 1
д. 817

Михаил Петров эпир ҫӳлерех асӑннӑ А.П.Петровӑн (Туринген) ҫывӑх тӑванӗ пулнӑ, ҫавӑнпа та ҫамрӑк ача куккӑшӗ хыҫҫӑн туртӑннӑ, нумай япалана унран вӗренсе пынӑ. Ҫав тери ӑслӑ ача пулнӑ. Ун чухнех вӑл славянла текста ҫӑмӑллӑн ӑнланнипе тата чӑвашла ирӗклӗн те ӑста калаҫнипе, чӗлхе уйрӑмлӑхӗсене тата вӑрттӑнлӑхӗсене витӗр туйса тӑнипе палӑрнӑ. Ҫавӑнпа та Иван Яковлевич ӑста тӑлмача хӑйӗн ҫумӗнчех тытса тӑрасшӑн пулнӑ. 1903 ҫулта вӑл М.П.Петрова Чӗмпӗрти чӑваш шкулне чӗнсе илсе хӗрсен училищинче Турӑ Саккунне вӗрентекен учителе лартать. Тепӗр икӗ ҫултан И.Я.Яковлев сӗннипе Чӗмпӗрти тӗн консисторийӗ ӑна священника кӑларнӑ. Чӗмпӗрте пурӑннӑ ҫулсенче М.П.Петров чӑвашла кӗнекесем куҫарас ӗҫре Иван Яковлевичӑн чи ҫывӑх пулӑшаканӗ пулнӑ, Библи кӗнекисене чӑвашла куҫарса кӑларас тесе пуринчен ытла хытӑ тӑрӑшнӑ. 1905 ҫулта "Кӗлӗ кӗнекисен пуххине" йӑлтах хӑй пӗччен тенӗ пек куҫарса пӗтерет, И.Я.Яковлев ӑна редакциленӗ хыҫҫӑн шутсӑр кӑмӑллӑ юлать, ҫакӑн пирки Хусанти Куҫару комиссине тата Чӗмпӗрти тӗн консисторине ҫырса пӗлтерет. Ҫавӑнпа пӗрлех Петров аттене Чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи чиркӳ настоятельне лартма ирӗк ыйтать. Ун умӗн ӗҫленӗ Никифоров атте сывлӑхӗ хавшанипе чиркӳ пачӑшкинчен тухма шутлани тата учительсем хатӗрлекен шкулта историпе географи вӗрентме юлни ҫинчен пӗлтерет. Ҫав хушӑрах Никифоров атте 16 ҫул ытла пачӑшкӑра ӗҫлесе пухнӑ опычӗпе Петров аттене паллаштарма хавас пулнине тата пысӑк уявсем вӑхӑтӗнче чиркӳре службӑсем ирттернӗ чухне ватӑрах пуп Петровран аслӑрах вырӑнта тӑма тивӗҫлине палӑртать.

Чӗмпӗрти тӗн консисторийӗ И.Я.Яковлев ыйтнине туллин тивӗҫтерсе ҫапла хыпар ярать: "По вниманию к великим трудам, понесенным священником Петровым по переводам Нового Завета и Богослужебным книгам, я признаю его вполне заслуживающим поощрения наградою — набедренником. С Божьей помощью, он, несомненно, на

новом месте своего священнослужения не мало поработает в переводческом делании во благо Святой церкви по успешному просвещению светом веры Христовой своих сородичей" (10).

Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн чиркӳ настоятелӗнче тата шкул ҫумӗнчи учительсем хатӗрлекен хӗр училищинче Турӑ Саккунне вӗрентекен пулса М.П.Петров 1907 ҫулхи авӑн уйӑхӗччен ӗҫленӗ. Ҫак уйӑхӑн 16-мӗш кунӗнче Петров атте Чӑваш шкулӗн инспекторне И.Я.Яковлева прошени парать. "Хамӑн та, арӑмӑн та сывлӑхсем чаплах маррине пула тата тухтӑрсем сӗннипе эпӗ Хусан епархийӗнчи прихутсенчен пӗрне ӗҫлеме куҫас тесе шут тытрӑм. Ӗҫ вырӑнӗ пирки ҫыру ҫӳретме пуҫланӑ ӗнтӗ. Ҫавӑнпа та училищӗри Турӑ Саккунне вӗрентекен ӗҫӗнчен хӑтарма тархасласа ыйтатӑп", —тенӗ унта. Арӑмӗн сывлӑхӗ чӑнласах начарланса ҫитнӗ пулмалла, Чӗмпӗртен куҫса кайсан вӑл тепрер ҫултанах ҫӗре кӗнӗ.

Иван Яковлевич хирӗҫлемест, чӳк уйӑхӗнчен пуҫласа ун вырӑнне И.Д.Доримедонтов пупа ӗҫе илме килӗшет. Анчах М.П.Петров Хусан епархийӗнче ӗҫе тӳрех вырнаҫаймасть те И.Я.Яковлев, Чӗмпӗртех тата тепрер уйӑх шалу илмелле пултӑр тесе, Петров аттене ӗҫрен хӑтарни ҫинчен калакан хут ҫине раштавӑн 1-мӗшӗнче кӑна алӑ пусать.

М.П.Петров (Тинехпие) Аслӑ Вӗрентекен мӗн виличченех ырӑпа ҫеҫ аса илсе пурӑннӑ. Талантлӑ ҫын пулнине пӗрре мар асӑннӑ. Хусанти тӗн академийӗнче вӗреннӗ чухне М.П.Петров Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗн 1890 ҫулччнехи историйӗ ҫинчен — Н.И.Ильминский вилнӗренпе 25 ҫул ҫитнӗ тӗле тӗпчев ӗҫӗ ҫырнӑ. Ку тӗпчев ӗҫне вӑл истори наукисен кандидачӗн ятне илме тӑратнӑ. Ученӑй ятне илнӗ. 1920 ҫулта священник сумӗнчен тухнӑ. 1928 ҫулта Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗ 60 ҫул тата ӑна пуҫласа янӑ И.Я.Яковлев 80 ҫул тултарнине асӑнса "Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗпе Иван Яковлевич Яковлев ҫинчен кӗскен каласа кӑтартни" кӗнеке ҫырса кӑларнӑ.



А.П. Петров (Туринге) тата М.П. Петров (Тинехпи)
(сăнӳкерчĕк пĕрремĕш хут пичетленет)



М.П. Петров – Чӗмпӗрти тӗн семинарийӗнче вӗреннӗ çулсенче

Ҫапла вара 1907 ҫулхи раштавӑн 1-мӗшӗнчен чиркӳ настоятелӗ пулма тата хӗрсен училищинче Турӑ Саккунне вӗрентме Иван Доримедонтович Доримедонтова ҫирӗплетнӗ. И.Д.Доримедонтов 1876 ҫулта Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесне кӗрекен Аслӑ Аксу ялӗнче ҫуралнӑ. 1890-1895 ҫулсенче Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ хыҫҫӑн тӑватӑ ҫул хушши ялти учительте ӗҫленӗ. 1899 ҫулхи авӑнӑн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 1902 ҫулччен Чӗмпӗрти тӗн семинарийӗнче вӗреннӗ. Ҫак тапхӑрта 25 ҫулхи ҫамрӑк ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче финн ученӑйӗсен Паасонен ертсе пынӑ ушкӑнӗпе пӗрле Чӗмпӗр, Самар кӗпӗрнисене кӗнӗ чӑваш ялӗсем тӑрӑх ҫӳренӗ, финсене чӑваш халӑх сӑмахлӑхне пухса ҫырса илме пулӑшнӑ. Пултаруллӑ студент ученӑйсене шырав-тӗпчев ӗҫӗнче пысӑк усӑ кӳнине Паасонен каярахпа хӑйӗн кӗнекин умсӑмахӗнче палӑртса хӑварнӑ (11).

Тӗн семинарийӗнчен вӗренсе тухсан ҫулталӑк хушши ялта учительте ӗҫленӗ хыҫҫӑн И.Д.Доримедонтова священник ятне панӑ. 1907 ҫулччен Чӗмпӗр уесӗнчи Тимӗрҫен ялӗнчи чиркӗве тытса тӑнӑ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче те, тӗн семинарийӗнче те М.П.Петровпа пӗр вӑхӑталлах вӗреннӗ, Библи кӗнекисене куҫарас ӗҫе те пӗрлех хутшӑннӑ. Чӑвашла ҫеҫ мар, тутарла пит япшар калаҫни тӑлмачӑ ӗҫӗнче нумай пулӑшнӑ. М.П.Петров Чӗмпӗртен куҫса кайнӑранпа 1917 ҫулхи революциччен чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи чиркӳ настоятелӗнче тата хӗр училищинче Турӑ Саккунне вӗрентекен пулса ӗҫленӗ. Паллах, куҫару ӗҫӗ те, тӗпрен илсен, ун ҫине тиеннӗ. Пирӗн Туррӑмӑр Иисус Христос хунӑ Ҫӗнӗ Сӑмаха йӑлтах пӗр кӗнекепе пичетлесе кӑларас енӗпе Иван Яковлевичпа пӗрле ҫӗр ҫывӑрмасӑр тӑрӑшнӑ самантсем чылай пулнӑ. Каярахпа, Ҫӗнӗ Сӑмах пичетленсе тухнӑ хыҫҫӑн та, тӑлмачӑсем малалла ӗҫленӗ, малашнехи ӗмӗчӗ вӗсен Авал хунӑ Сӑмаха йӑлтах чӑвашла куҫарса кӑларасси пулнӑ. 1913 ҫулта И.Д.Доримедонтова Иван Яковлевич сӗннипе Хусанти



И.Д. Доримедонтов – Чӗмпӗрти тӗн семинарийӗнче вӗреннӗ ҫулсенче



Чӗмпӗрти тӗн семинарийӗн вӗренекенӗсем:
сулахайран сылтӑмалла – А.А. Антонов, Г.Ф. Федоров,
М.С. Спиридонов, И.Д. Доримедонтов.
1899 çулхи чӳкӗн 14–мӗшӗ

Православи Миссионер Обществин Куçару комиссийĕн членне илнĕ. Çавна май акă мĕн пĕлтернĕ ун пирки И.Я.Яковлев Куçару комиссине: "В прошлом 1912 году я имел честь докладывать Комиссии, что моим ближайшим сотрудником в деле заготовления новых и исправления ранее сделанных переводов в последние пять лет является настоятель домовой церкви и законоучитель женского при ней училища о. И.Доримедонтов. Он по происхождению природный чувашенин. По своему образованию и по предварительной учительской и пастырской деятельности, а главное отлично владея чувашским языком и приобретая опытность, о. Доримедонтов совершенно подготовлен к переводческому делу. При свойственной ему скромности он отличается трудолюбием, терпением и усидчивостью. Следует еще добавить и то, что о. Доримедонтов хорошо владеет татарским языком. Словом, из всех известных мне священников и учителей из чуваш, я нахожу его самым подходящим для переводческого дела. О. Доримедонтов и после меня может продолжать переводы и печатание книг религиозно-нравственного содержания (учебных и назидательных), богослужебных и священного писания в духе и направлении, выработанных мною еще при жизни приснопамятного Н.И.Ильминского и под его руководством, и как это ведется доселе в Симбирской чувашской учительской школе.

Представляя все вышеизложенное вторично, я имею честь покорнейше просить Переводческую комиссию возбудить ходатайство пред Советом Православнаго Миссионерскаго Общества о назначении о. Доримедонтова членом Переводческой Комиссии" (167 стр. ӳкерчĕке пăхăр) (12).

Куратпăр ĕнтĕ, ватăлса пынăçемĕн 65 çулхи Иван Яковлевич хăйĕн сăваплă куçару ĕçне малалла тăсма пултаракан çамрăксем пирки пĕртте шухăшлама пăрахман. Ку тĕлĕшпе пуринчен те ытларах шанăç кӳреканни

И.Д.Доримедонтов пулнӑ. Ҫакна тепӗр тӗслӗх те ҫирӗплетсе парать.

1898 ҫулта Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗн тата ун ҫумӗнчи хӗр училищин чиркӳне ҫӗнетсе аслӑлатнӑ. Ҫавӑн чухне чиркӳ ҫумӗнче Православин Ҫветтуй Сывлӑш Тӑванлӑхне (Православное Святодуховское Братство) йӗркеленӗ. Тӗрӗссипе, вӑл Хусанти Гурий Святителӗн Тӑванлӑх канашӗ майлӑрах пулма тивӗҫлӗ пулнӑ. Унӑн тӗллевӗсен шутне ҫаксем кӗнӗ: а) Чӗмпӗр епархине кӗрекен чӑваш халӑхӗ хушшинче Православи чиркӗвӗн принципӗсемпе килӗшӳллӗн *Христос вӗрентӗвне* сарасси, иккӗленекенсене христианствӑн ырӑ енӗсене ӑнлантарса парасси; ӑ) Пӑва уесне кӗрекен Кивӗ Эйпеҫ прихутӗнче Турра ӗненсе тӑракан тата христианство пурнӑҫӗн йӗркине ҫирӗп тытса пыракан хӗрарӑмсен общежитине йӗркелесе ярасси; б) Сӑваплӑ Ҫыру кӗнекисене, Турра кӗл тумалли кӗнекесене тата ытти усӑллӑ кӗнекесене чӑвашла куҫарса, пичетлеттерсе халӑх хушшине сарасси; в) Чӑваш шкулӗнчен тата хӗр училищинчен вӗренсе тухнисене йывӑрлӑхра чухне пурлӑх тӗлӗшӗнчен пулӑшасси, вӗреннӗ чухне ятарлӑ медицина пулӑшӑвӗ парасси, Чӑваш шкулӗпе хӗр училищине хӑйсен вӑхӑтӗнче нумай усӑ кӳнӗ ҫынсене пулӑшасси. 1911 ҫулта Ҫветтуй Сывлӑш Тӑванлӑхӗ сӑваплӑ ҫырусене, вӗренӳ, кӗлӗ кӗнекисене, Христос вӗрентӗвӗпе ҫыхӑннӑ ытти кӗнекесене хӑй тӗллӗн пичетлесе кӑларса халӑх хушшине сарас тӗллев лартнӑ, ҫапла тума Хусан Вӗренӳ округӗнчен ирӗк ыйтнӑ.

"70-е ярса пуснӑ Иван Яковлевич чӑвашла кӗнекесем кӑларас ӗҫе малашне чиркӳ ҫумӗнчи Ҫветтуй Сывлӑш Тӑванлӑхне шанса парасшӑн. Ҫапла туни хальхи вӑхӑтра калама ҫук вырӑнлӑ, мӗншӗн тесен Тӑванлӑх йышӗнче, шӑпах Чӑваш шкулӗнчи вӗрентекенсем хушшинче куҫару ӗҫӗпе тата кӗнекесем пичетлесе кӑларас ӗҫпе тачӑ ҫыхӑннӑ чӑн чӑвашсем пулнӑ, малашне те пулӗҫ. Хальхи вӑхӑтра шкул чиркӗвӗн настоятелӗ И.Доримедонтов ҫакӑн пек

шанчăклă çын пулса тăрать. Çавăнпа та чăвашла куçарнă тата çырса хатĕрленĕ кĕнекесене пичетлесе кăларас ĕç ăнăçлă пуласси пирки иккĕленмелли çук, — "палăртнă чăвашсен Тăванлăх Канашĕн пĕрлехи пухăвĕ. Куратпăр ĕнтĕ, ку тапхăрта И.Д.Доримедонтов куçару ĕçне чи активлă хутшăнакансенчен пĕри пулнă тата шкулта вĕренекен çамрăксене те çак ĕçе явăçтарма пĕлнĕ.

Анчах пурăнăç улшăннăçемĕн И.Я.Яковлевпа И.Д.Доримедонтов хушшинче те хирĕçӳсем сиксе тухнă. 1917 çулхи революци хыççăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче те И.Я.Яковлевпа учительсем хушшинче пĕрлешӳ пĕте пуçланă. Ватăлса çитнĕ Шурсухал революци çилĕпе килнĕ улшăнусене чунĕпе йышăнма пултарайман, çамрăксен шухăшкăмăлне ним вырăнне те хурасшăн пулман. Вĕри юнлă çамрăксем çĕнĕ йĕркешĕн, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме пуçланă. Ĕçлеме чăрмантаракан И.Я.Яковлева вырăнтан кăларасшăн пулнă. Ку тĕлĕшпе пуринчен ытларах шкул священникĕсем Иван Доримедонтовпа Василий Никифоров тăрăшнă. Мĕншĕн тесен Чăваш шкулĕ вырăнне учительсем хатĕрлекен семинари туса хунă хыççăн, унта Турă Саккуне вĕрентме пăрахнă, ĕççĕр тăрса юлнă пачăшкăсем мĕнле те пулин урăх предметпа вĕрентесшĕн пулнă. Дорминдонтов пуп семинарире чăваш чĕлхи вĕрентме хатĕр тăнă, Чĕмпĕрти халăха вĕрентес ĕç комиссариачĕ çакăн пирки официаллă ыйту тăратсан, Иван Яковлевич ун пирки чăваш чĕлхин учителĕнче ĕçлемелĕх пĕлĕвĕ çитеймест тесе пĕлтерет. Мĕншĕн тесен ку вырăна И.Я.Яковлев Хусанти тĕн академине пĕтернĕ М.П.Петрова е Хусан университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă Т.М.Матвеева чĕнсе илесшĕн пулнă (Т.М.Матвеев 1884 çулта Шăмăршă районĕнчи Палтиелĕнче çуралнă, 1897-1903 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, 1908 çулта Чĕмпĕрти тĕн семинарине пĕтернĕ, 1911-1915 çулсенче Хусан университетĕнче пĕлӳ пухнă, паллă чĕлхеçĕ, шкул кĕнекисем çырнă, Чăваш педагогика институчĕн до-

центĕнче, Çутĕç министерствинче ĕçленĕ. Н.И.Ашмаринăн 17 томлă словарĕн пирвайхи кăларăмĕсене редакцилеме хутшăннă. 1936 çулта "халăх тăшманĕсен" шутне кĕртсе тĕрмене хупса лартнă. 1939 çулхи пушăн 10-мĕшĕнче Соликамскри лагерьте вилнĕ. 1956 çулта реабилитациленĕ.— *И.М.*). Çакăн çинчен пĕлсен Доримедонтов Иван Яковлевича хирĕçле тĕрлĕрен усал ĕçсем тума тытăнать, ăнсăртран куçа-куçăн тĕл пулнă чухне вăл ватăран "Чăваш апостолĕ... Просветитель", —тесе тăрăхланă.

Çав вăхăтри йывăр самантсем пирки И.Я.Яковлев хăй акă мĕнлерех аса илет: "Чехословаксем Чĕмпĕртен большевиксене хӳтерсе кăларсан, вырăнти вĕренӳ заведенийĕсенче (çав шутра Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче те) Турă Саккунне çĕнĕрен вĕрентме пикенчĕç. Дормидонтов манран каллех Турă Саккунне вĕрентмелли уроксене хăйне пама ыйтрĕ. Эпĕ ăна "Эсĕ мĕскер, нумай пулмасть кăна-халĕ Турă Саккунне вĕрентессинчен пăрăнтăн, чăваш чĕлхине вĕрентесшĕн ăшталанса çӳрерĕн? Халĕ акă архиерейтен ыйтас пулать ĕнтĕ..."терĕм (Саккуна вĕрентекенсене архиерей пилленипе лартаççĕ). Дормидонтов урса кайрĕ, мана темĕн те пĕр каласа хăртса тăкрĕ, мана çапса пăрахма та хатĕр пулнине каларĕ. "Урăх мĕн тăвайăн ĕнтĕ эсĕ! — терĕм эпĕ ăна. — Енчен те сана, пупа, Евангели ирĕк парать пулсан, мана вĕлерме те пултаратăн... Халĕ вăхăчĕ çапларах вĕт..." Çакна курса тăракансем кайран Дормидонтов ман çине кăшкăрнă чухне мана çапма тесе аллине сулса та янăччĕ, тесе каласа кăтартрĕç" (13). Паллах, хăй вĕрентсе çын тунă, каярахпа та пурнăçра нумай пулăшса тăнă, пысăк вырăна илсе çитернĕ вĕренекенĕ çавăн пек пархатарсăр пулни Иван Яковлевичăн чунне ыраттарнă.

* * *



Библие куçарма хутшăннă тăлмачăсем: сулахайран сылтăмалла – И.Д. Данилов, А.П. Петров (Туринге), И.Я. Яковлев, В.Н. Никифоров, К.П. Прокопьев; ура çинче тăраççĕ – И.Д. Доримедонтов, М.П. Петров (Тинехпи). 1903 ç.

Ку сыпăкра каланă сăмахăма çапларах пĕтĕмлетме юрать пулĕ. И.Я.Яковлевăн тĕн кĕнекисене чăвашла куçарассипе çыхăннă пикенчĕкĕ 1870 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тымар ярса, вĕрентекенсемпе вĕренекенсенĕн терчĕпе, вĕсенĕн вăйĕпе çĕкленсе патварланса пынă. Чĕмпĕрти шкулта учительте ĕçленĕ чăвашсенчен куçару ĕçне хутшăнман çын пулман та. Урăх çĕрте вĕреннĕ çынсенчен ку ĕçе пĕр çын та ермен. Пысăк хевтеллĕ, хыт тӳсĕмлĕ çынсем çеç çапла ĕçлеме пултарнă чăвашла кĕнекесемпе. Унсăр пусне хăйсен тивĕçне Турă тивлечĕ вырăнне хурса йышăнни тата çак ĕçе чунтан юратни çеç пулăшнă вĕсене çакнашкал хăватлă ĕç тума. Ырă ятлă пулас, чапа тухас, çынсене куçран пăхтарас тесе ĕçлемен

вёсем, тăван халăха тĕнче культурин шайне çĕклесе тĕнче çутине кăтартасшăн пулнă. Çавăнпа та çӳлерех асăннă тăлмачăсем пурте чăваш культурин историйĕнче паллă вырăн йышăнма тата пысăк чыса тивĕçлĕ.

Ку сыпăкра асăннă çынсем хăш тăрăхра çуралса ӳснине те ахальтен мар асăнтăмăр. Вĕсен хушшинче анатри чăвашсем те, тури-вирьял чăвашсем те, хальхи Чăваш Республикин вăтам тăрăхĕнчи чăвашсем те пулнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕсем пĕрле вĕренсе, пĕрле ĕçлесе пĕр чĕлхе тупнă. Амăшĕн сĕчĕпе вĕренсе ӳснĕ чĕлхене тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсен калаçу чĕлхипе пуянлатса чăвашсем валли пĕр чĕлхе, илемлĕ калаçу-çыру чĕлхи туса хунă. Хăйсем чăвашла каланă сăмах чĕрене пытăр тесе, калани чуна тивтĕр тесе, чĕлхе сасси хăлхана ыррăн кăтăклатăр тесе Турă сăмахĕсене таса чĕлхепе çырса пама кирлине ăнланса ĕçленĕ. Çапла чунтан хĕмленсе çырса хатĕрленĕ чăваш кĕнекисене тăван тăрăхри чăвашсем ăнланса йышăннине курса чĕререн хĕпĕртенĕ. Куçару ĕçне хутшăнни вĕреннĕ чăваш çыннисене хăйсене те чăвашла калав-юмах, сăвă-поэма, тĕпчев-тишкерӳ çырма хавхалантарнă. И.Я.Яковлев шкулĕ витĕр тухнă тăлмачăсем, вĕсем кăна та мар, чăваш шкулĕнче ăс пухнă чăвашсем хăйсем тĕллĕн илемлĕ литература произведенийĕсем çыра пуçланă, çавна май чăвашăн литература чĕлхине йĕркелесе янă.

Литература

1. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. М.:Республика, 1997. С.271.

2. Яковлев И.Я. Письма. Чеб.: Чуваш кн. изд-во, 1985. С. 150.

3. Çавăнтах. С. 166-167.

4. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. С. 244-245.

5. ЧР ПА. 207 ф., 1 оп., 691 ĕç., 2-4 л..

6. Христианство: Энцикл. словарь: В 3 т. М., 1995. Т. 2. С.241; Т. 3. С. 228.
7. ЧРПА. 207 ф., 1 оп., 691 ĕç., 1 л.
8. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. С. 275.
9. ЧРПА. 201 ф., 1 оп., 226 ĕç.
10. ЧРПА. 201 ф., 1 оп., 463 ĕç.
11. Gebrauche und Yolksdichtung der Tschuwassen. Helsinki, 1949. Vorwort. S. IV-V.
12. ЧРПА. 207 ф., 1 оп., 817 ĕç.
13. Яковлев И.Я. Манăн пурăнăç: Аса илӳсем. С. 580-581.

## 7 сыпӑк

# БИБЛИ КУҪАРӐВӖСЕМ — ЛИТЕРАТУРА ЧӖЛХИН НИКӖСӖ

Этемлӗх историйӗнче Библи вышкайсӑр пысӑк вырӑн йышӑннине никам та хирӗҫлеме пултараймасть. Библи куҫарӑвӗсем халӑхсен этнос аталанӑвӗн историйӗнчи паллӑ тапхӑрсене сӑнласа параҫҫӗ. Ҫавна май Библи кӗнекисене ҫӗр-ҫӗр чӗлхене куҫарасси пӗр-пӗр нацин мӑнаҫлӑх туйӑмӗ-хӑйӑнланӑвӗ тӗвӗленме, культурӑпа наци чӗрӗлӗвӗ палӑрма пуҫланӑ тапхӑрпа ҫыхӑннине те уйрӑммӑн палӑртса хӑвармалла.

Чӑваш халӑхӗн пурнӑҫӗнче ҫакӑн пек тапхӑр XIX ӗмӗрӗн 70-мӗш ҫулӗсенче пуҫланнӑ. Тӗрӗсрех каласан, 60-мӗш ҫулсенче Раҫҫей патшалӑхӗнче чӑваш пек "вакӑ" халӑхсене вӗрентсе ҫутта кӑлармалли уйрӑм система ҫуралса тӗрекленнӗ, ӑна правительство шайӗнче йышӑнса ҫирӗплетнӗ. Ҫак ӗҫе никӗслекенӗ Хусан университечӗн профессорӗ, паллӑ ученӑй-ориенталист Н.И.Ильминский пулнӑ. Ҫӗнӗ вӗрентӳ системин тӗшши – вак халӑхсене ҫырӑва, ӑслӑлӑха, тӗн идейисене вӗрентнӗ чухне тӑван чӗлхепе усӑ курасси. Ҫак ансат та пысӑк пӗлтерӗшлӗ принципа ӗҫе кӗртме чӑвашсем валли ятарлӑ чӑваш шкулӗсем уҫмалла, вӗсенче ӗҫлеме чӑваш учителӗсем вӗрентсе кӑлармалла, чӑваш халӑхӗн сӑнарлӑ сӑмахлӑхне пухса пичетлемелле, чӑвашла вӗрентӳ кӗнекисем хатӗрлемелле, Сӑваплӑ Ҫырусен историне, Библие чӑвашла куҫармалла, чӑвашсем хушшине Христос тӗнне чӑваш пупӗсем урлӑ чӑвашла сармалла.

Ҫак ӗҫе пурнӑҫлама Турӑ пирӗн наци мӑнаҫлӑхне, пирӗн аслӑ Вӗрентекенӗмӗре И.Я.Яковлева пӳрнӗ.

Чи малтанах ҫак шухӑш патне пырса тухмашкӑн ҫамрӑк Иван Яковлева Н.И.Ильминскипе ҫывӑх паллашни пулӑшнӑ.

Сăваплă çырусен историне тата Евангелисене чăвашла куçарас ыйтăва И.Я.Яковлев Чĕмпĕрте вĕренекен А.Рекеевпа, Хусанта паллашнă юлташĕсемпе – Самарти тĕн училищинчен вĕренсе тухнă В.Васильевпа тата Хусанти крешĕн тутарсен шкулĕнче вĕренекен С.Тимрясовпа (чăвашла та, тутарла та япшар калаçакан ачасемпе) 1870-мĕш çултах сӳтсе явма пуçланă. Ку вăхăт тĕлнелле С.Тимрясовпа В.Васильев Н.И.Ильминский ертсе пынипе чăваш шкулĕсенче вĕренӳ пособийĕ вырăнне усă куракан хăш-пĕр тĕн кĕнекисене тутарларан чăвашла куçарса кăларкаланă пулнă ĕнтĕ.

И.Я.Яковлев ку ĕçе 1871 çулта пикеннĕ. Çавна май куçару ĕçĕнче хăш калаçу чĕлхине тĕпе хурас ыйту тухса тăрать. И.Я.Яковлев тӳрех Пăва уесĕнче пурăнакан чăвашсен чĕлхине суйласа илет. Мĕншĕн тесен, чи малтанах - амăшĕн сĕчĕпе вĕренсе ӳснĕ чĕлхеуншăн ытти диалектсенчен тĕрĕсрех, тасарах, илемлĕрех пек туйăнать. Çавăн пекех çуллахи кану вăхăтĕнче вăл ытти вĕренекен çамрăксемпе пĕрле анатри чăвашсен сăвви-юррисене пухса çӳренĕ, çавна май анатри калаçу чĕлхинче сăмахсем уçăмлăрах та янравлăрах пулнине вăл çеç мар палăртнă. Тата тепĕр сăлтавĕ - Пăва уесĕнчи чăвашсен калаçу чĕлхи Самар, Пĕкĕлме,Пăхăрăслан, Пăслăк, Теччĕ, Чĕмпĕр уесĕсенчи чăвашсен калаçу чĕлхипе пĕр пекех пулнă. Унсăр пуçне ытти уессенчи чăвашсем те анатри чăвашсен чĕлхи илемлĕрех янăранипе килĕшнĕ.

Тен, ку сăлтавсен пĕлтерĕшĕ пысăках та мар пулĕ, анчах кĕнеке-çыру чĕлхи мĕнле пулмалли пирки тавлашнă чухне вĕсене те шута илнех пулĕ И.Я.Яковлев.

Акă мĕн çырнă Н.И.Ильминский çакăн пирки Хусан архиепископĕ патне янă пĕр çырура: “Кирек мĕнле чĕрĕ чĕлхе те тĕрлĕ вырăнти калаçу чĕлхисем (диалект формисем) çине пайланма пултарать. Вĕсемпе пуринпе те кĕнекере усă курма май çук-çке. Кĕнекесем куçарнă чухне тăлмачăсем тĕрлĕ сăлтавсене пула пĕр-пĕр диалект формине

суйласа илеççĕ, вара çав калаçу чĕлхи литература чĕлхин картне ларать. Тĕслĕхрен, Мартин Лютер грекла Библие нимĕçле куçарнă чухне Саксони диалектне тĕпе хунă. Ун хыççăн Библие нимĕçле çакăн пек чаплă куçаракан тек пулман та. Çапла вара Саксони çĕрĕн диалекчĕ пĕтĕм Германири литература чĕлхин никĕсĕ пулса тăнă“ (Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии. Казань, 1890. 20-21 с.).

Çакна палăртса хăвармалла: тĕнчери нумай халăхăн Библи кĕнекисене куçарма пуçличчен хăйсен алфавичĕ те, литература чĕлхи те пулман. Тăлмачăсем кĕнеке куçарнă чухне ялан тенĕ пекех хăйсен тăван чĕлхине, урăхла каласан, хăйсем çуралса ӳснĕ вырăнти калаçу чĕлхине суйласа илнĕ. Çапла майпа çав диалект литература чĕлхин никĕсне кĕрсе ларнă. Тĕслĕхрен, сербсемпе хорватсен, чехсен, поляксен, болгарсен тата ытти славян халăхĕсен литература чĕлхи Библие чи малтан мĕнле диалекта куçарнă, çав калаçу чĕлхи çинче никĕсленсе кайнă. Ак тата мĕн пĕлетпĕр: И.Я.Яковлев, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлекенсем тата вĕренекенсем пулăшнипе, Библин Çĕнĕ Сăмах кĕнекисене йăлтах чăвашла куçарса пичетлеттерсе кăларнă. Çĕнĕ Сăмах шутне Матфей, Марк, Лука тата Иоанн çырнă таса Евангелисем, Çветтуй Апостолсен ĕçĕсем, Апостолсен çырăвĕсем, Апокалипсис – пурĕ 27 кĕнеке кĕрет. Вĕсен тексчĕ лексика тĕлĕшĕнчен анлă та пуян: çĕр ĕçĕпе, пулă тытассипе, çемье хутшăнăвĕсемпе, суту-илӳпе, туй, ĕçкĕ-çикĕ йăли-йĕркисемпе, чир-чĕрпе, çыннăн кулленхи пурнăçĕн ытти енĕсемпе çыхăннă сăмахсенчен пуçласа çыннăн кăмăл-туйăмне, шухăш-тĕллевне, çавăн пекех çутçанталăкри тĕрлĕ пулăма палăртакан абстрактлă терминсем таранах. Чăваш халăхĕ халиччен пачах чухламан пулăмсен ячĕсене те анлăн кăтартса панă Библире. Çавнашкал кăткăс текстсене халиччен чăвашла куçаракан пулман, çавăнпа И.Я.Яковлев умне виçесĕр пысăк йывăрлăхсем туха-туха тăнă.

Тĕн кĕнекисене вырăсларан чăвашла куçарасси мĕн тери хĕн пулни, христианлăх вĕрентĕвне чăвашсем куллен калаçакан чĕрĕ чĕлхепе куçарма тăрăшни çинчен И.Я.Яковлев хăйĕн шухăшĕсене 1873 çулта çапăнса тухнă Евангели ум сăмахĕнче тĕплĕн çырса панă: "Чăваш халăхĕн шухăшлавĕ нихăçан та христианла вĕрентӳ содержанийĕпе çыхăнман; апла пулсан, чăваш чĕлхинче христианла ăнлавсене палăртма май паракан сăмахсем пачах та çук. Чăваша малтан çав япаласем çинчен ăнланмалла каласа кăтартас пулать, майĕпен вăл шухăшлама пуçлать, хăй пĕлнĕ пек каласа пама хăнăхать. Вăхăт иртнĕçемĕн, чăваш халăхĕ хушшинче Христос вĕрентĕвĕн çутти сарăлсан, чăваш чĕлхи те майĕпен христианла ăнлавсен шайне çĕкленĕ. Халлĕхе куçару ĕçĕнче хăш-пĕр çитменлĕхсем пулма пултарнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Малтанласа эпĕ тĕн вĕрентĕвĕпе çыхăннă кĕске текстсене, пĕчĕк кĕнекесене куçарса,чăвашсене çĕнĕ ăнлавсене йышăнма хăнăхтарса пытăм.

Çакăн хыççăн тин Евангелие чăвашла куçарма тытăнтăм. Евангели – вăл христианствăн сăваплă кĕнеки çеç мар, пĕтĕм этемлĕхе ăса вĕрентекен тĕп никĕс".

"Матфей çырнă Евангелие эпир вырăсларан куçартăмăр,– çырать малалла И.Я.Яковлев, – славянла текстпа та танлаштартăмăр. Юлашкинчен пăхса тухса тӳрлетнĕ чухне грекла çырнă текста тĕпе хутăмăр, унсăр пуçне вăл е ку ăнлавсене Европа чĕлхисене мĕнлерех куçарнине те тишкертĕмĕр.

Чăваш предложенийĕн хăй евĕрлĕхне тĕпе хурса, аякри тĕттĕм ялсенче пурăнакан хут пĕлмен чăвашсем те куçарăвăмăра ăнланччăр тесе тăрăшрăмăр эпир. Çак тĕллевпе чăвашла куçарнă сыпăксене тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсене вула-вула патăмăр, вĕсем ăнланайман вырăнсене тӳрлетрĕмĕр" (Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии. Казань, 1890. 52-54 с.).

Куçару ĕçĕнче И.Я.Яковлевăн уйрăм сăмахсене чăвашла ăнлантарса панипех çырлахма тивмен, чăвашăн малашнехи çыру-кĕнеке чĕлхи мĕнлерех аталанса каяссипе çыхăннă принциплă ыйтусене те татса пама тивнĕ. Куçару ĕçне пуçăнсанах вăл кашни чăваш хăй çуралса ӳснĕ вырăнти чĕлхепе çырма пултарнине палăртнă пулсан, Библири Çĕнĕ Сăмахăн кĕнекисене пĕрин хыççăн тепĕрне чăвашла çаптарса пынă май пĕр пĕтĕмлетӳ патне пырса тухнă: чăвашсен пурин те пĕр чĕлхепе – мĕн пур вырăнта пурăнакан чăвашсен калаçу чĕлхипе пуянлатнă илемлĕ чĕлхепе – çырмалла. Тĕпрен илсен, çыру-кĕнеке чĕлхи анатри чăвашсен калаçу чĕлхи çинче никĕсленсе тăмалла. Пĕтĕм чăваш йышăнма, ăнланма тата калаçма пултаракан чĕлхе мĕнле пулмаллине И.Я.Яковлев чăвашла букварьсем хатĕрлесе тата тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса кăларнипе кăтартса парать. Вĕсен текстне юсас тĕлĕшпе çав вăхăтра чĕлхене лайăх пĕлекен çынсем ĕçленĕ – анатрисем те, турисем те. Кашни куçарăвăн е букварĕн çĕнĕ кăларăмĕсене И.Я.Яковлев ятарласа сахал экземплярпа çаптарса чăваш шкулĕсене яра-яра панă, вĕсене тĕрлĕ диалектпа калаçакан вырăнти вĕрентекенсем е чиркӳсенче ĕçлекен пачăшкăсем пăхса тухнă, хăйсен сĕнĕвĕсене çырса панă. Çапла вара литература чĕлхи, уйрăм калаçури хирĕçӳсене татса парса, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çирĕп нормăна кĕрсе пынă.

И.Я.Яковлев кĕнеке чĕлхине тури чăвашсен калаçăвĕнчи сăмахсемпе пуянлатма кирлине те палăртнă. Çавăнпа вăл Библи кĕнекисене чăвашла куçарнă чухне анатри тата тури чăвашсен калаçăвĕнче усă куракан сăмахсенчен мăшăр сăмахсем йышлă йĕркеленĕ: *вăрă-хурах, пушăт-мунчала, чашăк-тирĕк, савăнас-хĕпĕртес, чеелĕх-уймăлăх, ырăлăх-сиплĕх, йĕркесĕр-йĕренкесĕр, тискер-усал, хĕн-асап, выçăлăх-кахатлăх, мул-пуянлăх* тата ытти те.

Кирек мĕнле сăмаха куçарнă чухне те И.Я.Яковлев ăна ахаль чăваш хăйне кирлĕ чухне мĕнле каланă пулĕччĕ-ши тесе шухăшлама сĕннĕ. Çĕнĕ сăмахсем тунă чухне куçару–

çăсем халăх чĕлхинче лайăх çирĕпленсе çитнĕ йĕркепе анлă усă курнă: 1) сăмахсен тымарĕсене пĕрлештерсе*: куç çулĕ – куççуль; карта ăшĕ – карташ; ку çĕр – кĕçĕр; ку çул – кăçал; ача пăча – ачапча.* "Петр, сана калатăп: *кĕçĕр*, автан авăтиччен эсĕ Мана пĕлместĕп тесе, виçĕ хут тунăн, тенĕ" (Лука, ХХП: 34); 2) сăмах тăвакан аффикссемпе: -лăх (-лĕх) – *ырăлăх, пуçлăх, ĕçмелĕх, çимелĕх;* -çă (-çĕ) – *пахчаçă, кĕнекеçĕ;* -ав (-ев) – *аптрав, ўпкев,* -у (-ў) – *тату, вĕрў-суру, йĕрў, кўренў, вĕрентў*, -ăç (-ĕç) – *пурăнăç, савăнăç, ўкĕнĕç* тата ытти те: "Ас тăвăр, хăвăр *ырăлăх* тунине çын куртăр тесе , ăна çын умĕнче ан тăвăр" (Матф. У1:1); Çурта кĕнĕ чухне ырă сунса: *канăçлăх* пултăр çак çурта, тийĕр; çурчĕ тивĕçлĕ пулсан, сирĕн *канăçлăхăр* ăна çитĕ, тивĕçсĕр пулсан, сирĕн *канăçлăхăр* хăвăрах таврăнĕ" (Матф.Х:12-13); 3) глаголсене икĕ хут каласа тунă мăшăр сăмахсемпе: *йĕре-йĕре. ĕçсе-çисе, вĕрсе-сурса, сиплесе-эмеллесе, лара-лара, чупа-чупа:* "Сиона аса илнĕ чух, çавăнта, Вавилон шывĕсем хĕррине *лара-лара* йĕреттĕмĕр. Хамăр арфасене унти хăвасем çине *çака-çака* хутăмăр"(Псалт.136).

Библи кĕнекисене куçарнă чухне тăлмачăсен çавăн пекех урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсемпе те йышлă усă курма тивнĕ. Тĕслĕхрен, тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсемпе анлă усă курни Иван Яковлевича пăшăрхантарман, мĕншĕн тесен ют чĕлхери сăмахсемпе пачах усă курман чĕлхесем пĕртте çук, çитменнине тутар, араб, перс тата ытти хăшпĕр чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсем пирĕн чăваш чĕлхине тахçанах çирĕп кĕрсе вырнаçнă, унăн уйрăлми пайĕ пулса тăнă.

Еврей, латин, грек чĕлхисенчи хăш-пĕр сăмахсемпе усă курни тĕнпе е çав халăхсен пурнăçĕпе çыхăннă ăнлавсене лайăхрах кăтартса пама кирлĕ пулнă. Анчах тăлмачăсен кирек мĕнле пулсан та çав сăмахсем мĕне пĕлтернине хăйсен лайăх пĕлмелле пулнă. Çавăнпа вĕсем Библи тексчĕсене ăнлантарса паракан нумай-нумай кĕнекепе паллашнă, латинла, грекла текстсене алран яман,

специалистсемпе канашланӑ. Акӑ, пӗр-ик тӗслӗх илсе кӑтартар: ”Умӗнчен пыракансем те, хыҫӗнчен пыракансем те ҫапла кӑшкӑрса пынӑ: Осанна! Турӑ ячӗпе килекен мухтавлӑ. Пирӗн Давид аттемӗрӗн Турӑ ячӗпе килекен патшалӑхӗ мухтавлӑ: эй Ҫӳлти, Осанна! Тенӗ” (Марк, 11:9-10). *Осанна* грек сӑмахӗ, *мухтавлӑ пул* тенине пӗлерет. Ҫӗнӗ Сӑмах текстӗнче унпа шӑпах *мухтавлӑ пул* пӗлтерӗшпе усӑ курнӑ. Еврей чӗлхинче *осанна* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ – *ҫӑлсам ӗнтӗ.* Пӗлетпӗр ӗнтӗ, Авал хунӑ Сӑмахӑн нумай кӗнекине авалхи еврейсен чӗлхипе – ивритла ҫырнӑ. Ҫавӑнпа та И.Я.Яковлев Авал хунӑ Сӑмахри кӗнекесене куҫарнӑ чухне яланах ҫакна асра тытнӑ. Тӗслӗхрен, Псалтире куҫарнӑ май “*осанна*” сӑмаха пур ҫӗрте *ҫӑлсам ӗнтӗ* тесе куҫарнӑ. “Эй, Турӑҫӑм, *ҫӑлсам ӗнтӗ”* (Псалт.,118:25).

*Ареопаг* сӑмаха илсе пӑхар: “Вара ӑна *ареопага* илсе пынӑ, унтан ыйта пуҫланӑ: ҫак эсӗ каласа паракан вӗрентӳ мӗнле иккенне эпир епле пӗлейӗпӗр-ши?”(Ап. ӗҫӗсем, 17:19). *“Ареопаг*” грекла Areios-pagos — *Арес* е *Марс сӑрчӗ* тени пулать. Ӑна Афинӑра Акрополӗн хӗвел анӑҫ енчи стенисене хирӗҫ чуллӑ-сӑртлӑ вырӑнта ятарласа пухусем е судсем ирттерме чулран хӑпартса тунӑ. Унта вун ултӑ картлаҫка тӑрӑх хӑпарса ҫитмелле пулнӑ. Пурӑна-киле *ареопаг* сӑмах ытти чӗлхесенче пайӑр мар ят пек ҫирӗпленсе ҫитнӗ. Пасар пухӑнакан вырӑнта Христос вӗрентӗвӗ ҫинчен ӑнлантарса ҫӳренӗ Павӑла хӑш-пӗр эпикуриецсем лӑпкӑ лару-тӑрура лайӑхрах итлес тесе ареопага илсе кайнӑ. И.Я.Яковлев ку сӑмаха чӑвашла куҫарман, мӗншӗн тесен вырӑсла, латинла, нимӗҫле куҫарусенче те ӑна ҫаплипех хӑварнӑ. Ареопаг ҫывӑхӗнче пурӑнакансене ареопагитсем тенӗ, И.Я.Яковлев вара вӗсене *ареопаг ҫынни* тенӗ.

Ҫакнашкал сӑмахсен шутне час-часах тӗл пулакан *синагога, фарисей, кесарь, мытарь, пророк* тата еврейсемпе грексен укҫа, виҫе ячӗсене *дарик, динарий, драхма,*

*дидрахма, ефа, сикль, талант, фунт, стадия* пек сӑмахсене кӗртме пулать. И.Я.Яковлев вӗсене чӑвашла ӑнлантарса ҫырас темен .

Пӗтӗмӗшле илсен, чӑвашла Ҫӗнӗ Сӑмах кӗнекисем питӗ ҫӑмӑллӑн вуланаҫҫӗ, чӑвашла илемлӗн янӑраҫҫӗ. И.Я.Яковлев куҫарусемпе ӗҫленӗ чухне Библие чӑвашла вулакан унта мӗн каланипе паллашма ҫеҫ мар. чӑн-чӑн халӑх чӗлхине курса-туйса илме, ӑнланма пултартӑр тенӗ. Ҫынсем ҫак кӗнекесене тӑван чӗлхепе ҫырнӑ кӗнеке вырӑнне хурса вулаччӑр тесе, тепӗр чухне оригиналти ӑнлавсене чӑваш ӑнлавӗпе ҫыхӑнтарса халӑх чӗлхипе ҫырса пама тӑрӑшнӑ. Кӗнекере мӗн ҫырни ахаль чӑваш хӑлхине кӗтӗр, чунваррине кӗрсе вырнаҫтӑр, тенӗ. Ҫавна май пӗр тӗслӗхпе ҫеҫ паллаштарар: *"Вӑл вӗсене тепӗр юмах каласа панӑ: ҫӳлти патшалӑх хӑй хирне ырӑ вӑрлӑх акнӑ ҫын евӗрлӗ. Ҫыннисем ҫывӑрнӑ вӑхӑтра унӑн тӑшманӗ пынӑ та тулли ҫине пукра акса кайнӑ. Калчи ҫитӗнсе пуҫ кӑларсассӑн пукри те палӑрнӑ. Чурисем хуҫине пырса каланӑ: хуҫа! Эсӗ ху хирне тулӑ акманччӗ-и вара? Пукра ӑҫтан тухнӑ тата унта? тенӗ. Вӑл вӗсене каланӑ: ӑна тӑшман* ҫын *тунӑ, тенӗ. Чурисем каланӑ: ҫумлаттарас temестӗн-и? эпир кайса ҫумлӑпӑр ӑна, тенӗ. Вӑл каланӑ: ҫук, пукрине суйланӑ чух унпа пӗрле туллине те туртса кӑларӑр эсир. Ан тивӗр, выриччен иккӗшӗ те пӗрлех ӳсчӗр; вырнӑ чух выракансене калӑп эпӗ: малтан пукрине пухӑр, ӑна ҫунтарса ямашкӑн кӗлтенӗн-кӗлтенӗн ҫыхӑр, туллине ман кӗлете пухса хурӑр тийӗп, тенӗ"(*Матф. XIII:24-30).

Ҫак юмаха куҫарнӑ чухне тӑлмачӑсем умне *плевел* сӑмаха чӑвашла куҫарас тӗлӗшпе ыйту тухса тӑнах пулӗ. Мӗншӗн тесен Библие ытти халӑх чӗлхине куҫарнӑ тӑлмачӑсем ҫак вырӑнта йӑнӑш тунӑ тӗслӗхсем пулнӑ. *Плевел* вӑл сиенлӗ ҫумкурӑк, калчаланса ӳснӗ тата пучаха ларнӑ чухне ӑна тулӑран ниепле те уйӑрса илме ҫук. Вырма тухас умӗн кӑна вӑл хӑйӗн пушӑ пучахӗсемпе тулӑран уйрӑлса тӑрать. Ҫак ҫумкурӑк тулӑпа пӗрле кирек хӑш вырӑнта ӳсме

пултарать иккен: грексем – *zizania*, арабсем – *ziwan* тенӗ, латинла ячӗ вара унӑн – *Lolium temulentum*. Чӑвашсем ҫак “суя тулла” *“пукра”* е *“хунчав”* тенӗ. *“Пукра*, назв. раст., куколь. Ҫур тыррисем ҫийӗнчен пукрисене суйлӗҫӗ” (Ашм. Сл.,IX, с. 260) ; *Хунчав*, назв. растения (сорная трава). Хунчав ҫуртӑри ҫинче пулать, умпа ҫамкана ҫапсан, вӑл шалтлатса каять” (Ашм. Сл., ХУ1, с. 165). Вырӑсла-чӑвашла словарьте (М.,1971)_*плевел, куколь* сӑмахсене иккӗшне те *пукра* тесе куҫарнӑ. Анчах *плевелпа куколь*_ пӗр йышши ҫумкурӑк мар иккен. *“Плевел* – это сорняк семейства злаковых, сжатые с боков колоски которого собраны в двурядный колос (БЭС,478). *Куколь* – это сорняк семейства гвоздичных с темно-розовыми цветками (БЭС,302)”.

И.Я.Яковлев Библие вырӑсларан куҫарнине шута илес пулсан (вырӑсла текстра вара “плевел” сӑмахпа усӑ курнӑ) тӑлмачӑсем халӑх хушшинче анлӑ усӑ куракан *пукра* сӑмаха суйласа илсе тӗрӗс тунӑ теме юрать. Ҫапла вара ҫӳлерех асӑннӑ юмаха вуланӑ е итленӗ чухне чӑваш ӑна ют чӗлхерен куҫарни ҫинчен шутламасть те.

Библи кӗнекисене чӑвашла куҫарни пирки пӗтӗмлетсе ҫакна калама пулать. И.Я.Яковлев тата унпа пӗрле ӗҫленӗ тӑлмачӑсем Библин Ҫӗнӗ Сӑмахне кӗрекен 27 кӗнекене йӑлтах чӑвашла куҫарса, пурне те пӗр кӗнекепе пичетлеттерсе кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне Турӑ хунӑ Авалхи Сӑмахран тепӗр 11 кӗнеке чӑвашла куҫарнӑ, вӗсем пурте кун ҫути курнӑ, пӗр ӗмӗр каяллах чӑвашсем патне ҫитнӗ.

Ҫапла вара пирӗн чӑвашӑн литература, урӑхла каласан, кӗнеке-ҫыру чӗлхи пӗр ӗмӗр каяллах ҫирӗп никӗс янӑ. Ҫав никӗсе хываканни И.Я.Яковлев пулнӑ тенинчен нимӗн иккӗленмелли те ҫук. Унӑн вӗренекенӗсем вара — Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче ӑс пухса ҫитӗннӗ пултаруллӑ чӑваш ачисем — ҫӗнӗ литература чӗлхине халӑх хушшине сарнӑ, тӑван халӑха ҫӗнӗ илемлӗ чӗлхепе ҫырма–калаҫма хӑнӑхтарса пынӑ.

XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш ялĕсенче шкулсем, вĕсен çумĕнче чиркӳсем çав тери нумай уçăлнине шута илес пулсан, шăпах çак тапхăрта И.Я.Яковлев ертсе пынипе куçарнă Библин чăвашла кĕнекисем халăха çĕнĕ литература чĕлхипе тачă паллашма май панă. Куçару чĕлхи çамрăк ăрăва тăван чĕлхепе çывăхланма, тĕрлĕ диалектпа калаçакан чăвашсене пĕр чĕлхе тупма пулăшнă, чăвашла илемлĕ калаçма вĕрентнĕ, чăвашăн ăс-хакăл культурине кăтартса паракан хатĕр пулса тăнă.

Чăвашла Библи кĕнекисем халăх хушшине анлă сарăлни çĕнĕ литература чĕлхине çирĕплетсе хăварма тата çавăнпа пĕрлех тĕрлĕ вырăнта пурăнакан, раснарах чĕлхепе калаçакан чăвашсене этнос, культура, чĕлхе тĕлĕшĕнчен хăйсем пĕрешкел, пĕр чăмăр пулнине лайăххрах ăнланса илме пулăшнă.

Чăн-чăн халăх чĕлхине литература чĕлхин никĕсне хурса йышăнни те чăвашсем хăйсемпе хурăнташлă халăхсен çемйинче хăй тĕллĕн аталанакан, хăйне евĕрлĕ пĕр несĕл халăхĕ пулнине, вĕсен наци ăнланулăхĕ чĕрĕлсе ӳссе пыма пуçланине кăтартса панă.

Кунсăр пуçне тата çакă паха: И.Я.Яковлев христианство наукин историйĕнче те халăхăн чĕрĕ чĕлхипе паллаштаракан палăк лартнă. Ытти нумай халăх ку шая халĕ те çитеймен-ха.

Библин чăвашла кĕнекисем кашни çуртах кĕнĕ. Çĕнĕ чăваш литература чĕлхи мĕнпур чăвашăн пĕр калаçу чĕлхи пулса тăнă, малалла пуянланса пынă. Çакна Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă пултаруллă çамрăксен илемлĕ литература хайлавĕсенчен те курма пулать. Вĕсем И.Я.Яковлев хывнă литература чĕлхине хăйсен сăвви-юррисемпе, литературăн ылтăн çӳпçине кĕрсе вырнаçнă илемлĕ произведенийĕсемпе çирĕплетме пулăшнă.

Шел пулин те, Октябрьти революци хыççăн Библи кĕнекисене вулама тата халăх хушшине сарма та чарнă. Çакă чăвашăн калаçу чĕлхине те, çавăн пекех çыру чĕлхине

те хавшатнă. Тĕрĕссипе, ку вăл чĕлхе аталанăвне чарса, ура хурса тăнă,пирĕн культура шайне пĕчĕклетнĕ.

Паянхи кун лару-тăру тĕпрен улшăнчĕ. Халăх ирĕклĕн чиркĕве çӳреме пуçларĕ, чăвашла çырнă тĕн кĕнекисене те ирĕклĕн тупса илме пулать. Турă пулăшнипе, пирĕн сăмах ăстисем Библин Авал хунă Сăмахĕн кĕнекисене йăлтах чăвашла куçарса пĕтерчĕç.

## 8 сыпăк

# И.Я.ЯКОВЛЕВĂН КУÇАРУ ЧĔЛХИ

## 8.1. ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ КАМĂНЛĂХ ПАДЕЖĔПЕ КАМĂНЛĂХ КАТЕГОРИЙĔН ТУЛЛИ ФОРМИСЕМ

Чăваш литература чĕлхин никĕсне хывнă И.Я.Яковлев ĕçĕ-хĕлĕ çинчен сахал мар каласа патăмăр. Анчах кун пирки сăмах хускатсан, халиччен тĕпчевçĕсем иртнĕ 70-75 çул хушшинче И.Я.Яковлевăн чаплă ятне тĕп кĕнекисемпе Сăваплă Çырусен куçарăвĕсенче мар, ытти вак-тĕвек ĕçĕнче (букварь, пĕчĕк калавсем) шыранă. Аслă Вĕрентекенĕмĕр чăваш литература чĕлхине йĕркелесе никĕсленине те вăл пухса хатĕрленĕ букварĕн нумай кăларăмĕсене тишкернипех ĕнентерме тăрăшнă. Акă мĕн çырать кун пирки С.П.Горский: “Букварь чĕлхине шута илсен, чăваш литература чĕлхи Октябрь революцийĕчченех çирĕпленсе çитнĕ теме юрать” (1).

Кун пек хак пани, И.Я.Яковлев çут тĕнчери Кĕнекесен кĕнекине — Библие — чăвашла куçарса тăван халăхăмăршăн вышкайсăр пысăк та хăватлă ĕç тунине асăрхамасăр хăварни чăваш чĕлхипе унăн историне тĕпчекенсене йăнăш çул çине илсе тухать.

И.Я.Яковлев пурнăçĕпе ĕçĕнче уншăн чăн хакли мĕн пулнине чăваш халăхне панă халалĕнче те яр-уççăн куратпăр: ”Эпĕ туса пĕтерейменнине ĕçсене эсир туса пĕтерĕр. Турă çыруне çырнă кĕнекесене пĕтĕмпех чăваш халăхне парăр — этемсен Турăпа пĕрлешсе пурăнасси çинчен каланă Аслă Сăмах кĕнекисене чăвашла куçарса пĕтерĕр. Вырăс патшалăхийĕн Хĕвел тухăçĕ енче пурăнакан йышлă халăхсене Христос тĕнне вĕрентсе çутăлтарас ĕçе тăрăшса ĕçлĕр...”

И.Я.Яковлев Сăваплă Çырусене тата Библие чăвашла куçарса кăларас ĕçе 50 çул ытла йĕркелесе те ертсе пынă.

Ҫак хушăра халиччен ниҫта та илтĕнсех кайман чăваш чĕлхи чиркĕве ҫирĕп кĕрсе вырнаҫать, тĕрĕссипе, чиркӳ ҫыру чĕлхи йеркеленсе каять, вăйлă аталанать. “Чиркӳ ҫыру чĕлхи чăвашсен калаҫу чĕлхинчен аталанса пырать. Чиркӳ кĕнекисене халăха ăнламалла тума тăрăшнине пула, чиркӳ ҫыру чĕлхи халăх чĕлхин элеменчĕсене — лексикине те, граматика йĕркине те — йышăнса малалла аталантарать”, палăртать Н.А.Андреев (2).

Пĕтĕм пурнăҫĕ тăршшĕпех халăх сассине тăнласа пурăннă, ахаль чăваш ҫыннин таса калаҫăвне пит юратнă И.Я.Яковлев чиркӳ кĕнекисем халăхăн калаҫу чĕлхинчен уйăрăлса ан тăччăр, халăх вĕсене тăван чĕлхепе ҫырнă кĕнекесем вырăнне хурса, ăнланса вулатăр тесе пит хытă тăрăшнă. Чăвашла куҫарнă Библи кĕнекисен текстне ытларах якатас, юсас тĕллевпе вăл хăйĕн сывлăхне шеллемесĕр, вăхăчĕ ҫитменнине пăхмасăр (час-часах ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе) ĕҫленĕ. “Иван Яковлевич куҫарусене ҫав тери тĕплĕн тишкеретчĕ, ҫавна май текста тĕрĕс куҫарса ăнлантарни тĕлĕшĕнчен те, чĕлхе тĕрĕслĕхĕ енчен те, час-часах вак-тĕвек тĕслĕхе те асăрхамасăр хăвармастчĕ, чăкăлташса ытла та шала кĕрсе кайнăн туйăнатчĕ (тепĕр чухне вара ҫакă мана пит те тарăхтаратчĕ). Пĕр куҫарăва та тĕплĕн тĕрĕслемесĕр алăран ямастчĕ“— , тесе ҫырнă Библи кĕнекисене куҫарма хутшăннă А.Петров (3).

Кашни куҫарăва малтан Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи учительсемпе пĕрле вуласа якатнă, кирлĕ чухне вĕренекенсене те явăҫтарнă ку ĕҫе. Кашни ҫĕнĕ кăларăм умĕн И.Я.Яковлев Сăваплă Ҫырусене куҫарнă ал ҫырусене е сахал кăна ҫаптарса тĕрлĕ вырăнта ĕҫлесе пурăнакан чăваш учителĕсемпе пачăшкăсене ярса панă. Тĕрлĕ диалектпа калаҫакан учительсем е ытти вĕреннĕ ҫынсем сĕннипе куҫару чĕлхи уйрăм калаҫури хирĕҫӳсене татса парса, ҫирĕп йĕркене кĕрсе пынă.

Ҫапла вара куҫару ĕҫĕнче пĕр ҫирĕп нормăна тĕпе хурса ĕҫленипе чăвашсен анатри калаҫу чĕлхипе тури калаҫу

чĕлхи пĕтĕçсе йĕркеленсе пынă, чиркÿ çыру чĕлхи литература чĕлхи пулса тăнă. Халĕ акă, вăл пуçланса кайнă ранпа çĕр çул ытла иртрĕ пулин те унăн илемĕпе сăнарлăхĕ чакмарĕ, хăвачĕ сĕвĕрĕлмерĕ.

Çапах та кунсем, çулсем майĕпен малаллах шăваççĕ, вĕсем чĕлхене те улăштараççĕ, мĕншĕн тесен нимĕн те пĕр вырăнта тăмасть.

И.Я.Яковлев куçарнă чăвашла Библи чĕлхине паянхи чăваш чĕлхипе танлаштарса тухни халиччен пулманччĕ-ха. Ку тĕлĕшпе эпир пĕрремĕш сукмак та пулин тăвас терĕмĕр. Ку ĕç, паллах ĕнтĕ, çăмăл япала мар, анчах мĕн тăвас-ха: пуçласа тăвакан япала кирек хăçан та тертлĕ кăна мар, шăртлă-шăрпăклă та.

Чăвашла куçарнă Библи кĕнекисене вуласа тишкернĕ май çакна калама пулать: куçарусенче чăваш чĕлхин морфологийĕ нормăланса çирĕплене пуçланă. Библие куçаракан авторсем кăмăлларах панă вариантсем чылайăшĕ хальхи литература чĕлхинче те çирĕп вырăн йышăнаççĕ.

Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем морфологи формисем мĕнлине кура пĕр-пĕринчен ытлашши уйрăлсах та каймаççĕ: грамматикăн тĕп категорийĕсем (хисеп, падеж, сăмах пулăвĕпе улшăнăвĕ т. ыт. те) анатрипе тури диалектра, тĕпрен илсен, пĕрех темелле. Анчах хăш-пĕр уйрăмлăхсем те çук мар (4). И.Я.Яковлев куçару ĕçĕнче ытларах анатри диалектра усă куракан вариантсене çирĕплетме тăрăшни пирки эпир пĕрре мар каларăмăр ĕнтĕ. Анатри чăвашсен калаçу чĕлхи униăн ытти вырăнтисенчен тасарах та янравлăрах пек туйăннă пулмалла. Çакă морфологи формисене куçарса йĕркеленĕ тĕслĕхсенчен кĕретĕн курăнать.

Кунта манăн И.Я.Яковлевпа унăн пулăшаканĕсем чăваш чĕлхинчи падеж формисене мĕнлерех йĕркелесе пыни пирки тĕплĕнрех каласа хăварассăм килет.

Паянхи чĕлхешĕн интереслĕреххи тата тӳрех куçа тирĕнекенни камăнлăх падежĕпе камăнлăх категорийĕн тĕрлĕ формисемпе анлăн усă курни.

Чăваш чĕлхине ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарса тĕпчекен ученăй камăнлăх падежĕн (генитив) аффиксĕсене пăхса тухсан, вĕсене икĕ пая уйăрма пулнине палăртать:

а) -ыҧ (-иҧ), -ын (-ин); -уҧ (-ӳҧ); -ун (-ӳн); -ăн (-ĕн);

б) -ныҧ (-ниҧ), -нын (-нин); -дыҧ (-диҧ), -дын (-дин); -дуҧ (-дӳҧ), -тун (-тӳн); -тыҧ (-тыҧ), -тын (-тин).

Орхонпа Енисей, туркă, азейбарджан, туркмен, гагауз тата чăваш чĕлхинче тымар хупă сасăпа пĕтет пулсан – камăнлăх падежĕн аффиксĕ уçă сасăпа, уçă сасăпа пĕтет пулсан — хупă сасăпа пуçланать (5).

Акă чăвашла куçарнă Библи кĕнекисенчен илнĕ тĕслĕхсем: *парне- + -нĕн* "Унтан пĕтĕмĕшпе çунтарса кӳрекен *парненĕн* парне вырăнĕ çинчи вутра çунса пулнă кĕлне илтĕр те, парне вырăнĕ çумне хутăр" (Левит,V1:10); *самана- + -нăн* "Çăварăма уçса йуптарса калаçăп, авалхи *сamананăн* шухăшласа пĕлмели ĕçĕсем çинчен каласа кăтартăп" (Псалтирь 77:2); *патша- + -нăн "Патшанăн* кунĕсем çумне кунсем хуш, унăн ĕмĕрне сыпăкран сыпăка пымалла ту" (Псалтирь, 60:7); "*Патшанăн* хăвачĕ тĕрĕс сут тунине юрататъ" (Псалтирь, 98:3); *тĕнче- + -нĕн* "Пирĕн Турă çăлнине *тĕнченĕн* пур вĕçĕ-хĕрри те курчĕ" (Псалтирь 97:3).

Куратпăр ĕнтĕ, И.Я.Яковлев куçарăвĕсенче, авалхи тĕрĕк чĕлхинчи пекех, камăнлăх падежĕн тулли формипе усă курнă.

М.Р.Федотов палăртнă тăрăх, уçă сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне *-нăн (-нĕн)* аффикссем хушăнса пулнă формăсем хальхи чăваш чĕлхинче усă куракан *парне- + -н, самана- + -н, тĕнче- + -н* формăсенчен ватăрах.

Хальхи чăваш чĕлхинче, уйрăмах кулленхи калаçура камăнлăх падежĕн тулли формăллă аффиксĕпе пачах усă курма пăрахнă тесен те йăнăш пулмасть. Кĕскелнĕ форма

*-ăн (-ĕн)* тухса ӳкнипе пулнă, япала камăннине (мĕнĕннине) ку формăра кĕрсе ларнă *-н-* сасă пĕлтере пуçланă (6).

Библие куçаракансем нумайлă хисепре тăракан япала ячĕсем, местоименисем, паллă ячĕсем камăнлăх падежĕнче тăнă чухне яланах çак падежăн тулли формăллă аффиксĕпе усă курнă: *арăмсен- + -ĕн, тăлăхсен- + -ĕн* "Вăл *тăлăхсенĕн* ашшĕ, тăлăх *арăмсенĕн* тӳри" (Псалтирь, 67:6*);* "Хама *хăртакансенĕн, элекçĕсенĕн* сассинчен тăшмансем, çилĕлĕ çынсем пăхса тăнăран питĕме намăс хупласа илчĕ" (Псалтирь, 43:17); *вĕсен- + -ĕн* "Турра хирĕç, Унăн Христосне хирĕç çĕр çинчи патшасем тăраççĕ, пуçлăхсем пĕрле пухăнса канашлаççĕ: *вĕсенĕн* çыххисене татар *вĕсенĕн* çĕклемне хамăр çирен пăрахар, теççĕ" (Псалтирь, 2:2,3).

Çине-çинех тĕл пулаççĕ çакнашкал вариантсем куçару чĕлхинче. Ку, паллах, анатри чăвашсен чĕлхинче нумайлă хисепри сăмахсене камăнлăх падежĕнче ытларах тулли формăпа калама хăнăхнипе çыхăннă. Тури чăвашсен чĕлхинче çак формăна пачах йышăнман. Авал хунă Сăмахпа Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмахăн тата Псалтирь кĕнекисене тишкерсе тухнă май И.Я.Яковлевпа унăн пулăшаканĕсен çак грамматика формисен тулли вариантне çирĕплетес туртăм вăйлă пулни сисĕнет. Тăлмачăсем хăш–пĕр текстсенче нумайлă хисепри камăнлăх падежĕн кĕске варианчĕпе пĕртте усă курман, тулли варианта çеç кăмăлланă. Чăнах та çав вариантсем предложенире умлă-хыçлă тĕл пулаççĕ пулин те текстри чĕлхе илемĕ чакмасть. Акă хăш-пĕр тĕслĕхсем: "Усал *çынсенĕн* канашне çӳремен çын, çылăхлă *çынсенĕн* çулĕ çинче тăман çын, астаракан *çынсенĕн* ушкăнĕнче ларман çын телейлĕ" (Псалтирь, 1:1). "Тӳрĕ *çынсенĕн* çулне Турă пĕлсе тăрать, усал *çынсенĕн* çулĕ пĕтсе ларĕ" (Псалтирь, 1:6). "Эсĕ шывра *çĕленсенĕн* пуçне çĕмĕрнĕ, Эсĕ левиафан пуçне çĕмĕрнĕ, ăна пушă хирте *пурăнакансенĕн (эфиопсенĕн)* çимĕçĕ тунă" (Псалтирь, 73:14). "Унăн

ту́рӗлӗхӗ Вӑл хунӑ сӑмаха тытса тӑракан *ывӑлсенӗн* ывӑлӗсем ҫинче, унӑн заповедӗсене туса тӑмаллине асра тытакан *ывӑлсенӗн* ывӑлӗсем ҫинче" (Псалтирь, 102:18).

Ҫапла вара И.Я.Яковлев камӑнлӑх падежӗн тулли варианчӗсемпе усӑ курни чӗлхене ҫирӗпрех системӑллӑ тума, унӑн хӑй евӗрлӗхӗпе пуянлӑхне лайӑхрах упраса хӑварма май парать, тесе шутланӑ пулас. Вӑл норма тума сӗннӗ тулли вариант чӑваш ҫыру чӗлхинче чылай вӑхӑт тытӑнса тӑнӑ, совет тапхӑрӗн малтанхи вунӑҫуллӑхӗсенче те унпа илемлӗ литературӑра кӑна мар, ытти литературӑра та норма вырӑннех усӑ курнӑ. Ҫакна Иван Юркинӑн повеҫӗсемпе тӗрленчӗкӗсене, аса илӗвӗсене вуласан та лайӑх туйса тӑратӑн.

Анчах та истори аталаннӑ май чӗлхе нормисем те улшӑнса пыраҫҫӗ, ҫав шутрах сӑмахӑн е грамматика формин тулли варианчӗпе кӗске варианчӗ хушшинчи шайлашу та пӗр вырӑнта тӑмасть, — палӑртать А.Е.Горшков (7).

Хальхи вӑхӑтра, шел пулин те, камӑнлӑх падежӗн тулли формӑллӑ аффиксӗсем манӑҫа тухса пыраҫҫӗ. Халӑх ҫыравҫисемпе поэчӗсем те, журналистсем те, чӗлхеҫӗсем те морфологи формисен кӗске варианчӗпе ҫеҫ усӑ курнине пула пирӗн вӑхӑтшӑн тулли формӑллӑ аффикссем аваллӑха аса илтерекен тӗслӗхсем пек туйӑнаҫҫӗ.

И.П.Павлов ҫак пулӑма "Чӑваш чӗлхи нумай сыпӑклӑ сӑмахсене кӗскетме тӑрӑшать" — тесе ӑнлантарать (8). Ҫавӑнпах пулӗ чӑваш чӗлхин орфографийӗпе пунктуацийӗн ҫӗнӗ правилисенче камӑнлӑх падежӗн тулли формӑллӑ аффиксӗсем пурри тата вӗсемпе усӑ курма юрани ҫинчен пӗр сӑмах та асӑнман, 44-мӗш параграфра "*А, е* сасӑсемпе пӗтекен япала ячӗсене камӑнлӑх падежӗнче *-н* аффикспа ҫырмалла..." — тесе ҫеҫ каласа хӑварнӑ (9). Ҫапла ӗнтӗ тӑван чӗлхемӗре илемлӗ те янравлӑ тӑвакан, хӑйне майлӑ сӑнарлӑх ку́рекен морфологи формисем пирки асӑнми те пултӑмӑр.

Камăнлăх категорийĕнчи сăмахсен камăнлăх падежĕнчи тулли формăллă аффиксĕсем пирки те çавнах каламалла. Ку чухне, *кун-çулийĕн, Турă тивлечийĕн, амăшийĕн, хĕвел тухăçийĕн, вырăс патшалăхийĕн, çыннийĕн, тăванийĕн* тесе калаçнине е çырнине ниçта та кураймăн. Анчах пирĕн асаттесен-асаннесен калаçăвĕнче çак формăпа усă курасси çирĕп йĕрке пулнă. 3-мĕш сăпатри камăнлăх категорийĕнчи усă сасăпа пĕтекен япала ячĕпе камăнлăх аффиксĕ хушшине *-й-* сасă кĕрсе ларни авалхи тĕрĕк чĕлхинченех килет. И.Я.Яковлев Библие куçарнă чухне каллех Тăхăр ял тăрăхĕнчи чăвашсем анлă усă курнă çак тулли формăна суйласа илнĕ. Пирĕн шутпа, çакă чăваш чĕлхин пуянлăхне витĕмлĕрех çеç палăртать.

Нумай-нумай тĕслĕхрен хăшĕ-пĕринпе кăна паллашар: "Эпĕ нимĕне те пăхмастăп, хамăн чунăма та хĕрхенместĕп, хам мĕн тумаллине — Çăлакан Иисусран илнĕ ĕçĕме — Турă *тивлечийĕн* Евангелийĕне анчах савăнса вĕрентсе çитересчĕ тетĕп" (АĔ, XX, 44:24), "Унăн ашшĕ Авраам пурăннă чухне *ашшийĕн* чурисем алтнă пусăсене пурне те филистим çыннисем тăпра ярса, питĕрсе лартнă" (Пултарни, XXVI:15), "Унта Иуда пĕр Шуа ятлă Хананей *çыннийĕн* хĕрне курнă та, ăна хăй валли илсе, ун патне кĕнĕ" (Пултарни, XXXVIII:2). "Тырă *парнийĕн* юлашки Ааронпа унăн ывăлĕсене пулĕ" (Левит, II:10). "Санăн пур мухтавлă ĕçӳсем çинчен те Сион *хĕррийĕн* хапхи умĕнче каласа тăрам" (Псалтирь, 9:15).

Çавăн пекех виççĕмĕш сăпатри камăнлăх категорийĕнче тăракан *-ĕ-* сасăпа вĕçленекен сăмахсем çумне камăнлăх падежĕн авалхи тĕрĕк чĕлхинчи *-ин* аффикс хушăнса пулнă тĕслĕхсем пирки те каласа хăвармалла. Библи куçарăвĕсенче *йăмăкин, Турă çурчин, сучин, патша хĕрин, хăвачин, Давид килин, халăхин* пек тĕслĕхсем тăтăш тĕл пулаççĕ. Вĕсенче камăнлăх падежĕн *-ин* аффиксĕ умĕн камăнлăх категорийĕн *-ĕ* аффиксĕ тухса ӳкет, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче икĕ усă сасă юнашар тăма пултараймасть. Ку

формăпа каллех анатри чăвашсем усă курнă, И.Я.Яковлев та куçарусенче çак форма вырăнти чăвашсен калаçу сĕмне кӳрет тесе шутланă пулас. Библин Çĕнĕ Сăмахне куçарнă чухне те, каярахпа Авал хунă Сăмах кĕнекисемпе ĕçленĕ чухне те çак формăпа усă курнă: "Лаван хăй *йăмăкин* ывăлĕ Иаков çинчен илтсен, ăна хирĕç чупса тухнă" (Пултарни, XX1X:13). "Унта Израил законĕ тăрăх, Турă ятне аслăлама ăрусем, Турă *халăхин* ăрăвĕсем çӳреççĕ. Унта сут вырăнĕсем, Давид *килин* аслă вырăнĕсем лараççĕ" (Псалтирь, 121:4, 5). "Унтан пĕтĕмĕшпе çунтарса памалли парне *выльăхин* тирне сӳсе илтĕр, ăна пайăн-пайăн касса ваклатăр" (Левит, 1:6). Тепĕр чухне куçарусенче пĕр сăмахах икĕ тĕрлĕ çырни те тĕл пулкалать: парне *вырăнин* (Левит, 1:11, 16; 1V:7; 1X:9) е парне *вырăнийĕн* (Левит, 1V: 30,34; V111:15; 1X:9).

Чăваш чĕлхин орфографийĕпе, пунктуаци правилисемпе килĕшӳллĕн *-у (-ӳ)* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене, камăнлăхпа пару падежĕсен тата сăпат аффиксĕ умĕн, асăннă сасăсем вырăнне *-ăв (-ĕв)* çырмалла: кану — канăвăн, канăва, канăвăм, канăву, канăвĕ; пĕлӳ — пĕлĕвĕн, пĕлĕве, пĕлĕвĕм, пĕлĕвӳ, пĕлĕвĕ (10).

М.Р.Федотов палăртнă тăрăх, *-в* кĕрсе ларнă сасă мар, авалхи тĕп сăмах вĕçĕнчи хупă сасă: пăру (ав. тĕр. бузаҕ - кăтартнă сăмахсен вĕçĕнти "ҕ" саспаллие "Бог" сăмаха каланă пек гх тесе вуламалла) — кам пад. *пăрăвăн; ту* (ав. тĕр: *таг.*) — кам. пад. *тăвăн;* пĕлӳ (ав. тĕр. *билиг)* — кам. пад. *пĕлĕвĕн* т.ыт. те (11).

И.Я.Яковлев тата унпа пĕрле ĕçленĕ тăлмачăсем иккĕмĕш сăпатри камăнлăх категорийĕнче тăракан сăмаха камăнлăх падежĕнче çырнă чухне шăпах çӳлерех асăннă меслетпе усă курнă, камăнлăх падежĕн тепĕр тĕрлĕ аффикс формине туса хунă: *аллувăн, ывăлувăн, чурувăн, аçувăн, халăхувăн, тыррăвун* т. ыт. те. Акă, Библирен илнĕ икĕ-виçĕ тĕслĕх: "Турă Аврама каланă: ху çĕрĕнтен, хăвăн йăх-тĕпĕнтен, хăвăн *аçувăн* килĕнчен тух" (Пултарни,

XII:1). “Эпĕ санăн мĕнпур çĕрне шапа ярса тултарăп, ... вĕсем, тухĕç те ... санăн чурусенĕн, санăн *халăхуван* пӳрчĕсене кĕрĕç“ (Тухни, VIII:4). “Эпĕ Египетре мĕн туни çинчен, эпĕ унта кăтартнă паллăмсем çинчен эсĕ хăвăн ывăлна, хăвăн *ывăлувăн* ывăлне каласа кăтартăн, терĕм” (Тухни, X:2). “Турра тырă парни малтан ĕлкĕрнĕ çимĕçсенчен кӳретĕн пулсан, эсĕ парнене хăвăн малтан ĕлкĕрнĕ *тыррăвун* пуçахĕсене вут çинче типĕтсе, унăн тырă пĕрчисене тӳсе пар” (Левит, II:14).

Тĕслĕхсенчен çакна асăрхатăн: камăнлăх категорийĕнче тăракан сăмахсене камăнлăх падежĕнче çырнă чухне тăлмачăсем пур чухне те вĕсене сăпат местоименийĕсемпе пĕрле усă курнă.

## 8.2. И.Я. ЯКОВЛЕВ КУÇАРĂВĔСЕНЧИ МĂШĂР СĂМАХСЕМ

Чăваш чĕлхинче мĕн авалтанах мăшăр сăмахсен пулăвĕ вăйлă аталаннă. Хальхи чĕлхере те вĕсем питĕ чĕрĕ. Мăшăр сăмах ытларах сăмах пĕрлешнипе пулать. Синтаксис тĕлĕшĕнчен мăшăр сăмах тăвакан пайсем пĕр–пĕринпе тан: пĕри теприне пăхăнмасть, вĕсем сыпăнуллă çыхăнупа пĕрлешнĕ. Морфологи енчен илсен те, мăшăр сăмаха тăвакан пайсем (компонентсем) пĕр евĕрлĕ сăмахсем шутланаççĕ; чылай чухне пĕр пуплев пайне кĕрекен сăмах тĕпĕсем е сăмах формисем (12): *атте-анне, ӳт-тир, вăйă-кулă, çурт-йĕр, выльăх- чĕрлĕх, силĕ-пӳлĕ, ĕçкĕ-çикĕ* тата ытти те.

Мăшăр сăмах ытларах чухне икĕ япала ятне сыпăнуллă çыхăнтарса пулать. Анчах мăшăр япала ячĕсем мĕнле кирлĕ апла пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕрлешнипе пулмаççĕ, кунта семантика законĕсене шута илни кирлĕ (13).

И.Я. Яковлевпа пĕрле ĕçленĕ тăлмачăсем Сăваплă Çырусен кĕнекисене чăвашла куçарнă чухне чĕлхере тĕл пулакан мăшăр сăмахсемпе мĕн пултарнă таран анлă усă

курнă, çавăнпа пĕрлех чĕлхе законĕсене тĕпе хурса, хăйсем те çĕнĕ мăшăр сăмахсем тунă. Библин чăвашла куçарнă кĕнекисенче тĕрлĕ пуплев пайĕсенчен пулнă мăшăр сăмахсем йышлă тĕл пулаççĕ.

И.Я. Яковлев вăхăтĕнчи куçаруçăсем хăйсем тĕллĕн пирвайхи хут тума пултарнă мăшăр сăмахсем тесе шутлакан тĕслĕхсене илсе пăхар: *"ăрулă-йăхлă* (Хисеп, У:29)*; *кĕсен-суран* (Тухни, IX:15); *юхан-суран* (Левит, XIV:55); *тиркӳ-чашку* (Матф., XXIII:26); *вăрă-хурах* (Лука, X:30); *йăх-тĕп* (Пултарни, XII:1); *имлĕх-сиплĕх, ырăлăх-сиплĕх* (Сирах, XXXVIII:4,8); *çынни-этемми, ят-йыш* (Сирах, X:20); *кĕсен-çăпан* (Левит, XX:20); *ăн-пуç* (Лука, XIII:35); *улмалă–чечеклĕ* (Тухни, XXV:31); *вĕрес-сурас* (Левит, XIX:26) тата ытти те.

Акă, Евангели кĕнекисенче те, Авал хунă Сăмах кĕнекисенче те чылай çĕрте тĕл пулакан "проказа" сăмаха *йухан-суран* тесе куçарнă, "прокаженный" пăллă ятне *йухан-суранлă* тенĕ: "Çавăнта пĕр *юхан-суранлă* çын пынă та, Ăна пуççапса каланă: эй Вĕрентекен, Эсĕ мана тасатас тесен, тасатма пултаратăн, тенĕ... Вăл вара çавăнтах *йухан-суранĕнчен* тасалнă" (Матф.,VIII:2,3).

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, вырăс чĕлхинче мăшăр сăмахсен пулăвĕ анлă сарăлсах кайман, И.Я. Яковлевпа пĕрле ĕçленĕ тăлмачăсем Библи кĕнекисене вырăсларан чăвашла куçарнă май, чăваш чĕлхин законĕсемпе килĕшӳллĕн мăшăр сăмахсемпе пит вырăнлă усă курнă, вырăсла сăмахсем валли тĕрĕс те илемлĕ чăвашла компонент тупма пултарнă. Хăш–пĕр тĕслĕхсем çеç илсе кăтартам: "Если же жена не осквернилась и была чиста, то останется невредимою и будет оплодотворяема семенем" тенине акă мĕнлерех килĕшӳллĕ куçарнă: "Арăмĕ ирсĕрленмесĕр тасах пулсан, пĕр сиенсĕрех йӳлĕ, йăх вăрлăхĕпе *ăрулă–йăхлă* пулса тăрĕ" (Хисеп, V:28). Кунта "оплодотворяема" глагола паллă ячĕсенчен пулнă *ăрулă-йăхлă* мăшăр сăмахпа шăпах вырăнлă та чăваша ăнланмалла куçарнă.

Тата Матфей çырнă таса Евангелирен илнĕ тепĕр тĕслĕх: “Ибо есть скопцы, которые из чрева матери родились так; и есть скопцы, которые оскоплены, и есть скопцы, которые сделали сами себя скопцами” текен предложенире “скопцы” сăмах пĕлтерĕшне чăвашла пит меллĕ куçарнă: “Хăш çын амăшĕнченех *арлă-арăмлă* пулма юрăхсăр çуралать; хăшне çынсем юрăхсăра кăлараççĕ, хăшĕ тата çӳлти патшалăхшăн хăйсене хăйсем *арлă-арăмлă* пулмалла мар тăваççĕ” (Матф., XIX:12). Çапла ĕнтĕ тăлмачăсем сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕс уçса пама тата куçаракан предложенин тĕп шухăшне тĕрĕс ăнлантарма тăрăшнă чăваш халăхне.

Хальхи чăваш чĕлхинче мăшăр сăмахсем падеж тăрăх вĕçленнĕ чухне вĕсен пĕрремĕш компоненчĕ улшăнмасăрах юлать, аффикссем иккĕмĕш сăмахĕ çумне хушăнаççĕ (*чĕлхе-çăвара*, *кил-çурта*, *ача-пăчасăр*, *вăй-хăватпа*, *ял-йышран*, *вăрă-хурахсенчен*, *ĕçме-çимерен*, *савăт-сапана*, *ăн-пуçпа* тата ытти те). “Анчах авалхи чĕлхере мăшăр сăмахсен компоненчĕсем иккĕшĕ те улшăнма пултарнă“(14). Çакна И.Я. Яковлев кăларнă кĕнекесенчи час-часах тĕл пулакан тĕслĕхсем ĕненмелле кăтартса параççĕ: “Пĕр пуян çын пулнă; унăн *кил-çурт* пăхаканни пулнă“ (Лука, XVI:1); “Хулара мĕн пуррине, *килте-çуртра* мĕн пуррине пурне те çаратса тухнă“ (Пултарни, XXXIV:29); “Манăн çын сахал: вĕсем мана хирĕç пуçтарăнĕç те мана çĕмĕрсе тăкĕç, хама та, манăн *килĕм-çуртăма* та пĕтерсе тухĕç, тенĕ” (Пултарни, XXXIV:32); “Турă Египет çынниййĕн *кил-çуртне* Иосифшăн пилленĕ; унăн *килĕ-çуртĕнче,* унăн хирĕнче мĕн пуррине те Турă пиллĕхĕ çитнĕ (Пултарни, XXXIX:5); “Манăн халăхăма ямасан, акă, эпĕ сан çине, санăн чурусем çине, сан халăху çине, санăн *килне-çуртна* йытă шăнисем ярăп...” (Тухни, VIII:21), Куратпăр ĕнтĕ, *кил-çурт* мăшăр сăмахăн компоненчĕсем иккĕшĕ те падеж аффиксне те, камăнлăх категорийĕн аффиксне те йышăннă тĕслĕхсенче чĕлхе пĕртте пăсăлни сисĕнмест, пачах урăхла, илемлĕрех çеç янăрать. Çакă ĕнтĕ тăлмачăсем хăйсен куçарăвĕсене

тӗрӗс те илемлӗ тума, тӑван чӗлхе пуянлӑхӗпе туллин усӑ курма тӑрӑшнине кӑтартса парать. Татах та илсе кӑтартма пулать ҫакнашкал тӗслӗхсем: "Иисус каланӑ: ан вӗлер, аскӑнланса ан ҫӳре, ан вӑрла, ҫын ҫинчен суя суйса ан кӑтарт; *аҫуна-аннӳне* хисепле" (Матф., XIX:19). "Унтан каланӑ: ҫавӑнпа ҫын хӑй *ашшӗ-амӑшне* хӑварӗ те, хӑй арӑмӗ ҫумне ҫыпҫӑнӗ, вара иккӗшӗ те пӗр ӳт пулӗҫ" (Матф., XIX:5); "Турӑ патшалӑхӗшӗн *ҫуртне-йӗрне*, е *ашшӗ-амӑшне,* е тӑванӗсене, е арӑмне, е ачисене хӑварсан, никам та хальхи вӑхӑтра ытлашшине нумай илмесӗр, килес ӗмӗрте ӗмӗрлӗх пурнӑҫа кӗмесӗр юлмӗ, тенӗ" (Лука, XVIII:29); "Иосиф вун-ҫичӗ ҫулта чухне, ӳсе ҫитӗнес ача чухне, хӑйӗн пиччӗшӗсемпе пӗрле, хӑй ашшийӗн Валла ывӑлӗсӗмпе, Зелфа ывӑлӗсемпе пӗрле ашшийӗн *выльӑхне-чӗрлӗхне* кӗтсе ҫӳренӗ" (Пултарни, XXXVII:3); "Ман халӑха ярасшӑн мар пулсан, ӑна татах чарса тӑрсан, акӑ Турӑ алли санӑн хирте ҫӳрекен *выльӑху-чӗрлӗхӳсем* ҫине ҫитӗ" (Тухни, IX:3); "Хӑвӑн туйӑна аллӑна тытса тӑс, ҫӗр тӑприне ҫап, вара ҫынсене, *выльӑха-чӗрлӗхе,* фараона, унӑн пӳртне, унӑн чурисене ӳпресем пусса илӗҫ..." (Тухни, VIII:16). "Ҫапла хӳтлӗх паракантан ят илтесси, кивҫеншӗн сӑмаха кӗресси *ӑслӑ-хакӑллӑ* ҫынна пит йывӑр вӑл" (Сирах, XXIX:31). Илсе кӑтарнӑ тӗслӗхсенче мӑшӑр сӑмахсен компоненчӗсем, пӗр йыши членсем пекех, пӗр-пӗринпе килӗшсе, пӗр пек улӑшӑнаҫҫӗ. Вӗсенче сыпӑнуллӑ ҫыхӑну вӑйлӑ палӑрать. Анчах сыпӑнуллӑ ҫыхӑну палӑрӑмӗ ҫеҫ мар, мӑшӑр сӑмахсем семантика, фонетика, грамматика тӗлӗшӗнчен те лайӑх шайлашни курӑнать.

И.Я. Яковлев вӑхӑтӗнче халӑх мӑшӑр сӑмахсемпе ҫав тери анлӑ усӑ курнӑ, ҫавна май мӑшӑр сӑмахсен икӗ компоненчӗ те падеж, камӑнлӑх категорийӗн аффиксӗсене, ҫитменнине тата нумайлӑ хисеп аффиксне те йышӑнма пултарнӑ. Тӑлмачӑсем халӑх чӗлхинче ирӗклӗ ҫӳрекен мӑшӑр сӑмахсемпе пӗлсе тата вырӑнлӑ усӑ курнӑ. Мӑшӑр сӑмахсен икӗ компоненчӗ те аффикс йышӑннӑ тӗслӗхсемпе

Чёмпёр чăваш шкулёнчи тăлмачăсем хăйсем тëллëн пуçласа усă курнă, халăх чëлхинче мăшăр сăмахсен иккёмёш компоненчё çумне аффикс хушăнса пулнă форма çеç тёл пулма пултарнă, теççё хăш-пёр чëлхеçёсем (15). Çапла çирёплетнипе пёртте килёшес килмест. Мёншён тесен Библин чăвашла куçарнă кёнекисенче çÿлерех илсе кăтарнă пек тёслёхсем чăнласах пит нумай, вёсене тăлмачăсем хăйсем шухăшласа çырма пултарайман. Куçаруçăсем яланах халăх чёлхине тёпе хурса, вырăнти чăваш халăхё кулленхи пурнăçра мёнле калаçнине шута илсе ансатрах куçарма тăрăшнине И.Я. Яковлев темиçе хутчен те палăртнă.

Чăвашла кăларнă кёнекесене пăхса тухнă май хăйне евёрлёрех мăшăр сăмахсемпе те тёл пулма тиврё. Тен, вёсемпе куçаруçăсем чăнласах хăйсем пуçласа усă курнă-и, анчах вёсем чёлхене çирёппёнех кёрсе вырнаçайман, хальхи вăхăтра вёсемпе усă курсах каймаççё. Тёслёхрен, *çынни-этемми, ят-йыш, палли-сăнё, ырăлăх-сиплёх, улма-чечек, çулă-техёмлё, йăли-палли, вёри-хёрÿ, чёри-варё, сиен-суран, выçăлăх-кахатлăх, шăл-çăвар, кÿрёш-кÿп, чёрлёх-чунлăх, чеелёх-уймăлăх, сăтăр-мăшкăл, йёр-кесёр-йёренкёсёр, чунсăр-чёмсёр, хёçёр-сăннăр, уххăр-çёмёренёр* тата ытти те. Çак мăшăр сăмахсене Библи кёнекисенчен çырса илнине кăтарма хăш-пёр тёслёхсем илсе парам: "Вăл çын ир тăрё те, кăмăлне Турă еннелле çавăрё, *чёри-варне* хăйне пултаракан Турра хурё, çÿлти Турра хурё, çÿлти Турра кёл тăвё (Сирах, XXXIX:6); "Чеесене вăл хăйсенён *чеелёх-уймăлăхёсемпех* такăнтарса пырать, вёсенён канашне харама ярать" (Иов, V:13); *"Вут-кăвара, юр-пăра, выçлăх-кахатлăха*, вилёме, пурне те сăтăрлăхшăн пултарнă" (Сирах, XXXIX:36) е тата "Вилём те, юн-тăку та, *вăрçу-тулашу* та, *хёç-пăшал* та, *шар-инкек* те, *выçăлăх-кахатлăх та*, *хуçăлу-аману* та, *чир-суран* та пурте çылăхлă çын тёллён; тёнчене те авалах çавсен пиркиех шыв илнё" (Сирах, XI:9-10); "Унта пёрре куçса кайсан, кунта тавăрăнас çук текех, сём-тёттём çёрте, вилём тёттёмлёхён

тёттёмёнче *йёркесёр-йёренкёсёр* çёрте, тёттёмрен тёттём çёрте пулăп вара, тенё Иов" (Иов, X:21), "Халăх пуçлăхё умёнче, аслă çын умёнче айăплă ёç тăвасран вăтанăр, пуху умёнче, халăх умёнче йёркесёр ёç тума вăтанăр, *тус-йыш* умёнче, *юлташ-тантăш* умёнче ултавран вăтанăр, *кўрёш-кўп* умёнче вăрă тăвасран намăсланăр" (Сирах, XI:22). Куратпăр ёнтё, ку предложенисенче мăшăр сăмахсемпе анлăн усă курнă, вёсен шутёнче хальхи чёлхешён кăштах урăхларах мăшăр сăмахсем те пур. Акă, эпир *чунтан-вартан* тенине час-часах илтетпёр, çак сăмахпа хамăр та калаçура, çырура нумай усă куратпăр, анчах *чёрере-варта* усратпăр теместпёр, *чун-чёрере* усратпăр тетпёр, *чёререн-вартан* мар, *чун-чёререн* юрататăп тетпёр. Тен, чăнахах, *чёри-варне* мăшăр сăмахпа тăлмачă хăй тёллён усă курнă пулё, çавăнпа та вăл чёлхере те çирёпленсе юлайман. *Чеелёх-уймăлăх*, *выçлăх-кахатлăх*, *йёркесёр-йёренкёсёр* пек мăшăр сăмахсем синонимлă сăмахсем пёрлешнипе пулнă. *"Уймăлăх"*—"хитрость"; "*уймă*"— "сноровка, хитрость" тесе ăнлантарнă Ашмарин (Ашм. Сл., III,191), анчах çак ăçтан пулса кайни паллă мар. "Кахатлăх" сăмаха çапла ăнлантарнă: *кахат* голод (араб.) отсюда "кахатлăх" — голод, *кахатлăх* — çитменлёх пёлтерёшпе те çўрет (Ашм. Сл.,VI, 177). *"Йеренкёсёр,* находящийся в беспорядке, хаотический. "Йеренкёсёр, худой, плохо одетый, грязный. Изамб." (Ашм. Сл., IV, 283-284). *"Кўрёш-кўп"* тесе хальхи вăхăтра пачах каламаççё, Ашмарин çак мăшăр сăмаха çапла ăнлантарнă: *"Кўршё-кўп, кўпе,* соседи, шабры. Тюрл. Кўршём-кўптём лайăх полсассăн, йал-йыш лайăх полсассăн, самана хушши лайăх полать. Альш. Тепёр кунне ял-йышпа, кўршё-кўпёпе ёçме тытăнатпăр" (Ашм. Сл., VII, 87). Кўрёш-кўп, кўршё-аршă, çак мăшăр сăмахсенчи иккёмёш компоненчёсен пёлтерёшёсем çухалнă, вёсем ăçтан пулса кайни паллă мар. Çапах та Библи кёнекинчен илнё тёслёхри *кўрёш-кўп* мăшăр сăмахпа тури чăвашсем усă курнă тесе çирёплетме май пур, мёншён тесен вёсем

сăмахăн вĕçĕнчи сыпăкне хупă сасăпа каланă: *кӳрĕш*, *тирĕк*, *ăйăх*, *кĕтӳç*, *тимĕрç*, *усламăç* тенĕ. Анатрисем çав сăмахсене уçă сасăллă сыпăкпа вĕçленĕ: *кӳршĕ*, *тиркĕ*, *ыйхă*, *кĕтӳçĕ*, *тимĕрçĕ* тата ытти те.

И.Я. Яковлев кăларнă чăвашла кĕнекесенче анатри чăвашсен калаçу чĕлхипе тури чăвашсен калаçу чĕлхине пĕр-пĕрин патнерех çывăхлатма тăрăшни сисĕнет. Куçарусенче те çак тĕллевпех вырăсла пĕр сăмаха синонимлă мăшăр сăмахпа куçарни нумай тĕл пулать. Акă, çӳлерех асăннă *выçăлăх-кахатлăх, чеелĕх-уймăлăх, йĕркесĕр-йĕренкесĕр* пек тĕслĕхсем те çавнах кăтартса параççĕ. Тата çавăн пекех: *хĕпĕртӳ-савăнăç, халлап-юмах, тискер-усал, мул-пуянлăх, вĕри-хĕрӳ, шӳт-мыскара, чăнлăх-тĕрĕслĕх, чăтăмлăх-тӳсĕмлĕх, хĕн-асап, çилĕ-хаяр, ăс-тăн* тата ытти тĕслĕхсенче те пĕр сăмахĕ анатрисен, иккĕмĕшĕ — турисен калаçăвĕнчен пулнине куратпăр: “*Мул-пуянлăха* сыхласси *ӳт-тире* шăрататать, *мул-пуянлăха* пăхасси ыйăха вĕçтерет” (Сирах, XXXI:1). “*Кайăк-кĕшĕк* харпăр хăй *тĕс-йышĕпеле* пухăнать; *чăнлăх-тĕрĕслĕх*, кам чăнлăх çинче тăрать, çавăн еннелле туртăнать” (Сирах, XXVII:9). “Канăçланса пурăнасси, чуна пусарса пурăнасси, *хĕпĕртӳ-савăнăç* курасси пулмарĕ ĕнтĕ манăн, инкекех хупласа илчĕ мана, тесе хуйхăрнă Иов” (Иов, III:26).

Библин чăвашла куçарнă кĕнекисенчи мăшăр сăмахсем хушшинче япала ячĕсем çеç мар, причастисем те, деепричастисем те, ытти глаголсем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Паллах, çакă ку е вăл кĕнекене кам куçарнинчен те килнĕ-тĕр. Акă, Евангелисенче вĕсем хутран–ситрен çеç тĕл пулкалаççĕ, Авал хунă Сăмахăн кĕнекисенче вара вĕсемпе пит анлă усă курнă теес килет: *вĕрес-сурас, пани-илни, савăнса-хĕпĕртсе, кашласа-ешерсе, шухăшласа-тавçăрса, тĕрĕслесе-чухласа, тытас-тăвас, тытан-тăван, тытман-туман, касас-чикес* пек тĕслĕхсем тăтăш тĕл пулаççĕ. Текстран илнĕ хăш-пĕр тĕслĕхсемпе паллашар: “Чаплă патша вырăнĕ çинче лараканран пуçласа çĕр çумĕнчен, тăпра ăшĕнчен

хăпаймана çитеччен, ылттăн пурçăн тумтир тумланса, пуçне патша çĕлĕкĕ тăхăнса çӳрекенрен пуçласа, *сине-пуçне çĕтĕк-çатăк* çакса çӳрекене çитеччченех пурин те *çил-хаяр* та пур, *кĕвĕçӳ-кӳренӳ* те пур, *кулянасси-пăшăрханасси* те пур, *хурланасси-ӳкĕнесси* те пур, вилĕм сехĕри те пур, *кӳтесси-пăтранасси* те пур, *вăрçасси-хирĕçесси* те пур" (Сирах, XI:4,5). Çак пĕр предложенире кăна сакăр мăшăр сăмахпа усă курнă, вĕсенчен тăваттăшĕ — пулас причастисенчен пулнă; *кулянасси-пăшăрханасси* тата *вăрçасси-хирĕçесси* мăшăр сăмахсем синоним сăмахсенчен пулнă. "Мана вара Амос пророк сăмахĕсем аса килчĕç, вăл каланă: праçник вырăнне сирĕн хуйхă, хурлăх пулĕ, *савăнса-хĕпĕртесе* çӳрес вырăнне йĕрсе çӳрĕр эсир, тенĕ" (Товит, II:6). "*Шухăшласа-тавçăрса* илнĕ ӳкĕт калатăп сана, *тĕрĕслесе-чухласа* илнине пĕлтеретĕп сана" (Сирах, XVI:25). Ку тĕслĕхсенче автор-тăлмачă деепричастисене пĕрлештерсе мăшăр сăмахсем тунă.

Тепĕр чухне мăшăр сăмахсем виçĕ сăмах юнашар тăнипе те пулаççĕ, ун пеккисемпе те усă курнă тăлмачсем: "*Пĕр-ик-виç* хут çаратса иличчен, вăл сана си кăтартса, чыс туса вăтантарса пĕтерет, çинчен санранах мăшкăлласа кулать" (Сирах, XIII:8). Ку тĕслĕхре малти вырăнта пĕчĕкрех хисепе кăтартакан сăмах тăрать.

Пĕтĕмĕшле илсен, мăшăр сăмахсен пулăмĕ — чĕлхене пуянлатакан тухăçлă мел. Çакна И.Я. Яковлевпа унăн ĕçтешĕсен, вĕренекенĕсен опычĕ лайăх кăтартса парать. Тăлмачăсем мăшăр сăмахсемпе усă курнă чухне вĕсен семантика, фонетика уйрăмлăхĕсене тĕпе хурса ĕçленĕ; илсе кăтартнă тĕслĕхсенче куртăмăр ĕнтĕ чăвашла Библи "авторĕсем" (вĕсене çапла каласан та çылăх пулас çук) куçарура синоним сăмахсен (*вăй-хал, вăй-хăват, мул-пуянлăх, тиркĕ-чашкă, ӳт-тир, имлĕх-сиплĕх*), антоним сăмахсен (*суту-илӳ, аçу-аннӳ, ывăл-хĕр, кунĕн-çĕрĕн*), пĕр йышши япаласене пĕлтерекен сăмахсен (*хĕç-пăшал, вăрă-хурах, пит-куç, сăн-пит, чĕлхе-çăвар, кил-çурт, йăх-тĕп*)

пěрлешěвěнчен пулнă мăшăр сăмахсемпе усă курнă, компонентсен йěркине те çирěп пăхăнтарса пынă. Çÿлерех илсе панă тěслěхсенче мăшăр сăмахсен компоненчěсем рифмăланни *(куç-пуç, ача-пăча, ěçкě-çикě, хуйхă-суйхă),* аллитерациллě (*хěн-хур, савăт-сапа, шăмми-шакки, чир-чěр*), ассонанслă (*арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă**), консонанслă *(çěлен-калта, вăрă-хурах, ěçкě-çикě, ěçме-çиме*) пулни тăван чěлхемěрěн янравлăхне пит ěненмелле кăтартса парать.

## 8.3. СĂМАХĂН ТУЛЛИ ФОРМИПЕ УСĂ КУРНИ

Чăваш чěлхинче чылай сăмахăн тулли тата кěске форми пур. Сăмахăн тулли форми, тěпрен илсен, анатри чăвашсен калаçу чěлхинче анлă сарăлнă. Хальхи вăхăтра литература чěлхинче, çавăн пекех калаçу чěлхинче те, ытларах кěске формăпа усă курма тăрăшаççě. Çакна чи малтанах чăваш чěлхинчи перекетлěх саккунě пысăк витěм кÿнипе ăнлантарса, хаçат-журналсенче ěçлекенсем тулли формăллă сăмахсене çине тăрсах пăрахăçа кăларса пыраççě.

И.Я. Яковлев пурăннă вăхăтра чěлхере тулли формăллă сăмахсемпе те, кěске формăллисемпе те активлă усă курнă. Библи кěнекисене тишкерсе тухнă май И.Я. Яковлевпа ăна пулăшнă ытти тăлмачăсем куçару чěлхинче сăмахăн тулли формине кăмăлларах пани сисěнет. Ăна вěсем литература чěлхин норми вырăнне хурса йышăннă пулин те, пěр вăхăтрах сăмахсен икě варианчěпе те усă курнă тěслěхсем сахал мар тěл пулаççě. Çакна И.Я. Яковлев анатри чăвашсемпе тури чăвашсене пěр-пěринчен пистерес мар, вěсен калаçăвне май килнě таран çывăхлатса пырас, литература чěлхин нормине çирěплетес тěллевпе тунă. Акă хăш-пěр тěслěхсем: "Ывăлне курсан, пахчаçăсем пěрне пěри каланă: ашшин *пурлăхě* çакна юлмалла; атьăр, ăна вěлерер те, ăна тивěçлě *пурăлăха* хамăр илер, тенě" (Матф., XXI:38); "Этем Ывăлийěн те: Ăна ěненекенсем пěри те ан пěтчěр, ěмěрлěх *пурăнăçлă* пулччăр тесе, (хěрес çумне)

çĕкленмелле" (Іоанн, III:15); "Авланнă çын арăма епле юрас-ши тесе, *пурăнăçшăн* тăрăшать. Арăмпа хĕрĕн *пурăнăçĕнче* те *уйăрăмĕ* пур" (АÇ, Павел, *Коринф*, VII:33); "Хĕвел тухса сарăлать те шăрăх пулать, курăк шăрăхпа типсе каять, чечекĕ тăкăнать, унăн илемĕ çухалать; пуянăн *пурнăçĕ* те çапла пĕтсе ларать" (АÇ, Іаков, I:11); "Пур аван япала та, пур чăн *ырăлăх* та çӳлтен, çутă Ашшĕнчен анать" (АÇ, Іаков, I:17); "Турă *ырăлăхлă,* пит хĕрхенекен кăмăллă" (АÇ, Іаков, V:11); "Акă тата карапа та, вăл темĕн пек пысăк пулсан та, хӳре тытса пыракан çын *пĕчĕкçеççĕ* хӳрепех хăй ăçталла каяс тенĕ çавăнталла ярать. Чĕлхе те çавăн пекех: *пĕчĕкçеççĕ* япала пулсах, пит нумай ĕç тăвать. Асту-ха, *пĕчĕкçеççĕ* вут хĕлхемех мĕн чухлĕ япала çунтарса ярать" (АÇ, Іаков, III:4-6); "Эпĕ сире хăвăр илнĕ тивлет чăнах Турă тивлечĕ тесе шантарасшăн çакна *кĕскенĕн* анчах çырса Силуанран парса ятăм" (АÇ, Петр 1-мĕш, V:12); "Иисус Христосран сире *пурăсăра* та канаçлăх пултăр" (АÇ, Петр 1-мĕш, V:14); "Малашне мĕн пулассине *нихăçан* та этем ирĕкĕпе каласа паман, ăна Туррăн таса çыннисем Святой Сывлăш пĕлтернипе каласа хунă" (АÇ, Петр 2-мĕш, I:21); "Іоанн шыва кӳртнĕ, çакăнтан кайран *пăртакçă* вăхăт иртсен, эсир Святой Сывлăшпа тĕне кĕрĕр, тенĕ" (АЕ, I:5); "Манăн пур çынна та хам пек тăвас килет; анчах пур те Турăран хăйне кура хастар илнĕ: пĕри пĕр тĕрлĕ, *тепĕри* тепĕр тĕрлĕ" (АÇ, Павел, Коринф, VII:7).

Куратпăр ĕнтĕ, И.Я. Яковлевпа унăн пулăшаканĕсем сăмахăн тулли формипе анлă усă курни япала ячĕсенче те, паллă ячĕсенче те, местоименисенче те, наречисенче те тĕл пулать. Çавăн пекех чăвашла Библие вуланă чухне çак формăпа усă курнă глаголсем уйрăмах йышлă пулни курăнать. Çавна май хупă сасăсем хушшине кĕртсе лартнă (е хупă сасăсем хушшинче сыхласа хăварнă темелле пулĕ) усă сасăсем сăмахсене усăлтарса ярасçĕ, илемлĕн янăратаççĕ. Паллах, тулли формăпа усă курасси чи малтанах

сăмах тымарĕ мĕнле сасăсенчен тăнинчен, аффикссем сăмах тымарĕ çумне е тĕп сăмах çумне хушăннинчен килет.

Çакна глаголсен тĕслĕхĕсенче пăхса тухар: "Вăл сана уруна *аптăрама* памĕ" (Псалт., 120:3) — *аптăра* (чăв) тут., пушк. *аптыра,* кăрк. *аптыра;* мар. *аптраташ;* удм. *абдраны* "смутиться, растеряться, удивляться, беспокоить, мучить, одолевать, надоедать" (Федотов ЭСЧЯ, I, с.53-54). Хальхи вăхăтра чĕлхере *аптра* вариант çирĕпленнĕ, анчах И.Я. Яковлев куçарнă кĕнекесенче ытларах тулли форма тĕл пулать.

"Хĕвел тухăçĕнчен тапранса кайса, вĕсем Сеннаар çĕрĕнче тӳрем çĕр тупнă, вара çавăнта *вырăнаçнă*" (Пултарни, XI:2) < *вырăн-* + -аç- + -нă.

"Эсир пророксем валли тупăк вырăнĕсем тăватăр, сăваплă çынсен тупăкĕсене *илемлĕлентеретĕр*" (Матф., XXIII:29) < *илемлĕ-* + -лен- + -тер- + -ет- + -ĕр. Ку тĕслĕхре сăмаха улăштаракан аффикссем *илем* я.я. çумне мар; *илемлĕ* паллă ячĕ çумне хушăннă.

"Турă сăмахĕ сарăлнăçем сарăлса пынă, вĕренекенсем те Иерусалимре *йышлăланса* пынă" (АĔ, VI:7) < *йышлă-* + -лан- + -са.

"Ĕненекенсем ытларан та ытла Турă енне *çавăрăнса* пынă, темĕн чухлĕ арçын, темĕн чухлĕ хĕрарăм *çавăрăннă*" (АĔ, V:14) < *çавăр-* + -ăн- + -са; *çавăр-* + -ăн- + -нă "привлечь на свою сторону, расположить к чему-либо (к кому-либо)" пĕлтерĕшпе усă курнă. "Вертеть, вращать" пĕлтерĕшпе чухне *çаврас, çавăрас* вариантсемпе усă кураççĕ. "Ав. тĕр. *čövrüп* — вращаться, уйг. *чăбир-*, тур. *чăвир-* ворочать, переворачивать; окружать, обмотать; тур. *чăвирин-* (*чăвир-* + -н) бегать кругом, бегать туда и сюда (чтобы отыскать) (Федотов ЭСЧЯ, II, с.80).

Чăваш чĕлхинче ĕлĕк икĕ форми те чĕрĕ пулнă, И.Я. Яковлев ытларах тулли формăпа усă курнă.

"Турă патне *çывăхарни* маншăн *ырăлăх*" (Псалт., 72:28) — *çывăх-* + -ар- + -ни.

“Хирти çын та хăй тумтирĕсене илес тесе каялла ан *таварăнтăр* “(Матф., XXIV:18) < *тавăр-* + *-ăн-* + -тăр, *таварăн-*/ *таврăн*.

“Ĕненмен хăрах *уйăрăласшăн* пулсан, *уйăрăлтăр;* ун пек чух ар-тăванăн та, хĕрарăм-тăванăн та *уйăрăлма* ирĕк пур” (АÇ, Павел, Коринф, VII:15) < *уйăр-* + -ăл- + -ас- + -шăн: *уйăр- / ойăр- : уйăрăл- / уйрăл-*. Тĕрĕк чĕлхисенче те çаплах: тел., алт., леб., кирг., к.кирг., кюэрик., каз., тоб., ком., тур., аз., крым., карТ. *айр- / айыр-* разделить, разъединить; разделиться (Федотов ЭСЧЯ, II, 270).

“Турă илтĕ, ĕмĕрех Пурăнакан вĕсене чарĕ: мĕншĕн тесен вĕсем *улăшăнасси* çук ĕнтĕ (Псалт., 54:20) < улăш- + -ăн- + -ас- + -си: улăш-/олăш- улăшăн-/улшăн- поменяться, перемениться. Тĕрĕк чĕлхисенче: кирг., койб., саг., карЛ. *алыс- (ал- + -ш)* переменить, променять; кирг., саг., койб. *алыстыр- (алыс- + -тыр)* переменить; бар., каз., крым., тел., ком., аз., тур., карТ. *алыш- (ал- + -ш)* брать взаимно друг у друга; бар., каз., алт., тел., крым., аз., ком., тур., *алыштыр- (алыш- + -тыр)* смешать, перемешать (алт., тел.); заставить менять (бар., каз.); заставить свыкнуться с чем-нибудь. (Федотов ЭСЧЯ, II, с. 277-278).

“Савл *хăватлăланнăçемĕн хăватлăланса* пынă“ (АĔ, IX:22) < хăватлă- + -лан- + -нă- + -çем- + -ĕн хăватлă- + -лан- + -са. Ку тĕслĕхре *хăват-* я.я. çумне *-лă* аф-с хушăнса пулнă пал.я. çумне - *лан* аф-с хушăннипе глагол пулнă. Хальхи чăваш чĕлхинче *хăватлан* формăпа çеç усă кураççĕ, урăхла каласан *хăват* я.я. çумне тӳрех глагол тăвакан *-лан* аф-с хушăнать. Тĕрĕк чĕлхисенче те çавăн пекех: каз., ком., бар. *куат* сила; *куатлан- (куат- + -ла- +-н)* окрепнуть, сделаться сильным; каз. *куатландыр- (куатлан- + -дыр)* усилить; укрепить; *куатлы* сильный, крепкий; каз., карТЛ., чаг., сарт. *куват* сила; каз., карЛ. *куватлан-* усилиться, приобрести силу; быть сильным (карЛ.); *куватлы- (куват- + -лы)* сильный; могучий; *куватландыр-* усилить, придать силу; тур. *кувäт* сила; *кувäтли- (кувäт- + -ли)* сильный; крепкий;

тут *куәт* , пушк. *кеуәт* сила, могущество (Федотов ЭСЧЯ, II, 316).

“Эсӗ манӑн утӑма пысӑклататӑн, ман урасем *чӗтӗремеҫҫӗ”* (Псалт., 17:38); “Халӑх ҫине халӑх тӑрӗ, патшалӑх ҫине патшалӑх тӑрӗ; выҫлӑхсем, мурсем пулӗҫ, вырӑнӗ вырӑнӗпе ҫӗр *чӗтӗрӗ* (Матф., XXIV:7); “Ҫавӑн чухне ҫӗр питӗ хытӑ *чӗтресе* кайнӑ... Хурал тӑракансем унтан хӑранипе *чӗтресе* кайса, вилнӗ пек пулнӑ“ (Матф., XXVIII:2,4); “Ӑна шуйттансем те ӗненеҫҫӗ, *чӗтӗресе* тӑраҫҫӗ” (АҪ, Іаков, II:19). Ку тӗслӗхсенче куҫаруҫӑсем *чӗтӗр* евӗрлев сӑмахӗ ҫумне *-е* аффикс хушӑннипе пулнӑ глаголӑн тулли варианчӗпе те, кӗске варианчӗпе те пӗр пекех усӑ курнине куратпӑр: *чӗтӗре- / чӗтре-* дрожать; трястись, трепетать; *чӗтӗрет-/чӗтрет-* трясти, *чӗтӗрев* дрожь; *чӗтреллӗ* дрожащий, трясущийся (Ашм.Сл. XV, 289-290). Ав.тӗр. *titrä-, titri-* дрожать, трепетать (ДТС, 564). Ытти тӗрӗк чӗлхисенче: кирг., тар. *титӗре-* дрожать; тур., чаг., ком., карЛ, каз. *титрӓ-* дрожать; трястись; карТ. *титрʼэ- =титрӓ-*; карТ. *титрʼэт-* карЛ., тур. *титрӓт-* трясти; заставлять дрожать; карТ. *титрʼэвӳк* дрожание; крым. *дитирӓ-* дрожать, колебаться =тур., аз. *дитрӓ-;* тур. *дитрӓт-* заставлять дрожать; *дитрӓмӓ* дрожание (Радл. Сл. III, 1391-1392, 1770-1771); тут., пушк. *тетрә-* дрожать, вздрагивать, трястись; *тетрәуле* дрожащий, трепетный, трепещущий; як. *титирээ-* трястись; тув. *дидире-* дрожать, трястись (Федотов ЭСЧЯ, II, 417).

Ҫавӑн пекех чӑваш чӗлхи сӑмаха е вӑрӑмлатса, е кӗскетсе калама пултарать. Икӗ усӑ сассӑ хушшинчи хупӑ сасса вӑрӑмлатса каласси тури чӑвашсен калаҫӑвӗнче час-часах пулать. Акӑ, тӗслӗхрен: *тоттӑр* (тутӑр), *виттӗр* (витӗр), *каяттӑр* (каятӑр), *кӑккӑр* (кӑкӑр), *ҫӑккӑр* (ҫӑкӑр), *коккӑль* (кукӑль), *коккӑр* (кӑкӑр), *ҫеккӗл* (ҫекӗл), *ӗссӗр* (ӳсӗр), *тӑрри* (тӑри), *пӑрри* (пӑри) т. ыт. те. Анатри чӑвашсем те *наччар, ҫаккӑнта, ҫиччас* теҫҫӗ.

Çакăн йышши сăмахсем чăвашла Библире çине-çине тĕл пулаççĕ: "Патша, çакна илтсесĕн çиленсе çитнĕ те, хăй *çаррисене* ярса çав вĕлерекенсене хăйсене те вĕлерттернĕ, вĕсен хулине те çунтарттарса янă" (Матф., XXII:7); "*Çаррисем* хатĕрленнĕ те, хулана çавăрса илсе çав кун кунĕпе вăрçнă" (Маккавей 1-мĕш, V:50); "Вара хăйсен аллинчи *çаррисене* ертсе Іамнія çине тухса кайнă. Вăл хуларан Горгій хăй *çаррипе* вĕсене хирĕç вăрçма тухнă" (Маккавей 1-мĕш, V:58,59). Çакăн евĕрлĕ тĕслĕхсем Ашмарин словарĕнче те тĕл пулмарĕç.

"Кесариіара Италіа *полкки* тийекен *полккăра* пĕр Корнилій ятлă çĕр-çын пуçлăхĕ пулнă" (АЁ, X:1); "Пире Италіана шывпа каймалла тусан, Павела та, тата хăш хăш тимĕрлĕнĕ çынсене те Август *полккинчи* Іолій ятлă çĕр-çын пуçлăхĕ аллине пачĕç" (АЁ, XXVII:1). *Полкки* сăмах çинчен Ашмарин словарĕнче çапла çырса панă: *пулкăн* (-гын), полками. Пулкăн-пулкăн яш пырать, хĕрсем çине ӳкесшĕн; *полкки,* полк, стая, скопище. Полкки килет, икĕ çĕр çăмарта пар. Полккипе каяççĕ кайăксем. (Элĕк, Сĕнтĕр, Шупашкар тăрăхĕнче çырса илнĕ тĕслĕхсем —*И.М.)* (Ашм. Сл. IX, 280-281).

"Çил майсăр пулнă пирки, эпир нумай кунччен *йеррипе* ишсе пырса, аран аран Книд тĕлне çитрĕмĕр, унтан Крит йатлă тинĕс *утти* çинчи Салмон тийекен сăмсах патне ишсе пытăмăр" (АЁ, XXVII:7) — *йеррипе,* пĕрлелĕх падежĕнче: *йеррипе,* тихонько; медленно. Йеррипе юрлат (Пăва уесĕнчи ялсенче. — *И.М.*) (Ашм. Сл. IV, 287). Сăмах май, халĕ чĕлхере *ерипен* тени çирĕпленсе çитнĕ. Ашмарин словарĕнче икĕ формине те çырса кăтартнă: *утти* < *тинĕс утти,* морской остров; *отă, утă* (оды, уды), остров (Ашм. Сл. III, 330-331).

"Пур тĕрлĕ çăханпа унăн ăрăвĕнчен, страусран, тăманаран, чарланран, хĕрхирен, унăн ăрăвĕнчен, ӳхĕрен, пулăçă-кайăкран, ибисран, *аккăшран*, пеликанран, сипран,

пысăк чарланран, зуйпа унăн ăрăвĕнчен, шыв вăкăрĕнчен тата нетопыртен йĕрĕнĕр"(Левит, X1:15).

*аккăш* (аккыш), лебедь. Аккăш малтан килсен, йур час каймасть. Аккăш пулса вĕççе ӳкрĕм хамăр савни пур çĕре (Пăва уесне кĕрекен Эльшель ялĕнче, Чăваш Республикин Сĕнтĕр тăрăхĕнчи ялсенче çырса илнĕ тĕслĕхсем — *И.М.*) (Ашм. Сл. I, 99). Çак словарьтех *акăш* варианта та çырса панă: *акăш* (акыш), лебедь (Эльшель, Тăвай р. Нюшкасси, Ĕнел Елчĕк р., Етĕрне р., Патăръел р. Арапуç) (Ашм. Сл. I,93).

"Хăвăр пата *çаккăнтан* урăхла вĕренме пыракана килĕре ан кӳртĕр" (АÇ, Іоанн 2-мĕш, 10). *Çаккăнтан* сăмах *çак, çакă* кăтарту местоименийĕн туху падежĕн формине йышăннă. Икĕ усă сасă хушшинчи *-к-* сасса вăрăмлатса калани анатри чăвашсен калаçăвĕнче халĕ те тĕл пулать. Ашмарин словарĕнче *çакă, çакăнта, çакăнтан, çаккăльте, çаккăнччен* вариантсене çырса кăтартнă (Ашм. Сл. XII,32-33).

Анчах çакăнпа пĕрлех И.Я. Яковлев пачах урăхла вариантпа усă курнă тĕслĕх пирки те каласа хăварар. Хальхи чĕлхере эпир *выльăх вилли, кайăк вилли, çын вилли* тетпĕр пулсан, И.Я. Яковлев куçарнă Авал хунă Сăмах кĕнекисенче çак сăмахăн кĕске формипе усă курнине палăртмалла: "Сыснана та ан çийĕр, мĕншĕн тесен унăн чĕрни те икке уйăрăлнă, чĕрни хушшинчи çурăкĕ те тарăн, анчах çинĕ апатне кавлемест, вăл сирĕншĕн таса мар, вĕсен ашне ан çийĕр, вĕсен *вилисем* çумне ан сĕртĕнĕр... вĕсен *вилисенчен* йĕрĕнĕр... вĕсен *вилине* сĕртĕнекен кирек кам та каçченех таса мар пулĕ; вĕсен *вилине* тытакан кирек кам та хăйĕн тумтирне çуса тасатмалла" (Левит, XI:8,13,24,25). Ашмарин словарĕнче: *виле* (вилъэ), мертвец, покойник; *вили* (виле + 3-мĕш сăп. аф-сĕ); *вилĕ* (вилъ ), то же, что и виле, мертвец, покойник; çăпата вилли — ошметок (истасканный и брошенный лапоть); хушпу вилли — истасканное хушпу; атă вилли — истасканное хушпу; атă

вилли — отопок; çӗлӗк вилли; *çын вилли,* труп (Ашм. Сл. V, 226-227). Çапла вара, çӳлерех асăннă тӗслӗхсенче те *вили* вырăнне *вилли* тесе çырнă пулсан тӗрӗсрех пулатчӗ. Анчах ку тӗслӗхсем Библин Авал хунă Сăмахӗнчен пулнине шута илер, И.Я. Яковлев Авал хунă Сăмахăн кӗнекисене пичетлесе кăларма ӗлкӗреймен, çавăнпа та вӗсене хăй редакцилемен те пулас.

## 8.4. ТӖРӖК КАРТИНЕ ЛАРАКАН ЧĂВАШ СĂМАХӖСЕМ

Библие куçарасси пирки каласан, вăл – чи кăткăс та йывăр ӗç пулни пурсăмăра та паллă, ку ак мӗнтен курăнать: унта литературăри тӗрлӗ стильсем, жанрсем, темиçе ӗмӗр чăнлăхӗсем пӗтӗçсе кайнă. Мӗншӗн тесен ăна 1400 çул хушши хӗрӗхе яхăн çын кашни харкам хăй чӗлхи стилӗпе поэма пек те, историлле калав пек те, е догмăланă вӗрентӳ кӗнеки пек те çырнă. Унăн оригиналӗсене, палăртрăмăр ӗнтӗ, виçӗ чӗлхепе – авалхи еврей чӗлхипе, хăшне-пӗрне арамейла тата грекла çырнă. Çавăнпа та Библие куçарнă чухне темиçе чӗлхе конструкцийсене асран кăларса яма юрамасть.

Анчах та ку ӗç çăмăл мар. Куçаруçă, вăл кам пулсан та, сахалтан та ик-виçӗ чӗлхе пӗлекен çын кăна мар, чăн-чăн чӗлхе ăсти, урăхла каласан, чӗлхе наукине тарăн чухлакан, нумай пӗлӳллӗ, анлă тавракурăмлă çын пулмалла.

Сăваплă Çырусене куçарас тесен чăваш чӗлхине тӗн вӗрентӗвӗпе, философипе, патшалăх тата общество тытăмӗпе, географипе çыхăннă ăнлавсене палăртакан çӗнӗ сăмахсем, терминсем тупмалла пулнă. Тӗслӗхрен, Библие чăвашла куçарма пуçличчен пирӗн чӗлхере "царство небесное", "прелюбодеяние", "благословить", "крестить", "распять", "церковь", "храм", "книжник", "ангел", "дьявол", "священник" тата ытти нумай сăмах пачах та пулман.

Библи терминологине кӑна мар, Ҫӗр пичӗ ҫинчи ют патшалӑхсен, ҫӗрсен-шывсен, ял-хуласен, тӗрлӗ тӗслӗ вырӑнсен ячӗсене, Библире ҫырса кӑтартнӑ ҫӗршывсенче пурӑнакан халӑхсен ячӗсене, унта ӳсекен ӳсен тӑрансен, улма-ҫырла, выльӑх-чӗрлӗх ячӗсене куҫарнӑ чухне те нумай тертленме тивнӗ тӑлмачӑсен. Мӗншӗн тесен ҫав ӑнлавсем ун чухнехи чӑвашсемшӗн пачах паллӑ пулман.

Анчах И.Я. Яковлев, хӑйне чаплӑ чӗлхепӗлӳҫӗ тесе шутламан пулин те, нумай ӑнлава ҫав тери ӑнӑҫлӑ сӑмахпа паллӑ тума пултарнӑ. Ҫавна май вӑл чӑваш чӗлхи, ку таранччен ҫирӗплетнӗ пек, чухӑн чӗлхе пулманнине кӑтартса панӑ. Чӑваш чӗлхине мӗн авалтанах тӗрлӗ халӑх чӗлхисенчен кӗрсе вырнаҫнӑ сӑмахсене тупса, вӗсемпе пӗлсе усӑ курма пултарнӑ. Ҫавна май ват ҫынсен калаҫӑвне тимлӗ тӑнласа, чӗлхере нумай ӑнлава усӑмлӑ палӑртма май паракан сӑмахсем сахал мар тупма пултарнӑ. Паллах, вӑл Тахӑр ял таврашӗнчи чӑвашсен калаҫу чӗлхине тӗпе хурса ӗҫленӗ.

Революцичченхи чӑвашсен калаҫу чӗлхинчи сӑмахсене илес пулсан, вӗсене икӗ пая пайлама пулать: пӗрисем — ытти тӗрӗк чӗлхисенчи сӑмахсемпе пӗрешкел, теприсем — чӑваш чӗлхинче кӑна тӗл пулаҫҫӗ.

Малалла И.Я. Яковлев куҫару ӗҫӗнче ытти тӗрӗк сӑмахӗсемпе пӗр карта ларакан чӑваш сӑмахӗсемпе усӑ курнӑ тӗслӗхсене тишкерсе-тӗпчесе тухӑпӑр:

*сӑвап* : "Савӑнӑр, хӗпӗртенӗр: пӗлӗт ҫинче сире пысӑк *сӑвап* пулӗ" (Матф., V:12). "Вилнӗ ҫынсем — *сӑваплисем* те, *сӑвапсӑррисем* те чӗрӗлсе тӑрӗҫ тесе, Турӑ ҫине шанса тӑратӑп, ҫавна вӗсем хӑйсем те кӗтсе тӑраҫҫӗ" (АЁ, XXIV:15). "*Сӑвап"* сӑмах вырӑсла "спасение души; блаженство; награда в загробной жизни"тени пулать. Тӗрӗк чӗлхисенчи пӗрпеклӗхсем: уйг. *савап* = араб. награда; каз. *савап* награда, спасение души; *саваплан-,* быть вознагражденным, спасенным; *саваплы-* спасенный, благочестивый; тур. *сӓвап* (< араб.) награждение, заслуга; *сӓваплы* заслуживающий

награды, заслуженный (Радл. Сл. IV, 427, 504-505; Федотов ЭСЧЯ, II, 19–20).

*пайтах* : "Вĕсенчен нумайăшĕ ĕненнĕ, еллинсен чаплă хĕр-арăмĕсенчен те, арçыннисенчен те ĕненнисем *пайтах* пулнă" (АĔ, XVII:12). "Çапах та вĕсем унта Турă пулăшнипе хăюллă ĕçлесе, *пайтахчен* пурăннă" (АĔ, XIV:3). "Пире пурăнма лайăхрах пултăр тесе, вĕсем пире *пайтахранпа* вĕренекен пулса тăракан Мнасон ятлă пĕр Кипр çынни патне илсе пычĕç" (АĔ, XXI:16). *Пайтах* довольно много, довольно (долго, много, большой) (Ашм. Сл. IX, 71-72). Тĕрĕк чĕлхисенчи пĕрпеклĕхсем: кирг., тюм., тар., каз. *байтак* обширный, широко раскинутый, просторный, давний, давно (кирг.); довольно, достаточно значит. время (каз.); тел., шор *пайдак* изобильный, излишний (тел.); щедрый (шор.); пушк. *байтак* изрядно; (Федотов, ЭСЧЯ, I, 379).

*хапăл* : "Кам çакăн пек пĕр ачана Ман ятăмшăн *хапăл* тăвать, вăл Мана *хапăл* тăвать" (Матф., XVIII, 5). "Эпĕ çынсем мухтанине *хапăл* тумастăп" (Іоанн, V:41). *Хапăл* сила (Хорачка); охотно. Встречается в сложении: *ал-хапăл, ăс-хапăл.* Производные формы: *хапăл ту-* или *хапăл ил-* приветствовать, принять радушно, охотно, сердечно; *хапăла- / хапăлла-* принимать охотно, желать всем сердцем; *хапăллă* достойный; *хапăлсăр* бессильный (Ашм. Сл. XVI, 51). Тĕрĕк чĕлхисенче: ком., крым., каз., тур., уйг., карТЛ. *кабул* согласие; принятие; соглашение; признание; тар. *кобул* согласие; пушк. *қабул: қабул ит-* принимать, принять кого; дать аудиенцию. От араб. *гăбул* принятие, прием; благосклонный прием; согласие; одобрение (Федотов ЭСЧЯ, II, 310-311).

*киненсе* : "Вăл мĕн чухлĕ чаплă пулса, мĕн чухлĕ *киненсе* пурăнчĕ, ăна çавăн чухлĕ асаппа хуйхă кăтартăр" (Апокалипсис, XVIII:7). *Киненсе- килен-/кинен-* наслаждаться, удовлетворяться. Произв. формы: *киленӳ* удовлетворение, наслаждение (Ашм. Сл. VI, 214-215). Тĕрĕк

чӗлхисенче: каз. *килӓн-* радоваться, забавляться; *килӓндӗр-* (*килӓн- + -дӗр*) радовать, забавлять (Радл. Сл. II, 1368); тут., пушк. *кинән-* получать, получить наслаждение, удовольствие; наслаждаться, насладиться (Федотов ЭСЧЯ, I, 293);

*кӗлен:* "Тӗнчери мӗн пурри пурте: *ӳт кӗлени те, куҫ кӗлени те,* пуҫа мӑнатса пурӑнни те Атте Турӑран килмест, ҫак тӗнчеренех тухать" (АҪ, Іоанн, І-мӗш, II:16). "Пурте *кӑмӑл кӗленӗ* тӑрӑх ҫӗрӗсем, хӑлха алкисем, куҫлӑ ҫӗрӗсем, ҫакӑсем, тӗрлӗ ылттӑн япаласем илсе пынӑ" (Тухни, 35:22). *Кӗлен-* попрошайничать, клянчить, просить милостыню; ав.тӗрӗк *тилӓн-,* хак. *килен-,* мишар *кәлән-* желать для себя, просить для себя; узб. *тилан-*, азерб. *дилән-,* туркм., тур., тув., *дилен-,* кирг., казахск. *тилен-,* пушк., тут. *телән-* умолять, клянчить, попрошайничать, просить подаяния. Форма возвратного залога от *кӗле-* (Егоров ЭСЧЯ, с. 104); *кӗле-* просить, клянчить; молиться; хотеть, желать. Тӗрӗк чӗлхисенче: каз. *кӗлӓ-* хотеть; просить; *кӗлӓӳ* (*кӗлӓ- + -ӳ*) молитва, богослужение; *кӗлӓн-* просить милостыню, быть попрошайкой, попрошайничать; *кӗленчӗ* нищий (Радл. Сл. II, 1411–1412); тутар диал. *келән-* клянчить, попрошайничать; *келәу* пожелание; *келәу иту-* молиться; *келәучелек* место моления (ДСТЯ, 236–237).

М.Рясянен чӑв. *кӗле-* II тутар чӗлхинчен кӗнӗ тесе шутлать, тут. *келәу* богомоление, богослужение; молитва, молебен; чӑвашла *кӗлӗ* сӑмах та ҫак тымартанах тухнӑ тет, *кӗлӗ* — моление, молитва; церковная служба; монг. *kili-* стараться, хлопотать; напрягаться, делать усилия, быть усердным, ревностным.

Тунг. формисем: эвенк. *гэлиэ-,* сол. г*элээ-,* эвен, *гэлнэ-,* ороч. г*элэ-* просить; требовать; желать, хотеть; ав.тӗрӗк *qol-* просить, добиваться, вымаливать; желать (Федотов ЭСЧЯ, I, 270 - 271);

*ӑв-:* "Ҫавсенчен вара тӗрлӗ ҫусем хутӑштарса тӑвакан ҫыннӑн ӑсталӑхӗпе, *ӑвса* тунӑ, тасатнӑ, тӗтӗрмелли япала ту" (Тухни, XXX:35). *Ӑв-/ыв-* тереть, растирать, мять; молоть

табак; бить, хлестать. *Ăвă табак* нюхательный табак (Ашм. Сл. III, 46, IV, 35). Тĕрĕк чĕлхисенче: чаг. *уҕ-* мять, растереть; каз., бар., *у-* месить, растереть, мять, катать; саг., койб., кач., *ӯ-* мять, размять, растирать (Радл. Сл. I, 1591, 1617); пушк. *ыу-,* тут. *уу-* тереть, натирать, растирать (Федотов ЭСЧЯ, I, 79).

*хыв-:* "Вăл вĕсене кĕсен аллинчен илнĕ те, çавсенчен *хывса* пăру кĕлетки тунă, ăна касмаллипе касса лайăхлатнă (Тухни, XXXII : 4) *хыв-* лить, отливать, ковать (Ашм. Сл. XVI, с.80-83). Тĕрĕк чĕлхисенче: ав. тĕр. *qui-/qud-* лить, наливать; ку пĕлтерĕш чăв. *хыв–* сăмахра сыхланса юлнă; тут. *кой-* , пушк. *кой-* лить, отливать, отлить что (из металла) (Федотов ЭСЧЯ, II, 379). Чăваш чĕлхинче те *хыв-* глагол "шăратса яр, ирĕлтерсе яр" пĕлтерĕшпе çӳренĕ.

*авăрла-*: "Пур ăслă шухăшлă хĕрарăм та хăйсен аллипе кăвак çип, йăмăх хĕрлĕ, тĕттĕм хĕрлĕ çип *авăрласа*, виссон тĕртсе, вĕсене илсе пырса панă; *авăрла* пĕлекен пур хĕрарăм та хăйсен кăмăлĕ туртнă тăрăх качака çăмĕ *авăрланă*" (Тухни, XXXV: 25). *Авăрла-* прясть, навивать; тут. *эрлə-* прясть, напрясть, чăв. *арла-* < *авăрла-* (Федотов ЭСЧЯ,1,27).

*авка*: "Унта пĕр *авка* пурăнсан, тăвансем вĕсене канăçлăх сунса, апостолсем патне янă" (АЁ, XV: 36). "Пĕр-пĕринчен пăрăнса ан çӳрĕр, пăрăнсан та пĕр пĕринпе килĕшсе, е чунтан кĕл тăвасшăн, е типĕ тытасшăн пĕр *авкана* анчах пăрăнăр, унтан каллех пĕрле пулăр" (Павел, Коринф, VII: 5). *Авăк* короткий промежуток времени. *Пĕр авăк* значит небольшой промежуток времени. Анатри чăвашсен калаçăвĕнче усă куракан çак сăмах тутарла *айык* (некоторое количество) сăмахран пулса кайнă (Ашм. Сл. I A, 43-44). Апла пулсан, чăвашла *пĕр авăк* < тут. *бер авык* (некоторое время) ~ казах. *ауык* (чуточку), *ауык-ауык* (временами, время от времени) пĕлтерĕшпе çыхăнать (Егоров ЭСЧЯ, 19).

*ёлкё:* “Кёлё чатăрё *ёлки* те, унти пур савăт-сапасен *ёлки* те пурте Эпё сана кăтартса панă пек пултăр, çаплах тăвăр” (Тухни, XXV:9). *Ёлкё* выкройка, образец, модель; вид, форма. *Тумтире ёлкёпе касаççё* (Ашм. Сл. IV, 102). Тёрёк чёлхисенче: шор., саг. *ӳлгä* выкройка (сапожная); алт., тел. *ӳлгӳ* мера; образец, модель (по которым работают); тут. *өлге* выкройка, пушк. *өлгөө* пример, образец; выкройка, модель. Ср. монг. *улгэр* модель, образец; форма, выкройка (Федотов ЭСЧЯ, I, 148).

*ёлккен:* “Эсир çӳçёрсене çивётлесе, ылттăн тавраш çакса, е *ёлккен* тумланса тултан анчах илемлё пулма ан тăрăшăр” (АÇ, Петр, III:3). *Ёлккен* великолепный. Производные формы: *ёлккенлен-* стать пышным, великолепным; *ёлккенлентер-* понуд. ф. от *ёлккенлен-* ; *ёлккенлет-* то же, что *ёлккенлентер-* (Ашм. Сл. IV, 103). Тёрёк чёлхисенче: *ӳлкäн* большой; кирг. *ӳлкöн* высокий, большой, великий; *ӳлкöншӳлӳк (ӳлкöн- + -чи- + -лик)* величие, важность; тел. *Ӳлҕан* Ульген, высшее доброе божество у телеутов; каз. *ӧлкӧн* взрослый, большой; видный (Федотов ЭСЧЯ, I, 148).

*ёнчё:* “Çӳлти патшалăх тата аван *ёнчё* шыракан хуçа евёрлё: вăл пёр хаклă *ёнчё* курнă та, кайса хăйён мёнпур пурлăхне сутса çав *ёнче* сутăн илнё” (Матф., XIII:45). *Ёнчё (ёнчё* жемчуг, жемчужина; перламутр; бисер. Производные формы: *чăн ёнчё* первоначально—настоящий жемчуг, теперь—перламутр; *ёнчелё* украшенный жемчугом (Ашм. Сл. IV, 127-128). Тёрёк чёлхисенче: тур. *инџу* жемчуг; уйг. *ӳнџӳ* жемчуг; тоб. *йинџи* жемчуг; куманд., леб. *чиңчи* жемчуг; ав. тёр. *йäнчӳ* (из кит.)жемчуг; тут. *энҗе,* пушк. *ынйы* жемчуг (Федотов ЭСЧЯ, I,155); Фасмер шутланă тăрăх, вырăс чёлхи *жемчуг* сăмаха ав. чăваш (Атăлçи пăлхар) чёлхинчи *ǯinǯü* сăмахран йышăннă, венгрсен *gyöngy* жемчуг сăмах та ав. чăв. чёлхинченех куçнă (Фасмер ЭСРЯ II, 48).

*тăкăс:* “Вёсене пёрле пурăнма вёсемшён çёр *тăкăс* пулнă“ (Пултарни, XIII:5). *Тăкăс* плотный, тесный; плотно,

тесно; ровно; неуживчивый <тюрк (Ашм. Сл. XIV, 252). Тĕрĕк чĕлхисенче: каз. *тыҕыз (тык- + -з)* тесный, частый; трудный; *тыҕызла- (тыҕыз- + -ла)* стеснять; *тыҕызлык (тыҕыз + -лык)* теснота (Радл. Сл. III, 1307); кирг., казах., к. калп., ног., кумык, тутар, пушк. *тыҕыз* тесный, плотный; узбек *тигиз* тесный, плотный, туркм. *дыкыз* плотный, хакас *тыгыс* давка, толкотня (Егоров ЭСЧЯ, 235).

*хăйлалăх:* "Эпĕ ăна Турă сывлăшĕ патăм, ăслăлăх, *хăйлалăх,* пĕлесси, тĕрлĕ ăсталăх парса çитертĕм" (Тухни, XXXI:3). *Хайла* хитрость, уловка; способ, средство, притворство; прибаутка; причина, повод (Ашм. Сл. XVI, 14-15). Тĕрĕк чĕлхисенче: тур. *һилӓ* хитрость, обман, каверза = тар. *һиилӓ;* крым., тур. *һилӓлӓн- (һилӓ- + -лӓн)* ухитряться; кр.- тут. *кӓйлӓ* хитрость; тут., пушк. *хəйлə* хитрость, уловка; марВ. (белеб.) *хайла* повод; уловка; марВ *кайла* хитрость; обман, уловка; марВ. *кайлазе* хитрый, лукавый, хитрец (< тюрк.) (Федотов ЭСЧЯ, II, 306).

Çакăн евĕрлĕ тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать, 100-150 çул ĕлĕкрех, И.Я. Яковлев пурăннă вăхăтра, уйрăмах анлă усă курнă вĕсемпе. Мĕншĕн тесен, чăвашсен калаçу чĕлхинче тĕрĕк сăмахĕсем яланах çав тери пысăк вырăн йышăннă, чăваш пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕн мĕнпур енĕпе çыхăннă ăнлавсене палăртма пулăшнă. Чĕлхери пĕтĕм сăмах йышне шута илес пулсан, тĕрĕк сăмахĕсем пирĕн чĕлхере 50 процента яхăн, тесе те çирĕплетеççĕ ăсчахсем (16). Çавна май тĕрĕк сăмахĕсен шутне вĕсем мĕнпур тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан сăмахсене çеç мар, çавăн пекех икĕ е виçĕ тĕрĕк чĕлхинче чăваш сăмахĕпе пĕр килекен сăмахсене те кĕртеççĕ. Сăмах май тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсем чăваш чĕлхинче хăйсен сĕм авлхи формине сыхласа хăварнă. Апла пулсан, тĕрĕк чĕлхисем аталанма пуçланă тапхăртанпах пирĕн чĕлхене кĕрсе пынă сăмахсем чăваш чĕлхин авалхи пуянлăхĕ пулса тăнă.

Каярахпа пирĕн чĕлхене вырăс чĕлхи ытларах та ытларах витĕм кӳме пуçланă. Çапла вара çĕнĕ япаласене,

пулӑмсене пӗлтерме чӗлхене ҫӗнӗ сӑмахсем кӗрсе пынӑ, маларах активлӑ усӑ курнӑ сӑмахсенчен чылайӑшӗ майӗ-майӗпен калаҫу чӗлхинчен тухса, манӑҫа юлса пынӑ. Чӑвашла Библие вуланӑ чухне паянхи кун усӑ курма пӑрахнӑ сӑмахсемпе час-часах тӗл пулатӑн. Тӗрӗссипе, вӗсене архаизмсем тесе те калас килмест, мӗншӗн тесен ҫав сӑмахсен пӗлтерӗшӗ чӗлхере пачах ҫухалман, вӗсене халӗ урӑх сӑмахсемпе е синонимсемпе палӑртаҫҫӗ. Хӑш-пӗр тӗслӗхсемпе паллаштарам:

"Ҫул ҫӳрекенсене пӗр *вырханмасӑр* юратса пӑхса тӑрӑр" (АҪ, Петр 1-мӗш, IV: 9). *Выран* (вырhан) злобиться, негодовать (Ашм. Сл. V, 216). *Вырхан* 1. Негодовать, сердиться; 2.Обижаться, жаловаться; 3. Печалиться, расстраиваться, беспокоиться; 4. Медлить, мешкать разг. (ЧВС, 88). Илсе панӑ тӗслӗхре куҫаруҫӑ вырханмасӑр сӑмахпа "не обижаясь, не жалуясь" пӗлтерӗшпе усӑ курнӑ. Уйрӑмах ӗлӗк Пӑва уесне кӗнӗ чӑваш ялӗсенчи ҫынсем ҫапла каланӑ.

"Ей савнӑ тӑванӑмсем, хӑвӑра сӑнасшӑн янӑ ҫунтаракан асапа *енчетрен (е нехекрен)* ҫакланчӗ пире тесе ан калӑр" (АҪ, Петр 1-мӗш, IV: 12). *Енчетрен* неожиданно, случайно, редко (Ашм. Сл. III, 20); *нехекрен* ни с того, ни с сего; без вины (Ашм. Сл. IX, 21); *нехекрен* 1. Случайно, нечаянно, неожиданно; 2. Напрасно, беспричинно, зря, ни с того, ни с сего, ни за что, ни про что (ЧВС, 255). Хальхи вӑхӑтра ку сӑмахсемпе усӑ курсах каймаҫҫӗ, *енчетрен* вырӑнне *енчен* теҫҫӗ. *Нехекрен* сӑмах Елчӗк районне кӗрекен чӑваш ялӗсенчи тата Тӑхӑръял тӑрӑхӗнчи ватӑсен калаҫу чӗлхинче халӗ те сыхланса юлнӑ.

"Хамӑра ҫӑлакан Іисус Христос кунӗ ҫав ӗҫе тӑвакан ҫыннӑн чунӗ ҫӑлӑнтӑр тесе, унӑн ӳтне *минкетмешкӗн*, ... хамӑра ҫӑлакан Іисус Христос хӑвачӗпе ӑна сирӗн шуйттан аллине памалла" (Павел, Коринф, V: 5). *Минкет* мучить; понудительная форма от глагола *минкен- > минкел-* истомиться, измучиться. "Ӑна унта тытсан хӗнеме мар,

*минкетме* те пултарççĕ" (Юркин) (Ашм. Сл. VIII, 245). Хальхи вăхăтра *минре-, минрет-* теççĕ. Анатри чăвашсем "пуç минресе кайрĕ", теççĕ. *Минĕре-* приходить в беспамятство; *минĕрет-* привести в беспамятство. Хĕнесе минĕретнĕ; çапса минĕрĕтнĕ (Ашм. Сл. VIII, 244).

Çӳлерех илсе кăтăртнă тĕслĕхре "во изможденіе плоти" текен пĕлтерĕше тăлмачă питех те ăнăçлă куçарнă теме пулать.

"Пĕтĕмпех ырă пулса пĕр *сăлтăксăр* тăрас тесен, сирĕн яланах тӳсĕмлĕ пулмалла" (АÇ, Іаков, І:4). *Сăлтăк* (сылдык), вина, недостаток, порок. (Ашм. Сл. XI, 243-244); *сăкăлтăк* недостаток, порок; повод, придирка (Ашм. Сл. XI, 241). Ку тĕслĕхре *сăлтăксăр* сăмахпа "без всякого недостатка" тенине ăнлантарнă.

"Çӳлтен анакан ăс вăл таса, унтан лăпкă, *сăпă, кунĕ,* вăл пит хĕрхенет, ырă нумай тăвать, тӳррипе пырать, икĕ питлĕ хăтланмасть (АÇ, Іаков, III: 17). *Сăпă* (сыбы), скромный, сдержанный; жеманный (Ашм. Сл. XI, 264). *Сăпă тут. суфи* набожный, благочестивый, воздерживающийся от дурных прступков; араб. с*уфий* благочестивый аскет (Федотов ЭСЧЯ, II, 27). *Кунĕ* (кун' э), смирный, простак. Вăл кунĕ çын, вăл йăваш, лăпкă çын (Ашм. Сл. IV, 293). *Кунĕ* тата *сăпă* вырăс чĕлхинчи "скромный", послушливый, податливый" сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕс уçса пама пулăшнă куçаруçăсене. *Кунĕ* сăмах Вăрмар, Элĕк тăрăхĕнче, ĕлĕк Чистай уесне кĕнĕ чăвашсен чĕлхинче çӳренĕ.

"Эсĕ пирĕн хăлхана темĕнле *сейĕрле* сăмахсем кӳртетĕн" (АĔ, VII, 20). *Сейĕрле* странно, удивительно (Ашм. Сл. I, 88). Вырăсла текстра ку предложени çакăн пек: "Ибо что-то странное ты влагаешь в уши наши" (Деяния, VII: 20). Чăвашла сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕс уçса панă, *сейĕрле* сăмахпа та вырăнлă усă курнă темелле. Анчах хăй вăхăтĕнче анатри диалект сăмахĕ пулнăскер, вăл хальхи вăхăт тĕлне чăвашсен калаçу чĕлхинче сыхланса юлайман.

"Вăл Рим çынни ятне илнĕ çын иккенне пĕлсен, пин-çын пуçлăхĕ ăна çыхтарнăшăн *хăра* юлнă" (АĔ, XXII: 29). *Хăра-* бояться, пугаться, страшиться. (Ашм. Сл. XVI, 355-356). Тĕрĕссипе, чăвашла Библи кĕнĕкисенче ытларах çĕрте *хăраса кайнă, хăраса ўкнĕ* тени тĕл пулать. *Хăра юлнă* пек тĕслĕхсене Ашмарин словарĕнче те илсе кăтартнă : "Вăл мана тем те пĕр каласа пĕтерчĕ те тухса карĕ, эпĕ *хăра юлтăм,* нимĕн тума та пĕлместĕп (Шоркино)" (Ашм. Сл. XVI; 356).

"Ку япала пирĕншĕн акă мĕншĕн *хатарлă:* пирĕн ĕçĕмĕрсенчен йĕрĕне пуçлĕç, аслă турă Артемидан чиркĕвĕ те пăрахăçа тухĕ" (АĔ, XIX:27). *Хатар* (хадар), страшно, опасно; *хатарлă* опасно, опасный; *хатарлăх* опасность (Ашм. Сл. XVI, 70). Синод пилленипе куçарнă вырăсла Библире ку предложени çапла пуçланать: "А это нам *угрожает* тем ..." Çапла вара ку тĕслĕхре те *хатарлă* сăмахпа вырăнлă усă курнине палăртмалла.

Çўлте илсе кăтартнă тĕслĕхсем пирĕн тăван халăхăмăрăн калаçу чĕлхи чăн чăваш сăмахĕнчен пуян пулнине кăтартса параççĕ тата çавăн пекех пĕр ĕмĕр каярахри вăхăта куç умне чĕррĕн кăларса тăратма пулăшаççĕ. Чăн чăваш сăмахĕсен шутне çапла майпа çакăн пек сăмахсене кĕртме пулать пулĕ: 1) ытти тĕрĕк чĕлхисенчен хăшинче те пулин тĕл пулаканнисене; 2) хăçан тата мĕнле пулса кайнине эпир хальхи вăхăтра татса калама пултарайманнисене; 3) тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан сăмах тымарĕсенчен, чăваш чĕлхин шалти саккунĕсемпе килĕшўллĕн чăвашланса кайнисем.

Шел пулин те, нумай чăваш сăмахĕ пирĕн хальхи калаçу чĕлхинчен тухса ўкнĕ. Тен, совет саманинче çитĕннĕ сыпăксем хăйсен вăхăтĕнче И.Я. Яковлевпа унăн пулăшаканĕсем 100 çул каярах чăвашла куçарнă Библие тăван чĕлхипе вуласа ўснĕ пулсан, чăвашла Библин пуян та сăнарлă чĕлхи ăруран ăрăва куçса пынă пулĕччĕ, çапла вара пирĕн паянхи чĕлхемĕр татах та пуянрах, вăйлăрах пулнă пулĕччĕ.

## 8.5 ХИСЕП ЯЧĔ ЕВĔРЛĔ *ПУР* МЕСТОИМЕНИ

Пĕтĕмлетӳ форминче тăракан *пур* местоимени хăш-пĕр пĕтĕмлетӳ хисеп ячĕсем пекех сăпат, падеж тăрăх улшăнма пултарать. Тĕслĕхрен, хальхи чăваш литература чĕлхинче *пур* местоимени 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат формине йышăннă чухне, сăпат аффиксĕ умĕн сăмах тĕпĕ ҫумне *-с-* сасă кĕрсе ларать: *пурсăмăр, пурсăр* (ку сасă мĕншĕн кĕрсе ларнине, хăҫан ҫапла калама пуҫланине тата мĕне пĕлтернине калама йывăр). И.Я. Яковлевăн куҫарăвĕсенче вара *пур* местоимени сăпат, падеж аффиксĕсене йышăннă чухне -с- сасăсăрах усă курнă тĕслĕх питĕ нумай: "Турă сана мĕн хушнине пурне те итлесшĕн, эпир халĕ *пурăмăр* та Турă умĕнче тăратпăр, тенĕ" (АĔ, Х:33); "Ей тăванăмсем, хамăра Ҫăлакан Іисус Христос ячĕпе тархаслатăп сире: эсир *пурăр* та пĕр сăмахра тăрăр, пĕр-пĕринчен уйăрăлмалла ан пулăр, пĕр кăмăллă, пĕр шухăшлă пулса пĕрле тăрăр" (Павел, Коринф., І:10); "Чĕнсе илнĕ чух хăвăр кам пулнă, *пурăр* та ҫаплипех тăрăр (Павел, Коринф., VII:20). Ҫак вариантпа пĕр харăсах *пур* местоименипе сăпат аффиксĕ хушине *-с-* кĕрсе ларнă тĕслĕхпе усă курни те час-часах тĕл пулать: "Ей тăванăм–сем, вĕрентекенсене ытларах айăплассине пĕлсе, *пурăр* та вĕрентекен пулма ан тăрăшăр; эпир *пурсăмăр* та ҫылăха ахаль те нумай кĕретпĕр" (АҪ, Јаков, III:1). "Ҫăкăр пĕрре, эпир те нумайăн пĕр ӳт пулса тăратпăр, мĕншĕн тесен *пурсăмăр* та пĕр ҫăкăртан пай илетпĕр" (Павел, Коринф., Х:17).

*Пур* местоименин 3-мĕш сăпат форми *те* татăксăр ҫӳресшĕн мар. Ҫитменнине, хальхи чĕлхере *пурте* форма сăпат пĕлтерĕшне ҫухатнăпа пĕрех: эпир пурте, эсир пурте, вĕсем пурте (17).

Библи кĕнекисен куҫарăвĕсенче *пур* местоименипе *те* татăка уйрăм ҫырнă "Эй тăванăмсем, эпĕ сире ак ҫакна пĕлтермесĕр хăварасшăн мар: пирĕн аттемĕрсем *пур те*

пĕлĕт айĕнчен пынă, *пур те* тинĕс витĕр тухнă; Моисей пĕлтернине ĕненсе, *пур те* пĕлĕтпе тинĕс ăшĕнче тĕне кĕнĕ пек пулнă; *пур те* тĕлĕнмелле антарса панă пĕр çимĕçе çинĕ; *пур* те тĕлĕнмелле юхтарса кăларнă пĕр ĕçмелли ĕçнĕ, вĕсем хăйсемпе пыракан курăнми Чулран ĕçнĕ, вăл Чул Христос пулнă" (Павел, Коринф, X:1-4).

Акă, 3-мĕш сăпатри *пур те* местоименипе камăнлăх падежĕнче усă курнă тĕслĕх: "... тĕп аттесем те вĕсенĕн, ĕмĕр мухтавлă тăракан *пуринĕн* те Турри — Христос та — ўчĕпе вĕсенчен тухнă, амин" (Павел, Рим çын., IX:5); "Çапах та, аскăн ĕç тăвасран *пуринĕн* те хăйĕн арăмĕ пултăр, *пуринĕн* те хăйĕн упăшки пултăр" (Павел, Коринф, VII:2). Хальхи чăваш литература чĕлхинче камăнлăх падежĕн тулли формипе пачах усă курма пăрахни пирки асăннăччĕ ĕнтĕ эпĕ.

## 8.6. ИКĔ ХУТ КАЛАКАН СĂМАХСЕМ (РЕДУПЛИКАЦИ)

Чăваш чĕлхи ик хут калакан сăмахсенчен пуян. Хутлă сăмахсемпе мăшăр сăмахсен пулăвĕ çĕнĕ ăнлава палăртассипе, апла-тăк — çĕнĕ сăмах тăвассипе çыхăннă пулсан, ик хут калакан сăмахсен пулăвĕ лексика пĕлтерĕшне вăйлатассипе, çавна май хăш-пĕр грамматика пĕлтерĕшĕсене палăртассипе çыхăннă.

Компоненчĕсен тытăмне кура ик хут калакан сăмахсене виçĕ ушкăна пайлама пулать: 1) икĕ компонечĕ те пуçламăш формăра тăраççĕ; 2) пĕр-пĕр компонентри сасă улшăнăвĕпе тата пĕрремĕш компоненчĕ кĕскелнипе çыхăннă; 3) аффикссем йышăннă икĕ хут калакан сăмахсем.

Библин чăвашла куçарнă кĕнекисенче виççĕмĕш ушкăна кĕрекен ик хут калакан сăмахсемпе питех те анлă усă курнине палăртмалла. Çитменнине вĕсене пĕрне те хальхи чăваш литература чĕлхинче çырнă пек, дефиспа уйăрса çырман. Çавăнпа та вĕсем вулаканăн куçне тўрех

курӑнаççӗ. И.Я. Яковлев редакциленӗ куçарусенче пуринчен те ытларах ик хут калакан глаголсемпе усӑ курнӑ, ку ӗнтӗ ӗç вӑрӑма пынине е ӗçе темиçе хут тунине ӑнлантарса пама кирлӗ пулнӑ: "Вӑл Іисус ури патне хыçӗнчен пырса тӑнӑ та, *йӗре йӗре* Унӑн урисене куç-çулӗпе йӗпетсе, хӑйӗн пуçӗнчи çӳçӗпе *шӑла шӑла* илнӗ, урине *чуп-тӑва чуп-тӑва* миро сӗрнӗ" (Лука, VII,38); "Іисус Турӑ чиркӳне кӗнӗ те, чиркӳре суту-илӳ тӑвакансене пурне те хӑваласа кӑларнӑ; укçа улӑштаракансенӗн сӗтеллисене, кӑвакарчӑн сутакансенӗн тенкеллисене *тӳнтере тӳнтере* янӑ" (Матф., XXI:12); "Сиона аса илнӗ чух, çавӑнта, Вавилон шывӗсем хӗррине, *лара лара* йӗреттӗмӗр. Хамӑр арфасене унти хӑвасем çине *çака çака* хутӑмӑр" (Псалтырь, 136:1-2). Икӗ хут калакан глаголсемпе усӑ курнӑ тӗслӗхсене тата та илсе кӑтартма пулать: "*пере пере* вӗлернӗ (Мтф.,XXI:35), *кӑтарта кӑтарта* ӑнлантарнӑ (Лука, I:22), *чӗне чӗне* кӑларать (Іоанн, X:2,3), *ывӑта ывӑта* тӑнӑ" (АЁ, XXII:23), Псалтирьтен: "*сулла сулла* мӑшкӑлаççӗ (21:8), *кара кара* хураççӗ (37:13), *çарата çарата* каяççӗ (43:11), *çӗклене çӗклене* пырса (45:4), *ыйта ыйта* тӗпчеççӗ (34:12), *чӗне чӗне* халран кайрӑм, Туррӑма *кӗте кӗте* куçӑм ывӑнчӗ (68:4), хуласем *тӑва тӑва* лартӗ (68:36), *пыра пыра* тӑнӑ (77:35), *яра яра* парать (74:9), *чупа чупа* пуçтарӑнаççӗ т. ыт. те. Тӗслӗхсенчен çакӑ курӑнать: ик хут калакан глаголсем иккӗшӗ те пӗр пек аффикссем йышӑнаççӗ, вӗсен сӑпатне е вӑхӑтне виççӗмӗш компонент урлӑ çеç палӑртма пулать.

Икӗ хут калакан хисеп ячӗсем пирки тата çакна каламалла: пуçламӑш формӑра чухне ик хут калакан хисеп ячӗсене дефиспа çырнӑ, пӗрремӗш е иккӗмӗш компоненчӗ аффикс йышӑннӑ тӗслӗхсенче — дефиссӑрах: "*Пӗр-пӗр* хулана пырсан, унта сире хапӑл туса, мӗн çиме парӗç, çавна çийӗр" (Лука, X:8); "*Пӗри пӗри* сире мӗн те пулин каласан, эсир: вӗсем Вӗрентекене кирлӗ тесе калӑр" (Матф., XXI:3); "Унтан вӑл хуçине парӑм тӳлемелли çынсене *пӗрерӗн*

*пĕрерĕн* чĕнсе илнĕ те, пĕрне каланă: эсĕ ман хуçана мĕн чухлĕ памалла? тенĕ” (Лука, XVI:5).

Пĕр-пĕр хисеп ячĕн иккĕмĕш компоненчĕ çумне пĕтĕмлетӳ хисеп ячĕн 1-мĕш сăпат аффиксĕ хушăнса пулнă *пĕр пĕрĕмĕр* текен сăмах майлашăвĕпе эпир хальхи вăхăтра усă курма пăрахнă тесен те йăнăш пулас çук. И.Я. Яковлев вăхăтĕнче çак сăмах майлашăвĕпе çине–çине усă курнă, çавна май ăна местоименипе пĕрле те, местоименисĕр те усă курма пултарнă: “Хăй хушнă пек эпир Унăн Ывăлĕ Јисус Христоса ĕнемелле, *пĕр пĕрĕмĕре* юратса тăмалла” (Іоанн, 1-мĕш, III:23); “Çавăнпа ĕнтĕ килĕшӳ кӳрекеннине, *пĕр пĕрĕмĕ*ре усă тума пулăшаканнине шырăр” (Павел, Рим., XIV:19); “Эй хисеплĕ арăм, халĕ сана тархаслатăп: *пĕр-пĕрĕмĕре* юратса тăрар” (Иоанн, 2-мĕш, 5). Хальхи чĕлхере эпир *пĕр-пĕрне* теме хăнăхнă, шел пулин те, чĕлхен илемлĕх мелĕсем вăхăт шунăçемĕн сĕвĕрĕлсе пыни сисĕнет.

Икĕ хут калакан *пĕр-пĕр* хисеп ячĕн 2-мĕшпе 3-мĕш сăпат формисем тĕрлĕ падеж аффиксĕсене йышăннă чухне 100 çул ĕлĕкрех те паянхи пекех пулни курăнать: “Çавăн чух іудейсем *пĕр пĕрне* каланă: эпир Ăна тупас çук çĕре ăçта каяс тет Вăл?” (Іоанн, VII:35); “Ывăлне курсан, пахча–çăсем *пĕрне пĕри* каланă: ашшин пурлăхĕ çакна юлмалла, атьăр, ăна вĕлерер те, тивĕçлĕ пурăлăха хамăра илер тенĕ” (Матф, XXII:38); “... вĕсем *пĕр пĕринпе*: пире тупăк умне хунă чула кам йăвантарса парĕ-ши? Тесе калаçса пынă“ (Марк, XVI:3).

Кунта çакна каласа хăвармалла: икĕ хут каланипе пулнă формăсене мĕнле çырассине И.Я. Яковлев вăхăтĕнче çирĕп йĕркелесе çитереймен, çавăнпа та *пайăн пайăн* (Матф., XII:25), *хăшĕ хăшĕ* (Матф, XII:38), *аран аран* (АĔ, XIV:18), *кун куна, çĕр çĕре* (Псалт., 18:3) пек компонентсене тата çӳлерех асăннă тĕслĕхсенче икĕ компонента нимĕнле паллă па та уйăрман. Икĕ хут калакан паллă ячĕсене пĕрремĕш компоненчĕ кĕскелсе хупă сыпăклă пулса юлнă тĕслĕхсене дефис лартса çырнă: *шап-шурă* (Лука, IX:29), *тӳп-тӳрĕ*

(Лука, XIII:13), *сĕм-тĕттĕм* (АЁ, XIII:11), *тĕт-тĕм* (Тухни, X:23) тата ытти те. Акă, Авал хунă Сăмах кĕнекинчен илнĕ пĕр тĕслĕх: "Турă Моисее каланă: аллуна пĕлĕт çинелле тăс, Египет çĕрĕнче тĕттĕм пуласа тăрĕ, *сĕм-тĕттĕм* пулĕ, тенĕ. Моисей аллине пĕлĕт çинелле тăснă та "пĕтĕм Египет çĕрĕнче виçĕ кунччен *тĕт-тĕтĕм* тăнă" (Тухни, X:21,22).

## 8.7. ЧĔНӲ ФОРМИСЕМ (ВОКАТИВ)

Чăвашла Библи кĕнекисенче чĕнӳ формипе усă курни час–часах тĕл пулать. Çавăнпа та чăваш чĕлхинче чĕнӳ формисем мĕнлерех палăрни пирки кăштах чарăнса тăма та юрать пулĕ. Хальхи тĕрĕк чĕлхисенче чĕнӳ сăмахсĕне уйрăм падеж шутне кĕртмеççĕ. Ку тĕрĕс, анчах пур тĕрĕк чĕлхисенче те, сахал пулсан та, чĕнӳ формисем пур. Сăмах май, вырăс чĕлхинче те ĕлĕк уйрăм чĕнӳ падежĕ пулнă, каярахпа вăл ят падеж формипе пĕр пекленсе кайнă. Хальхи вăхăтра тĕпчевçĕсем вырăс чĕлхинче чĕнӳ падежĕн пĕлтерĕшне ят падежĕн пĕлтерĕшĕсемпе пĕрле пăхаççĕ.

Паллă тюрколог М.Р. Федотов палăртнă тăрăх (18), хальхи чăваш чĕлхинче чĕнӳ формисем тăванлăхпа çыхăннă япала ячĕсенче палăраççĕ. Вĕсем тымар сăмах çумне *-и, -й, -ай (-ей)* аффикссем хушăннипе пулаççĕ: *аттей* (< атте "отец") ~ тут. *атай* (< *ата* "отец"); чăв. *анней* (< *анне* "мать") ~ тут. *анай* (< ана "мать"); чăв. *ани (ей >и)* ~ тут. *әни* "мама", чăв. *ати (ей >и)* ~ тут. *әти* "папа"; чăв. *аппай* (< аппа) "старшая сестра", *кинемей* "тетя" (ашшĕн аслă пиччĕшĕн арăмĕ), "бабушка" (вată хĕрарăма хисеплесе чĕнни); *кукамай* "бабушка" (анне амăшĕ), *кукаçей* "дедушка" (анне ашшĕ), *мучей* "дядя" (аттен аслă пиччĕшĕ е аннен аслă аппăшĕн упăшки); тут. агай ~ эгей (< ага "дядя") "дядюшка", *бабай* (< баба "дед") "дедушка"; тув. *авай (< ава* "мать") "мама", ачай (< ача "отец") "папа" т. ыт.те.

Вокатив форманчĕ чăвашсемпе кӳршĕллĕ финн-угор чĕлхисенче те тăванлăха палăртакан ятсенче пур: марЛ. *ава*

> *авай* “мама”, *ача > ачай* “папа”, анчах марГ. *ăви* ~ чăв. *апи* “мама”, ăти ~ чăв. *ати* “папа”; ирçе *ава > авай* “мама”, *ялга > ялгай* “товарищ”; удм. *баба > бабай* “дедушка”, *ата > атай* “папа”, *ана > анай* “мама”.

Чĕнÿ форми монгол тата тунгус–манчжур чĕлхисенче те çÿлерех асăннă формăсенчен уйрăлса тăмасть: монг. *aqa* “старший брат”, чĕнÿ падежĕ *aqai ~ aqä*; *ekei* “мать”; тунг. *aka ~ aki* “старший брат”, *ene ~ eni* “мать”; *eke ~ eki* “старшая сестра,тетя”.

Кунта çакна куртăмăр, тăванла хутшăнусемпе çыхăннă сăмахсем чĕнÿ формин -ай (-ей) аффиксĕсене йышăннă чухне ачаш, çепĕç туйăмсене палăртаççĕ.

Чăваш чĕлхинче вокатива палăртмалли ытти йышши морфологи формисем те пур. Çавна май вĕсенчен ытларахăшĕ — камăнлăх категорийĕн аффиксĕсем: 1–мĕш сăпат, пĕр.хис. — хĕр + ĕм, *ыльăм е ывлăм,* 1–мĕш сăпат нум.хис. — *ачамсем, хĕрĕмсем*, 3–мĕш сăп. пĕр.хис. — амăшĕ (< *ама* “мать”+ *шĕ)* —упăшки арăмне чĕннĕ чухне “мать сына или дочери”. ~ тут. *əнисе* id., мар. *аваже (< ава,* “мать”) id.; *ашшĕ (< аçа* “отец”+ шĕ) — арăмĕ упăшкине чĕннĕ чухне “отец сына или дочери” ~ тут. *атасы / əтисе* id., мар. *ачаже (*< ача, “отец”) id.

Çавăн пекех -ав (-ев) аффикс та, тĕпрен илсен, атте, анне тата усă сасăпа вĕçленекен çын ячĕсем çумне хушăнса, чĕнÿ формине палăртать: *аннев (< анне + ев), аттев (< атте + ев), аппав (< аппа + ав), Еляв (< Еля + ав), Ирав (< Ира + ав).* Ку формăпа ытларах çыннăн вăйлă туйăмне: хăранине е савăннине пĕлтерме чĕнсе каланă тата аякри çынна кăшкăрса чĕнсе илнĕ чухне усă кураççĕ.

Чĕнÿ форми чăваш чĕлхинче вăл е ку çынна (япалана) палăртакан сăмах умне *эй* чĕнÿ татăкне лартнипе те палăрать.

Н.И. Ашмарин словарĕнче *эй* чĕнÿ татăкĕ тата междомети пулнине палăртнă: 1.*ей* (эj), звательная частица. Восклицание удивления, восхищения, сожаления,

недовольства, нежелания вести о чем-либо речь. Ей Турă, çумăр пар (Букв. 1904); 2. *ей* (эj), или. Çук çын хĕрне илес тетне, ей тата пĕр–пĕр Çынна–и? 3. *Ей* (эj), междометие окликающего или возражающего. Ей, тăхта–ха! (Ашм. Сл. III, 4–5).

Хальхи чăваш чĕлхинче *эй* татăка хистев междометийĕсен шутне кĕртеççĕ. Çынна хистекен *эй* междомети чĕннине, хушнине, хистенине, чарнине, тархасланине т. ыт. те пĕлтерет (19).

М.Р. Федотов та маларах асăннă *ей* чĕнÿ аффиксĕ междометирен пулса кайма пултарнине палăртать: *аппа + эй! > аппай, баба + эй! > бабай* тата ытти те (20).

Малалла И.Я. Яковлев куçарăвĕсенче чĕнÿ форми мĕнлерех палăрнине пăхса тухăпăр. Çавна май ку формăпа тăлмачăсем çав тери активлă усă курнине палăртмалла. Уйрăмах — Мухтав юррисен кĕнекине (Псалтире) куçарнă чухне. Тĕслĕхсене Псалтирьтен çеç илнĕ: *"Ей Турă,* тăшманăмсем ытла та нумайланчĕç–ĕçке!" (3:2): "*Ей Турă,* тăр! *ей Турăçăм,* çăл мана!" (3:8). Вырăсла текстри "Господи" тенине "ей Турă" тесе куçарнă, "Боже", "Боже мой" тенине — "ей, Турăçăм" тенĕ. Псалтирьте "ей Турă" тени пурĕ 209 хутчен тĕл пулать, "ей Турăçăм" тени — 55 хутчен: *"Ей Турăçăм,* эсĕ мана мĕн çамрăкранпах вĕрентсе тăтăн; *Ей Турăçăм*, эпĕ Санăн хăвату çинчен çак ăрăва каласа пĕлтериччен... ан пăрахсам мана. *Ей Турăçăм,* Санăн тÿрĕлĕхÿ çÿл–тÿпене çитичченех; Есĕ пысăк ĕçсем турăн; *ей Турăçăм,* Сан пекки кам пур?" (70:17, 19,20).

"Господи, Боже" тенине "Ей Турăçăм Турă" тесе куçарнă: *"Ей Турăçăм Турă*, Есĕ манăн ĕмĕтĕм, мĕн çамрăкранпах манăн шанчăкăм" (70:5).

Малалла "Господи", "Боже" сăмахсене кăна чăвашла мĕнле куçарнине, вĕсенче чĕнÿ, хистев, тархаслу формисем палăрнине кăтарса паракан тĕслĕхсемпе паллашар:

“Господи, Боже мой!” — “*Ей Турăçăм Туррăм,* Есĕ мана илтетĕн” (37:16) — псаломсенче çакăн евĕрлĕ тĕслĕхсем 11 хутчен тĕл пулаççĕ.

“Боже, Боже мой!” — “Ей Турăçăм, Турăçăм, Сана кĕсле каласа мухтатăп” (42:4).

“Боже мой” — “*Ей Турăм,* епĕ Санăн ирĕкне туса çитерес тетĕп, Санăн закону ман чĕрем ăшĕнче” (39:9). “Ей Туррăмçăм! вĕсем çавра çил ăшĕнчи тусан пек, çил çинчи улăм пек пулччăр; (82:14)

“Господи, Боже наш” — *“Ей Туррăмăр Турă,* Санăн яту пĕтĕм çĕр çинче те ытла та чаплă–çке!” (8:2).

“Ты, Святый!” — “*Ей таса Турă,* Есĕ Израил аслăласа мухтанă çĕрте пурăнатăн” (21:4).

“О, Всевышний!” — “Ей çӳлти Турă, мана хирĕç тăракансем пит нумай” (55:3).

“Боже, Спаситель” — *“Ей çăлакан Туррăмăр,* хăвăн яту мухтавĕшĕн пулăшсам пире; пире хăтарсам; Хăван ятушăн пирĕн çылăхсене каçарсам” (78:9).

“Господи, Боже спасения моего!” — *“Ей Турă, мана çăлакан Туррăм,* кунĕпе тархаслатăп, çĕрле те Сан умăнтах тăратăп” (87:2).

“Господи, Спаситель мой!” — “*Ей Туррăм, ей Çăлаканăм,* мана пулăшма васкасам” (37:23).

”Боже, Царь мой!” — *“Ей Турăçăм, ей Патшам,* Есĕ çав-çавах тăратăн; Іакова çăлăнăç парсам” (43:5).

“Боже мой, Царь мой” — *“Ей Туррăм, ей Патшам,* Сана аслăласа мухтам, Санăн ятна ĕмĕр ĕмĕрех мухтаса тăрам” (144:1).

“Господь, Пастырь мой” — *Турă манăн Кĕтӳçĕм,* манăн çитменни нимĕн те çук” (22:1).

“Пастырь Израиля!” — “*Ей Израил Кĕтӳçи,* тăнла, Іосифа сурăхсене çӳретнĕ пек Çӳретекен, херувимсем çинче ларакан, хăна кăтарт” (79:2).

“Сила моя!” — *Ей Хăватăм,* эпĕ Сана юрласа мухтăп: Турă — ман хута кĕрекенĕм, мана хĕрхенекен Туррăм” (58:18).

“Судия земли” — *Ей тĕнче Тӳри,* тăр, мăн кăмăллисене тивĕçлипе тавăрса пар” (93:2).

“Боже отмщений” — “Ей Турă, ей хирĕç тавăракан Турă, ей хирĕç тавăракан Турă, кăтарт Хăна“ (93:1).

“Праведный Боже!” — *Ей тӳрĕ Турă,* Есĕ çын чĕрине, çын ăшне витĕр пĕлсе тăратăн: çылăхлă çынсенĕн усллăхĕ пĕттĕр-чĕ, тӳрĕ çынна тĕреклентер-чĕ” (7:10).

Святый Израилев” — *Ей Израил Святойĕ,* сана кĕсле каласа, юрласа мухтăп” (70:22).

“Боже правды моей” — *“Ей манăн тӳрĕлĕхĕм Турри,* епĕ тархасланă чух илт мана” (4:2).

Господи, твердыня моя, и избавитель мой” — *“Ей мана тĕреклĕлентерекен, мана хăтаракан Турă,* çăварăмри сăмахăмсем, ăшăмри шухăшăмсем Сан умăнта кăмăллă пулĕçин-чĕ” (18:15).

“Господи, защитник наш” — *“Ей пирĕн хута кĕрен Турă,* ан вĕлер вĕсене: манăн халăхăм ан мантăр; Хăвăн хăватупа салатса яр вĕсене, ӳкер вĕсене” (58:12).

“Живущий на небесах”— *“Ей çӳлте Пурăнакан!* Куçăма çĕклесе Сан йеннелле пăхатăп” (122:1).

“Боже хвалы моей” — *“Ей хам мухтакан Туррăм,* чĕнмесĕр ан тăрсам: ман çийе усал чĕлхе-çăварне, ултавлă чĕлхе-çăварне караççĕ, ман умра суеççĕ чĕлхепе калаçаççĕ""(108:1-2).

”Боже сил” — *Ей çӳлти çарсенĕн Турри!* тăрат пире Санăн сăну çутăлса кайтăр, вара çăлăнăпар” (79:8) — 10 хутчен тĕл пулать çак сăмах майлашăвĕ.

Вырăс чĕлхинче чĕнӳ сăмахĕсем предложени пуçламăшĕнче те, варринче те, вĕçĕнче те тăраççĕ пулсан, чăваш чĕлхинче, уйрăмах И.Я. Яковлев куçарăвĕсенче, чĕнӳсем пурте предложени пуçламăшĕнче çеç вырнаçнă. Çакă çӳлте çырса панă тĕслĕхсенчен те курăнать.

Литература

1. Горский С.П. И.Я.Яковлев чăваш литература чĕлхине йĕркелени// Ялав. 1968. № 9. 30-31 с.

2. Андреев Н.А. Чăваш чĕлхин стилистики. Шупашкар, 1958. 25 с.

3. Переписка о чувашских изданиях Переводческой комисии. Казань, 1890. С. 142.

4. Горшков А.Е. И.Я.Яковлев тата чăваш литература чĕлхи// 100 лет новой чувашской письменности: Статьясен пуххи. Шупашкар, 1972. 164 с.

5. Федотов М.Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштару грамматики. Шупашкар, 1975. 16 с.

6. Сергеев Л.П., Котлеев В.И. Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1993. 236 с.

7. Горшков А.Е. Асăннă статья. 166 с.

8. Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Шупашкар, 1965. 95 с.

9. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем// “Хыпар” кĕнеки. № 12. Шупашкар, 1995. Нарăс, 1.

10. Çавăнтах. 43 §.

11. Федотов М.Р. Асăннă кĕнеке. 16 с.

12. Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Шупашкар, 1965. 38 с.

13. Çавăнтах, 65 с.

14. Çавăнтах, 38 с.

15. А.Е. Горшков. И.Я. Яковлев тата чăваш литература чĕлхи// 100 лет новой чувашской письменности: Статьясен пуххи. Шупашкар, 1972. 169 с.

16. Егоров В.Г. Современный чувашский литературный язык. Чебоксары, 1971. С. 73.

17. Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Морфологи. Шупашкар, 1965. 292 с.

18. Федотов М.Р. Чувашский язык: истоки. Отношение к алтайскому и финно-угорским языкам. Историческая грамматика. Чебоксары: издательство Чув.ун-та, 1996. с. 190-191.

19. Павлов И.П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 335 с.

20. Федотов М.Р. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштару грамматики (Морфологи лекцийсем). Шупашкар, 1975. 15 с.

*. Тĕслĕхсене Авал хунă Сăмахăн "Пултарни", "Тухни", "Левит", "Хисеп", "Иов кĕнеки" ятлă кĕнекисенчен, Сăваплă Çырусен шутне кĕртмен апокрифран — Сирах ывăлĕ Иисусăн ăслăлăх кĕнекинчен, Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмахран — Матфей, Марк, Лука çырнă таса Евангелисенчен илнĕ.

## ПАТРИАРХĂН ЮЛАШКИ КУНĔСЕМ

1922 çулхи юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче Н.И.Яковлев суккăрланма пуçланă ашшĕне тухтăрсене кăтартас тесе Чĕмпĕртен Питĕр хулине илсе тухса кайнă. Килĕнче унăн арăмĕ Екатерина Алексеевна тата Алексей Ивановичăн çемйи юлнă, ăна кунтах кĕтсе илме шантарнă. Çавна май ватă Шурсухал хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрне ирттернĕ чăваш шкулĕнчен яланлăхах тухса каятăп, тесе шутламан пулĕ. Анчах 80 ярса пуснă ватăшăн пурнăç тăршшĕпе ырми-канми тăрăшса çавăрнă тăван йăваран кĕске вăхăтлăха та пулин хăпса тухма тем пекех йывăр пулнă, йывăр шухăшсем пуçĕ çине арман чулĕ пек пусса тăнă, чунне хĕстерсе ыраттарнă. Юлашки хут тăван çĕр çинче тăнине чунĕ сиснĕех пулĕ çав ват çыннăн. Ахальтен мар вăл тухса каяс умĕн шкул картишне тухсан вокзала илсе кайма хатĕрленĕ тăрантас çине лариччен пуçĕнчи çĕлĕкне хывса сăхсăхнă та тăван шкула тепĕр хут вăраххăн пăхса çаврăннă хыççăн тăван килĕпе, хăй никĕслесе çĕкленĕ "чăваш тĕнчипе" пуç тайса сывпуллашнă, унтан пĕтĕм картиш илтмелле хытă сассипе: "Çĕр çăттăр сана, Яштайкин!" тесе ылханнă. (И.Н.Яштайкин ун чухне Чĕмпĕрти Чăваш институчĕн ректорĕ пулнă. — *И.М.*).

Чĕмпĕртен тухса кайнă хыççăн И.Я.Яковлев Питĕр хули çывăхĕнчи Елизаветино текен поселокра Николай Ивановичăн дачинче пурăннă. Тепĕр уйăхран Е.А.Яковлева та япалисене пуçтарса Иван Яковлевич патне пырса çитнĕ.

1923 çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕнче А.В.Жиркевич хăйĕн кун кĕнекинче çапла çырса хунă: "Яковлевсем патĕнче Чĕмпĕрте тăванĕсем икĕ карчăк (Алексей Иванович арăмĕн тăванĕсем пулас) тăрса юлнă. Вĕсене ватă Гаевский лайăх пĕлет (В.С.Гаевский — отставкăри генерал. 1920-1921 вĕренӳ çулĕнче "Чувинора" астрономи вĕрентнĕ, кĕске вăхăт хушши институт библиотекинче ĕçленĕ. — *И.М.*). Çавсенчен илтнĕ хыççăн вăл мана ĕнер Иван Яковлевич

Яковлевӑн ҫемйи унпа мӗн тери шелсӗр тата киревсӗр хӑтланни пирки каласа кӑтартрӗ. Вӑл Чӗмпӗртен пачах тухса каясшӑн пулман. Вара ӑна пурте пӗрле улталанӑ: Питӗр хулинче суккӑрланма пуҫланӑ куҫна тухтӑрсене кӑтартас пулать, ҫавӑнпа вӑхӑтлӑха Николай патне куҫса каймалла, ывӑлу патӗнче кӑштах хӑналанса пурӑнсан каялла Чӗмпӗрех таврӑнӑн, тесе шантарнӑ. Кунта хваттер те мӗнле пулнӑ, ҫаплах тӑрӗ, кайран ӑна кунта арӑмӗ кӗтсе илӗ тесе ӗнентернӗ. Ҫапла вара ватӑ ҫынна улталаса, Екатерина Алексеевна ывӑлӗсем пулӑшнипе хӑй те Чӗмпӗртен Николай ывӑлӗ патне куҫса пынӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн тин Шурсухал хӑй мӗнле серепене лекнине ӑнланса илнӗ. Каласа панӑ тӑрӑх, вӑл тарӑхса-ҫилленсе кайнӑ, ҫине тӑрсах Чӗмпӗре каялла илсе кайма ыйтнӑ, пуринпе те вӑрҫӑнса пӗтнӗ тата ытти те. Анчах та ӑна Чӗмпӗре каялла чакма ҫул хупӑ: хваттер те, килӗнчи сӗтел-пукан та, ытти япаласем те ҫук, ҫемйи те йӑлтах кунта куҫса килни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ... Мӗскӗн Иван Яковлевич! Чӗмпӗрте пурӑннӑ чухне те пурнӑҫӗ пылаках марччӗ. Ҫапах та ун патне паллакансем, унӑн ӗҫне пӗлсе сума сӑвакансем кӗркелесе тухкалатчӗҫ. Халӗ вара ӑна, тискер кайӑка читлӗхе хупнӑ пек, темле ял чӑтлӑхне хупса лартнӑ“ (1).

Пӗчӗк ачана амӑшӗн кӑкӑрӗнчен уйӑрнӑ чухнехи пек йывӑррӑн тӳссе иртгернӗ Шурсухал чӑвашсенчен уйрӑлса кайнӑ тапхӑра. Акӑ хӑҫан хӑйне чӑн тӑлӑх пек туйса илнӗ вӑл! Ҫур ҫула яхӑн никампа калаҫмасӑр, ниҫта тухса ҫӳремесӗр пурӑннӑ. Тӑванӗсенчен, пӗлӗшӗсенчен килекен ҫырусем те йӑпатайман ун чунне.

1923 ҫулхи нарӑсӑн 6-мӗшӗнче вӑл Алексей патне ҫапла ҫырнӑ: “Савнӑ Леля! Санран темиҫе ҫыру та илтӗм эпӗ, юлашкине — 1923 ҫулхи нарӑсӑн 1-мӗшӗнче, анчах килнӗ хыҫҫӑн пӗр ҫыру кӑна ҫырайрӑм. Пурӑнасса эпӗ кунта пилӗк уйӑх ытла пурӑнатӑп иккен...

Коля патӗнче аван пурӑнатӑп эпӗ: ҫиетӗп-ӗҫетӗп, лайӑх пӳлӗм пур, ӑшӑ, уҫӑлса ҫӳретӗп, аннӳне те лайӑх пӳлӗм

пачĕç. Пĕр хутчен Питĕр хулине кайса килтĕм. Куç пирки канашласа пăхрăмăр, катаракта пирки операци тума кирлех мар тесе йышăнчĕç, мĕншĕн тесен катаракта ӳсме пăрахнă, куçлăхсене çеç улăштарса пачĕç, урăх нимех те тумаççĕ".

1923 çулхи кĕркунне Яковлевсем Мускава куçса килнĕ те хăйсен ывăлĕн килĕнче, Алексей Иванович патĕнче пурăнма пуçланă. Чӳкĕн 1-мĕшĕнче Иван Яковлевич çут ĕç халăх комиссарĕн заместителĕнче ĕçекен М.Н.Покровский патне çыру çырнă, хăйне тата арăмне пенси панăшăн Çут ĕç халăх комиссариатне тав тунă, апат-çимĕç пĕрмаях хаклăланнине кура, пенсине кăштах ӳстерме ыйтнă (2). Ывăлĕн çурчĕ Çăлаканăмăр Христос храмĕпе юнашар пулнă. Анчах ку та ватă çыннăн чунне канăçлăх кӳмен.

Иван Яковлевич Чĕмпĕре таврăнас шухăшне пĕр самантлăха та пуçĕнчен кăларман. Акă мĕн çырнă вăл Чĕмпĕре, Екатерина Алексеевнăн хреснай ывăлĕ пулнă Н.В.Никифоров патне (Василий Никифоровичăн ывăлĕ. — *И.М.*) 1924 çулхи нарăсăн 5-мĕшĕнче: "Юратнă Николай Васильевич! Эпĕ Чĕмпĕре пыма пуçтарăнатăп, çавăнпа та эпĕ вырнаçма пултаракан хваттер (малтанхи е урăххи) пирки çырса пĕлтерме ыйтатăп. Манăн ĕнене Вараксаркăран илсе килнĕ-и, çук-и? Шкула халĕ кам тытса пырать? Вĕренекен ачасемпе хĕрсем пурĕ миçен пирĕн? Наталья Яковлевна (Чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕр училищинче ĕçленĕ учительница. — *И.М.*) халĕ ăçта пурăнать? Учительсемпе учительницăсем камсем? Хальхи вăхăтра пирĕн шкул мĕн ятлă? Шкула тытса тăма эсир халĕ мĕн чухлĕ укçа илетĕр? Сире пĕтĕм пурлăха типтерлĕ упрама ыйтас килет манăн, мĕн кирлине йăлтах тăвăр Эсир. Н.И.Ашмарин Бакуран çырать-и, мĕн çырать, манăн питĕ пĕлес килет. Ирина Федоровнăна (Н.В.Никифоровăн арăмне. — *И.М.*) пуç тайма ыйтатăп, хăвăн хĕрне чăвашла вĕрент. Тата эпир Федор Тимофеевич Тимофеева пуç таятпăр. Час-часах тата ытларах çырса тăр" (3).

А.В.Жиркевич хăйĕн кун кĕнекинче çырса хăварнă тăрăх, Н.В.Никифоровпа Ф.Т.Тимофеев хăйсен вĕрентекенне сума сунă, ун патне хыпар ярсах тăнă, Мускава кайсан, ватă Вĕрентекенĕ патне кĕрсе тухма тăрăшнă тата Яковлевсене Чĕмпĕртен тухса кайма хăваланăшăн аванмарланнă, пуçлăхсене ӳпкеленĕ.

Çава тухнă май И.Я.Яковлев та майĕпен йывăр шухăшсенчен хăтăлса пырать, çĕнĕ вырăна хăнăхнă пек туять. Чăвашсем ун патне тăтăш пырса çӳрени Иван Яковлевича хаваслантарнипе килĕнчисем те хирĕçлемен çавнашкал тĕл пулусене. Вуласа пăхар-ха Жиркевичăн кун кĕнекине: "...Чувинона, Андреев (О.А.Андреев, 1924 çулхи пуш уйăхĕнче Чĕмпĕрти Чăваш педагогика тата ял хуçалăх техникумĕсен заведущине лартнă, ку вырăнта 1930 çулччен ĕçленĕ. — *И.М.*) хваттерне (Яковлевсем пурăннă хваттере) кайрăм. Унта чăваш деятелĕсен съездне килнĕ çынсене, çав шутра Шупашкарти халăха вĕрентес ĕç пайĕн председательне куртăм. Вăл мана темиçе кун каярах кăна Мускавра, Иван Яковлевич патĕнче пулни çинчен каларĕ: старик япăх илтет, çапах та çирĕп-ха, хаваслă, тарават, сăра ĕçет, килекенсене те хăналать. Никифоров та каласа панăччĕ-ха мана: Яковлевăн тахçанхи пĕлĕшĕ, чăваш архиерейĕ Филимонов Мускавра ватă çын патĕнче темиçе хутчен те пулнă: Яковлев ун умĕнче те хăйне тăн-тăн тыткаланă, Алексей Иванович кашни кун илсе паракан сăрапа сăйланă, чĕрĕ те хаваслă пулнă... Турра шĕкĕр, апла пулсан, Екатерина Алексеевна Никифоров патне ватă çын сӳнсе пыни çинчен çырса пĕлтернисем ахалех пăшăрхантарнă иккен мана", — тет (4).

Чăвашсем манман хăйсен патриархне, 1924 çулхи авăнăн 15-мĕшĕнче Чăваш область ĕçтăвкомĕн президиумĕ Яковлевпа унăн арăмне 100-шер тенкĕ пенси парса тăма йышăннă. 1928 çулхи юпа уйăхĕнче И.Я.Яковлев пенсине çулталăкра 200 тенке çити ӳстернĕ.

1928 çулхи юпа уйăхĕнче икĕ чаплă юбилее: Чĕмпĕрти чăваш шкулне никĕсленĕренпе 60 çул çитнине тата И.Я.Яковлев 80 çул тултарнине паллă тунă. Юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче ирхине Яковлев патне Мускаври чăвашсен ентешлĕхĕн делегацийĕ пырса кайнă, ăна чаплă уяв ячĕпе саламланă. Каçхине рабочисемпе хресченсен Халăх Комиссариачĕн клубĕнче юбилейпе çыхăннă уява ирттернĕ. Сывлăхĕ хавшанипе И.Я.Яковлев унта хутшăнайман (ку вăхăт тĕлнелле, шел пулин те, аслă Вĕрентекенĕмĕр чăнласах сӳне пуçланă: тăнне çухатнă, хăй тĕллĕн çӳреймен, калаçайман, килен-каяна паллайми пулнă, пĕчĕк ачана çаврăннă). Клуб студентсемпе, СССРти халăхсен Центриздачĕн Чăваш секцийĕн редакцийĕнче ĕçлекенсемпе, Мускавра пурăнакан ентешсемпе, çавăн пекех хăнасемпе лăк тулнă. Савăнăçлă пухура çутĕç халăх комиссарĕ А.В.Луначарский сăмах каланă. Вăл И.Я.Яковлевăн халăха çутлăх тĕнчине илсе тухас енĕпе тунă пысăк ĕçĕсем çинчен каласа панă, В.И.Ленин 1918 çулхи ака уйăхĕнче Чĕмпĕр Советне янă телеграммăпа паллаштарнă, унăн чăваш халăхĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсене пысăк хак панă. Унтан А.В.Луначарский президиумра ларакан Е.А.Яковлева патне пырса ăна ăшшăн саламланă. Луначарский И.Я.Яковлевăн ĕçне çавăн пек пысăк чыса хуни машăрне савăнтарнă.

1928 çулта И.Я.Яковлевпа арăмĕ хĕрĕ патне пурăнма куçнă. Лидия Ивановна упăшкин, К.А.Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕн профессорĕн А.Д.Некрасовăн, академи çывăхĕнчи Соломенная Сторожка поселокĕнче дача пулнă, ватăсем çавăнта пурăнма килĕшнĕ.

1930 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче Екатерина Алексеевна Ф.И.Поручикова (Федор Иванович Поручиков 1909 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернĕ, çав шкулах учителе хăварнă. Пĕрремĕш тенче вăрçи умĕн вырăнтан тухнă. 1930 çулта ссылкăра пулнă. — *И.М.*) çапла пĕлтернĕ: “Иван Яковлевич пачах йывăрланса çитрĕ — нимĕн те илтмест, унтан ытларах, ăсран тайăлчĕ. Тухтăрсем унăн пуç мими

склерозĕ теççĕ, чирĕ шалтан шала кайса пырать. Вăй-халĕ пĕтнĕ, утаймасть, ăна аран-аран кровать çинчен креслă çине тата каялла çавăн пекех йăтса куçаратпăр. Талăкра ытларах çывăрать е тĕлĕрсе выртать, нимĕн те каламасть, никама та курмасть, тăнне йăлтах çухатнă... Иван Яковлевича пăхнă чухне мана пулăшма пĕр ар çынна тытрĕç. Ун пеккине тупайман чухне, хĕр арăма чĕнеççĕ, мĕншĕн тесен эпĕ хам та ватăлтăм ĕнтĕ, унпа пĕччеиçи нимĕн те тăваймастăп. Питĕ начар çиет — кăштах çупа çăкăр, сĕт çикелет, хутран-ситрен — çăмарта. Йăлтах начарланса пĕтсе кайрĕ — шăммипе тирĕ кăна. Ун çине пăхма шел — ăна чылайранпа курман пулсан, куççульсĕр пăхаймастăн. Чăвашсем ăна манмаççĕ тата 200 тенкĕ пенси ярса тăраççĕ, вĕсенчен 120-ĕшне эпир ăна пăхакана тӳлетпĕр. Талăкра 3 тенкĕ тӳлеме тивет, унсăр пуçне пăхакана та тăрантармалла, кĕпе-йĕм памалла. Пĕтĕмĕшле кунта ĕçлекен алăсем питех те хаклă, чирлĕ çын çумĕнче лараканнине тупма уйрăмах йывăр. Чăвашсем пулăшман пулсан, ăна тата ытларах йывăр пулнă пулĕччĕ — лайăхах пăхайман, таса тытайман, кирлĕ пек çитереймен те пулăттă-мăр. Эпĕ кунĕпех унтан пăрăнаймастăп тата хуçалăхра пулăшкалатăп: кунĕпех çĕлекелетĕп, тӳрлеткелетĕп, саплакалатăп. Урасем манăн та чирлĕ, килте çӳрекелетĕп-ха, урăх ниçта та тухаймастăп. Иван Яковлевич 83-ре вĕт, эпĕ хам 70 çулта".

1930 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче пирĕн патриархăн, чăваш халăхĕн хăватлăран та хăватлă Вĕрентекенĕн И.Я.Яковлевăн чĕри тапма чарăннă. Çапла вара пурнăç уйĕ урлă тăван чăваш халăхĕшĕн утса каçнă, тăван халăхăн ăру-несĕлĕшĕн вут-кăварлăн ĕçлесе пурăннă этем чăваш-сенчен ĕмĕрлĕхех уйрăлнă.

Чӳкĕн 16-мĕшĕнче Екатерина Алексеевна Ф.И.Поручикова янă çырура унăн вилĕмне тата ăна пытарнине çапла çырса панă: " Чĕри ĕçлеме чарăннипе вилчĕ. Вилĕмĕ лăпкă килчĕ, çывăрса кайнă пек пулчĕ те

кушне уҫмарĕ. Малтанласа хăвăрт-хăвăрт сывларĕ, унтан пĕр 10 минут хушши сывлăшĕ сайра-сайра тухкаларĕ, вара пачах сывлами пулчĕ. Тепĕр ҫеккунтран юлашки сывлăшне кăларса ячĕ те куҫĕнчен куҫҫулĕ юхса анчĕ, ҫапла йăлтах пĕтрĕ. Вилекенĕн вырăнĕпе юнашар Екатерина Алексеевна, тухтăр, кĕҫĕн мăнукĕ Митя (16 ҫулта) тата ăна пăхакан хĕрарăм пулчĕҫ. Ҫемьерисем ыттисем пурте ĕҫреччĕ, вĕсем киле таврăннă ҫĕре аслашшĕне сĕтел ҫине вырттарнăччĕ ĕнтĕ...

Юлашки хут аслашшĕ авăнăн 20-мĕшĕнче каларĕ, яланхи пекех Чĕмпĕре кайма пуҫтарăнчĕ, "тирпейлĕрех" кĕпе-тумтир ыйтрĕ, лаша илсе килнипе килменнипе интересленчĕ, тăрса юласран хăраса пĕрех май таҫта васкатрĕ, вырăн ҫинче сике-сике тăрса ларчĕ. Пĕрре ура ҫине тăма та хăтланса пăхрĕ, анчах шел пулин те, урисем тытайми пулчĕҫ, аран-аран ăна кровать ҫинчен кресло ҫине илсе лартрăмăр. Ун хыҫҫăн мĕн виличченех вăл пĕр сăмах та каламарĕ, нимĕн туймасăр, курмасăр тенĕ пек пурăнчĕ. Лăпкăн вилсе кайрĕ, урине те тăсса ямарĕ, пичĕ-куҫĕ вара лăпкă та ырă пулчĕ. Пирĕнтен килмен сăлтавсене пула ăна килтех асăнса кĕл турĕҫ, сăвапларĕҫ. Ваганьково масарĕнче пирĕн кĕрĕвĕн (Лидия Ивановна упăшкин) вилнĕ тăванĕсемпе юнашар пытарчĕҫ. Ӳтне килтен илсе тухнă чухне тăвансемпе пĕлĕшсемсĕр пуҫне, чăваш организацийĕсенчен килнĕ представительсем пулчĕҫ, масар ҫинче вара унăн тупăкне чăваш студенчĕсем кĕтсе илчĕҫ те катафалк ҫинчен илсе шăтăкĕ умне ҫитиччěнех алă ҫинче йăтса пычĕҫ. Вил тăприйĕ ҫинче, хальхи йĕркепе панихида пулчĕ. Чăвашсем сăмах каларĕҫ, И.Я.Яковлева ырăпа ҫеҫ асăнчĕҫ, вăл тăван халăхне культура ҫути патне туртни ҫинчен тата халĕ вĕрентӳ ĕҫĕ Совет влаҫĕ вăхăтĕнче малалла хăвăрт аталанни ҫинчен каларĕҫ. Катафалкĕ кая юлса ҫитнине тата ҫанталăк япăххине пула шăтăк чавакансем хăйсен ĕҫне вăрах тунипе вилнĕ ҫынна пытарасси ытла каҫа юлчĕ. Киле эпир ҫĕрле 11 сехете кăна таврăнайрăмăр. Пӳрт йăлтах

пушанса юлчĕ, эпĕ вара хама çак тĕнчере никама та кирлĕ мар çын пек туйса илтĕм. Иван Яковлевичăн вил тăприйĕпе юнашар ман валли те вырăн пур — çакă йăпатать мана.

Пилĕк çул ытла Иван Яковлевич пĕчĕк ача пек пурăнчĕ, çавăнпа та ăна пĕчĕк ачана пăхнă пекех пăхмаллаччĕ — ĕçтермеллеччĕ, çитермеллеччĕ, çуса тасатмаллаччĕ, салтăн-тарса выртдтармаллаччĕ, тумлантарса тăратмаллаччĕ... Эпĕ çак ĕçе йăлтах хăнăхса çитнĕччĕ, килтен ниçта та тухса çӳремен, çавăнпа халĕ манăн чун пушанса юлчĕ, тĕнчере урăх нимĕн те çук пек туйăнать... Чăвашсем укçа-тенкĕпе Иван Яковлевича лайăх пулăшса тăчĕç, çавăнпа та эпĕ ăна мĕн кирлине йăлтах тупма пултараттăмччĕ — ĕçмеллине-çимеллине, таса кĕпе-йĕм туянма, юлашки вăхăт-ра пулăшакан хĕрарăма тытса тăма та. Мĕншĕн тесен эпĕ ăна пĕччен йăтса тăратайми пултăм. Пулăшакан хĕрарăма тара тытиччен мана çулталăк хушши унăн Кăнна Кушкинчи тăванĕсен ачисем черетпе пулăшса тăчĕç"(5).

Екатерина Алексеевна Яковлева 1936 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Мускавра Ваганьково масарне упăшкипе юнашарах пытарнă.



И.Я. Яковлев тупăкра. 1930 ç.

Литература:

1. Жиркевич А. Встречи с Яковлевым. (Публикация и примечания Г.А.Александрова)// Лик Чувашии. 1996. №№ 5-6. С. 148.

2. Александров Г.А. Иван Яковлевич Яковлев: фрагменты жизни. Чебоксары: Изд-во "Чувашия", 1997. С. 146-145.

3. ЧПГĂИНА. 1 пай., 2395 ĕç., инв. № 8938.

4. Жиркевич А. Встречи с Яковлевым. Асăннă журнал. С. 155-156.

5. Александров Г.А. Асăннă кĕнеке. С. 148-151.

# КĔСКЕТНĔ ПАЛЛĂСЕМ

*Ашм. Сл.* — Ашмарин Н.И. Словарь чувашского языка: В 17 т. Казань; Чебоксары: Чувашгосиздат.

*БИБО* — Британское Иностранное Библейское общество (Британипе ют çĕршывсен Библи обществи).

*БЭС* — Большой энциклопедический словарь: В 2 т. Гл. ред. А.М.Прохоров. М.: Сов. энциклопедия, 1991.

ДТС — Древнетюркский словарь. Л.: Наука. Ленингр. отд-е, 1969. 676 с.

ДСТЯ — Диалектологический словарь татарского языка. Казань: Тат. кн. изд-во, 1969. 643 с.

*ЕСІ* — БИБО редакцине пырса кĕрекен çырусем.

*Егоров ЭСЧЯ* — Егоров В.Г. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1964.

*Радл. Сл.* – Радлов В.В. Опыт словаря тюркских наречий: В 4 т. Т. 1–4. Спб., 1893–1911.

*Федотов ЭСЧЯ* — Федотов М.Р.. Этимологический словарь чувашского языка: В 2 т.Чебоксары: Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 1996.

*Фасмер* — Фасмер М.Этимологический словарь русского языка: В 4 т. Т.1-4.СПб.,1996

*ЧВС* — Чăвашла- вырăсла словарь. Под ред. Скворцова М.И. М.: Русский язык, 1985.

*ЧРПА* —Чăваш Республикин патшалăх архивĕ.

*ЧПГĂИНА* – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсĕн институчĕн наука архивĕ.

Пирĕн Туррăмăр Іисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмах (Чĕмпĕр, 1911) кĕнекерен:

*Матф. е Мтф.*— Матфей çырнă таса Евангелие.

*Марк* — Марк çырнă таса Евангелие.

*Іоанн* — Іоанн çырнă таса Евангелие.

*Лука* — Лука çырнă таса Евангелие.

*АЁ* — Святой Апостолсен ĕçĕсем.

*АÇ* — Святой Апостолсен çырăвĕсем.

*Іаков* — Іаков çырăвĕ.

*Петр (малт.); (иккӗмӗш)* — Петр апостолӑн малтанхи ҫырӑвӗ; иккӗмӗш ҫырӑвӗ.

*Павел, Коринф,* — Павел апостол Коринф ҫыннисем патне малтан яни.

*Павел, Рим ҫын* – Павел апостол Рим ҫыннисем патне яни.

*Апокалпс.* — Апокалипсис.

Авал хунӑ Сӑмахӑн (Ветхий Завет) чӑвашла куҫарнӑ кӗнекисем:

*Пултарни, Тухни, Левит, Хисеп.*

*Псалт.* – Псалтирь е Мухтав юррисен кӗнеки.

Сирах ывӑлӗ Іисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнеки. Шупашкар: 1-мӗш типографи, 1995:

*Сирах* — Сирах ывӑлӗ Іисусӑн Ӑслӑлӑх кӗнеки.

*Іов* — Іов кӗнеки.

*Навин* — Іисус Навин кӗнеки

*Товит* — Товит кӗнеки

*Руфь* — Руфь кӗнеки

*Маккавей* — Маккавейсен пӗрремӗш кӗнеки.

## ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани ........................................................ 3
1. И.Я.Яковлев чăваш халăхне панă Халал
1.1. Чăвашла Халал ........................................................ 5
1.2. Вырăсла Халал ........................................................ 9
1.3. Акăлчанла Халал ........................................................ 12
1.4. Нимĕçле Халал ........................................................ 15
1.5. Французла Халал ........................................................ 18
2. Чунăм пĕрмаях сирĕншĕн çунатчĕ ........................................ 22
3. Эпир пĕлмен И.Я.Яковлев
3.1. Чăваш та çын шутне кĕтĕрччĕ ........................................ 39
3.2. Кивĕ пурнăç тĕттĕмлĕхĕ сирĕлет ........................................ 47
3.3. Чăвашăн та кĕнеке чĕлхи пулать ........................................ 56
3.4. Чăваш чĕлхи чиркĕве кĕрет ........................................ 71
3.5. Тулли кăмăлпа тимлеççĕ ........................................ 78
4. Чăвашла Библи
4.1. Библи чĕлхи тата авалхи куçарусем ........................................ 87
4.2. Вырăсла Библин кĕске историйĕ ........................................ 90
4.3. Çĕнĕ Сăмаха чăвашла куçарни ........................................ 95
4.4. Авал хунă Сăмаха куçарса пĕтерме ĕмĕтленни ...... 119
5. Псалтирь е Мухтав юррисен кĕнеки ........................................ 140
6. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи тăлмачăсем ........................................ 150
7. Библи куçарăвĕсем — литература чĕлхин никĕсĕ ........ 182
8. И.Я.Яковлевăн куçару чĕлхи
8.1. Чăваш чĕлхинчи камăнлăх падежĕпе камăнлăх категорийĕн тулли формисем ........................ 193
8.2. И.Я.Яковлев куçарăвĕсенчи мăшăр сăмахсем .......... 201
8.3. Сăмахăн тулли формипе усă курни ........................................ 209
8.4. Тĕрĕк картине ларакан чăваш сăмахĕсем ........................ 216
8.5. Хисеп ячĕ еверлĕ *пур* местоимени ........................................ 226
8.6. Икĕ хут калакан сăмахсем (редупликаци) ........................................ 227
8.7. Чĕнӳ формисем (вокатив) ........................................ 230
Патриархăн юлашки кунĕсем ........................................ 237

Ираида Васильевна Мукина

Слово о И.Я.Яковлеве

Художественный и технический редактор *В.А.Мукин*
Художник *Н.Ф.Толстов*
Компьютерная верстка *В.А.Яковлева*

ЛР № 034 от 25.02.1993 г. Формат 60×90[1]/16.
Объём 15,5 ф. п. л. Тир. 500 экз.
Издательство «Руссика». 428000, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 36.

ТУПМАЛЛИ


[illegible] ... 3
1. И.Я.Яковлев чӑваш халӑхне панӑ Халал
1.1. [illegible] Халал ... 3
1.2. [illegible] Халал ... 9
1.3. [illegible] Халал ... 12
1.4. [illegible] Халал ... 15
1.5. [illegible] Халал ... 19
2. [illegible] ... 22
3. [illegible] И.Я.Яковлев
3.1. [illegible] ... 29
3.2. [illegible] ... 47
3.3. [illegible] ... 56
3.4. [illegible] ... 71
3.5. [illegible] ... 78
4. [illegible]
4.1. [illegible] ... 87
4.2. [illegible] ... 90
4.3. [illegible] ... 93
4.4. [illegible] ... [illegible]
5. [illegible] ... 140
6. [illegible] ... 150
7. [illegible] ... 182
8. И.Я.Яковлев [illegible]
8.1. [illegible]
[illegible] ... [illegible]
8.2. [illegible] ... [illegible]
8.3. [illegible] ... 209
8.4. [illegible] ... 216
8.5. [illegible] ... [illegible]
8.6. [illegible]
[illegible] ... [illegible]
8.7. [illegible] ... [illegible]
[illegible] ... [illegible]

25/руб.



**Мукина Ираида Васильевна**

1957 çулта Патăрьел районне кĕрекен Кивĕ Ахпӳрт ялĕнче çуралнă. 1979 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн 15 çул хушши "Коммунизм ялавĕ", каярахпа "Хыпар" хаçатра тăлмачă пулса ĕçленĕ, 1994 çултанпа — Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмелли методика кафедрин аслă преподавателĕ. И.Я.Яковлевăн куçару ĕçĕпе çыхăннă еткерлĕхне тĕпчет.